К74.268.11
А 86
Ч-44885

Т. В. Артемьева, О. И. Печников

3
класс

# ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВĔН урокĕсем



Национальная библиотека ЧР
4-044885

К74.268.11 Ч-44885-ОЭ - ОНЛиБ -
А86 Артемьева, Т. В.
Литература вулавĕн урокĕсем. -
Шупашкар, 2012. - 35.00 р.

74.268.11
А86

Т. В. Артемьева, О. И. Печников

# ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВĔН УРОКĔСЕМ

## 3-мĕш класс

*Меслет сĕнĕвĕсем*

Шупашкар
2012

УДК 373
ББК 74.268.3 (2Рос=Чув)
А 86

*Чăваш Республикин*
*вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви*
*шкулсенче усă курма ирĕк панă*

Рецензентсем:
**А.Р. Кульева,**
педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ,
Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн доценчĕ;
**Г.Ф. Брусова,**
педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ,
И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн доценчĕ;
**Л.А. Ермакова,**
Шупашкар районĕнчи Салапайкассинчи
пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен.

**Артемьева Т.В.**
А 86 Литература вулавĕн урокĕсем: 3-мĕш класс: меслет сĕнĕвĕсем / Т.В Артемьева, О.И. Печников. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2012. – 144 с.

**УДК 373**
**ББК 74.268.3 (2Рос=Чув)**

© Артемьева Т.В., Печников О. И., 2012
© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви, 2012
© Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ, 2012

Ч-44885

Национальная би...
Чувашской Р...

# «Литература вулавĕ» предметăн 3-мĕш класри вĕрентӳ тĕллевĕсемпе задачисем

«Литература вулавĕ» предмета 3-мĕш класра вĕрентнĕ чухне çак тĕллевсемпе задачăсене татса пама палăртатпăр:

– ачасен литература хайлавне туллин ăса хывас хевтине аталантарасси;

– геройсемпе пĕрле савăнма-хурланма хăнăхтарса пынин никĕсĕ çинче туйăмсене çивĕчлетме хавхалантарасси;

– ачасене илемлĕ хайлавăн сăнарлă чĕлхине, илемлĕ сăнар калăпламалли палăртулăх хатĕрĕсене туйма тата ăнланма хăнăхтарасси, сăнарлă шухăшлава аталантарасси;

– литература хайлавĕнчи илемлĕ сăнарсене тепĕр хут ăсра çуратса вĕсен пурнăçне тепĕр хут йĕрлесе тухас ăслая калăпласси, пултарулăха тата евĕрлес хевтене аталантарасси;

– ачасен поэзи туйăмне аталантарасси, илемлĕхе туяссине тарăнлатасси, сăмахлăхăн паха хайлавĕсене кăсăкланса итлес опыта пуянлатасси;

– кĕнекесене юратса вулас туртăма аталантарасси, литература пултарулăхĕпе кăсăклантарасси;

– ачасен туйăмлăх опытне пуянлатасси, çут çанталăкпа таврари тĕнче çинчен мĕн пĕлнине пĕрмаях тарăнлатса пырасси;

– пурнăçри илеме курма, ăна классика литературинчипе танлаштарса пăхма вĕрентесси;

– йывăрлăх тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ шайри хайлавсене хевте çитнĕ таран туллин те тарăн ăнланма вĕрентесси;

– жанр тата содержанипе тематика тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ кĕнекесене вуланă майăн ачасен тавра курăмне анлăлатасси;

– ачасен пуплевне аталантарассине тĕллевлĕн йĕркелесси, пуплев ăслайĕсене, вулав, итлев, çыру, каласа парас хăнăхусене хастаррăн аталантарасси;

– сăмах искусствин сăнарлăхĕпе илемне туйма вĕрентесси;

– диалога хутшăнас, палăртса вулас, хатĕрленнĕ хыççăн тата хатĕрленмесĕрех каласа парас хăнăхусене тарăнлатса пырасси;

– ăнланса, тĕрĕс, хăвăрт та палăртуллă вулас ăслайсене çивĕчлетесси;

– вулавҫă тавра курăмне калăпласси, харкам тĕллĕн вулас опыта тарăнлатасси;

– сапăрлăх опытне пуянлатасси, ырăпа усал, лайăххипе япăххи ҫинчен, тĕрĕслĕхпе тӳрĕлĕх ҫинчен пухнă пĕлӳсемпе хăнăхусене пуянлатасси;

– кăмăл-сипет туйăмĕсене аталантарасси, Раҫҫейри халăхсен культурине хисеплеме, юратма хавхалантарасси.

Ачасене сăмах искусствин сăнарлăхне туйма вĕрентмелле. Сăмах сăнарлăхне асăрхама вĕренсен ҫеҫ илемлĕ хайлава туллин, нумай енлĕн ăнланма пулать.

Литература вулавĕ ачасене илемлĕ хайлавсене вулама хавхалантартăр, сăмах хайлалăхĕпе кăсăклантарса ятăр тесе тăрăшмалла.

Вĕрентӳ практикинче нумай чухне сюжетпа информацие тишкернипех ҫырлахнине асăрхама пулать. Ку вăл пысăк ҫитменлĕх. Программăна кĕртнĕ литература хайлавĕсене тишкермелли меслетлĕхĕн йĕрки литература хайлавне пĕр енлĕн ҫеҫ тишкерессинчен хăтарма тивĕҫлĕ.

Тишкерӳ уҫлăхне ҫаксене те кĕртмелле: илемлĕ хайлавăн эстетика туртăмĕсем, автора мĕн-мĕн хумхантарни, кăмăл-сипет проблемисемпе пахалăхĕсем т. ыт. те.

Илемлĕхпе эстетика тата литературоведени принципĕсем – тĕп принципсем, вĕсен мĕн пур ĕҫе ертсе пымалла. Ку принципсене кашни урока хатĕрленнĕ чухнех асра тытмалла.

## Литература вулавĕн «Ылтăн пучах» кĕнеки тытăмĕ

Виҫҫĕмĕш класра литература вулавне вĕрентме пĕр кĕнеке калăпланă.

Малтанхи классенчи пекех ку кĕнекене те официаллă ятсăр пуҫне ятарлă ят («Ылтăн пучах») панă. Ăна та аталану принципне шута илсе суйланă. Пĕчĕк пĕрчĕрен калча шăтса тухать, калчаран ылтăн пучах ӳссе ҫитĕнет. Ачасен пĕлӳ-ăслайĕпе ăнланулăхĕ те ҫавнашкал. Пĕрремĕш-иккĕмĕш классенче калăплама пуҫăннисенчен чылайăшĕ виҫҫĕмĕш класра йĕркеленсе тĕвĕленет. Кĕнекепе паллашнă хыҫҫăн ҫакăн евĕрлĕ пĕтĕмлетӳ ачасене хăйсене йĕркелеме хистет: «Кĕнеке мĕн ятлă? Маларах класрисем мĕн ятлăччĕ? Ятсене мĕнлле ăнлантарнăччĕ? Ҫак кĕнекене мĕншĕн «Ылтăн пучах» тенĕ-ши?» Ҫакăн пек сӳтсе явусем пулăмсене сăлтавлама вĕрентсе пыраҫҫĕ:

ачасен шухăш логикине аталантарма, вĕренĕвĕн универсалă действийĕсене ăнаçлăрах йĕркелеме пулăшаççĕ.

Ачасен ĕçне ертсе пыма, сӳтсе яву йĕркелеме, пĕтĕмлетӳсем калăплама пулăшма ку кĕнекене те малтанхи тăвата персонажа кĕртнĕ: тантăш ачасем – Верукпа Тимук, ватăсем – Шухши мучипе Мариç кинеми, вĕрентекен – Мария Васильевна. Мариç кинемипе Шухши мучи ачасемшĕн ырă кăмăллă кукамайĕпе кукашшĕ е асламăшĕпе аслашшĕ пекех. Икĕ çул вĕсем урокран урока ачасемпе пĕрле пулнăччĕ, кăмăл-сипет ыйтăвĕсене хускатнăччĕ, ăса вĕрентнĕччĕ. Ку вĕренӳ çулĕнче чылай пĕлӳ-ăслай туяннине шута илсе ачасем кĕнеке страницисенче ватăсемпе сайрарах тĕл пулаççĕ. Нумай ыйтăва вĕсен хăйсем тĕллĕн шутлама, татса пама тăрăшмалла, пĕтĕмлетӳсем тумалла. Çав вăхăтрах Шухши мучи сӳтсе явнă çĕре тăтăшрах хутшăнать, уйрăмах аваллăхпа çыхăннă ыйтусене сӳтсе явма. Сăмах хушать, йăлăхтармасăр вăл е ку пулăм çинчен ăнлантарать, ăса вĕрентет. Вĕсем Мариç кинемипе пĕрле ĕлĕк-авал мĕнле пулнине аса илеççĕ, ачасене каласа параççĕ. Хайлавсен тĕп шухăшĕпе идейине уçса паракан ваттисен сăмахĕсемпе тата каларăшсемпе паллаштараççĕ.

«Ылтăн пучах» кĕнеке страницисенче тăтăш тĕл пулакан персонаж – Мария Васильевна учительница. Çакă ачасен ĕçĕ-хĕлĕ кăткăсланнипе çыхăннă.

Литература теорийĕн хăш-пĕр кăткăсах мар пĕлĕвне ачасем иккĕмĕш класрах ăса хывма пуçланăччĕ. Вĕсен вĕренĕвĕн универсаллă действийĕсем те йĕркеленсе пыраççĕ. Виççĕмĕш класс тĕлне ачасем пулăмсен хутшăнăвĕсемпе çыхăнăвĕсене сăнама-курма, ансат пĕтĕмлетӳсем патне пыма вĕренсе çитеççĕ. Çавăнпа литература вулавĕн тĕллевĕсем те тарăнланаççĕ, тишкерӳ кăткăсланать. Çакна валли кĕнекере кашни хайлав хыççăн калăплă инструментари – меслетлĕх аппарачĕ панă. Унти ыйтусемпе ĕçсем утăм хыççăн утăм ачасене пĕтĕмлетӳ (хайлавăн тĕп шухăшне уçăмлани) патне илсе пыраççĕ. Çапах та вĕсене хальлĕхе хăйсем тĕллĕн пĕтĕмлетӳсем тума йывăр. Çавăнпа литература пĕтĕмлетĕвĕсене Мария Васильевна вĕрентекен йĕркелет, вăлах терминсене ансаттăн ăнлантарать.

Программăпа килĕшӳллĕн 3-мĕш класра ачасене тĕрлĕ жанрлă хайлавсене тишкерме вĕрентнисĕр пуçне чăваш тата ытти халăх çыравçисем çинчен те пĕлӳ памалла. Хальлĕхе ку пĕлӳ тарăнах мар: хăш халăх çыравçи, халăх асĕнче мĕнпе юлнă, паллă хайлавĕсем. Çаксем çинчен Мария Васильевна кĕскен пĕлтерет. Хайлав

чĕлхин тишкерĕвĕпе ҫыхăннă пĕтĕмлетӳсене те Мария Васильевна тăвать.

Верукпа Тимук, малтанхи кĕнекесенчи пекех, ҫивĕч ыйтусем тавра пуҫарнă калаҫăва хутшăнаççĕ, хăйсен шухăшĕсене пĕлтереççĕ, ачасене калаҫăва явăҫтараççĕ.

Ку кĕнекере ятарлă уйрăм палăртусем пур. Малтанхисенчи пекех, кунта та ыйтусемпе ĕҫсене, пĕтĕмлетӳсене палăртнисем. хăйсем тĕллĕн хайлама, ӳкерме-сăрлама сĕннисем кĕртнĕ. Енчĕкпе ачасене ăнланма кăткăсрах сăмахсене палăртнă, вĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарнă.

Кунсăр пусне кĕнекере ҫĕнĕ палăртусем те панă: сăмах майлашăвĕн пĕлтерĕшне словарьте тупма хушни (фразеологизмсен кĕске словарьне кĕнеке вĕҫĕнче панă), хайлаври ҫивĕч самантсене палăртни. Уйрăм палăртусен тĕллевĕ – ачасене кĕнекепе хăйсем тĕллĕн ĕҫлеме пулăшасси.

Кĕнеке 11 пайран тăрать. Пайсене календарьпе тематика принципне тĕпе хурса йĕркеленĕ, йĕркине те ҫавна шута илсех палăртнă. Малтанхи пекех кĕнеке шкул пурнăҫĕпе ҫыхăннă «Ак ҫитрĕ сентябрь» пайран пуҫланать. Пая вĕренĕвĕн хутшăну универсаллă действийĕсене калăплас тĕлĕшпе паха хайлавсене кĕртме тăрăшнă.

1–2-мĕш классенче вĕренӳ ĕҫĕпе, вĕренекен тивĕҫĕсемпе, яваплăхĕсемпе паллаштарассине, вĕсене ăса хывма пулăшассине ытларах тимленĕ пулсан, ку тапхăрти задачăсем кăткăсланаççĕ. Ачасемпе тарăнрах ыйтусем хускатмалла: вĕреннĕ ҫын вăл мĕнлерех ҫын, ҫынсен хутшăнăвĕ еплерех пулмалла? Ҫынпа ҫын хушшинчи хутшăну, пĕр-пĕринпе тимлĕ пуласси, харкам кăмăл-ĕмĕчĕсемсĕр пуҫне ыттисен туйăмĕсене сисме, шута илме пĕлесси – ҫакă пулмалла ачасемпе сӳтсе явмалли ыйтусен карти.

«Чăваш ҫĕр-шывĕ» пайра ачасем «тăван ҫĕр», «тăван ҫĕр-шыв», «патшалăх» ăнлавсене тарăнрах уҫăмлаççĕ. Хайлавсене тишкернĕ май ачасене тăван халăх кăмăл-туйăмне, чунне ăнланма, хăйсене халăхăн уйрăлми пĕчĕк пайĕ пек туйса илме пулăшмалла. Ҫавăн пекех тăван ен илемне, тăван халăхăн культура несĕл эткерлĕхне кăтартасси те ҫак пайри хайлавсене тишкернĕ май татса памалли задачăсем.

«Кĕркунне» пайра ытларах сăнлавлă проза, сăвăсем те пур. Вĕсене вуланă май ачасене текстри сăнлăхсене, вĕсене автор мĕнле ҫырса панине асăрхама вĕрентсе пымалла. Пуплев сăнарлăхне, кĕввине туйма, сăнарлăх хатĕрĕсене курма хăнăхтармалла.

Халăх сăмахлăхĕпе паллашасси ку класра анлăрах пулать. Вăл тапхăрăн-тапхăрăн пулса пырать. Малтан ачасем тупмалли юмахсене, вĕççĕр тата пулмасла халапсене аса илеççĕ, вăйăсемпе тата вăйă юррисемпе паллашаççĕ. Унтан *«юптару»* ăнлава уçăмлатаççĕ. Çак жанрлă хайлав тĕслĕхĕсемпе (ĕлĕкрех тата хальтерех çырнисемпе, пĕр темăпа пĕр ĕç çинченех хайланисемпе, сăвăлла тата прозăлла хайланисемпе) паллашаççĕ.

Улăп халапĕсене, чăваш тата ытти халăх юмахĕсене («Улăп йăхĕнчен эпир, туссем» тата «Юмах юпа тăрринче» пайсене) малалла тишкереççĕ. Ку пайри хайлавсем вĕрентĕвĕн харкам универсаллă действийĕсене йĕркелеме меллĕ. Хайлавсене вуланă-тишкернĕ май ачасем тăван халăх историйĕпе, несĕлĕсемпе, йăхĕ-ратнипе тĕплĕнрех паллашаççĕ. Вĕсенче тăван халăхпа, унăн историйĕпе, ăс-хакăл мулĕпе мухтанас, хавхаланас туйăмсем çуратса аталантарма тăрăшмалла.

Малалла кĕнекере «Асамлă хĕл», «Эпир – сăпайлă ачасем», «Çур хаваслăхĕ», «Чĕр чун тĕнчи», «Ытарайми, асран кайми тăван тавралăх» пайсене вырнаçтарнă.

Пайсене чăваш çыравçисен хайлавĕсене ытларах кĕртме тăрăшнă. Кÿршĕллĕ халăхсен çыравçисен хайлавĕсене те çителĕклĕ панă. Вĕсем тематика, жанр, шалаш (содержани,) сюжет тата композици йĕркеленĕвĕ, тĕп шухăшĕ тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ. Ачасен ÿсĕмне, ăслав мехелне, литература аталанăвĕн шайне шута илсе хайлавсен тишкерĕвĕ те кăткăсланать. Çакна валли хайлавсем хыççăн курăмлă ĕçсемпе ыйтусен анлă комплексне панă.

## Литература вулавĕн урокĕсенче воспитани парасси

Раççей Федерацийĕн Конституцийĕнче уйрăм этемĕн прависемпе ирĕклĕхне чи пысăк пахалăх тесе палăртнă. Кашни этемĕнех правасемпе пĕрлех тивĕççем пур. «Мы, многонациональный народ Российской Федерации, – вулатпăр Коституцире, – соединенные общей судьбой на своей земле, утверждая права и свободы человека, гражданский мир и согласие, сохраняя исторически сложившееся государственное единство, исходя из общепризнанных принципов равноправия и самоопределения народов, чтя память предков, передавших нам любовь и уважение к Отечеству, веру в добро и справедливость, возрождая суверенную государственность России и утверждая незыблемость ее демократической основы, стремясь обеспечить благополучие и процветание России, исходя из от-

ветственности за свою Родину перед нынешним и будущими поколениями, сознавая себя частью мирового сообщества, принимаем Конституцию Российской Федерации».

Паян пирӗн обществӑра пурнӑҫри хаклӑхсем улшӑннӑ вӑхӑт. Иртнӗ ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсенче Раҫҫейре паха улшӑнусемпе пӗрлех пирӗншӗн киревсӗр туйӑнакан пулӑмсем те ҫуралса аталанчӗҫ. Вӗсем обществӑри кӑмӑл-сипет пахалӑхӗсене, гражданла ӑнланулӑха, ҫынпа ҫын, этемпе общество хушшинчи хутшӑнусене тӑрлавсӑр витӗм кӳчӗҫ. Асар-писер саманара, пахалӑх маякӗсем ылмашӑннӑ тапхӑрта обществӑри пӗрлӗх арканать, ҫамрӑксен пурнӑҫри хаклӑхӗсем улшӑнаҫҫӗ, аслӑ ӑрӑвӑн хаклӑхӗсем арканаҫҫӗ, моральпе кӑмӑл-сипет пахалӑхӗсем урӑхланаҫҫӗ. Асӑннӑ тапхӑрта Раҫҫейри васкаварлӑн совет идеологине сӳтсе пӑрахрӗҫ, Анӑҫри пурнӑҫа евӗрлеме пикенчӗҫ.

Раҫҫей обществине кӑмӑл-сипет тӗлӗшӗнчен пӗтӗҫтерес, этеме пӗр-пӗрне тата патшалӑха хисеплеме вӗрентес, пурнӑҫ ҫине урӑхларах пӑхакан ҫыннӑн шухӑш-кӑмӑлне тӳсме хӑнӑхтарас ӗҫре шкул пӗлтерӗшӗ калама ҫук пысӑк.

Уйрӑм ҫын пахалӑхӗсем ҫемьере калӑпланма пуҫлаҫҫӗ. Шкулта вӗсем тӗллевлӗн те тарӑннӑн аталанаҫҫӗ. Раҫҫейри ҫӗнӗ шкул обществӑна пӗтӗҫтерекен чи пӗлтерӗшлӗ услови вырӑнӗнче. Шӑпах шкулта ача ӑс-хакӑл енчен ҫеҫ мар, кӑмӑл-сипетпе мораль тӗлӗшӗнчен те аталанать. Шкул ҫулӗнчи ачасем гражданлӑхпа кӑмӑл-сипет тӗлӗшӗнчен тивӗҫлӗ воспитани илейменни кайран вӗсен умне пысӑк йывӑрлӑхсем кӑларса тӑратать. Ача чухне ӑса хывни ӗмӗрлӗхе юлать.

Воспитани тени вӑл мӗнле те пулин идеал калӑплас тесе ӗҫлени пулать. Ку идеал общество уйрӑмах хаклакан идеал пулмалла. Совет саманинче уйрӑм гражданинпа унӑн пурнӑҫне йӗркелессине патшалӑх хӑй ҫине илнӗччӗ. Пурнӑҫри мӗн пур пахалӑхсем коммунизмпа коммунистсен партийӗ тавралла пӗтӗҫнӗччӗ. Ҫав вӑхӑтрах совет тапхӑрӗнче те ҫӳллӗ педагогика идеалӗ пурччӗ. Ку вӑл – пур енлӗ аталаннӑ ҫын. Совет тапхӑрӗнче массӑллӑ патриотизм, ҫӗршывшӑн хӑйсене хӗрхенменни, укҫа-тенке пурнӑҫра чи кирли тесе хакламанни тата паянхи ҫамрӑксем ӑнланма пултарайман ытти ҫӗр-ҫӗр тӗслӗхе асӑнма пулать.

XX ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсенче общество умӗнчи тивӗҫсенчен, наци трдицийӗсемпе пахалӑхӗсенчен ирӗклӗ харкамлӑх (личность) идеалӗ ҫуралчӗ. Паянхи воспитани идеалне палӑртнӑ чухне ытти ӗмӗрсенчи воспитани идеалӗсене те шута илмелле. Паллах ӗнтӗ,

кăмăл-сипет пахалăхĕсем патшалăх саккунĕсенче çырăннă. Вĕсене хисеплеме вĕрентесси – кашни учитель тивĕçĕ.

Паян чи пысăк хаклăх, наци уменчи чи пĕлтерĕшлĕ задача тесе çĕр-шыври халăх йышне ӳстерессине, унăн пурнăçне лайăхлатассине, кăмăл-сипет тасалăхне упраса хăварассине, гражданла тăванлăха тата наци культурине аталантарассине йышăнмалла. Паянхи наци воспитани идеалĕ вăл – хăйне тӳрĕ тытакан, Тăван Çĕршыв шăпине хăйĕн шăпи пек йышăнакан, патшалăхăн паянхи тата ыранхи пурнăçĕшĕн хăйне яваплă тесе шутлакан, Раççейри нумай нациллĕ халăхăн культура традицийĕсене упракан гражданин.

Çапла вара, паян Раççей Федерацийĕн патшалăх политикинче Раççей гражданинĕн харкамлăхне ăс-тăнпа кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен аталантарса воспитани парасси тĕп задача пулса тăрать. Çак юхăмра педагогика яваплăхне çапларах ăнлантарма пулать:

– паян обществăпа патшалăх ачасемпе çамрăксене активлă граждан позицийĕллĕ, тăван патшалăх шăпишĕн яваплă пулма вĕрентсе ӳстерессшĕн;

– Раççей гражданинĕн харкамлăхне ăс-тăнпа кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен педагогика витĕмĕ кӳмелли тĕп институт пĕтĕмĕшле вĕренӳ пулать. Ăс-тăнпа кăмăл-сипет воспитанийĕн тĕллевĕсене пурнăçламалли тĕп субъект пĕтĕмĕшле вĕренӳ паракан учрежденин педагогика коллективĕ;

– ăс-тăнпа кăмăл-сипет аталанăвĕпе воспитанийĕн содержанийĕ, педагогика коллективĕсен ĕçĕ-хĕлĕ обществăпа патшалăх кăларса тăратакан тĕллевсене пурнăçлассипе çыхăнса тăрать.

Çапла майпа, пĕтĕмĕшле вĕрентӳре ăс-тăнпа кăмăл-сипет аталанăвĕпе воспитанийĕ гражданлăх туйăмĕсене аталантарма пулăшмалли услови пулма тивĕçлĕ.

Педагогика юхăмĕнче çак пахалăхсене ăнланса илсе ăса хывмалла:

– çемье пурнăçĕ;

– культурăпа регион пĕрлешĕвĕ;

– тăван халăхăн культури (унта пахалăхсен системине асăрхатпăр);

– Раççейри гражданла наци;

– пĕтĕм тĕнче пĕрлĕхĕ.

Раççей гражданинĕн аталанăвĕнчи тепĕр пусăм вăл – харкам халăх традицийĕсемпе пахалăхĕсене, культурăпа истори, социаллă тата ăс-тăн пурнăçĕнчи формăсене йышăнни пулать. Тăван ял, хула, район, республика, çемье, тăвансем, тус-юлташсем, тăван

ҫут ҫанталӑк, социаллӑ тавраш урлӑ ҫак ӑнлавсем конкретлӑ содержанипе туласҫӗ: «Тӑван ҫӗр-шыв», «тӑван тавралӑх», «тӑван ҫӗр», «тӑван чӗлхе», «манӑн ҫемьепе йӑх-ратне», «манӑн ҫурт». Раҫҫей гражданинӗн ӑс-тӑнпа кӑмӑл-сипет аталанӑвӗн ҫӳлерех тӑракан шайӗнче Раҫҫей Федерацийӗнчи нумай нациллӗ халӑхӑн культурипе ӑс-тӑн традицийӗсене йышӑнни. Гражданла ӑнланулӑх аталанассинче питех те пӗлтерӗшлӗ тапхӑр – этем этнокультура традицийӗсене харкамлӑх шайӗнче ӑса хывни.

Раҫҫей гражданинӗн харкамлӑх аталанӑвӗнче ытти нацисен культурине хисеплеме пӗлни, урӑхларах шухӑшлакансене тӳсме пултарни – питех те кирлӗ условисем.

Харкамлӑха аталантарас енчен пӑхас пулсассӑн вӗренекенсене воспитани парасси ҫак задачӑсене пурнӑҫа кӗртессипе ҫыхӑннӑ:

– кӑмӑл-сипет тӗлӗшӗнчен аталанма, пурнӑҫ пӗлтерӗшне ӑнланма хатӗр пулни;

– харкам пултарулӑхне мораль нормисен никӗсӗ ҫине таянса аталантарма хатӗр пулни;

– ирӗклӗх традицийӗсен никӗсӗ ҫинче кӑмӑл-сипет пахалӑхӗсене ҫирӗплетни;

– ырӑпа усал, лайӑххипе япӑххи ҫинчен обществӑра ҫирӗпленнӗ ӑнланӑва кура харкамлӑх пахалӑхӗсене аталантарни;

– харкамлӑх наци пахалӑхӗсемпе традицийӗсене йышӑнни;

– харкам сунӑмсемпе шухӑшсене тиркевлӗн хаклама, харкам шухӑша палӑртма тата ӑна хӳтӗлеме пултарни;

– харкам тӗллӗнех вӑл е ку ӗҫсене тума, вӗсемшӗн явап тытма хатӗр пулни;

– ӗҫе юратни, перекетлӗх, пурнӑҫа юратни, йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме пултарни;

– ытти ҫынсен, этем пурнӑҫӗн хакне ӑнланни, этем пурнӑҫӗшӗн хӑрушлӑх кӑларса тӑратма пултаракан ӗҫсемпе хӑтланусене тӳсменни, вӗсене хирӗҫ тӑма пултарни;

– ҫемье, общество, Раҫҫей, пулас ӑрусем умӗнчи моральлӗ яваплӑх никӗсӗ ҫинче ирӗклӗхе юратни, гражданлӑх тӗлӗшӗнчен аталанни;

– Раҫҫее ӗненнине ҫирӗплетни, Тӑван ҫӗр-шывӑн иртнӗ, хальхи тата килес ӑрусем умӗнчи харкам яваплӑхне ҫирӗплетни.

Обществӑри хутшӑнусем енчен пӑхас пулсассӑн вӗренекенсене воспитани парасси ҫак задачӑсене пурнӑҫа кӗртесси пулса тӑрать:

– наци пӗтӗмӗшле кӑмӑл-сипет пахалӑхӗсене йышӑннин никӗсӗ ҫинче харкама Раҫҫей гражданинӗ вырӑнӗнче шутлани;

– граждансем тулашри тата шалти хăрушлăха хирĕç кар тăма хатĕр пулни;
– патриотлăхпа гражданлăх туйăмне аталантарни;
– Раççейри нумай нациллĕ халăхăн тăнăçлăхне упрани, этноссем хушшинчи татулăхпа килĕштерĕве упрани;
– Тăван çĕр-шыври нумай нациллĕ халăх никĕсĕнче çемье çирĕплĕхĕ чи пысăк пахалăх пулнине ăнланни;
– çемьен чи пĕлтерĕшлĕ те ырă енĕсене ăнланни тата аталантарни: юрату, пĕр-пĕрне пулăшни, атте-аннене хисеплени, кĕçĕннисемпе аслисемшĕн тăрăшни;
– этем пурнăçне хаклани, йăха малалла тăсма тăрăшни;
– саккунсене уяни, право йĕркине хисеплени;
– ăрусем хушшинчи ăс-тăн, культура тата социаллă çыхăнусене аталантарни.

Патшалăх хутшăнăвĕсем енчен пăхас пулсассăн вĕренекенсене воспитани парасси çак задачăсене пурнăçлани пулса тărать:
– общество пурнăçне активлă хутшăнас тата яваплă пулас сунăма аталантарни;
– демократиллĕ федеративлă правăллă патшалăха çирĕплетни тата аталантарни;
– граждансемпе общество организацийĕсем патшалăх институчĕсене шаннине ўстерни;
– çĕр-шыври пурнăçа лайăхлатма тăрăшни;
– наци хăрушсăрлăхне çирĕплетни.

Ăс-тăнпа кăмăл-сипет аталанăвĕпе воспитанийĕ тата социализацин тĕп содержанийĕ шутне социумпа истори, культура, çемье традицийĕсенче упранакан нацин тĕп пахалăхĕсем кĕреççĕ. Наци пурнăçĕнче кăмăл-сипетпе çынлăх çăлкуçĕсене уйăрма пулать. Вĕсем çине таянни этеме киревсĕрлĕхе хирĕç тăма май парать, харпăр хăй ăс-тăнне, пурнăçне, общество хутшăнăвĕсен системине тухăçлă аталантарма пулăшать.

Кăмăл-сипетлĕхĕн ĕмĕртен пыран çăлкуçĕсем шутне çаксем кĕреççĕ: Раççей, Раççей Федерацийĕнчи нумай нациллĕ халăх, гражданла общество, çемье, ĕç, искусство, тĕн, çут çанталăк, этемлĕх. Традициллĕ çăлкуçсемпе килĕшўллĕн наци кăмăл-сипетлĕхĕн çак пахалăхĕсене палăртатпăр:
– патриотлăх – Раççее, тăван халăхпа çуралнă çĕр-шыва юратни, Тăван çĕр-шыва хўтĕлеме хатĕр пулни;
– социаллă пĕршухăшлăх – харкамлăх тата наци ирĕклĕхĕ, çынсене, патшалăхпа гражданла общество институчĕсене шанни,

тĕрĕслĕх, ыр кăмăллăх, чыслăхпа тивĕçлĕх;

– гражданлăх – Тăван çĕр-шыв ырлăхĕпе тăнăçлăхĕшĕн ĕçлени, право пуç пулса тăракан патшалăх, закон тата право йĕрки, нумай культурăллă тĕнче, совеçпе тĕне ĕненес ирĕклĕх;

– çемье – юратупа шанчăклăх, сывлăх, атте-аннене хисеплени, пехет, аслисемпе кĕçĕннисене пăхни, йăха малалла тăсма тăрăшни;

– ĕç тата пултарулăх – ĕçе хисеплени, пултарулăх тата çĕнĕ япала ăсталани, тĕллев патне талпăнни тата çине тăни;

– ăслăх – пĕлӳ хакĕ, чăнлăхшăн тăрăшни, тĕнчен ăслăх ӳкерчĕкĕ;

– Раççейри йăлана кĕнĕ тĕнсем – ĕненӳ, этемĕн тĕнри пурнăçĕ, тĕн тĕнче курăмĕн пахалăхĕсем, ыттисен шухăшне хисеплени, тĕрлĕ конфессисем хушшинчи диалог;

– искусство тата литература – илем, гармони, этемĕн ăс-тăн пурнăçĕ, кăмăл-сипет суйлавĕ, пурнăç пĕлтерĕшĕ, эстетика аталанăвĕ, этика аталанăвĕ;

– сут çанталăк – эволюциллĕ аталану, тăван çĕр, Çĕр планета, экологи ăнланăвĕ;

– этемлĕх – пĕтĕм тĕнчери тăнăçлăх, халăхсен тата культурăсен нумай енлĕхĕ, этемлĕх аталанăвĕ, пĕтĕм тĕнчери халăхсем хутшăнса ĕçлени.

Ăс-тăнпа кăмăл-сипет аталанăвĕпе воспитанине çак принципсен никĕсĕ çинче йĕркелесе ертсе пыратпăр:

– педагог хăй тĕслĕх пулни;

– социаллă-педагогикăллă хутшăну;

– харкамлăх аталанăвĕ;

– ăс-тăнпа кăмăл-сипет воспитанийĕн программисен пĕтĕçӳлĕхĕ;

– воспитанин социаллă кирлĕлĕхĕ.

Педагог тĕслĕхĕ çинчен çакна каламалла. Учитель хăйне урокра та, уроксем хыççăн та ачасемпе, ытти учительсемпе, ашшĕамăшĕсемпе мĕнле тыткалани, хăш кăмăл-сипет пахалăхĕсене маларах хуни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Педагог ачашăн ырă тĕслĕх мар пулсан, тем пек чаплă воспитани программи те хут çинче çеç юлма пултарать. Учителĕн ырă енĕсем шкулта ытти мĕн пур пахалăхсенчен чи çӳлте тăраканнисем. Педагогăн патшалăх тата социаллă статусне ӳстересси – паянхи чи çивĕч ыйтусенчен пĕри. Учитель обществăра чи хисеплĕ çын пулма тивĕçлĕ. Педагог профессийĕ сумлă професси пултăрччĕ.

Паянхи пурнăç условийĕсенче социаллă-педагогикăллă хутшăнусăр май килмест. Вĕренӳ юхăмĕн субъекчĕсем кунашкал

хутшăнусăр ăс-тăнпа кăмăл-сипет аталанăвĕпе воспитанине туллин те пур енлĕн пурнăçлама пултараймаççĕ. Ку задачăна пурнăçлас тесен социализацин ытти субъекчĕсемпе (çемье, общество организацийĕсем, хушма вĕренӳ, культурăпа спорт учрежденийĕсем, массăллă информаци хатĕрĕсем) педагогика тĕлĕшĕнчен тĕплĕн шухăшласа йĕркеленĕ çыхăнусем пулмалла.

Уйрăм çын аталанăвĕ XX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче малти вырăнтаччĕ, паян та чи çивĕч задача пулса юлать. Ăс-тăнпа кăмăл-сипет аталанăвĕнче вăл туллин пурнăçланмалла. Харкамлăха пур енлĕн аталанмалли условисем туса пани, пĕлӳсем пани ăслайхăнăхусене, тивĕçлĕ компетенцисене аталантарни ирĕклĕ çынна пăхса ӳстермелли никĕс вырăнĕнче. Чăнласах ирĕклĕ пулас тесен, ырăпа усала, лайăххипе япăхине уйăрма пĕлмелле. Хăвăн пурнăçна хаклама, ĕçе юратма, ытти çынсене хисеплеме вĕренсе ӳсмелле.

Ăс-тăнпа кăмăл-сипет аталанăвĕпе воспитанийĕ ачасен кулленхи ĕç-хĕлĕ (урок, класс тата шкул тулашĕнчи, обществăшăн усăллă ĕçсем) витĕр пурнăçа кĕрсе пымалла. Урăхла каласан, программăсен интеграцийĕ пулмалла.

Воспитани содержанийĕн никĕсĕнчи тĕп пахалăхсене çак çăлкуçсенче шыратпăр:

– Раççей, чăваш халăхĕн, харкам ратне-ăру, çемье историйĕ;
– харкам ашшĕ-амăшĕн, ытти тăвансен пурнăç опычĕ;
– чăвашсен авалхи туррисем;
– Христос тĕнĕ;
– литературăпа искусство хайлавĕсем, тăван тата тĕнче культуринчи паха тĕслĕхсем;
– кулленхи пурнăçа çутатакан литература, массăллă информаци хатĕрĕсем;
– чăваш тата ытти халăх фольклорĕ;
– обществăшăн усăллă тата харкамшăн пĕлтерĕшлĕ ĕç-хĕл;
– вĕренӳ дисциплинисем;
– информаципе ăслăх пĕлĕвĕсен ытти çăлкуçĕсем.

Паянхи пурнăçра проблемăсем, татса паман ыйтусем çителĕклех. Вĕсенчен ниçта та тарса ӳкеймĕпĕр. Кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен тасарах, ырăрах пулас текен ĕмĕт-ăнтăлу кашни вĕренекен умĕнче пулмалла. Хамăр тасарах пулсан, тĕнче те тасарах пулĕ.

Литература вулавĕнче вĕрентӳпе воспитани пĕр пичеври икĕ ăнлав пулмалла. Вĕсене пĕр пулăмăн икĕ енĕ тесе йышăнмалла.

## «Литература вулавӗ» предмет мелӗсемпе 3-мӗш класра вӗренӗвӗн универсаллӑ действийӗсене (ВУДсене) калӑпласси

***Харкамлӑх ВУДсем:***

– харкам вырӑнне тупни – хуравланӑ чухне тепӗр ачан шухӑшне шута илме тивекен ыйтусем лартни, учебник геройӗсене Тимукпа Верука вӑл е ку ыйтӑва татса пама пулӑшни. «Тимука (Верука) ку ыйтӑва хуравлама пулӑш» евӗрлӗ ыйтусем. «Эсӗ ху мӗнле шутлатӑн? Эсӗ Тимукпа килӗшетӗн-и?» евӗрлӗ ыйтусем;

– поэзипе проза тексчӗсен тӗп шухӑшне, кӑмӑл-сипетпе этика пахалӑхне чухлани;

– кӑмӑл-сипетпе этика пахалӑхӗсене калӑплани – ҫут ҫанталӑка сӑнама, тавралӑхра ыттисем курманнине асӑрхама, харкам валли мӗн те пулин ҫӗннине уҫса тӗлӗнни ҫинчен калакан текстсем;

– куҫпа курма май пурри тата куҫпа курма май ҫукки, ҫут ҫанталӑкри тата искусствӑри илеме курма, унпа киленме хӑнӑхасси: *Н. Янкас.* «Лӑпкӑ ҫӗр-шывра» (24–26 с.), *С. Вишневский.* «Туслӑх сӑмахӗ» (26–28 с.), *Ю. Петров-Вирьял.* «Мерчен те ылтӑн пӗрчӗсем» (28–30 с.), *Н. Теветкел.* «Кӗрхи сӑнсем» (31–32 с.), *Н. Исмуков.* «Кӗр пасарӗ» (32–33 с.), *И. Соколов-Микитов.* «Кӗрхи вӑрманта» (33–34 с.), *М. Волкова.* «Кӗрхи хурӑн» (34–35 с.), *О. Туркай.* «Ҫулҫӑ» (36–39 с.), *Н. Янкас.* «Сивӗтет ҫанталӑк» (39–40 с.), *В. Эктел.* «Хӗл пуҫламӑшӗ» (96–97 с.), *А. Пушкин.* «Хӗлле…» (97–99 с.), *Н.Сладков.* «Хӗллехи ҫу кунӗсем» (99–100 с.), *В. Харитонов.* «Йӗлтӗрпе» (106–107 с.), *А. Смолин.* «Халӑх хайлавӗ майлӑ» (107–108 с.), *М. Джалиль.* «Ҫывракан ача» (116–118 с.), *И. Шухши.* «Кӗрен тӳпе» (128–129 с.), *А. Ерусланов.* «Хапхаҫӑ» (142–146 с.), *Н. Исмуков.* «Ҫурхи тӗнче» (164–165 с.), *Л. Смолина.* «Ҫуркунне пуҫланать» (165–166 с.), *Н. Некрасов.* «Ешӗл шав» (166–167 с.), *М. Уйӑп.* «Ҫурхи вӑйӑ» (167–168 с.), *М. Кипек.* «Ҫурхи вӑрманта» (169–172 с.), *Н. Соколов-Микитов.* «Вӑрманта» (172–174 с.), *Г. Снегирев.* «Малтанхи хӗвел» (174–177 с.), *К. Иванов.* «Ҫуркунне ҫитсен» (177–178 с.), *Н. Матвеев.* «Таврана илем кӳреҫҫӗ» (179–182 с.), *А. Артемьев.* «Ҫурхи кун» (182–183 с.), *Л. Ковалюк.* «Мулкач та тутӑ пултӑр» (196–205 с.), *Н. Матвеев.* «Уртӑш» (206–298 с.), *Н. Матвеев.* «Ҫара ҫерҫи» (208–211 с.), «Каюра» (211–212 с.), *И. Дубанов.* «Эл кӳлли» (216–218 с.), *В. Харитонов.* «Ҫил ачи» (219–220 с.), *Г. Харлампьев.* «Кӳлӗ хӗрринче» (231–233 с.);

– тĕнче ҫине ӳнерҫĕ куҫĕпе пăхма хăнăхни (фантазипе шухăшлав вĕҫевĕн пуянлăхĕ, чĕрĕ мар япаласене чĕрĕ пек курни, танлаштарусемпе ытти палăрту хатĕрĕсемпе выраннă усă курни) – *Г. Сапгир.* «Вĕреннĕ Лаша» (5–7 с.), *Н. Янкас.* «Лăпкă ҫĕр-шывра» (24–26 с.), *Н.Теветкел.* «Кĕрхи сăнсем» (31–32 с.), «Кĕркунне», «Асамҫă хĕл», «Ҫур хаваслăхĕ», «Чĕр чун тĕнчи», «Ытарайми, асран кайми тăван тавралăх» сыпăксенчи ытти хайлавсем;

– туслăхпа хутшăну пахалăхĕ питĕ пĕлтерĕшлĕ пулни, пĕр-пĕрин хуйхи-савăнăҫне пайлама тăрăшни юрату пуҫламăшĕ пулни – *С. Вишневский.* «Туслăх сăмахĕ» (26–28 с.), «Пакшапа кашкăр» юптару (65 с.). «Ту ҫинчен аннă Улăп» халап (72–75 с.), *Н. Карай.* «Йăмăк» (114–116 с.), *М. Джалиль.* «Ҫывракан ача» (116–118 с.). *Р. Минатуллин.* «Пулăшакан» (118–119 с.), *Л. Ковалюк.* «Хăравҫă» (132–141 с.), *А. Еруспанов.* «Хапхаҫă» (142–146 с.), *Н. Иванов.* «Ăсанпа Хураҫка» (193–196 с.);

– тăван халăхăн уйрăлми пайĕ пулнине туйни, культурăпа историе хаклассине калăплани, тăван тавралăхпа Тăван ҫĕр-шыв ҫыхăнăвĕсем – *К. Ушинский.* «Тăван ҫĕр-шыв – пирĕн анне» (16–17 с.), Чăваш Республикин Патшалăх гимнĕ (17–18 с.), *Кашкăр Хуначи.* «Ылтăн ҫĕр» (18–22 с.), *Ю. Петров-Вирьял.* «Мерчен те ылтăн пĕрчĕсем» (28–30 с.), «Халăх сăмахлăхĕ» сыпăкри текстсем, Улăп халапĕсем, «Курай юмахĕ» пушкăрт халăх юмахĕ (86–91 с.), *И. Дубанов.* «Эл кӳлли» (216–218 с.), *Г. Орлов.* «Ҫухату» (220–223 с.);

– текстсене вуласа пĕлнĕ лару-тăрусене харкам пурнăҫ опычĕпе танлаштарса пăхма хистекен ыйтусемпе ĕҫсем – «Сăнарсене сăнлама тăрăш. Кашнийĕ, сан шутупа, миҫе ҫулсенче, харпăр хăйне ҫын ҫинче мĕнле тыткалать?» (11 с.), «Авалхи чăвашсене автор мĕнлерех кăтартать? Эсĕ вĕсене мĕнле сăнланă пулăттăн?» (23 с.), «Сăвă мĕнле туйăм ҫуратрĕ?» (35 с.). «Кăҫал пĕрремĕш юр хăҫан ӳкрĕ? Вăл санăн асра мĕнле тăрса юлчĕ?» (99 с.), «Малалла ĕҫ тата мĕнле аталанма пултарнă?» (146 с.).

***Йĕркелӳ (регулятивлă) ВУДсем*** *(ĕҫ-хĕл юхăмĕпе результачĕсене тĕрĕслесси тата хак парасси, харкам тĕллĕн пахаласси)*:

– ку ВУДсене калăпласси тӳрременех учебникăн тĕп геройĕсем вăл е ку пулăм е ĕҫ-хĕл ҫинчен хăйсен шухăшне палăртса каланипе ҫыхăнса тăрать: «Пулма пултарайман, сăлтавпа тĕллев тĕлĕшĕнчен ҫыхăнса тăман пĕр саманта асăн. – Т и м у к: Сунарҫăсем куян тирне сутма Ҫĕрпӳ пасарне кайни. – В е р у к: Лапшу Ҫтаппанĕ ăсансене пилеш татса тăрантарни. – М а р и я  В а с и л ь е в н а: Ҫыравҫăсем унашкал ӳстеререх каланипе час-часах усă кураҫҫĕ.

Хăш чухне чиккинчен ытлашшипех тухса каяççĕ. Ку мел хайлава чĕрĕрех, кăсăклăрах тăвать, вилĕмсĕр сăнар калăпламa май парать» (61 с.). Тимукпа Верук шухăшĕсем ачасене ĕçе явăçтармалли условисем вырăнĕнче, вĕсенчен нихăшне те чăн тĕрĕс шухăш тесе йышăнма кирлĕ мар. Чи кирли – ачасем харкам тĕллĕн шухăшлама сĕмленччĕр, хăйсен шухăшĕсене хăйсен сăмахĕсемпе палăртма тăрăшчăр. Çапла майпа пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех харкамлă хаклав ăслайĕсем аталанмалла.

***Пĕлўлĕх ВУДсем:***

– çĕнĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăса хывни (22, 28, 30, 35, 49, 51, 54, 69, 74, 75, 77, 85, 86, 90, 146, 155, 159, 165, 168, 178, 204, 208, 210, 211, 223, 226, 229 с.);

– текста тĕрлĕ задачăсене пурнăçласа тепĕр хут вуласа тухни: текст пĕлтерĕшне ячĕ тăрăх чухлани, текстăн темипе тĕп шухăшне палăртни, тивĕçлĕ пайсемпе йĕркесене, палăрту мелĕсене (танлаштару, сăпатлантару (олицетворени), сăнлăх т.ыт.те) шырани: *Г. Сапгир.* «Вĕреннĕ Лаша» (5–6 с.), *Кашкăр Хуначи.* «Ылтăн çĕр» (18–23 с.), *Н. Янкас.* «Лăпкă çĕр-шывра» (24–26 с.), *С. Вишневский.* «Туслăх сăмахĕ» (26–28 с.), *Ю. Петров-Вирьял.* «Мерчен те ылтăн пĕрчĕсем» (28–30 с.), *Н. Теветкел.* «Кĕрхи сăнсем» (31–32 с.), *Н.Исмуков.* «Кĕр пасарĕ» (32–33 с.), *И. Соколов-Микитов.* «Кĕрхи вăрманта» (33–34 с.), *М. Волкова.* «Кĕрхи хурăн» (34–35 с.), *О. Туркай.* «Çулçă» (36–39 с.), *Н. Янкас.* «Сивĕтет çанталăк» (39–40 с.), «Вăйă-шăпа юрри-сăвви» (43–45 с.), «Чипер хĕрле» (48–49 с.), «Ĕмпўлле» (53–54 с.), «Юптарусем» (61–62 с.), *И. Крылов.* «Ула куракпа Тилĕ» (63–64 с.), «Пакшапа кашкăр», «Тимĕр шапапа ăмăрт кайăк» юптарусем (65–66 с.), *Г. Юмарт.* «Улăпсем» (67–70 с.), «Ной карапĕ» (70–71 с.), «Ту çинчен аннă Улăп» халап (72–75 с.), «Çунатлă урхамах» (75–77 с.), «Чее такасем» чăваш халăх юмахĕ (78–80 с.), «Çăмартапа тăрăхла пăрçа» еврей халăх юмахĕ (81–86 с.), «Курай юмахĕ» пушкăрт халăх юмахĕ (86–91 с.), «Пакшапа măйăр» удмурт халăх юмахĕ (91–93 с.), *А. Пушкин.* «Хĕлле…» (97–99 с.), *Н.Сладков.* «Хĕллехи çу кунĕсем» (99–100 с.), «Хырпа Чăрăш тата Уртăш мĕншĕн яланах симĕс?» чăваш халăх юмахĕ (101–106 с.), *Г. Харлампьев.* «Мулкач йĕрĕпе» (108 –111 с.), *Н.Силпи.* «Намăсланакан çĕнтерўçĕ» (111–112 с.), *Н. Карай.* «Йăмăк» (114–116 с.), *М. Джалиль.* «Çывракан ача» (116 –118 с.), *А.Галкин.* «Шăна кăмпин шăпи» (121–122 с.), *Н.Иванов.* «Чечек çыххи» (122–127 с.), *И.Шухши.* «Кĕрен тўпе» (128–129 с.), *Г.Волков.* «Пуянлăх хакне ĕçлекен çеç пĕлет»

(130 – 132 с.), *Л. Ковалюк.* «Хăравçă» (132–141 с.), *А. Еруслано*в. «Хапхаçă» (142–146 с.), *О.Уайльд.* «Хаяр Улăп» (146–155 с.), *И. Исемпек.* «Шăвăç витре» (156–160 с.), *К. Ушинский.* «Вăрманти ачасем» (161–163 с.), *Н. Исмуков.* «Çурхи тĕнче» (164–165 с.), *Н. Некрасов.* «Ешĕл шав» (166–167 с.), *М. Кипек.* «Çурхи вăрманта» (169–172 с.), *Н. Соколов-Микитов.* «Вăрманта» (172–174 с.), *Г. Снегирев.* «Малтанхи хĕвел» (174–177 с.), *К. Иванов.* «Çуркунне çитсен» (177–178 с.), *Н.Матвеев.* «Таврана илем кӳреççĕ» (179–182 с.), *А. Артемьев.* «Çурхи кун» (182–183 с.), *Н. Ишентей.* «Аптраман кăвакалсем» (184–188 с.). *С. Элкер.* «Кашкăрсемпе çапăçни» (189–192 с.), *Н. Иванов.* «Ăсанпа Хураçка» (193–196 с.), *Л. Ковалюк.* «Мулкач та тутă пултăр» (196–205 с.), *Н.Матвеев.* «Уртăш» (206–208 с.), «Çара çерçи» (208–211 с.), «Каюра» (211–212 с.), *Г.Орлов.* «Çухату» (220–223 с.), *Р. Сарпи.* «Пĕлĕтсем – шур пĕлĕтсем» (225–226 с.)

– текстра ятарласа палăртнă сăмахсемпе тата йĕркесемпе ĕçлени: *Х. Уяр.* «Мăйăр хуппи» (8–11 с.), *О. Туркай.* «Çулçă» (36 –39 с.), *И. Крылов.* «Ула куракпа Тилĕ» (63–64 с.), «Курай юмахĕ» пушкăрт халăх юмахĕ (86–91 с.), *Н. Силпи.* «Намăсланакан çĕнтерӳçĕ» (111–113 с.), *Н.Иванов.* «Чечек çыххи» (122–127 с.), *А. Еруслано*в. «Хапхаçă» (142–146 с.), *Н. Ишентей.* «Аптраман кăвакалсем» (184–188 с.), *С. Элкер.* «Кашкăрсемпе çапăçни» (189–192 с.), *Н. Матвеев.* «Çара çерçи» (208–211 с.);

– ĕç тетрадĕнчи хăнăхтарусене ятарлă паллăсем лартса пурнăçлани;

– кирлĕ чĕлхепе библиографи тата содержани информацине ятарлă рубрикăсенче, «Ăнлантару словарĕнче» (234–235 с.) тата «Тупмаллинче» (236–238 с.) шыраса тупни;

***Пĕлӳлĕх ВУДсем (логикăллисем):***

– объектсене вĕсен чи пĕлтерĕшлĕ паллисене палăртас тĕллевпе тишкерни: тĕрлĕ халăх юмахĕсене вĕсен ячĕсемпе сăнарĕсем, тĕп шухăшĕпе теми тĕлĕшĕнчен чăвашсеннипе танлаштарни («Халăх сăмахлăхĕ» (41–66 с.), «Улăп йăхĕнчен эпир, туссем» (67–77 с.), «Юмах юпа тăрринче» (67–77 с.) сыпăксем; халăх юмахĕсене автор юмахĕсемпе танлаштарни; чеелĕхпе тавçăрулăха, тăмсайлăхпа ухмахлăха питлекен сюжет çаврăмĕсем; илемлĕ литература тата ăслăх литератури тексчĕсене танлаштарни; Эзоп, И. Крылов, Л. Толстой юптарăвĕсене персонажсемпе тема тата тĕп шухăшне кура тишкерни, сӳтсе явни; «асамлă юмах», «йăла юмахĕ», «чĕр чун юмахĕ» ăнлавсене çирĕплетни; çут çанталăк пулăмне ăна сăнлакан



4-44885
Национальная библиотека
Чувашской Республики

литература хайлавĕпе танлаштарса тишкерни; çут çанталăкри тата социаллă пурнăçри илем, ку илемĕн тĕп палăрăмĕсене палăртни; çанталăк улшăнăвĕн вак тата тĕп палăрăмĕсем.

***Хутшăну (коммуникативлă) ВУДсем:***

– хутшăнăва йĕркелесе ертсе пыни, каварлă вĕренĕве (сотрудничество) планлани: черетленсе е рольсемпе вулани: *Г. Сапгир.* «Вĕреннĕ Лаша» (5–7 с.); *Х. Уяр.* «Мăйăр хуппи» (8–11 с.); Вăйă юррисем (45–51 с.); Пулмасла халап (54 – 56 с.); «Чее такасем» чăваш халăх юмахĕ (78–90 с.); «Пакшапа мăйăр» удмурт халăх юмахĕ. (91–93 с.); *А. Пушкин.* «Тинĕс кукринче» (93–95 с.); «Хĕлле…» (97– 99 с.); «Хырпа Чăрăш тата Уртăш мĕншĕн яланах симĕс?» чăваш халăх юмахĕ (101–106 с.); *А. Смолин.* «Халăх хайлавĕ майлă» (107–108 с.); *А. Кăлкан.* «Наян Кампур» (119–121 с.); *И.Шухши.* «Кĕрен тӳпе» (128-129 с.); *К.Иванов.* «Çуркунне çитсен» (177–178 с.); *Уйăп Мишши.* «Çуллахи каникул» (230–231 с.);

– пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлени: хайлавсенче çутатакан проблемăпа тема, тĕп геройпа сăнарсем, содержанипе тытăм çинчен кĕнеке геройĕсемпе (Тимукпа Верук, Шухши мучипе Мариç кинеми тата Мария Васильевна) пĕрле шухăшлани. Сăмахран, О. Уайльдăн «Хаяр Улăп» юмахĕ хыççăнхи полилог: «Пĕчĕк ар ача кам пулнă-ши? Мĕншĕн ăна Улăп хăй вилес умĕн курать? – Т и м у к: Пĕчĕк ар ача вăл пирĕшти пулмалла. Хаяр Улăпа ыталаса чуптунăшăн ăна çӳлти ырă вăйсем асап кăтартнă. – В е р у к: Тимук каланипе килĕшме пулать. – Ш у х ш и м у ч и: Усал вăйсене ырă вăйсем лайăх енне улăштараççĕ. – М а р и ç к и н е м и: Çĕр çинче ыррипе лайăххи яланах çĕнтермелле. Çакă вăл пурнăç никĕсĕ. – М а р и я В а с и л ь е в н а: Ку питĕ тарăн шухăшлă юмах. Ар ача куççульне курни Хаяр Улăп чунне çемçетет. Вăл чуп туни Хаяр Улăпран Ырă Улăп туса хурать. Е тата Исмай Исемпекĕн «Шăвăç витре» калавĕ хыççăнхи «калаçу»: М а р и я В а с и л ь е в н а: Исмай Исемпекĕн чăн хушамачĕ – Измаил Григорьев. Вăл Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Чуллă ялĕнче 1945 çулта, Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи вĕçленнĕ çул, çуралнă. Ку калавра хăйĕн йывăр ачалăхĕ çинчен çырать. – Ш у х ш и м у ч и: Пирĕн ачалăх та, кайранхи пурнăç та çăмăл пулмарĕ çав, мăнукăмсем. Выçлăх çулсене те, вăрçине те курма тиврĕ. – М а р и ç к и н е м и: Çапла, хурипе шуррине сахал мар куртăмăр. Эпир курнă хуйха-суйха сирĕн курмалла ан пултăрах. – Калав мĕн çинчен? – Т и м у к: Асламăшĕ мăнукне хĕрхенсе сĕт вăрласа ĕçме вĕрентни çинчен. – В е р у к: Авторăн йывăр ачалăхĕ çинчен. – Калавăн тĕп шухăшĕ мĕнле? Т и м у к: Пурнăç тем пек



И-44885

йывăр пулнă пулсан та ырăпа аса илмеллисем пурри çинчен. – В е р у к: Автор ача чухне ырă çынна кӳрентернĕшĕн ĕмĕрĕпе пăшăрханса пурăнни çинчен. Асăрхăр: литература хайлавĕ çинчен мĕн калани пурин те тĕрĕсех. Пуçран çапса шăп çакă чăн тĕрĕс шухăш тесе калассинчен аякра тăмалла.

**3-мĕш класс пĕтернĕ тĕле ВУДсене калăплас тĕлĕшĕнчен çапларах результатсем пулмалла:**

***Пĕлӳлĕх (пĕтĕмĕшле вĕренӳ) ВУДсем тĕлĕшĕнчен*** ача вĕренсе çитет: вĕренӳ словарĕсемпе ирĕклĕнех усă курма, шыракан сăмаха çăмăллăнах тупма; вĕренӳ кĕнекипе ирĕклĕн усă курма: йышăннă паллăсемпе уйрăм палăртусем мĕне пĕлтернине ăнланма, «Тупмаллипе» усă курса кирлĕ текста шыраса тупма, текстăн палăртнă сыпăкне, палăртнă сăмаха е йĕркесене тупма, сыпăксенче кирлĕ информацие шыраса тупма; текстпа ĕçлеме: унăн темипе тĕп шухăшне чухлама (идея, автора мĕн хумхантарни), пурнăçри пахалăхсене вăл е ку сăнар мĕнле курнине тата йышăннине ăнкарма; тишкерӳ аспекчĕпе килĕшӳллĕ информацие уйăрма; информацин тĕрлĕ çăлкуçĕпе ĕçлеме (вĕренӳ кĕнеки, ĕç тетрачĕ, тĕрлĕ словарьсем, хушма вулав кĕнекисем, библиотека кĕнекисем, хрестомати, интернетри сведенисем), текстсем тăрăх ӳкернĕ ӳкерчĕксемпе ĕçлеме; текст пуххисем тăвас алгоритма ăса хываççĕ: монографиллисем (пĕр çыравçăн), пĕр жанрлисем (чĕр чун юмахĕсем, асамлă юмахсем, йăла юмахĕсем т.ыт.те), пĕр темăллисем («Кĕр сăввисем», «Çĕнĕ çул сăввисем» т.ыт.те), терминсем хăйсем (сăмахран, «Вĕçен кайăк ячĕсем», «Курăк ячĕсем» т.ыт.те).

***Йĕркелӳ (регулятивлă) ВУДсем тĕлĕшĕнчен:*** ĕçе пурнăçлассипе унăн результачĕсен хăш-пĕр тапхăрĕсене харкам тĕллĕнех тĕрĕслесе тăма.

***Хутшăну (коммуникативлă) ВУДсем тĕлĕшĕнчен*** ача вĕренсе çитет: юнашар ларакан ачапа пĕрле, пĕчĕк тата пысăкрах ушкăнсенче ĕçлеме: рольсене валеçсе илме, ушкăнри ĕçĕн харкам пайне пурнăçлама, ăна ушкăнпа килĕштерме; пĕр ыйтăвах иккĕлле ăнланнин никĕсĕсене чухлама тата вĕсен сăлтавĕсене ăнкарма; харкам шухăшне ăнлантарма; текстра вăл е ку сăнар хăтланăшĕн сăлтавне ăнлантаракан саманта тупма.

***Харкамлăх ВУДсем тĕлĕшĕнчен*** ачан тăван халăхăн авалхи кун-çулĕпе, унăн тĕрлĕ тапхăрта палăрнă ывăл-хĕрĕпе, вĕсен пархатарлă ĕçĕсемпе паллашнă май харкам мĕнле халăхран тухнине ăса хывмалла, унăн çакăнпа мăнаçланас туйăм аталанмалла;

сăнарсен ĕçĕ-хĕлĕпе хăтланăшĕсене, кăмăл-туйăмне тишкернĕсăнанă май пĕтĕм этемлĕх сума сăвакан пахалăхсене ăнкармалла; ырăпа усала уяма вĕренмелле; илемлĕ хайлавсем вуланă-тишкернĕ май ачасен илемлĕхпе сăнарлăх туйăмĕ аталанмалла.

## Текстпа ĕçленĕ чухне пуплев ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене аталантарасси

***Вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси.***

Тĕрĕс ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр вуласси. Вуланине сăмах тата предложени шайĕнче ăнланас мелсене тарăнлатасси.

***Палăртуллă вулав тата пуплев шайĕсене çивĕчлетесси, орфоэпи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс вулав хăнăхăвĕсене калăпласа аталантарасси.***

Ачасене ăшра вулани хайшĕн вулани, сасăпа вулани вара итлекенсем валли пулнине сĕмлентересси.

Хăвăрт каларăшсемпе таса каларăшсене, сăвă йĕркисене вуласа уйрăм сасăсен тасалăхне çирĕплетесси.

Вуланă чухне сăмахсене орфоэпи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс калама хăнăхтарасси; пуплевпе вулав хăвăртлăхне аталантарасси; хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр, логика пусăмĕсемпе тăхтавсем туса вулас ăслая тарăнлатасси.

Илемлĕ хайлавсене рольсем тăрăх вулас хăнăхусене аталантарасси, хайлавсене драматизацилесси.

***Вулав хăнăхăвĕсен шайĕ.***

Тĕрĕс, ăнланса, тивĕçлĕ хăвăртлăхпа тата палăртса тулли сăмахсемпе вуласси. Текста минутра 75 сăмахран кая мар хăвăртлăхпа текста, пĕлтерĕшне тата шухăшне шута илсе, тивĕçлĕ интонаципе (хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр, логика пусăмĕсемпе тăхтавсем туса) вуласси.

***Текстпа ĕçлес ăслайсене калăпласси.***

Сăмахпа ўкерчĕк тăвас мелпе усă курса мĕн вуланине туллин, суйлавлăн каласа парасси.

Хайлаври ĕçсен йĕркине палăртасси тата событисен çыхăнулăхне чухласси, ыйтусен тĕрĕс хуравне суйлавлă вулавпа çирĕплетесси.

Текста шухăшĕ тĕлĕшĕнчен вĕçленнĕ пайсене харкам тĕллĕн уйăрасси, учитель пулăшнипе хайлав темине тата шухăшне пĕтĕмĕшле палăртасси.

Вуласа тухнин планне туни тата унӑн содержанине кӗскен палӑртни.

Ӗҫе хутшӑнакансене, ҫут ҫанталӑкпа событисене ӳкерсе кӑтартма автор усӑ курнӑ сӑмахсемпе ҫаврӑнӑшсене харкам тӗллӗн тупасси.

Геройсен хӑтланӑшӗсемпе вӗсен сӑлтавӗсене танлаштарасси; ку хӑтланӑшсене хак парасси.

Илемлӗ хайлавсенче усӑ курнӑ сӑнарлӑ ҫаврӑнӑшсен пӗлтерӗшне ӑнкарасси.

Вӗренӳ кӗнекипе ӗҫлесси: харкам тӗллӗнех хайлава «Тупмаллинчи» ячӗ тӑрӑх тупасси, текст тӑрӑх панӑ ыйтусемпе харкам тӗллӗнех ӗҫлесси.

## Вулавҫӑ пултарӑвне пуянлатасси тата аталантарасси

***Тавраши илеме асӑрхас пултарулӑха ҫивӗчлетесси.***

Ҫут ҫанталӑкри тата социаллӑ пурнӑҫри, этемпе этем, этемпе ҫут ҫанталӑк хушшинчи илеме асӑрхама, унпа киленме тата савӑнма вӗрентесси.

***Шухӑшлав хастарлӑхӗпе вӗҫевне (воображенипе фантази), ассоциациллӗ шухӑшлава, тавраши тӗнчен сӑнарлӑхне ятарлӑ хӑнӑхтарусемпе аталантарасси.***

Пӗрешкел тата расна япаласене сӑнасси тата ӳкерсе (ҫырса) кӑтартасси. «Чи ӑста танлаштаруҫӑ» конкурссем  ирттересси. «Асамлӑ япаласем» вӑйӑсем ирттересси  (тӗрлӗ япалана асамлӑ вӑй парса историсем шутласа кӑлараҫҫӗ, ку историсем тунсӑхлӑ е кулӑшла пулма пултараҫҫӗ. Ушкӑнпа тата харкам тӗллӗн юптарусемпе юмахсен  («Ула Куракпа Тилӗ», «Пакшапа кашкӑр», Улӑп халапӗсем, «Чее такасем», «Курай юмахӗ», «Пакшапа мӑйӑр») сюжет аталанӑвне урӑхлатасси. Сӗннӗ темӑпа импровизацилесе каласа парасси.

***Пӗр сӑмахпа харкам шухӑша витӗмлӗ палӑртас ӑслая аталантарасси.***

«Витӗмлӗ сӑмах туп» вӑййӑ ирттересси. Ирӗклӗ темӑсемпе ҫырса тата каласа парса калавсем ӑсласси.

***Литература хайлавӗн илемлӗхне йышӑнас ӑсталӑха ӳстересси.***

Тӗрлӗ жанрлӑ  хайлавсене итлесе ӑса хывас пултарулӑха аталантарасси, вӗсем ҫуратнӑ кӑмӑла ӳкерчӗксем туса, ушкӑнпа сӳтсе

явса тата драматизаци мелӗпе палӑртасси.

Ачасене поэзи тӗнчине явӑҫтарасси: сӑвӑсене итлесси тата пӑхмасӑр каласа парасси; поэзи туйӑмне аталантарасси, сасӑсен янӑравлӑхӗпе килӗшӳлӗхне сӑнасси, евӗрлесси.

Хайлавсен ӑшлӑхӗ (содержанийӗ) ҫинчен шухӑшласси, итлени ҫинчен харкам шухӑша палӑртасси. Пӗр темӑпах тӗрлӗ автор ҫырнӑ сӑвӑсене танлаштарасси, пӗрпеклӗхсемпе уйрӑмлӑхсене палӑртасси.

***Илемлӗ хайлавсене туллин йышӑнас пултарулӑха тарӑнлатасси.***

Сӑнарлӑ сӑмахсемпе ҫаврӑнӑшсене туйма вӗрентесси, текстра эпитетсене, метафорӑсене, танлаштарусене асӑрхама хӑнӑхтарасси.

Литература хайлавӗнчи илемлӗ сӑнарсене евӗрлеме вӗрентесси.

Автор тӗнче курӑмӗпе кӑсӑкланас, ӑна ӑнкарса илес пултарулӑха аталантарасси.

Харкам тӗллӗн тупмалли юмахсем, пулмасла халапсем, шӳтсем, витлешӳсем, шут сӑввисем хайласси.

«Вӑл е ку пулман пулсан мӗн пулса тухнӑ пулӗччӗ?» ыйтӑва хуравласа, вуласа тухнӑ хайлавсен сюжечӗсене урӑхлатасси.

Хайлав ячӗ тата пуҫламӑшӗ тӑрӑх унӑн сюжечӗ хӑш ҫулпа каяссине чухлас пултарулӑха аталантарасси.

Ӳнер тата музыка хайлавӗсем пулӑшнипе тӗнчене сӑнарлӑн курас ӑслая аталантарасси.

Илемлӗ хайлавсене ушкӑнпа драматизацилесси. Вӑйӑллӑ ситуацисем кӗртесси. Пултарулӑх ӗҫӗсене ушкӑнпа сӳтсе явасси.

***Литературоведени терминӗсемпе ӗҫлес опыта пӗтӗмлетесси.***

Юмах тата калав, сӑвӑ тата юптару, тупмалли юмах, ваттисен сӑмахӗ, пулмасла халап, шут сӑвви, юрӑ, шӳт жанрӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрас, вӗсен пӗрпеклӗхӗсемпе уйрӑмлӑхӗсене чухлас хӑнӑхусене калӑпласси.

Сӑвӑллӑ пуплевӗн хутламлӑхӗпе янӑравлӑхне сӑнасси, илемлӗ текстри сӑмахӑн палӑртулӑхӗпе сӑнарлӑхне асӑрхасси. Класри ачасен вӗренӳ пултарулӑхӗпе аталану уйрӑмлӑхӗсене кура учитель пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн танлаштару, эпитет, метафора, сӑпатлантару (олицетворени) терминсене активлӑ сӑмах енчӗкне кӗртсе пыма пултарать.

# Ачасен çитĕнӳ шайне палăртмалли хаклав виçисем

***Çак йăнăшсемпе çитменлĕхсем пулсан отметкăна чакарма тивет:***

Й ă н ă ш с е м:

– вулакан сăмахсене пăсни (сас паллисемпе сыпăксене тата сăмахсене улăштарни, ылмаштарса лартни, сиктерсе хăварни е кĕртсе лартни);

– пусăмсене тĕрĕс лартманни (2-рен ытларах пулсан);

– пĕтĕм текста шухăша кура чарăнусем тумасăр вулани, сасăпа вуланă чухне вулав хăвăртлăхне пăсни, сăмахсене уçăмлă каламанни;

– палăртнă вăхăтра вуласа тухнă текстăн пĕтĕмĕшле шухăшне ăнланманни;

– текст содержанийĕ тăрăх лартакан ыйтусене тĕрĕс мар хуравлани;

– текстăн тĕп шухăшне палăртма пĕлменни; вуласа тухнă текстăн тĕп содержанине ăнланнине çирĕплетекен сăмахсемпе çаврăнăшсене тупма пултарайманни;

– каласа панă чухне хайлаври событисен йĕркине пăсни;

– пăхмасăр каласа памалли текста çирĕп пĕлменни;

– сасса улăштармасăр, палăртулăх мелĕсене шута илмесĕр вулани.

Ç и т м е н л ĕ х с е м:

– хайлавăн тĕп шухăшне палăртнă чухне кăшт йăнăшни;

– палăртулăх хатĕрĕсемпе вырăнсăртарах усă курни;

– персонаж характерне уçса панă чухне палăртулăх хатĕрĕсемпе çителĕксĕртерех усă курни.

***Вулав хаклавне йĕркелесси***

*Кулленхи хаклав* кашни урокрах уйрăм ача е пĕтĕм класс хуравĕ витĕр пулса пырать: текста вулани, хайлав содержанине каласа пани (туллин, кĕскен, суйлавлăн), пăхмасăр е хут тăрăх палăртуллă вулани. Тĕпрен илсен, тишкерекен программа хайлавĕсен материалĕ çинче сăмах вĕççĕн пулса иртет. Çыру ĕçĕсем те пулма пултараççĕ – калăпăшĕпе пысăках мар ĕçсем (ыйтусене хуравлани, героя е пулăма сăнлани), кĕнекепе, ӳкерчĕксемпе тата «Тупмаллипе» харкам тĕллĕн ĕçлени. Кунта «предложенисене вĕçле», «тĕрĕс хуравне туп», «йăнăша палăрт» евĕрлĕ тата ытти тест заданисем вырăнлă.

*Тематика хаклавне* (контроль) пěр-пěр темăна вěренсе пěтернě хыççăн сăмах тата çыру вěççěн ирттереççě. Çыру ěçне тест заданийěсене пурнăçлаттарса та ирттерме юрать. Анчах та кунта литература вулавěн уйрăмлăхěсене тěплěн шута илмелле. Иккěлле хуравлама май пур ыйтусенчен хытă сыхланмалла.

Сасăпа вуланин *пěтěмлетӳ хаклавне* кашни ачапа уйрăммăн ирттереççě. Тěрěслев валли лексикăпа содержани тěлěшěнчен шăл çемми, анчах палламан текст суйласа илеççě. Текста суйланă чухне сăмахсен шутне палăртаççě (вăтам вăрăмăш сăмахра 6 паллă, паллă шутне сас палли те, сăмахсен хушшинчи пушă вырăн та кěрет). Текста ăнланнине тěрěслеме учитель кашни ача валли уйрăм карточка хатěрлет. Карточкăсенчи заданисем пěтěмěшлисем тата пайăррисем пулма пултараççě. Вулав пахалăхне тěрěслесе хакланин результачěсене шута илме учитель çакнашкал схемăпа усă курать.

**3-мěш класра вулав пахалăхне хакласа шута илмелли схема**

| Вěренекен хушамачě | Текстăн тěп шухăшне ăнланма май пур вулав хăвăртлăхě | Йăнăш-семсěр вулани | Текст содержанийě тăрăх хуравлани | Палăртуллă вулав (малтанах хатěрленнě хыççăн) | Пěтěмěшле отметка |
|---|---|---|---|---|---|

Кашни ачан вулав пахалăхне уйăхсерен тěрěслесе класс журналěнче çак виçесем тăрăх хакласа паллă лартаççě: (1) тивěçлě хăвăртлăхпа, (2) тěрěс, (3) ăнланса, (4) палăртса вулани.

«5» паллă – çак 4 требовани пурнăçланă пулсан.

«4» паллă – вулав хăвăртлăхěн виçине пурнăçланă (кашни чěрěкрех вăл урăх), анчах ытти виçесенчен пěри пурнăçланман пулсан.

«3» паллă – хăвăртлăх виçи пурнăçланнă, анчах ытти виçесенчен иккěшě пурнăçланман пулсан.

«2» паллă – хăвăртлăх виçи пурнăçланнă, анчах ытти виçě виçи те пурнăçланман е хăвăртлăх виçи пурнăçланман, анчах ытти виçесем пурнăçланнă пулсан. Ача харкамлăхне кура, енчен те вăл тěрěс те палăртуллă вулать, вуланине ăнланать, анчах та хăвăртлăх виçине кăшт çеç вырнаçаймасть пулсан, «2» лартмасан та юрать.

***Пăхмасăр калани***

«5» паллă – çирěп, пулăшмасăрах, пăхмасăр калама пěлет, палăртуллă вулать.

«4» паллă – сăвва пăхмасăр калама пěлет, анчах хăш-пěр сăмахсене вырăнěпе ылмаштарать, йăнăшсене хăех тӳрлетет.

«3» паллă – пăхмасăрах калать, анчах та текста çирĕпех астумасть.

«2» паллă – пăхмасăр каланă чухне йĕркесене пăтраштарать, текста пĕтĕмпех пĕлмест.

***Сăвва палăртуллă вулани***

Палăртуллă вулассин виçисем:

1. Логика пусăмĕсене тĕрĕс лартни.

2. Чарăнусем туни.

3. Тивĕçлĕ интонаципе вулани.

4. Тĕрĕс хăвăртлăхпа вулани.

5. Йăнăшсăр вулани.

«5» паллă – пур виçене те тивĕçлипе пурнăçланă.

«4» паллă – пĕр-ик виçине пурнăçлайман.

«3» паллă – виçесенчен виççĕшĕнче йăнăшсем тунă.

«2» паллă – виçĕ виçерен ытларахăшĕнче йăнăшсем тунă.

***Текст партитурине тăвасси***

*Логика пусăмĕ* ӳкекен сăмаха аялтан йĕр туртса паллă тăваççĕ.

*Чарăну (пауза):* кĕске – çӳлтен аялалла туртнă пĕр йĕр;
вăтам – çӳлтен аялалла туртнă икĕ йĕр;
вăрăм – çӳлтен аялалла тартнă виçĕ йĕр.

*Сасă çӳллĕшĕ:* сасса антарасси – сăмах тăррине, сылтăм енне, аялалла анакан стрелка лартаççĕ; сасса хăпартасси – сăмах тăррине, сылтăм енне, çӳлелле хăпаракан стрелка лартаççĕ.

*Хăвăртлăх:* хулленлетесси – поля çине «хулленрех» тесе çыраççĕ; хăвăртлатасси – поля çине «хăвăртрах» тесе çыраççĕ.

Юптарусене кулленхи калаçу интонацийĕпе вуламалла.

***Рольсем тăрăх вулани***

Виçесем:

1. Харкам сăмахсене вăхăтра вулама пуçласси.

2. Тĕрĕс интонаци тăвасси.

3. Йăнăшсăр вуласси.

4. Палăртса вуласси.

«5» паллă – пур виçене те пурнăçланă.

«4» паллă – виçесенчен пĕринче йăнăшсем тунă.

«3» паллă – виçесенчен иккĕшĕнче йăнăшсем тунă.

«2» паллă – виçесенчен виççĕшĕнче йăнăшсем тунă.

***Вуласа тухнине каласа пани***

«5» паллă – вуланин содержанине харкам тĕллĕнех, йĕркипе, чи кирлине сиктерсе хăвармасăр (туллин е кĕскен, е план тăрăх)

каласа парать, ыйтăва тĕрĕс хуравлать, хурава тивĕçлĕ сыпăксене вуласа панипе çирĕплетме пултарать.

«4» паллă – 1–2 йăнăш тăвать, вĕсене хăех тӳрлетет.

«3» паллă – учитель пулăшнипе каласа парать, вуласа тухнин содержанине йĕркипе каласа пама пултараймасть, пуплев йăнăшĕсем тăвать.

«2» паллă – вуласа тухнин содержанине каласа параймасть.

## Ĕç тетрачĕпе ĕçлесси

Чăваш шкулĕн 3-мĕш класĕнче литература вулавĕн урокĕсенче усă курмалли вĕренӳ хатĕрĕсенчен пĕри – «Ылтăн пучах» ĕç тетрачĕ.

3-мĕш класри литература вулавĕн урокĕсен тĕллевĕ ачан вулавçă хăнăхăвĕсене тарăнлатассипе, çирĕплетессипе, çавăн пекех çĕнĕ ăслай-хăнăхусем йĕркелессипе çыхăннă. Вĕсене, шалашне кура, икке уйăрма пулать: вулав хăнăхăвĕсене çирĕплетесси-аталантарасси; тĕрлĕ жанрлă хайлавсене йышăнас-тишкерес, текстпа ĕçлес хăнăхусене тарăнлатасси.

Ĕç тетрадĕнче сĕнекен ĕçсемпе хăнăхтарусем ытларах иккĕмĕш ушкăнри ăслай-хăнăхусем йĕркелеме пулăшаççĕ.

Пособие тĕрлĕ йышши ĕç кĕртнĕ:

**1.** Хайлав жанрне уйăрассипе çыхăннисем.

Кун йышши ĕçсене хайлавсен жанрне уйăрни (Юмах е калав? Юмах е юптару? Мĕнле юмах? Хайлавсенчен хăшĕсем Улăп халапĕсем? Хайлав мĕнле ушкăнри халап?) ачасем 2-мĕш класра та пурнăçланăччĕ. Халĕ вара ĕç самай кăткăсланать. Хайлав жанрне палăртнисĕр пуçне ачасен хăйсем каланине çирĕплетмелле, ăнлантарса памалла. Ачасене харкам шухăша ĕнентерӳллĕ сăмах вĕççĕн çирĕплетме те ансат мар. Ĕç тетрадĕнче вара уçăмлă та кĕскен çырса кăтартмалла. Çавăнпа кун йышши ĕçсене малтанласа ушкăнпа пурнăçласан тĕрĕсрех пулать. Вĕрентекен ачасене харкам шухăша ĕнентерӳллĕ мĕнле çирĕплетмеллине ăнлантарать, хайсем мĕн шутланине калама сĕнет, унтан чылайăшĕн хуравне итлеççĕ, ăнăçлисене палăртаççĕ, каланине мĕнле çырса хумаллине шутлаççĕ. Кун хыççăн ачасем хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ. Кашниййĕ, сӳтсе явнине шута илсе, хăйĕн хуравне калăпласа çырать.

**2.** Хайлав темипе тĕп шухăшне палăртассипе çыхăннисем.

Хăш-пĕр ĕçсенчен хайлавсен темипе тĕп шухăшне сĕннисенчен тивĕçлине суйласа илмелле. Ку ĕçсене хайлава тĕплĕн тишкернĕ

хыççăн ачасем хăйсем тĕллĕн те çăмаллăнах пурнăçлама пултараççĕ.

Теприсенче хайлавсен тĕп шухăшне хăйсен палăртса çырмалла. Ку самай кăткăс ĕç. Çавăнпа малтан ушкăнпа ĕçлесен вырăнлă. Вĕренекен ертсе пынипе хайлава йĕркипе тишкереççĕ. Автор мĕн каласшăн пулнине – хайлавăн тĕп шухăшне – палăртаççĕ: кашниех хăй шухăшне калать, пĕрле сӳтсе яваççĕ, ăнăçлăраххине, тĕрĕсрех тесе шутланине кăтартаççĕ. Унтан тĕп шухăша мĕнле çырса хумаллине шутлаççĕ. Ачасем майĕпен калу тата çыру пуплевĕсен уйрăмлăхĕсене ăша хываççĕ. Çыру пуплевĕ калăпласси яваплăрах ĕç. Шухăша тĕрĕс те уçăмлă палăртни çеç çителĕксĕр, ăна ансат та кĕскен, çав вăхăтрах тĕплĕ те витĕмлĕ çырса кăтартма пĕлмелле. Çакна тума ятарласа вĕрентмелле. Ачасене пĕр шухăшах тĕрлĕрен палăртма пулнине, тĕплĕнрех çырса хума май пуррине кăтартмалла.

**3.** Хайлаври сăнарсене палăртасси-ушкăнлассипе, сăнлассипе çыхăннисем.

Хайлаври сăнарсене палăртма, тĕп сăнарсене уйăрма ачасем 1–2-мĕш классенчех вĕреннĕ. Вĕсене сăнлама-хаклама та хăнăхса пынă. Сăнарсене вĕсен хăтланăшĕсем, ĕçĕ-хĕлĕ урлă хакламаллине те ăса хунă. Çавăнпа ĕç тетрадĕнче сĕннĕ ĕçсенчен чылайăшне ачасем хăйсем тĕллĕн те пурнăçлама пултараççĕ. Тĕслĕхрен, сăнарсене палăртни, тĕп сăнарне кăтартни, автор вăл е ку сăнар çинчен мĕнле кăмăлпа каланине палăртни.

Тест евĕрлĕ ĕçсем те, сĕннĕ хуравсенчен тĕрĕс тесе шутланине суйласа илни – виççĕмĕш класс ачисемшĕн йывăрах пулас çук. Кунпа пĕрлех пособире ачасемшĕн йывăр пулма пултаракан ĕçсем те сахал мар. Тĕслĕхрен, сăнарсен хăтланăшĕсене хак парасси, хăйсен шухăшне хайлаври йĕркесемпе çирĕплетесси, вăл е ку сăнарăн кăмăл-туйăм хусканăвĕ-улшăнăвĕсене йĕрлесси. Кун йышши ĕçсене ачасем хăйсем тĕллĕн тӳрех çырса тăваймаççĕ. Çавăнпа малтанхи тапхăрта ĕçсене çырса пурнăçлас умĕн класпа пĕрле сăмах вĕççĕн туса пăхсан тĕрĕсрех. Каярахпа ку ĕçсене пĕчĕкрех ушкăнпа е мăшăрпа пурнăçласан аван. 3–4 ачаран тăракан ушкăн ыйтăва пĕрле сӳтсе явать хуравне шутлать, хăйсен хуравне ыттисен умĕнче хӳтĕлет.

**4**. Хайлав содержанине уçăмласси-асăмлассипе, ĕçсен аталанăвне йĕрлессипе, текст ăшлăхне мĕнле (сăнлав, калав, уйлав) калăпланине палăртассипе çыхăннисем.

Çак ушкăнри ĕçсем ачасемшĕн ытла кăткăс пулас çук. Кун пеккисене вĕсем чылай пурнăçланă, йĕркине аса хывнах. Тата

ĕçсенчен чылайăшне тест евĕрлĕ йĕркеленĕ: кирлине, тĕрĕссине сĕннĕ хуравсенчен суйласа илмелле. Вĕсене ачасем хăйсем тĕллĕн те çăмăллăнах пурнăçлама пултараççĕ.

Харкам шухăша çырса палăртма е хайлаври йĕркесемпе çирĕплетме ыйтнисене малтан пĕрле сӳтсе явсан вырăнлă, мĕншĕн тесен ку ӳсĕмри ачасен çыру пуплевĕ çителĕклĕ йĕркеленсе çитеймен тенĕччĕ. Вĕсемшĕн хăйсен шухăшне çырса тирпейлĕ палăртма питех те йывăр. Çавăнпа вĕсене çакна мĕнле тумаллине тĕслĕхсем çинче тăтăш кăтартмалла, ушкăнпа, пĕчченшерĕн хăйсене калăплама сĕмлентермелле. Ан тив, нушаланччăр, тар тăкчăр, хайлавçă ĕçĕ мĕн тери йывăр та илĕртӳллĕ пулнине ăнланччăр.

Кăткăс, пурнăçлама хал çитеймен ĕçе тӳрех хăйсем тĕллĕн тума хушни ачасене ячĕшĕн çеç тăвасси патне сулăнтарать.

**5.** Хайлав чĕлхине тишкерессипе çыхăннисем.

Кун йышши ĕçсен тĕллевĕ анлă: ачасен сăмах йышне пуянлатасси-аталантарассинчен пуçласа сăмах, сăнарлă пуплев илемне туйма-сисме, унпа киленме вĕрентесси, илемлĕ хайлаври сăмах вăйне курма-ăнланма хăнăхтарасси таранах.

Ку ушкăнри ĕçсене малтан ачасене хăйсем тĕллĕн пурнăçлаттарсан аван. Вĕсем ытла кăткăс мар, ачасем халиччен тума хăнăхнă ĕçсем. Вĕсене хăйсем пухнă пĕлӳ-ăслайсăр пуçне тата словарь-справочниксемпе усă курма вĕрентсе пымалла кăна.

**6.** Хайлава вуланă май ачасем хăйсен кăмăл-туйăмĕ мĕнле улшăнса пынине, автор кăмăл-туйăмне сăнассипе çыхăннисем.

Харпăр хăй кăмăл-туйăм хусканăвне сăнасси, уйрăмах палăртасси ачасемшĕн çеç мар, çитĕннисемшĕн те самай кăткăс ĕç.

Вăл эпир таврана, хамăра, уйрăмах кăмăл-туйăм тĕлĕшĕнчен сăнлама хăнăхманни-пĕлменнинчен те, ăна палăртма пирĕн сăмах-пуплев çителĕклĕ пуян пулманнинчен те килет.

Çавăнпа ку ушкăнри ĕçсенчен ытларахăшне тест евĕрлĕ йĕркеленĕ. Сĕннĕ хуравсенчен тивĕçлине суйламалла. Ку ĕçсене пурнăçланă май ачасем хайлав мĕнле туйăмсем çуратма пултарнине, вĕсене пуплевре мĕнле палăртма пулнине кураççĕ. Тивĕçлине суйласа хăйсен туйăмне сăнама, ăнланма вĕренсе пыраççĕ, ăна сăмахпа мĕнле палăртмаллине кураççĕ. Майĕпен хăйсем тĕллĕн те сăнама-палăртма сĕмленеççĕ.

Çавăнпа ачасен сăнав хăнăхăвĕсем йĕркеленсе пынăçемĕн ĕçсене кăткăслатма та пулать. Хăнăхтарусенче сĕннисĕр пуçне ачасене хăйсене шутлаттармалла, панисем çумне хушса калама хистемелле.

Ĕç тетрачĕ вĕрентӳ кĕнеки çумĕнчи хушма ĕç хатĕрĕ терĕмĕр. Унăн тĕллевĕ – ачасен вулавçă мехелне аталантарма, хайлавçă пултарулăхне вăратма анлăрах майсем туса парасси.

Тетрадьри ĕçсене иккĕмĕш сăпатран пĕрреллĕ хисепре сĕннĕ. Калаçу ачапа куçа-куçăн йĕркеленет. Çакă ĕçсене ытларах хăй тĕллĕн пурнăçлама хистенĕ пек. Кун пек шутлани тĕрĕсех мар. Учителĕн пособипе ирĕклĕн, вĕрентӳ задачисемпе шайлашуллăн усă курмалла. Вăл ĕçсене класпа пĕрле те, ачасене пĕчĕк ушкăна пайласа та, мăшăрăн та йĕркелеме пултарать. Хăшĕсене хăйсем тĕллĕн пурнăçлама та сĕнет.

Ĕçе кирек мĕнле йĕркелесен те ăна тĕрĕслемесĕр, пахаласа хакламасăр хăвармалла мар.

## Ӳкерчĕксен альбомĕпе ĕçлесси

Ӳкерчĕксен альбомĕпе ачасем 2-мĕш класран ĕçлеме пуçлаççĕ. Альбом литература вулавĕн тĕрлĕ задачине – сăнарсене, вĕсен хăтланăшĕсемпе характерне, хайлавăн сюжет аталанăвĕпе композицине уçăмласси, авторпа вулаканăн кăмăл-туйăмне палăртасси – татса панă май тишкерĕвĕн тĕп тĕллевне (хайлавăн тĕп шухăшне, идейине ăнланасси) пурнăçлама пулăшакан хатĕр тенĕччĕ.

3-мĕш класс валли хатĕрленĕ пособире те ачасем хальччен пурнăçланă йышши ĕçсем ытларах сĕннĕ. Калăпласса та ăна малтанхи пекех калăпланă. Ĕçе йĕркелесе пыма, ачасене хăйсем тĕллĕн ĕçлеме пулăшма ятарлă палăртусем панă. Малтанхисемсĕр пуçне тата тепĕр палăрту кĕртнĕ: (!) – чи çивĕч самант.

Кашни страницăри ĕçсем кĕнекери уйрăм хайлава тишкерессипе çыхăннă. 32 страницăра пурĕ 32 хайлав тишкерме палăртнă. Юлашки страницăра тишкермелли хайлава ачасем хăйсем суйласа илеççĕ.

Программăра 3-мĕш класра литература вулавĕпе пурĕ 85 урок ирттерме палăртнă. Çавăнпа ӳкерчĕксен альбомĕпе кашни урокрах усă курма материал çителĕксĕр теме пулать. Ку вăл пачах тĕрĕс мар. Урокран урока пĕр хатĕрпе çеç усă курнин, пĕр еверлĕ ĕçсем пурнăçланин тухăçлăхĕ пысăках мар. Ӳкерчĕксен альбомĕ литература вулавĕн урокĕсенче усă курмалли хатĕрсенчен пĕри кăна. Хатĕрсемпе ĕçсене, урокра татса пама палăртнă задачăсене кура, четлесе усă курсан вырăнлăрах.

Тата çакна та шута илмелле. Ку ӳсĕмри ачасен литература вулавĕпе çыхăннă чылай ăслай-хăнăху йĕркеленсе çирĕпленнĕ ĕнтĕ.

вěсен тěрлě стильпе калăпланă, тěрлě жанрлă хайлавсене йышăнас-тишкерес ăсталăхě те самай аталаннă. Çакна кура вěрентекенěн татах та кăткăсрах задача лартма вăхăт – ачасен ăславлă пултарулăхне, ăсталас-хайлас мехелне вăратасси-аталантарасси. Тěрлě хăнăхтару, ěç пурнăçланипе пěрлех ачасене хăйсене те вěрентӳ задачисем палăртма, вěсене татса пама тивěçлě ěç йěркелеме, меслетсемпе мелсем, хатěрсем суйлама та вěрентсе пымалла. Урăхла каласан, вěренěвěн универсаллă действийěсене йěркелес тěлěшпе ěçлемелле. Çакна ӳкерчěксен альбоменчи ěçсем çине тěревленсе тума та меллě. Сěннě ěçсене хăйсем тěллěн пурнăçлама вěренсе çитсен, вěсен тěллевне уçăмлама сěмленсен ачасемпе пěрле проект шутласа пурнăçлама пулать. Проектăн результачě – «Ылтăн пучах» кěнекери пěр-пěр хайлав тишкерěвěпе çыхăннă ӳкерчěксен альбоменчи евěрлě ěçсем пулěç.

Альбомри ěçсем, тěпрен илсен, 2-мěш класс валли хатěрленě пособири евěрлех. Вěсене пурнăçланă май ачасем хăйсен кăмăл-туйăмне палăртаççě, хайлавсен содержанине асăмлаççě, сюжет аталанăвне йěрлеççě, композицине сăнаççě, хайлавсенчи сăнарсене сăнлаççě. Çакна вěсем ӳкерчěксене тěрев палли вырăнне хурса ӳкерчěксем урлă тăваççě. Ку вăл, пěр енчен, ачасемшěн çăмăллăх: ӳкерчěксем асăмлама, сăнарлама, сăнлама пулăшакан тěрев пулаççě. Тепěр енчен, сăнарсемпе харпăр хăй туйăмне, хайлав идейине палăртма, сăнарсене сăнлама çăмăл мар. Çакна тума сăнарсен сăн-питне куç умне кăларни, вěсен хăтланăшěсемпе характерне ăнланни-уçăмлани çеç çителěксěр. Кăмăл-туйăмне туйса илнě, куç умне кăларнă сăнарсемпе пулăмсене те ӳкерсе-сăрласа кăтартма йывăр. Ӳкерчěксем витěмлě, сăнарсем чěрě пулччăр тесен сăрăсемпе ěçлеме, вěсен килěшěвěпе вылявне туйма-курма пěлмелле. Ку вара хăй тěллěн пулаймасть – ятарласа вěрентмелле. Паллах, сăрăпа ěçлеме ачасем ӳнер урокěсенче тěллевлě вěренеççě. Ӳкерчěксен альбомěпе ěçленě чухне унта калăпланă хăнăхусемпе ăслайсем çине тěревленеççě. Анчах ӳкерме, сăрлама пуçличчен пурпěр малтан ачасене сăмахлă ӳкерчěк тутармалла. Вěл е ку туйăма мěнле тěспе палăртмаллине, тěссем пěринчен теприне мěнле куçса пымаллине, тěс сěмěсемпе мěнле вылямa пулнине сӳтсе явмалла.

Ачасене пулăшас тěллевпе альбомра сěрласа илемлетнě ӳкерчěксен тěслěхěсене те пană. Вěсенчен пěрисене вěçне çити сăрласа илемлетнě, хатěр ӳкерчěксем. Теприсене сăрлама çеç пуçланă. Ачасен художник шухăшне ăнланса, ăша хывса ӳкерчěке хăйсем тěллěн сăрласа пěтермелле.

Сӑнарсене, хайлаври уйрӑм самантсене ӳкерсе-сӑнласа кӑтартассипе ҫыхӑннӑ ӗҫсене те виҫҫӗмӗш класра самай ҫӗнӗ шая ҫӗклемелле. Иккӗмӗш класра ытларах мӗн ӳкерессине тимленӗ пулсан, ку тапхӑрта вара мӗнле ӳкересси малти вырӑна тухать.

Литература вулавӗн урокӗсенче уйрӑмах ачасен пуплевне аталантарасси пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Вӗрентекен урокран урока ачасен сӑмах йышне, грамматика хӑнӑхӑвӗсене, пуплев ҫыхӑнулӑхӗпе сӑнарлӑхне атлантарас тӗлӗшпе тӗллевлӗ тӑрӑшать. Ҫакӑн валли кӗнекере те, тетрадьре те чылай ӗҫ пахнӑ.

Анчах сӑмахлӑ пуплевсӗр пуҫне хускану пуплевӗ те пур вӗт. Ачасен ӑна та алла илмелле. Ҫакна шӑпах ӳкерчӗксемпе ӗҫленӗ май туса пыма меллӗ. Малтан ачасем ӳнерҫӗ тунӑ ӳкерчӗксене сӑнаҫҫӗ. Сӑнарсен пит-куҫ вылявне, ал-урапа кӗлетке хусканӑвӗсене тишкереҫҫӗ. Вӗсен кӑмӑл-туйӑмне хусканусем урлӑ еплерех кӑтартнине сӳтсе яваҫҫӗ. Кунта уйрӑмах вак детальсене сӑнамакурма вӗрентмелле. Ачан кашни йӗр, авӑнчӑк пӗлтерӗшлӗ пулнине ӑнланмалла. Калӑпӑр, вӗренекенсем пӗр сӑнарах хайне тӗрлӗ самантра мӗнле тыткаланине тишкереҫҫӗ. Малтан ӳкерчӗксенче пӗр сӑнарах, калӑпӑр, Оскар Уайльдӑн Хаяр Улӑпӗ тӗрлӗрен сӑнланине палӑртаҫҫӗ. Кашни ӳкерчӗкӗнче ӑна мӗнле сӑнарланине сӑнлаҫҫӗ. Унтан вара ӳнерҫӗ ҫакна мӗнле кӑтартма пултарнине ӑнлантарма тӑрӑшаҫҫӗ.

Пӗр ӳкерчӗкӗнче Улӑп питӗ тӗлӗннӗ. Унӑн куҫӗ кӑшт чарӑлнӑ, ҫӑварӗ кӑшт карӑлнӑ, куҫ харшийӗсем ҫӗкленнӗ. Теприйӗнче Улӑп ҫиллес. Унӑн куҫ харшийӗсем пӗрӗннӗ, ҫамки пӗркеленнӗ, вӑл тутине ҫӑтӑ тытнӑ, куҫне хӗснӗ. Виҫҫӗмӗш ӳкерчӗкӗнче Улӑп лӑпкӑ, тӑнӑҫ кӑмӑллӑ. Унӑн пит-куҫӗ яка, ҫамки ҫинчи хутламсем те якалнӑ пек.

Ӳкерчӗксенчи сӑнара ҫапла тишкернӗ хыҫҫӑн ачасем вӑл хӑш самантсенче ҫакӑн пек пулнине палӑртаҫҫӗ. Майӗпенех вӗсем пит-куҫ вылявӗ, ал-урапа кӗлетке хусканӑвӗ питех те витӗмлӗ сӑнарлӑх хатӗрӗ пулнине ӑнланаҫҫӗ. Хӑйсем те ҫак хатӗрпе усӑ курма вӗренсе пыраҫҫӗ. Учительпе пӗрле тишкерме вӗренсе ҫитсен ачасене пӗчӗк ушкӑнсенче, мӑшӑрӑн, пӗччен хӑйсем тӗллӗн ӗҫлеттерме пуҫламалла.

# УРОКСЕМ

## 1-мĕш урок

**Урок теми**: «Литература вулавĕ» предметăн 3-мĕш класс валли палăртнă тĕллевĕсемпе задачисем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– литература вулавĕн урокĕсенче 1–2-мĕш классенче мĕн вĕреннине аса илесси, ушкăнпа 3-мĕш класри тĕллевсемпе задачăсене палăртасси;

– ачасемпе мĕнле çынна вĕреннĕ çын теме пулнине сӳтсе явасси;

– кĕнекепе тата ытти вĕренӳ хатĕрĕсемпе мĕнле ĕçлемелли çинчен калаçтарасси;

– сăвăллă тата прозăллă хайлавсене ăнланас-тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене малалла аталантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** «Ак çитрĕ сентябрь. Салам, савнă шкулăмăр!» калаçу. Ачасемпе çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланни, халĕ вĕсем самай çитĕнни, вĕренĕвĕн чылай ăслай-хăнăхăвне алла илни, малашнехи тĕллевсемпе задачăсем çинчен калаçни.

3-мĕш класра литература вулавĕн тĕллевĕсемпе тата задачисемпе паллаштарни.

**2.** 3-мĕш класра литература вулавĕн урокĕсенче усă курмалли «Ылтăн пучах» кĕнекепе, ĕç тетрачĕпе тата ӳкерчĕксен альбомĕпе паллаштарни. Кĕнеке ятне ушкăнпа сӳтсе явса ăнлантарни. Малтанхи кĕнекесем мĕн ятлăччĕ? Çак ятсене епле ăнлантарнăччĕ? Ку кĕнеки мĕн ятлă? Çакна мĕнле ăнланатăр?

П ĕ т ĕ м л е т ӳ. Пурнăç çапла вăл: пĕрчĕрен ешĕл калча шăтать, калча ӳссе çитĕнсе ылтăн пучах кăларать. Пĕлӳ-ăслай, кăмăл-сипет те çавăн пекех çуралса-амаланса, йĕркеленсе-çирĕпленсе пырать.

Ачасем кĕнекери сăнарсене, вĕсем хăйсене вĕренӳре мĕнле пулăшса пынине аса илеççĕ. Уйрăм палăртусене тишкереççĕ: хăшĕнпе ĕçленĕ, çĕннисем пур-и?

**3.** Г. Волковăн «Çамрăкла вĕренни – чул çинче» калавĕпе ĕçлени:

– калав ятне вулани, ятне кура калав мĕн ҫинчен пулма пултарнине ăнкарма тăрăшни;

– калава хăйсем тĕллĕн вулани;

– калава ыйтусем тăрăх тишкерни;

– аслашшĕ вĕренӳ ҫинчен калакă сăмахсене тупса вулани, ăнлантарни;

– калав темипе тĕп шухăшне уҫса пани, ваттисен сăмахĕсемпе ĕҫлени. Калав ятне мĕнле ăнланатăр? Аслашшĕ ҫакна мĕнле ăнлантарать? Ваттисен сăмахĕсене ăнлантарма тăрăшăр.

**4.** Г. Сапгирăн «Вĕреннĕ Лаша» сăввипе ĕҫлени.

– Сăвва вĕрентекен вуласа парать, ăна кам ҫырнине калать. Сăвă мĕнле кăмăл-туйăм ҫуратрĕ?

– сăвва ачасем хăйсем тĕллĕн вулани;

– сăвва тишкерни (кĕнекере панă ыйтусем тăрăх, Верукпа Тимук, Мариҫ кинеми каланисемпе усă курса), суйлавлă вулав;

– сăвă жанрне палăртма тăрăшни. Автор ĕҫсем ҫинчен мĕнлерех каласа парать? Кун пекки пулма пултарать-и? Ку сăвва юмах темелле-и? Ку мĕнле сăвă? Автор мĕншĕн вĕреннĕ ача ҫинчен мар, вĕреннĕ лаша ҫинчен хайланă? «Лаша» сăмаха мĕншĕн пысăкран ҫырнă-ши?

– сăвва тишкернине пĕтĕмлетни (ачасене хăйсен шухăшĕсене калаттарнă хыҫҫăн Мария Васильевна каланипе усă курса).

**5.** Ĕҫ тетрачĕпе ĕҫлени.

Малтан ку класс валли калăпланă ĕҫ тетрачĕпе тата ӳкерчĕксен альбомĕпе паллашаҫҫĕ. Унтан тетрадьри ĕҫсен пĕр пайне класра пурнăҫлаҫҫĕ, тепри киле ĕҫ пулать.

**6.** Урока пĕтĕмлетни.

**7.** Киле ĕҫ пани.

## 2-мĕш урок

**Урок теми**: «Калав», «калаври сăнарсем», «калаври ĕҫ аталанăвĕ» ăнлавсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасен хайлавсене вулас, унти ĕҫ аталанăвне йĕрлесе пырас ăслай-хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси;

– «калав», «сăнарсем», «калаври ĕҫсен аталанăвĕ» ăнлавсен пĕлтерĕшне аса илесси;

– текста тишкерес хăнăху-ăслайсене малалла аталантарасси;

– калаври сăнарсене, вĕсен хăтланăшĕсене, кăмăл-туйăмне, кăмăл-сипет пахалăхĕсене тишкерес хăнăхусене аталантарасси;

– кăмăл-сипет ыйтăвĕсене сӳтсе явма явăҫтарасси;

– вулавӑн тӗрлӗ тӗсне (пӑхса тухни, тишкерӳллӗ вулав, суйлавлӑ вулав, паллашуллӑ вулав) ҫирӗплетесси.

### Урок юхӑмӗ

**1.** Умӗнхи калаҫу.

Ачасем тӑван ялӗ, урамӗ, кил-ҫурчӗ ҫинчен калаҫни. Тирпейилеме камӑн тытса пымалла? Ҫакӑ мӗн тума кирлӗ?

**2.** Урокра мӗнле хайлав вулама палӑртнине калани, авторӗ (Хветӗр Уяр ҫыравҫӑ) ҫинчен кӗскен пӗлтерни, сӑн ӳкерчӗкне кӑтартни.

**3.** «Мӑйӑр хуппи» калава 2 пая уйӑрса вулани, содержанине, ӗҫсен аталанӑвне тишкерни. Суйлавлӑ вулав (1-мӗш пай – Аслӑ урамра та ҫӳп-ҫап туллиех, 2-мӗш пай – малалла вӗсне ҫитиччен).

1-мӗш пая вуласа тишкерни.

– Тимушпа куккӑшӗ ӑҫта тухнӑ?

– Тимушӑн кӑмӑлӗ мӗншӗн пӑсӑлнӑ?

– Урамра, пасарта мӗнлерех лару-тӑру пулнӑ? Ҫакӑн ҫинчен ача мӗн шутлать? Тупса вулӑр.

– Таврана ҫӳпӗлекенсем ҫинчен вӑл мӗн шутлать? Тупса вулӑр.

– Ачана мӗн пӑшӑрхантарать? Мӗнле шутлатӑр, чӑнах та, куккӑшӗ мӗн калӗ? Малалла мӗн пулӗ?

2-мӗш пая вуласа тишкерни.

– Куккӑшӗ мӑйӑр хуппине газон ҫине сапсан ача хӑйне мӗнле туйса илет? Ҫакна хӑш йӗркесем, сӑмахсем уйрӑмах витӗмлӗ кӑтартаҫҫӗ? Тупса вулӑр?

– Куккӑшӗ мӗншӗн ҫапла хӑтланать-ши? Таврари ҫӳп-ҫапран та, куккӑшӗн хӑтланӑшӗнчен те ытларах ачана мӗн пӑшӑрхантарать? Тупса вулӑр.

– Мӗнле шутлатӑр: ача мӗн пирки хӑй калас тенине калаймасть? Ҫакӑ ӑна мӗнлерех хуҫать?

– Калав епле вӗҫленет? Вӗҫне тепӗр хут вулӑр? Автор ҫак йӗркесемпе мӗн каласшӑн пулнӑ?

**4.** Калаври сӑнарсене тишкерни (кӗнекери ыйтусемпе ӗҫсем тӑрӑх, сӑнарсем каланисене усӑ курса).

**5.** Пӗтӗмлетни. Автор калаври ӗҫсем ҫинчен, кашни сӑнар ҫинчен мӗнле кӑмӑл-туйӑмпа каласа парать? Хӑв каланине калаври йӗркесемпе, сӑмахсемпе ҫирӗплетме тӑрӑш. Ҫапла вӑл мӗн каласшӑн, кӑтартасшӑн, туйтарасшӑн? Калава вуланӑҫемӗн кӑмӑлу мӗнле улшӑнса пычӗ? Юлашкинчен мӗн шутласа илтӗн?

**6.** Киле ӗҫ пани.

## 3-мĕш урок

**Урок теми**: Калаври сăнарсем. Ĕç аталанăвĕ. Пулăмсем, сăнарсен ĕçĕсемпе хăтланăшĕсен хушшинчи çыхăну.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– калавăн тытăмне, çырса кăтартнă ĕçсен аталанăвне сăнамайĕрлеме малалла вĕрентесси;

– сăнарсен хăтланăшĕсемпе кăмăл-туйăмне сăнама хăнăхтарасси;

– пулăмсемпе сăнарсен ĕçĕсемпе хăтланăшĕсем хушшинчи çыхăнăва курма вĕрентесси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Умĕнхи калаçу. (Сентябрĕн 1-мĕш кунне сăнлакан ӳкерчĕксемпе усă курсан вырăнлă).

Вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш кунĕ ачасемшĕн уяв пулни, вĕсем çак уява мĕнлерех кĕтни-хатĕрленни, пыни çинчен.

**2.** Мĕнле калав вулама палăртни, ăна кам çырни çинчен пĕлтерни. (Калава кам куçарнине те асăнмалла.)

**3.** «Калав ятне» ăнлантарма хăтланни.

– Эпир маларах мĕнле уяв çинчен калаçрăмăр? Калав ячĕ мĕнле? Апла пулсан калав мĕн çинчен пулма пултарать? Калаçу мĕнле парне çинчен пулĕ-ши?

**4.** Калава икĕ пая уйăрса вулани, тишкерни.

Малтан вĕрентекен калава *«...Аня та пачĕ хăй чечекĕсене»* предложени таран хăй вулать.

– Мĕнле шутлатăр, малалла мĕн пулĕ-ши?

Унтан калавăн иккĕмĕш пайне ачасем хăйсем вулаççĕ. Кун хыççăн кĕнекере панă ыйтусем тăрăх, сăнарсем каланипе усă курса калавра пулни-иртнине тишкереççĕ.

**5.** Калаври ĕçсен аталанăвне, автор мĕнле çырса кăтартнине сăнани.

– Ĕç мĕнле пуçланать? Малалла мĕн пулать?

– Сирĕн шутăрпа чăтăмсăр (малалла мĕн пулнă-ши текен) самант хăшĕ-ши? Çак саманта калаври чи çивĕч самант теççĕ. Ӳнерçĕ пулнă пулсан эсир ăна мĕнлерех ӳкерсе кăтартнă пулăттăр? (Альбомри çак саманта сăнлакан ӳкерчĕке сăнаççĕ, калаçаççĕ.)

– Ĕç мĕнле вĕçленет? Çакăн пек вĕçленни сире тивĕçтерет-и?

**6.** Калаври сăнарсене, вĕсен кăмăл-туйăмне тишкерни, хăтланăшĕсене хак пани. (Ĕç тетрадĕнчи (2-мĕш с.) тата ӳкерчĕксен альбомĕнчи (2-мĕш с.) ĕçсемпе усă курса.)

**7.** Пĕтĕмлетни. Хăйсем калава мĕнле йышăнни, кăмăл-туйăмĕсем мĕнле улшăнса пыни, автор мĕн каласшăн пулни.

**8.** Урока пĕтĕмлетни.

**9.** Киле ĕç пани.

## 4-мĕш урок

**Урок теми:** Савнă çĕр, Чăваш çĕр-шывĕ. Чăваш Республикин Патшалăх атрибучĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасене «Тăван çĕр-шыв», «патшалăх», «патшалăх атрибучĕсем» ăнлавсене тарăнрах уçăмлама пулăшасси;

– илемлĕ хайлавсен чĕлхине, сăнарлăх мелĕсене сăнама-курма хăнăхтарасси;

– сăвăллă хайлавсен кĕвви-туйăмне сăнама, туйма хăнăхтарасси.

### У р о к  ю х ă м ĕ

**1.** Умĕнхи калаçу.

Пирĕн тăван чăваш халăхĕ ăçта пурăнни. Чăвашсен çĕр-шывĕ, патшалăхĕ. Патшалăх ялавĕ, гербĕ (калаçура Чăваш Енĕн карттине, ялавĕпе гербĕн ӳкерчĕкĕсемпе усă курмалла), вĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарни.

**2.** К. Д. Ушинскин «Тăван çĕр-шыв – пирĕн анне» хайлавне вулани, тишкерни:

– хăйсем тĕллĕн вулани;

– ыйтусене хуравласа суйлавлă вулани;

– хайлав чĕлхине сăнани-тишкерни.

**3.** Чăваш Республикин Патшалăх гимнĕпе паллашни, тишкерни.

– Сăвва вĕрентекен вуласа пани. (Сăвă мĕнле туйăмсем çуратрĕ? Вăл мĕн çинчен?);

– сăвва ачасем хăйсем ăшра вулани;

– пайăн-пайăн вуласа тишкерни. (Пĕрремĕш çаврăмне мĕнле ăнланатăр? Çĕршывăмăр çинчен хăçан юрлас килет? Тăван çĕр-шыв çинчен мĕн каласа юрлас килет, çакна ăçта панă? Иккĕмĕш çаврăмра мĕн çинчен каланă?).

П ĕ т ĕ м л е т ӳ. Тăван çĕр-шыв çинчен хайланă юрă мĕнле пулмалла? Хаваслă, çĕкленӳллĕ юрăсене хăçан юрлас килет? Сăвăра хăш самантсене асăннă? Мĕншĕн çак самантсене асăннă-ши?

**4.** «Тăван çĕр-шыв» юрă Чăваш Патшалăх гимнĕ пулни, ăна хăçан тата мĕнле юрламалли çинчен калаçни. (Кĕнекери ыйтусемпе сăнарсем каланипе усă курса.)

**5.** Чăваш çĕр-шывĕн гимнне итлени.

**6.** Урока пĕтĕмлетни.

**7.** Киле ĕç пани. Чăваш Патшалăх гимнне пăхмасăр калама вĕренмелле.

## 5-мĕш урок

**Урок теми**: Калав ячĕ, теми, тĕп шухăшĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасен калăпăшĕпе пысăкрах хайлавсене йышăнас-ăнланас хăнăхусене аталантарасси;

– калаври сăнлăхсемпе сăнарсене палăртасси, вĕсене мĕнле сăнарланине сăнама хăнăхтарасси;

– калав ячĕ калав темипе тата тĕп шухăшĕпе мĕнле çыхăннине уçăмлама вĕрентесси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Умĕнхи калаçу. Вĕрентекен хăш çыравçă хайлавне вулама палăртнине пĕлтерет. Хуначи Кашкăр (Геннадий Никандрович Волков) ĕçĕ-хĕлĕпе пултарулăхĕ çинчен каласа парать.

**2.** «Ылтăн çĕр» калава пайăн-пайăн вулани, кĕнекере панă ыйтусем тăрăх тишкерни.

**3.** Суйлавлă вулав.

Чăвашсем хăйсен Тăван çĕр-шывне мĕнлерех кураççĕ? Çакăн çинчен калавра мĕн каланă? Тупса вулăр. Çакă чăвашсен кăмăлне мĕнле сăнлать? Чăвашсен хăйсен хăнасен пушмакĕ çумне çыпçăннă пылчăк таткисене хăйпăтса илнине мĕнле ăнлантараççĕ? Тупса вулăр.

**4.** Ӳкерчĕксен альбомĕпе ĕçлени.

Ӳкерчĕкре камсем сăнланнă? Калаври хăш вырăна ӳкернĕ? Тупса вулăр.

Калаври тĕп сăнара, ытти сăнарсене, вĕсене калавра мĕнле сăнлани-сăнарланине аса илĕр (тупса вулăр).

**5.** Калав ятне ăнлантарни, темипе тĕп шухăшне уçса пани.

– Ĕç тетрадĕнчи 1–3-мĕш ĕçсене пурнăçлани;

– калав ятне ăнлантарни.

Калав ятне аса илĕр. Хăш çĕре ылтăн çĕр тенĕ? Чăвашсем мĕншĕн хăйсен тăван çĕрне çапла калаççĕ?

Автор калаври сăнарсене, ĕçсемпе пулăмсене мĕнле кăмăлпа сăнлать? Çакă ĕçтан курăнать? Вăл калаври пулăмсемпе ĕçсене çапла сăнласа мĕн каласшăн?

**6.** Пĕтĕмлетни. Ĕç тетрадĕнчи 6-мĕш ĕçе пурнăçланă май Тимукпа Верук калани çине таянса вĕрентекен ачасене калавăн тĕп шухăшне палăртма пулăшать.

**7.** Урока пĕтĕмлетни.

**8.** Киле ĕç пани.

## 6-мĕш урок

**Урок теми**: Сăвăллă хайлав, унти кăмăл-туйăм, сăнарлăхпа палăртулăх мелĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасен сăвăллă хайлава итлесе ăша хывас ăслайĕсене малалла аталантарасси;

– сăвăра туйăм мĕнле аталанса пынине сăнама хăнăхтарасси;

– хайлав чĕлхине туйма, сăнарлăхпа палăртулăх мелĕсене сăнама-курма вĕрентсе пырасси.

**У р о к ю х ă м ĕ**

**1.** Умĕнхи калаçу.

Сăвва Н.Янкас çырнă. Вăл чăваш халăхĕн паллă çыравçи. Иртнĕ ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче пурăннă, ĕçленĕ.

**2.** «Лăпкă çĕр-шывра» сăвва вĕрентекен вуланине итлени.

– Сăвă мĕнле туйăмсем çуратрĕ? Автор тăван тавралăха хăш самантра сăнланă?

**3.** Ачасем сăвва сасăпа черетленсе вулани.

**4.** Сăвва тишкерни. Суйлавлă вулав.

– Автор çуллахи лăпкă каçăн мĕнле ӳкерчĕкĕсене сăнланă? (Çавал шывĕ, сĕмлĕх, кĕмĕл уйăх; çурхи улăх, кăвайт тавра – ачасем; улăхра – тăлланă лашасем.) Кашни ӳкерчĕкне мĕнле сăнланă? Тупса вулăр.

– Хăш ӳкерчĕкĕнче лăпкăлăх, канăçлăх ытларах туйăнать? Тупса вулăр.

Тишкерӳ çине тайăнса ĕç тетрадĕнчи 1–4-мĕш ĕçсене хăйсем тĕллĕн пурнăçлани.

**5.** Хайлав чĕлхине тишкерни.

– Сăвăç сăнлăхсене сăнарлама мĕнле мелсемпе усă курать?

**6.** Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**7.** Хайлавăн темипе тĕп шухăшне уçăмлани.

– Хайлава мĕнле ят панă? Мĕнле шутлатăр, автор мĕншĕн «лăпкă çĕр-шывра» тенĕ? Автор тăван тавралăха мĕнле кăмăлпа сăнлать? Мĕнле кăмăл-туйăм çуратать?

**8.** Пĕтĕмлетни.

– Эсир хăш ялта (хулара) пурăнатăр? Сирĕн юратнă вырăнсем пур-и? Хăвăр çуралнă кĕтесе сăнлас пулсан хăш вырăнсене сăнланă пулăттăр? Çак вырăнсенче пулнă чухне сирĕн мĕнле туйăмсем çуралаççĕ?

**9.** Киле ĕç пани. Хăйсен ялне е унти хăйсем юратнă вырăна сăнлакан ӳкерчĕк тумалла. Ун тăрăх каласа пама хатĕрленмелле.

## 7-мĕш урок

**Урок теми**: Сăвăллă хайлав, унти кăмăл-туйăм. Сăнарлăх мелĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ытти халăхсене хисеплес, вĕсемпе çураçуллă пулас кăмăла аталантарасси;

– ачасен кӳршĕллĕ халăхсен культурипе, чĕлхипе кăсăкланас кăмăлне амалантарасси;

– ачасен поэзи хайлавĕсене итлесе-вуласа йышăнас хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси;

– хайлаври сăнарлăх мелĕсене сăнама хăнăхтарасси, вĕсене харпăрлама хистесси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Умĕнхи калаçу.

Пирĕн республикăра тĕрлĕ халăх çыннисем пурăнни, кашни халăхăн хăйĕн тăван чĕлхи пурри, вăл вĕсемшĕн чи хакли, чи çепĕççи пулни.

**2.** Урокра мĕнле хайлавпа паллашма палăртнине, авторне пĕлтерни.

Сăвва мари халăх поэчĕ Семен Вишневский хайланă. Марисем – пирĕнпе кӳршĕллĕ халăх. Мари Эл Республики Чăваш Республикипе çурçĕр енчен чикĕленет. (Семен Вишневский поэтăн сăн ӳкерчĕкне, карттă çинче Мари Эл Чăваш Республикипе хăш енчен чикĕленнине кăтартсан аван.)

**3.** «Туслăх сăмахĕ» сăвăпа паллашни. (Сăвăпа малтанах вĕрентекен е ятарласа хатĕрленнĕ, илемлĕ вулама пултаракан ача паллаштарма пултарать.)

– Сăвă мĕнле туйăмсем çуратрĕ?

**4.** Сăвва хайсем тĕллĕн вулани.

– Сăвă ячĕ мĕнле? Сăвăри хăш сăмаха *туслăх сăмахĕ* тенине ăнлнатăр-и? Ăна хăш-хăш чĕлхепе каланă? Кашни чĕлхере вăл еплерех янăрать? Эсир çак сăмаха тата хăш чĕлхесемпе калама пултаратăр?

**5.** Сăвва тишкерни. Суйлавлă вулав.

– Сăвăра «юрататăп» сăмаха мĕнпе-мĕнпе танлаштарнă? Тупса вулăр. Мĕнле шутлатăр, сăвăç мĕншĕн танлаштарма çак сăнарсене суйланă? «Çакă пирĕн сăмах – виçĕ халăх тупи» тенине мĕнле ăнланатăр?

**6.** Пĕтĕмлетни. Сăввăн тĕп шухăшне палăртни.

**7.** Киле ĕç пани.

## 8-мĕш урок

**Урок теми**: Чăвашсен юрри-ташши. Çĕкленӳллĕ, хавхаланулла сăвăллă хайлавсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– тĕрлĕ жанрлă хайлавсене вулама-йышăнма вĕрентесси;

– хайлавсен кăмăл-туйăмне тарăнрах туйма-ăнланма хăнăхтарасси;

– хайлаври сăнарлăх, палăртулăх мелĕсене сăнама хăнăхтарасси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Умĕнхи калаçу.

Хамăр хăш халăхран пулни. Чăваш халăхĕ авалхи халăх пулни. Кашни халăхăн хăйĕн кун-çулĕ, чĕлхи, юрри-кĕвви, ташши, уявĕсемпе йăли-йĕрки пурри.

**2.** Авалхи чăваш халăх юррине итлени.

– Юрă мĕнле кăмăл-туйăм çуратрĕ? Чăваш юррине сăнлас тесен эсир мĕнле сăмахсем калană пулăттăр?

**3.** Ю. Петров-Вирьялăн «Мерчен те ылтăн пĕрчĕсем» сăввипе малтанхи хут паллашни. (Сăвăпа вĕрентекен паллаштарсан аван.)

– Сăвă мĕнле туйăмсем çуратрĕ? Хăвăр туйăмсене сăмахсемпе палăртма тăрăшăр.

**4.** Сăвва çаврăмшарăн вуласа тишкерни. Суйлавлă вулав.

1-м ĕ ш  ç а в р ă м: Çаврăмра чăваш халăх культурин мĕнле пайрăмĕ çинчен калană? Чăваш сăмахĕсене мĕнпе танлаштарнă? «Шăтса вĕри чĕремĕрте пучах кăларăр пур çĕрте» тенине мĕнле ăнланатăр?

2-м ĕ ш  ç а в р ă м: Ку çаврăмра мĕн çинчен сăвăланă? Чăваш юррисене мĕнпе танлаштарнă? Юрă халăх пурнăçне витĕм кӳни çинчен мĕн калană? Халăх юрри-кĕввин хăвачĕ мĕнлерех тенĕ?

3-м ĕ ш  ç а в р ă м: Çаврăмра мĕн çинчен калană? Чăваш ташшине мĕнпе, çут çанталăкăн хăш пулăмĕсемпе танлаштарнă? Мĕншĕн çапла калană-ши? Чăваш ташшине епле сăнланă, сăнарланă? Мĕнле сăнарлăх мелĕсемпе усă курнă? Тупса вулăр.

4-м ĕ ш  ç а в р ă м: Ку çаврăмра мĕне-мĕне сăнланă, еплерех сăнланă? Сăвва епле вĕçленĕ?

**5.** Сăвă кăмăл-туйăмне, хайлава мĕнле калăпланине сăнани.

– Хайлавра автор мĕнле кăмăл-туйăм палăртать, сăвă йĕркисем-

пе вулакансенче мĕнле туйăмсем ҫуратать? Сăвă чĕлхи мĕнлерех? Автор епле сăмахсемпе, ҫаврăмсемпе ытларах усă курать?

Пĕтĕмлетӳ.

**6.** Сăввăн тĕп шухăшне уҫса пани.

– Автор сăвăпа мĕн каласшăн.

**7.** Сăвăпа паллашнă хыҫҫăнхи ăславлă ĕҫсем.

– Чăваш халăх ташшине сăнлакан ӳкерчĕксене сăнани.

Чăваш ташшине сăнлани.

– Чăваш уявĕсене аса илни. Ҫулталăкăн ҫак вăхăтĕнчи уява аса илни. Ӳкерчĕксемпе е ятарлă презентаципе усă курса унăн йĕркине сăнани.

**8.** Урока пĕтĕмлетни.

**9.** Киле ĕҫ пани. Аслисем пулăшнипе чăваш халăхĕн пĕр-пĕр юррине е пĕр-пĕр йăлине (уявне) ҫырса илесси, кăтартасси.

## 9-мĕш урок

**Урок теми**: Кĕр пуҫламăшĕн сăнлăхĕсем, вĕсене сăнламалли мелсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– сăвăласа ҫырнă сăнлавлă хайлавсене йышăнас-ăнланас, асăмлас хăнăхусене малалла аталантарасси;

– сăвăри сăнлăхсене курма, вĕсене мĕнле сăнарланине палăртас ăслай-хăнăхусене ҫивĕчлетесси;

– сăнлăх мелĕсене тупса палăртма, вĕсен пĕлтерĕшне уҫăмлатма вĕрентсе пырасси, хăйсен пуплевĕнче усă курма хавхалантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Умĕнхи калаҫу (Кĕр пуҫламăшне сăнлакан ӳкерчĕксем тăрăх).

– Ӳкерчĕксенче ҫулталăкăн хăш вăхăтне сăнланă? Кĕрĕн тапхăрĕсене аса илĕр. Кунта хăш тапхăрне сăнланă? Ҫак тапхăр хăш уйăхсенче килет? Кĕр пуҫламăшĕнчи ҫанталăк мĕнле пулать, ҫут ҫанталăкри улшăнусем епле?

**2.** Н. Исмуковăн «Кĕр пасарĕ» сăввине итлени.

– Сăвă мĕнле кăмăл-туйăм ҫуратрĕ? Ку сăвă мĕнлерех: хаваслă е тунсăхлă, лăпкă е ҫĕкленӳллĕ? Сăвăра кĕркуннен хăш самантне сăнланă?

**3.** Сăвва хăйсем тĕллĕн вулани.

**4.** Сăвва тишкерни. Суйлавлă вулав.

– Сăвăра кĕр пуҫламăшĕн мĕнле ӳкерчĕкне-сăнлăхне сăнланă? Мĕншĕн ҫапла шутлатăр? Ăнлантарăр. Сирĕн шутăрпа мĕн вăл «кĕр пасарĕ»? Ăнлантарăр.

**5.** Сăвă чĕлхине тишкерни, сăнарлăх мелĕсене палăртни.

– Сăвăра пыл хуртне мĕнпе танлаштарнă? Тупса вулăр. Ку сăнарламалли мĕнле мел? Сăвăра тата мĕнле сăнарлăх мелĕсем тĕл пулаççĕ? Тупса вулăр. «Мухтать çу панă çимĕçе» тенине мĕнле ăнланатăр? Сăмах мĕнле çимĕç çинчен пырать?

**6.** Пĕчĕк ушкăнсем çине пайланса ĕçлени. Кашни ушкăнăн пĕрле канашласа сӳтсе явнă хыççăн кĕр пуçламăшне сăнлакан ӳкерчĕк тумалла, ăна класс умĕнче хӳтĕлемелле.

**7.** Урока пĕтĕмлетни.

**8.** Киле ĕç пани.

## 10-мĕш урок

**Урок теми:** Ылтăн кĕркунне сăнлăхĕсем. Вĕсене сăнлани. Сăнарлăх хатĕрĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– сăвăласа çырнă сăнлавлă хайлавсене йышăнса, вĕсен кĕввине тарăнрах туйма хăнăхтарса пырасси;

– хайлаври сăнлăхсене палăртма, вĕсене мĕнлерех сăнарласа сăнланине курма малалла хăнăхтарасси;

– сăнарлăх хатĕрĕсене курма, вĕсен хайлаври пĕлтерĕшне ăнланма вĕрентсе пырасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Умĕнхи калаçу. Ӳкерчĕксем тăрăх ылтăн кĕр вăхăтĕнчи çут çанталăка, тавралăха сăнани, çут çанталăкри, таврари улшăнусене палăртни.

**2.** Мĕнле сăвă вулассине, ăна кам хайланине пĕлтерни.

**3.** Сăвва пĕрремĕш хут итлени.

– Сăвă мĕнле туйăм çуратрĕ?

**4.** Сăвва хăйсем тĕллĕн, сасăпа вулани.

**5.** Сăвва тишкерни. Суйлавлă вулав.

(Тишкерĕве кĕнекери ыйтусем тăрăх йĕркелеме пулать.)

**6.** Сăвă чĕлхине тишкерни, сăнлама усă курнă сăнарлăх мелĕсене тупса палăртни, уçăмлани. *(Хур ури пек хĕрлĕ çут çанталăк шарт çеç сикнĕн туйăнать, кĕркунне хыпарĕ хăвăрт саланать, йăмрасем те путрĕç тарăн шухăша – упраса юласшăн çуллахи ăшша.)*

– Автор ылтăн кĕркуннене мĕнле туйăмпа сăнлать? Сирĕн шутпа, ку сăвă мĕнле: хаваслă е хурлăхлă, çĕкленӳллĕ е шӳтлĕ? Вăл мĕнле туйăмсем çуратать? Ылтăн кĕркунне вăхăтĕнче хĕл çывхарасси сисĕнет-и? Сăвăра çакă хăш йĕркесенче уйрăмах палăрать?

**7.** Пĕчĕк ушкăнсенче ĕçлени. Кашни ушкăн урокра итленĕ-вуланă «Кĕрхи сăнсем» сăвва сăнлакан ӳкерчĕк тăвать, ыттисем умĕнче ăна сăнласа параççĕ.

– Эсир ӳнерçĕ пулнă пулсан çак сăвва сăнлакан ӳкерчĕк тума мĕн тĕслĕ сăрăсем илнĕ пулăттăр? Мĕншĕнне ăнлантарăр. Сăвăри хăш сăнлăха ӳкернĕ пулăттăр? Мĕншĕн çак сăнлăх ытларах чуна çывăххине ăнлантарма тăрăшăр.

П ĕ т ĕ м л е т ӳ. Ылтăн кĕркунне – кĕрĕн çав тери илемлĕ, капăр тапхăрĕ. Вăл лăпкăлăх, тăнăçлăх туйăмĕсемпе пĕрлех кăштах тунсăх та çуратать. Ылтăн кĕр кунĕсенче тата аякра пулин те хĕл çывхарни сисĕнет.

**8.** Урока пĕтĕмлетни.

**9.** Киле ĕç пани. Аслисенчен ылтăн кĕркуннепе çыхăннă çут çанталăк паллисемпе палăрăмĕсене çырса илмелле.

## 11-мĕш урок

**Урок теми**: Сăнлавлă калав. Сăнарсем. Сăнарлăх мелĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– çут çанталăк илемне сăнас, унпа киленес туйăма аталантарасси;

– сăнлавлă калавсене вуласа ăнланас хăнăху-ăслая çивĕчлетесси;

– сăнлавлă калаври сăнарсене палăртас ăслай-хăнăхăва тарăнлатасси; çынсем çеç мар, çут çанталăкри пулăмсемпе ӳсен-тăрансем те, йывăç-курăк та, таврари сăнсем те сăнар пулма пултарнине уçăмлама пулăшасси.

**У р о к  ю х ă м ĕ**

**1.** Умĕнхи калаçу. (Кĕрĕн тĕрлĕ тапхăрĕсенчи вăрмана сăнлакан ӳкерчĕксем тăрăх.)

– Кашни ӳкерчĕк çинче вăрмана кĕрĕн хăш вăхăтĕнче сăнланă? Кĕр пуçламăшĕнче, ылтăн тата хура кĕркунне вăрман мĕнлерех? Сăнлăр.

**2.** «Кĕрхи вăрманта» калавпа ачасем хăйсем тĕллĕн паллашни.

– «Кĕрхи вăрманта» ят пани тĕрĕсех-и? Ăнлантарăр. Калавра кĕрĕн тапхăрĕнчи вăрмана сăнланă?

**3.** Калаври сăнарсене палăртни. Суйлавлă вулав.

– Калавра ылтăн кĕркуннен мĕнле сăнĕсене сăнланă? Тупса вулăр. Кăмпасенчен кашнине мĕнле сăнланă? Мĕнле сăнарлăх мелĕсемпе усă курнă? «Уплюнккасем пĕр-пĕрин çумне тĕршĕнеççĕ» тенине мĕнле ăнланатăр? Шур çырлисене мĕнле сăнланă? Мĕнле

мелпе усă курнă? Сывлăшĕ уçă, юхан шыв тăрă пулнине мĕнле палăртнă?

**4.** Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш страницăри 3–4-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

**5.** Калаври сăнарсене палăртни.

– Сăнланă сăнсене калаври сăнарсем теме пулать-и? Ăнлантарăр.

П ĕ т ĕ м л е т ӳ. Илемлĕ хайлавсенче, çынсем пекех, çут çанталăк пулăмĕсем те, таврари сăнсемпе йывăç-курăк та, чĕр чунсем те сăнар пулма пултараççĕ.

**6.** М. Волкован «Кĕрхи хурăн» сăввине пĕрремĕш хут итлени.

– Ку сăвăра кĕрĕн хăш саманчĕ çинчен каланă?

**7.** Сăвва хăйсем тĕллĕн вулани, тишкерни. Суйлавлă вулав. (Кĕнекери ыйтусем тăрăх ĕçлеме пулать.)

**8.** Ăславлă ĕçсем. Сăвăра сăнланă хурăна ӳкересси. Харкам ӳкерчĕкне сăнлани.

**9.** Урока пĕтĕмлетни.

**10.** Киле ĕç пани. Ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсене (6-мĕш с.) пурнăçламалла.

## 12-мĕш урок

**Урок теми**: Хайлавăн сюжет аталанăвĕ. Чи çивĕч самант. Калаври сăнарсем. Тĕп сăнар.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– тĕрлĕ жанрлă хайлавсене вуласа ăнланас хăнăхăва малалла аталантарасси;

– ачасен вулавĕн тĕрлĕ тĕсне (паллашуллă вулав, тишкерӳллĕ вулав, суйлавлă вулав) çивĕчлетесси;

– илемлĕ хайлаври сăнарсене, тĕп сăнарне палăртас, сăнлас ăслай-хăнăхусене аталантарасси.

### У р о к ю х ă м ĕ

**1.** Умĕнхи калаçу. Мĕнле хайлав вулассине, ăна кам çырнине пĕлтерни. О. Туркай çыравçă çинчен кĕскен каласа пани.

**2.** О. Туркайăн «Çулçă» калавне хăйсем тĕллĕн вулани.

– Мĕн çинчен вуларăр? Хайлав мĕнле пуçланать? Çулçă мĕн çинчен ĕмĕтленнĕ? Пĕр кунхине мĕн пулса иртнĕ? Калаври чи çивĕч саманта тупса вула? Мĕншĕн çак саманта чи çивĕч тесе палăртнă? Ĕç мĕнле вĕçленнĕ?

**3.** Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе (6-мĕш с.) пурнăçлани. Йĕркеленĕ планпа килĕшӳллĕн хайлава пайсем çине уйăрса вулани.

**4.** Калава вуланӑ май харкам кӑмӑл-туйӑмӗ мӗнле улшӑнса пынине палӑртни (ӗҫ тетрадӗнчи 6-мӗш страницӑри 6-мӗш ӗҫе пурнӑҫланӑ май), ҫав самантсене хайлавра тупни. Верукпа Тимук каланисене вулани.

**5.** Калаври сӑнарсене тата тӗп сӑнара палӑртни, тӗп сӑнарне сӑнлани.

– Калаври сӑнарсене ӑнланӑр. Тӗп сӑнарӗ хӑшӗ? Ҫулҫӑ ҫинчен автор мӗнле кӑмӑлпа каласа парать? Вӑл ӑна мӗнле самантсемпе сӑнлать? (Ҫулҫӑ вӗҫме ӗмӗтленет. Ҫулҫӑн ӗмӗчӗ пурнӑҫланнӑ – вӑл вӗҫет. Ҫулҫӑ хӑй текех вӗҫейменнине, ӗмӗчӗ татӑлнине ӗненесшӗн мар. Ҫулҫӑ кӑмӑлӗ хуҫӑлни. Ҫулҫӑ ҫӑлӑнни.)

– Хайлавра ҫав вырӑнсене тупса вулӑр. Кашни саманта автор мӗнле сӑмахсемпе, еплерех сӑнарлать? Ҫулҫӑн кӑмӑл-туйӑмӗ хӑш самантра мӗнле улшӑнса пырать? Ҫакӑ хайлаври хӑш йӗркесенче уҫҫӑн курӑнать? Тупса вулӑр.

**6.** Ӳкерчӗксен альбомӗпе ӗҫлени.

– Ӳкерчӗксенче асӑннӑ самантсенчен хӑшӗсене сӑнланӑ? Пушӑ рамӑсенче хӑш самантсене сӑнлакан ӳкерчӗксем пулмалла тесе шутлатӑр?

Ачасем ӳкерчӗксем мӗнле пулмаллине сӑмахпа сӑнлаҫҫӗ. Кӑранташ-сӑрӑпа ӳкерме-сӑрлама киле сӗнмелле.

**7.** Хайлавӑн тӗп шухӑшне палӑртни.

– Хайлавӑн тӗп шухӑшӗ мӗнле? Автор мӗн каласшӑн пулнӑ?

**8.** Урока пӗтӗмлетни.

**9.** Киле ӗҫ пани. И. Соколов-Микитовӑн «Кӗрхи вӑрманта» тата О. Туркайӑн «Ҫулҫӑ» хайлавӗсене аса илни. Ӗҫ тетрадӗнчи 1–2-мӗш ӗҫсене (5–6-мӗш с.) пурнӑҫлни.

## 13-мӗш урок

**Урок теми:** Сӑвӑласа ҫырнӑ сӑнлавлӑ хайлав. Сӑвӑра автор туйӑмӗ сӑнланни.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

– сӑвӑллӑ хайлавсене йышӑнас, ӑша хывас ӑслай-хӑнӑхусене аталантарасси;

– сӑвӑласа ҫырнӑ хайлавсен содержанийӗпе форми еплерех килӗшсе тӑнине асӑрхама вӗрентсе пырасси;

– сӑвӑллӑ хайлавсенче авторӑн кӑмӑл-туйӑмне сӑнама-палӑртма хӑнӑхтарасси.

### Урок юхӑмӗ

**1.** Умӗнхи калаҫу. Хура кӗркуннене сӑнлакан ӳкерчӗк тӑрӑх ҫак тапхӑр паллине сӑнани, сӑмахлӑ ӳкерчӗк калӑплани.

**2.** Н. Янкасăн «Сивĕтет çанталăк» сăввине вĕрентекен вуланине итлени.

– Сăвă санра мĕнле туйăмсем çуратрĕ?

(Тӳрех хуравлаймасан ĕç тетрадĕнчи 1-мĕш ĕçре кăтартнисенчен (6-мĕш с.) суйлама сĕнмелле.

**3.** Сăвва ачасем хайсем тĕллĕн вулани.

– Сăвăра кĕркуннен хăш самантне сăнланă?

**4.** Сăвва суйлавлă вуласа тишкерни.

– Сăвăра кĕр вĕçĕн мĕнле паллисене сăнланă? Тупса вулăр. Автор мĕнле мелсемпе усă курнă?

– Çак йĕркесене мĕнле ăнланатăр?

1) «Хир те тулăх кăкăрпа

Çимĕçрен хăтарчĕ...»;

2) «тутăхать çу кунĕ», «сивĕ çилĕ уласа çу тумне туларĕ»

**5.** Ĕç тетрадĕнчи 4–6-мĕш ĕçсене (7-мĕш с.) пурнăçлани.

**6.** Хайлав формине, унта кăмăл-туйăм мĕнле улшăнса пынине сăнани.

– Автор сăвăра хура кĕркунне ӳкерчĕкĕсене мĕнлерех кăмăлпа сăнлать?

– Мĕнле шутлатăр, вăл кĕрĕн çак саманчĕсене кăмăллать-ши? Вăл хăй кăмăл-туйăмне сăвăра мĕнле те пулин кăтартать-и? Хăш йĕркесем, сăмахсем урлă?

– Сăвва вуланăçемĕн сирĕн хăвăрăн кăмăл улшăнчĕ-и? Еплерех улшăнчĕ?

**7.** Пĕчĕк ушкăнсене пайланса сăвă витĕмĕпе хура кĕркуннене сăнлакан ӳкерчĕк туни, ăна ыттисем умĕнче сăнлани.

– Уйрăм çын кăмăл-туйăмне сăмахсемсĕр пуçне тата ытти мĕнле мелсемпе усă курса сăнлама пулать?

– Хăвăр ӳнерçĕ пулнă пулсан кĕрĕн çак самантне сăнлама мĕнле сăрăсем суйласа илнĕ пулăттăр?

**8.** Пĕтĕмлетӳ.

Сăвăласа çырнă сăнлавлă хайлавсенче автор таврари пулăмсемпе йывăç-курăка, япаласене сăмахпа ӳкерсе сăнласа парать. Унăн сăнлавĕ яланах туйăмлă.

**9.** Киле ĕç пани.

## 14-мĕш урок

**Урок теми**: Тупмалли юмахсем – халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем. Çыравçăсем хайланă тупмалли юмахсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– халăх сăмахлăхĕн мĕнле тĕслĕхĕ тупмалли юмах пулнине, унăн тытăмне аса илесси;

– çыравçăсем те халăх сăмахлăхĕнчи евĕр хайлани, кун пек чухне хайлав епле йĕркеленннине уçăмлатасси;

– ачасен тупмалли юмахсен тупсăмне шутлас ăслай-хăнăхăвĕсене çивĕчлетесси, хайсене те тупмалли юмахсем хайлама хавхалантарасси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Умĕнхи калаçу. Тупмалли юмахсен 2–3 тĕслĕхне итлени. Вĕсем халăх сăмахлăхĕн мĕнле тĕслĕхĕсем пулнине, вĕсен тытăмĕ мĕнлерех пулнине аса илни.

**2.** Кĕнекери 41-мĕш страницăри тупмалли юмахсене вулани, тупсăмĕсене, тытăмне тишкерни. Тупмалли юмахсенче кашнийĕнче япалан хăш паллисем вырăнне шахвăрту сăмахĕсем каланине уйлани.

**3.** Ĕç тетраденчи 1–2-мĕш ĕçсене пурнăçлани. Тупмалли юмахăн хăй евĕрлĕхне, тытăмне уçăмланине çирĕплетни.

**4.** Çыравçăсен тупмалли юмах евĕр калăпланă хайлавĕпе (ĕç тетраденчи 6-мĕш страницăри 3-мĕш ĕç) авторсем хайланă тупмалли юмахсен тĕслĕхĕсене (42-мĕш с.) танлаштарса тишкерни.

П ĕ т ĕ м л е т ў. Çыравçăсем те халăх сăмахлăхĕнчи пек тупмалли юмахсем хайлаççĕ. Вĕсем кун пек чух хайлавĕсене халăх сăмахлăхĕнчи евĕр йĕркепе калăплаççĕ.

**5.** Ўкерчĕксен альбоменчи ўкерчĕксем тăрăх тупмалли юмахсем калăплани.

Малтан ушкăнпа кашни чĕр чунăн курăмлă паллисене палăртаççĕ, ăна мĕнле шахвăртса калама пулнине уйлаççĕ. Унтан хăйсем тĕллĕн тупмалли юмах калăплама тăрăшаççĕ.

**6.** Урока пĕтĕмлетни.

**7.** Киле ĕç пани.

## 15-мĕш урок

**Урок теми**: Вăйă-шăпа тата вăйă юррисем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– вăйă-шăпа юррисене (вĕсен тытăмне, содержанине, хăçан мĕн тума каланине) аса илесси;

– вăйă юррисемпе паллаштарасси: вĕсен тытăмĕ, содержанийĕ, хăçан тата мĕнле юрлаççĕ;

– халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсенче кашни халăхăн йăли-йĕрки, ĕçĕ-хĕлĕ ўкерĕннине уçăмласси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Урок тĕллевĕпе паллаштарни.

**2.** Вăйă-шăпа юрри-сăввине аса илни.

1) Кĕнекери (43–44-мĕш с.) сăвăсене хăйсем тĕллĕн вулаççĕ, вĕсем мĕнле хайлавсем пулнине, хăçан каланине шутлаççĕ, хăйсен шухăшне ăнланма хатĕрленеççĕ;

2) кĕнекери Шухши мучи калани çине таянса ыйту тăрăх хăйсем пĕтĕмлетӳ тума тăрăшаççĕ.

**3.** Вăйă юррипе паллашни.

Вĕрентекен вăйă юррин пĕр тĕслĕхне калать.

– Çакăн евĕр юрă-такмак эсир хальччен илтнĕ-и? Тен, хăвăр та каланă? Çакăн евĕр юрăсене вăйă юррисем теççĕ. Ку юрăра мĕн çинчен, мĕнле ĕçсем çинчен каланă? Мĕнле шутлатăр, ачасем вăйă юррисенче мĕншĕн çак ĕçсене асăннă?

Пĕтĕмлетĕвне Шухши мучипе Мария Васильевна вĕрентекен каланисемпе усă курса калăплама пулать.

**4.** Ачасем вăйă юррисем çинчен мĕн ăнланнине çирĕплетни.

Пĕчĕк ушкăнсене пайланса ĕçлеççĕ. Вĕрентекен кашни ушкăнне вăйă юррин тĕслĕхĕ, хыççăн ыйтусем çырнă хут листи валеççе парать. Ачасен ушкăнпа юрă вуласа тишкермелле, ыйтусем тăрăх ушкăнпа уйласа пĕтĕмлетӳ калăпламалла, ăна ыттисен умĕнче хӳтĕлемелле. (Ыйтăвĕсемпе ĕçĕсене кĕнекерисене те усă курма пулать.)

**5.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

Малтан вăйă юррисем çинчен каланине вулаççĕ (8-мĕш с.), унтан 1-мĕш ĕçе (9-мĕш с.) пурнăçлаççĕ.

**6.** Ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсене (9-мĕш с.) пурнăçлани.

**7.** Урока пĕтĕмлетни.

**8.** Киле ĕç пани. «Шăп-шăприкле» вăйă сăввине хăйсем тĕллĕн вуласа тишкерни, хыççăн панă ыйтусене хуравлани, пĕтĕмлетӳсемпе паллашни.

## 16-мĕш урок

**Урок теми**: Ача-пăча вăййисем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасене хускану вăййисемпе кăсăклантарасси, ытларах хускалма-чупма, ăмăртма-хавасланма хавхалантарасси; хускални, чупнихавхаланни çирĕп сывлăх никĕсĕ пулнине ăса хывма пулăшасси;

– ачасем халăх вăййисем çинчен мĕн пĕлнине тарăнлатасси: вăйăсем шалашĕпе те, тытăмĕпе те тĕрлисем пулаççĕ, çакă хăçан вылянинчен килет.

**У р о к   ю х ă м ĕ**

**1.** Вăйă юррисене аса илни. Ачасем хăйсене кăмăла кайнă, асра юлнă вăйă юррисене аса илеççĕ, ыттисем ку юрра хăçан юрланине тавçăрма тăрăшаççĕ.

**2.** Вĕрентекен чăваш ача-пăча вăййисем çинчен каласа пани. Вĕсем мĕнле пулса кайни, тĕсĕсем, ачасен пурнăçĕнчи пĕлтерĕшĕ. (Г. И. Воронцовăн «Вăйă – пурнăç шкулĕ» хайлавĕпе усă курса хатĕрленме пулать: *Г.И.Воронцов.* «Ача-пăча вăййисем». – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1992. Презентаци калăпласан татах та аванрах.)

**3.** Хускану вăййисемпе паллашни.

1) Кĕнекере панă вăйăсен тĕслĕхĕсемпе хăйсем тĕллĕн вуласа паллашаççĕ, унтан ушкăнпа тишкереççĕ: çак вăйăсене хальччен пĕлнĕ-и, вылянă-и, вĕсене мĕнлием шутне кĕртме пулать?

2) Шухши мучипе Мария Васильевна вĕрентекен калданисемпе паллашаççĕ.

**4.** Вăйăсем çинчен вĕреннине çирĕплетни. (Урокăн çак тапхăрĕнче ачасем пĕчĕк ушкăнсенче ĕçлеççĕ. Умĕнхи урокра кашни ушкăнне пĕр вăйă суйласа илсе ăна тишкерме сĕнмелле. Халĕ вĕсен çак вăйăпа ачасене паллаштармалла, выляма вĕрентмелле.)

**5.** Урока пĕтĕмлетни.

**6.** Киле ĕç пани.

## 17-мĕш урок

**Урок теми**: Пулмасла халап.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасен шухăш вĕçевне аталантарасси, уйлав тата ăслав хăнăхăвĕсене çивĕчлетесси;

– тĕрлĕ жанрлă хайлавсене йышăнас, вĕсен шалашĕпе тытăмне, чĕлхин уйрăмлăхне сăнас хăнаху-ăслайсене çирĕплетесси;

– пулмасла халапсене аса илтересси (тытăмĕпе шалашĕн уйрăмлăхĕсем, сăнарĕсем, мĕнле кăмăл-туйăмпа халаплани).

**У р о к   ю х ă м ĕ**

**1.** Умĕнхи калаçу. Вĕрентекен ачасене пĕр-пĕр пулмасла халап каласа парать. Çакăн евĕрлĕ хайлавсем хальччен вуланă-и, илтнĕ-и? Вĕсенче мĕнле ĕçсем çинчен каласа параççĕ? Вĕсене мĕнле халапсем теççĕ?

**2.** Урок тĕллевне ушкăнпа калăплани, задачисене палăртма тăрăшни.

– Мĕнле шутлатăр, паянхи урок теми мĕнле пулать? Пулмасла халапсем çинчен ытларах пĕлес тесен мĕнле ĕçсем тумалла пулĕ?

**3.** Кĕнекери пулмасла халапа вулани, тишкерни. Суйлавлă вулав. (Хăйсем тĕллĕн вуласа паллашаççĕ.)

– Ку хайлава пулмасла халап теме пулать-и? Ăнлантарăр. Кун-та çырса кăтартнинчен мĕн-мĕн пулма пултараймасть? (Малтан хăйсем мĕн шутланине калаççĕ. Верукпа Тимук каланисемпе танлаштараççĕ, унтан хайлавра тупса вулаççĕ.)

– Ку хайлава вĕçленнĕ теме пулать-и, ăна малалла тăсма май пур-и? Çакна тума мĕнле сăмахсем пулăшаççĕ? (Ыйтăва ушкăнпа уйланă хыççăн Мария Васильевна каланипе паллашаççĕ.)

**4.** Кĕнекери пулмасла халапа пĕр-ик çаврăм та пулин тăсма хăтланни. (Ĕçе мăшăррăн е пĕчĕк ушкăнсенче пурнăçласан вырăнлăрах.)

1) Халап тытăмне пуплев сыпăкĕсем мĕнле йĕркеленсе çыхăнса пынине сăнаççĕ.

2) Хăйсем пĕр-ик сыпăк хайлаççĕ.

3) Выляса кăтартаççĕ.

**5.** Ӳкерчĕксен альбоменчи ĕçсене пурнăçлани.

1) Ӳкерчĕкене сăнаççĕ, вĕсенчен хăшĕ вуланă пулмасла халапа сăнланине палăртаççĕ.

2) Тепĕр ӳкерчĕк тăрăх пулмасла халап хайлама пулни-пулманнине, пушă тăваткала мĕнле ӳкерчĕк тумаллине уйлаççĕ. (Ӳкерчĕкне тăвасси киле ĕç пулма пултарать.)

**6.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

**7.** Урока пĕтĕмлетни.

**8.** Киле ĕç пани.

## 18-мĕш урок

**Урок теми:** Çыравçăсем хайланă пулмасла халапсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасен танлаштарас, уйлас хăнăхăвĕсене аталантарасси;

– ачасен прозăпа çырнă тĕрлĕ жанрлă хайлавсене вуласа ăнланас ăслай-хăнăхăвĕсене аталантарасси;

– илемлĕ хайлавăн сюжет аталанăвне, ĕç мĕнле йĕркеленсе аталанса пынине сăнама-йĕрлеме вĕрентсе пырасси;

– пулмасла халапăн шалашĕ, тытăмĕ мĕнле калăпланине, унти сăнарсем мĕнлерех пулнине уçăмлаттарасси; автор кăмăлне сăнама хăнăхтарасси.

**У р о к  ю х ă м ĕ**

**1.** Умĕнхи калаçу. Иртнĕ урокра мĕнле хайлавсем вуланине аса илеççĕ, пĕр-пĕр пулмасла ĕçе сăнлакан хăйсем тунă ӳкерчĕксене сăнаççĕ.

Вӗрентекен пулмасла халапсене ҫыравҫсем те хайланине асӑнать, К. Чулкаҫ чӑвашсен ҫакӑн пек халапҫи пулнине пӗлтерет. Ун ҫинчен кӗскен каласа парать.

**2.** К. Чулкаҫӑн «Ӑсансене ертсе килни» халапне пайӑн-пайӑн вуласа хайлаври ӗҫсем мӗнле аталанса пынине сӑнани.

*Хайлав пуҫламӑшӗ.* – Ямаш вӑрманӗ сунарҫӑсен иленнӗ вырӑнӗ пулни ҫинчен.

*Тӗп пайӗ.* – Калавҫӑ ӑсансем тытма шутлани, вӗсене сӑнани; ытти сунарҫӑсем ӑсан тытайманни; калавҫӑ чее мел тупса ӑсансене килне кӗтӗвӗпех ертсе килни.

*Вӗҫӗ.* – Калавҫӑ ҫемйи ӑсан ӗрчетсе ыр курни.

**3.** Ӳкерчӗксен альбомӗпе ӗҫлени.

1) Сюжетлӑ ӳкерчӗксене сӑнаҫҫӗ, вӗсем хайлаври хӑш саманта сӑнланине калаҫҫӗ.

2) Хайлаври ӗҫсен аталанӑвне кура ӳкерчӗксен йӗркине палӑртаҫҫӗ.

3) Ӳнерҫӗ ӳкерчӗкри сӑнарсене, вӗсен хӑтланӑшӗсене еплерех кӑмӑлпа сӑнлани, ӳкерчӗксене сӑрласа илемлетме хӑйсем мӗн тӗслӗ сӑрӑсем суйласшӑн пулни ҫинчен калаҫаҫҫӗ. (Килте сӑрлама сӗнсен тӗрӗсрех.)

**4.** Калава, унӑн чӗлхине тишкерни. Суйлавлӑ вулав. (Кӗнекери ыйтусемпе, ӗҫ тетрадӗнчи 1–2, 7–8-мӗш ӗҫсем тӑрӑх.)

**5.** Сӑнарсене палӑртни, сӑнлани. (Тетрадьри ӗҫсене пурнӑҫланӑ май, ӳкерчӗксен альбомӗнчи 3–4, 6-мӗш ӗҫсем урлӑ.)

**6.** Пӗтӗмлетни.

**7.** Киле ӗҫ пани.

## 19-мӗш урок

**Урок теми:** Юптарусем.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

– тӗрлӗ жанрлӑ хайлавсен уйрӑмлӑхӗсене сӑнама-курма, вӗсене ӑса хывма малалла хӑнӑхтарасси;

– пӗр жанрлӑ пӗр сюжетпах тӗрлӗ тапхӑрти ҫыравҫӑсем хайлама пултарнине уҫӑмлаттарасси, ҫакӑн пек хайлавсен уйрӑмлӑхӗсене курма, сӑлтавлама вӗрентсе пырасси;

– тӗрлӗ тапхӑрта ҫырнӑ хайлавсен чӗлхине, тӗп шухӑшне сӑнама, танлаштарма хӑнӑхтарасси.

### Урок юхӑмӗ

**1.** Хатӗрлев ӗҫӗ.

Вӗрентекен 2-мӗш класра вуланӑ «Чӑрсӑр автансем» юптарӑва аса илтерет (вуласа е каласа парать).

– Хайлава аса илтĕр-и? Мĕн ятлăччĕ вăл, ăна кам çырнă? Кунашкал хайлавсене мĕнле хайлавсем тенĕччĕ?

**2.** Урок темипе задачисене хăйсене калăплама хавхалантарни.

– Сирĕн шутпа, ку урокра мĕнле хайлавсемпе паллашăпăр?

**3.** Умĕнхи калаçу. Юптарусене çыравçăсем мĕн авалтанах хайлани, кашни халăхăн хăйĕн юптаруçи пулни çинчен, Эзоппа И. Крылов юптаруçăсем çинчен вĕрентекен кĕскен каласа парать. (И. Крыловăн сăн ўкерчĕкне кăтартсан аван.)

**4.** Эзопăн «Ула куракпа тилĕ» юптарăвне вулани, тишкерни.

– Хайлав мĕнле юмах евĕрлĕ? (Хайлав чĕр чун юмахĕсем евĕрлĕ.)

– Вăл юмахран мĕнпе уйрăлса тăрать? (Юптару икĕ пайран тăрать, ун вĕçĕнче ăса вĕрентсе калани пур.)

– Юптарура мĕнле чĕр чунсем çинчен каланă? Ула курак мĕн тупнă? Тилли мĕн шут тытнă? Вăл ула курака мĕншĕн çăмăллăнах улталама пултарнă? Ула курак мĕнлескер, тилли еплерех?

**5.** И.Крыловăн «Ула куракпа тилĕ» юптарăвне вулани, Эзоп юптарăвĕпе танлаштарни.

– Юптарусем содержанийĕ, сюжечĕ тĕлĕшĕнчен пĕр пек е расна? Танлаштарса сăнăр: сăнарĕсене, пулса иртекен ĕç-пуçа.

П ĕ т ĕ м л е т ў. Тĕпрен илсен, Иван Крылов юптаруçă каласа панă истори Эзопăнни евĕрлех. Вĕсем хăш-пĕр самантсемпе, детальсемпе çеç уйрăлса тăраççĕ. Ку ламран лама куçакан, «çулçўревçĕ» истори (сюжет). Ун пеккисем халăх сăмахлăхĕнче те, литературăра та тĕл пулаççĕ.

– Эзоппа И. Крыловăн юптарăвĕсенче мĕнле уйрăмлăхсем куратăр? Танлаштарса вулăр, палăртăр. (Эзоп юптарăвĕнче ула курак аш татки тупнă. Крыловăн – чăкăт татки. Эзопăн тилли ула куракăн сасси пурри пирки иккĕленет. Крыловăн тилли вара кайăкăн сасси пит чаплă пулĕ тесе йăпăлтатать. Крыловăн тилли чее кăна, чăкăтне илет те тарать, Эзопăн вара сĕмсĕркке, ăса вĕрентме пăхать.)

**6.** Юптарури сăнарсене тишкерни.

– Юптарусенче тилĕ мĕнлерех? Ула куракĕ мĕнлескер? Авторсенчен кашнийĕ вĕсене мĕнле сăнарлать? (Юптарусенчи йĕркесемпе сăнарлаттармалла.) Чĕр чунсен хăтланăшĕсене, калаçăвне мĕнле сăнланă? Юптарусенчи йĕркесемпе çирĕплетĕр.

**7.** Хайлавăн тĕп шухăшне палăртни.

– Юптарусенче ăса вĕрентсе каланисене тупса вулăр. Кашнийĕнче вăл ăçта вырнаçнă? (Эзоп юптарăвĕнче – вĕçĕнче. И. Крыловăн – пуçламăшĕнче.)

– Кашни юптарăвĕнче мĕне сивленĕ: Ула курак айванлăхне е Тилĕ чеелĕхне? (Эзоп юптарăвĕнче – Ула курак айванлăхне, И. Крыловăн – Тилĕ чеелĕхне.)

**8.** И. Крыловăн «Тилĕпе ула курак» юптарăвне палăртуллă вулама вĕренни.

**9.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (5–6-мĕш ĕçсем.)

**10.** Урока пĕтĕмлетни.

**11.** Киле ĕç пани.

## 20-мĕш урок

**Урок теми**: Прозăлла юптарусем. Юптарусен тытăмĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– тĕрлĕ жанрлă, тĕрлĕ мелпе (сăвăласа, прозăпа) çырнă хайлавсене ăса хывса, ăнланас, асăмлас хăнăхусене малалла аталантарасси;

– юптару жанрĕн хай евĕрлĕхне, шалаш тата тытăм уйрăмлăхĕсене тарăнрах ăса хывасси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Умĕнхи калаçу. Вĕрентекен чаплă çыравçăсем те юптарусем хайлани çинчен асăнать. Вырăссен паллă писателĕ Л. Толстой çинчен кĕскен каласа парать. Вăл та юптарусем хайлани çинчен асăнать.

**2.** «Пакшапа кашкăр» хайлава вулани, шалашне, сăнарсене тишкерни.

– Хайлав мĕн çинчен? Пакша мĕнле нушана лекни çинчен. Вăл инкекрен хăтăлма мĕнле май тупать? Пакшана мĕнле сăнлатăр? Хăвăр шухăшăрсене хайлаври йĕркесемпе çирĕплетме тăрăшăр.

– Хайлав тытăмĕ епле, кашни пайĕ мĕн çинчен?

**3.** «Тимĕр шапапа ăмăрт кайăк» хайлава вулани, шалашĕпе сăнарĕсене тишкерни.

– Ку хайлавра мĕнле чĕр чунсем çинчен каланă? Тимĕр шапа ăмăрт кайăка мĕн çинчен тилмĕрнĕ? Лешĕ килĕшнĕ-и? Ĕç мĕнле вĕçленнĕ?

**4.** Пĕтĕмлетни.

– Ку хайлавсем мĕнле юмахсем евĕрлĕ? Çапах та вĕсене мĕншĕн юптару тенĕ? (Хăйсен шухăшĕсене палăртнă хыççăн ачасем Шухши мучипе Мария Васильевна каланисемпе паллашаççĕ.)

**5.** Юптарусене палăртуллă вулани.

**6.** Урока пĕтĕмлетни

**7.** Киле ĕç пани.

## 21-мĕш урок

**Урок теми**: Мифсем. Улăп халапĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасен харкам йăх-несĕлне пĕлес, хăйсем мĕнле халăхран тухнине ăнланас туйăмне амалантарасси;

– ачасен тĕрлĕ жанрлă сăвăласа çырнă хайлавсене вуласйышăнас хăнăхăвĕсене аталантарасси;

– сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсене тарăнрах уçăмлама хăнăхтарасси;

– хайлаври сăнарлăх хатĕрĕсене курма вĕренесси, вĕсен пĕлтерĕшĕсене ăнланма пулăшасси;

– поэзи хайлавĕсенчи лирика геройĕн кăмăл-туйăмне туйма, палăртма вĕрентсе пырасси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Умĕнхи калаçу. Вĕрентекен ачасене Улăп ӳкерчĕкне кăтартать.

– Ӳкерчĕк çинче кама сăнланă? Аса илĕр, кунччен эсир Улăпсем çинчен калакан мĕнле хайлавсем вуланăччĕ? Вĕсене мĕнле хайлавсем тенĕччĕ? Улăп сăнарĕ сирĕн асра мĕнлерех юлчĕ? Сăмахпа сăнлама тăрăшăр.

**2.** Урокра мĕнле хайлав вулассине пĕлтерни.

Хайлав ятне, кам çырнине калать. Г. Юмарт çыравçă çинчен кĕскен каласа парать, унăн «Улăп халапĕсем» кĕнекипе паллаштарать.

**3.** Словарь ĕçĕ. Сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсене уйлани. (Енчĕкпе палăртнă сăмахсен пĕлтерĕшне доска е мультимедиа экранĕ çинчен вуласа ушкăнпа тишкерме пулать.)

**4.** Сăвва ачасем хăйсем тĕллĕн вулани.

– Камсем çинчен вуларăр? Сăвă мĕнле туйăмсем çуратрĕ?

**5.** Сăвва пайăн-пайăн вуласа тишкерни. (Кĕнекери ыйтусем тăрăх.)

**6.** Хайлаври тĕп сăнара палăртни, ăна мĕнле сăнарланине тишкерни.

– Автор Улăпсене кĕлетки тĕлĕшĕнчен мĕнлерех сăнлать? Вăл çав тери пысăк та вăйлă пулнине мĕнле палăрт? Тупса вулăр. Мĕнле мелсемпе усă курнă? Кăмăлне, чун пуянлăхне мĕнле сăнланă? Тупса вулăр. Вуланă йĕркесене мĕнле ăнланатăр? Сăвăра Улăпăн мĕнле паттăрлăхĕсене çырса кăтартнă? Тупса вулăр.

**7.** Автор кăмăл-туйăмне палăртни.

– Автор Улăпсене мĕнле кăмăл-туйăмпа сăнлать, паттăрла ĕçсем çинчен мĕнлерех каласа парать? Сăвва мĕнлерех вуламалла?

**8.** Пĕтĕмлетни.

Сăвăри юлашки çаврăма вулăр. Вăл мĕнле пуçланать? Çак йĕркесене мĕнле ăнланатăр, йышăнатăр? Хамăра Улăп йăхĕнчен тени, сирĕн шутпа, мăнаçланни е хамăр çине яваплăх илни? Улăп йăхĕнчен тухнă халăх çыннисем, сирĕн шутпа, мĕнлерех пулмалла? Сăнласа пама тăрăшăр? Çаврăм мĕнле йĕркесемпе вĕçленет? Каланине мĕнле ăнланатăр?

**9.** Киле ĕç пани. Хайлава харкам тĕллĕн вуласа, тишкерсе Улăп сăнарне сăрăсемпе ӳкерни.

## 22-мĕш урок

**Урок теми**: Мифсем. Улăп халапĕсем *(малалли)*.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасен тĕрлĕ жанрлă хайлавсене вулас-ăнланас, жанр уйрăмлăхĕсене уçăмлас хăнăхăвĕсене аталантарасси;

– хайлавра çырса кăтартнă ĕçсен аталанăвне, сăнар хăтланăшĕсемпе ĕçсен çыхăнăвне сăнама, сăлтавлама вĕрентесси;

– хайлав темипе тĕп шухăшне палăртас хăнăхăва малалла аталантарасси;

– кашниех хăй хăтланăшĕсемшĕн яваплă пулмалла текен шухăша ăша хывма пулăшасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Умĕнхи калаçу. Хальччен вуланă Улăп халапĕсене аса илеççĕ. Мĕнле хайлава халап тенине асăмлаççĕ.

**2.** Ячĕ тăрăх халап мĕн çинчен пулма пултарассине уйлани.

– Улăп ăçтан аннă? Камсем патне аннă-ши вăл? Унпа çĕр çинче мĕн пулма пултарнă?

**3.** Халапа пайăн-пайăн вуласа тишкерни, пайсене ят парса план туни. (Тишкерĕве кĕнекере панă ыйтусем тăрăх йĕркелеме пулать.)

**4.** Тĕп сăнара палăртни. Унăн хăтланăшĕсемпе ĕçĕсене тишкерни. (Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕç.)

– Улăп вăйлă, пысăк пулнине мĕнле сăнланă? Çĕр çинче Улăп камсене тĕл пулать? Вĕсене автор мĕнле сăнлать? Тупса вулăр. Улăп хайне мĕнле тыткалать? Мĕн хăтланать? Тупса вулăр. Сирĕн шутăрпа вăл мĕншĕн çапла хăтланать? Çав териех хаяр-и вăл? (Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕç.) Инкек çитсен, арăмĕ вилсе кайсан, Улăп хайне мĕнле туять, мĕнле тыткалать? Тупса вулăр.

– Ту çумне сăнчăрланă Улăпăн кăмăл-туйăмĕ улшăнать-и? Мĕнле улшăнать? Мĕншĕн çапла шутлатăр? Хăвăр шухăша халапри йĕркесемпе çирĕплетĕр. Мĕнле шутлатăр, Улăп кăмăл-туйăмĕ, хăтланăшĕсем мĕнле çакăн пек тĕпрен улшăнма пултарнă? Улăп хăтланăшĕсем, сăмахĕсем сирĕнте хăш самантра мĕнле туйăм çуратрĕç? Каласа парăр.

**5.** Пĕтĕмлетни.

– Кунашкал халапсене *мифсем* теççĕ. Мифсемпе çут çанталăкри, халăх пурнăçĕнчи пулăмсене хăйне майлă ăнлантараççĕ. Ку халапра мĕнле пулăмсене ăнлантарнă? (Ачасен хуравĕсене итленĕ хыççăн ушкăнпа Мария Васильевна вĕрентекен каланипе паллашаççĕ, сӳтсе яваççĕ.)

**6.** Ăславлă ĕç йĕркелени. Вĕрентекен ачасене пĕчĕк ушкăнсене уйăрать. Вĕсем канашласа халапри чи асра юлакан саманта палăртаççĕ, çак саманта сăнлакан ӳкерчĕк тăваççĕ. Унтан хăйсен ӳкерчĕкне класс умне кăлараççĕ.

**7.** Урока пĕтĕмлетни.

**8.** Киле ĕç пани.

## 23-мĕш урок

**Урок теми:** Халапсен пурнăçри вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ.

**Урок тĕллевĕсемпе задачисем:**

– ачасен тишкерес-танлаштарас ăслай-хăнăхăвĕсене çирĕплетесси, пĕтĕмлетӳсем патне пыма вĕрентесси;

– хайлавсене хăйсем тĕллĕн вуласа ăнланас, асăмлас пултарулăхĕсене аталантарасси;

– мифсен хăй евĕрлĕхне, тулаш тата содержани уйрăмлăхĕсене сăнлаттарасси, уçăмлаттарасси;

– ачасене вулавăн тĕрлĕ тĕсĕсене вĕрентсе пырасси.

**У р о к ю х ă м ĕ**

**1.** Урок тĕллевне ачасене уйлаттарни. Вĕрентекен ачасене класра вулама палăртнă халапсенчи пĕр-пĕр саманта сăнланă ӳкерчĕксене сăнлаттарать. Вĕсенчи мĕнле хайлавсенчи ĕçсене сăнлама пултарнине шутлама, харкам шухăшне сăлтавлама ыйтать.

– Мĕнле шутлатăр, паян эпир мĕнле йышши хайлавсем вулăпăр?

**2.** «Çунатлă урхамах» халапа хăйсем тĕллĕн вулани.

– Кам çинчен вуларăр? Халапра Улăпăн мĕнле паттăрла ĕçĕ çинчен каласа панă?

**3.** Ӳкерчĕксен альбомĕпе усă курса халапри ĕçсен аталанăвне йĕрлени, халапа суйлавлăн вулани.

– 1-мĕш ÿкерчĕкре халапри хăш саманта сăнланă? Халапри ĕç мĕнле пуçланать? Тупса вулăр. Сăнăр: Улăп урхамахне мĕнле сăнланă? Эсир ăна мĕнле ут тенĕ пулăттăр?

– 2-мĕш ÿкерчĕкре хăш саманта сăнланă? Çав вырăна тупса вулăр. Улăппа Аçтаха çапăçăвĕ пилсĕр, хаяр пулнине мĕнле кăтартнă? Çав йĕркесене тупса вулăр.

– Çапăçу хыççăн мĕн пулнă? Пушă вырăна эсир мĕнле ÿкерчĕк тунă пулăттăр? Мĕншĕнне ăнлантарăр.

**4.** Халапри сăнарсене палăртни, вĕсене сăнлани. (Ÿкерчĕксен альбомĕпе ĕçлеççĕ.)

**5.** Халапçă кăмăлне, харкам кăмăл-туйăмне палăртни. (Ĕç тетрадĕнчи 6-мĕш ĕç.)

– Халапçă Улăпăн паттăрла ĕçĕ çинчен еплерех кăмăлпа каласа парать? Улăпа мĕнле туйăмпа сăнлать? Халап хăвăнта мĕнле кăмăл-туйăм çуратрĕ? Вуланăçем кăмăлу епле улшăнса пычĕ?

**6.** Пĕтĕмлетни.

– Халапçă Улăпăн çак паттăрла ĕçне сăнласа мĕн каласшăн пулнă? Çак авалхи халап халăхра паян кунччен мĕнле сыхланса юлнă? Халăх ăна мĕншĕн упранă, ламран лама çитернĕ?

**7.** Урока пĕтĕмлетни.

**8.** Киле ĕç пани.

## 24-мĕш урок

**Урок теми**: Тĕрлĕ халăх халапĕсем. Вĕсен пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасен тишкерес-танлаштарас, пĕрпеклĕхсемпе уйрăмлăхсене палăртас хăнăхăвĕсене çивĕчлетесси;

– тĕрлĕ жанр уйрăмлăхĕсене курас-палăртас хăнăхусене аталантарасси;

– тĕрлĕ халăхăн пĕр жанрлă хайлавĕсене танлаштарса сăнама хăнăхтарасси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Урокра мĕнле хайлав вулассине пĕлтерни.

**2.** «Ной карапĕ» халапа ачасем хайсем тĕллĕн вулани, ытти халапсемпе танлаштарни, халапа тишкерни.

– Ку хайлав кунччен вуланă Улăп халапĕсем евĕрлĕ теме пулать-и? Сирĕн шутпа, халап пулать-и? Ăнлантарăр.

– Халап ăçтан тесе палăртнă? (Библи – пурнăç кĕнеки. Унта çынсен пурнăçне, хутшăнăвĕсене çырса кăтартнă.) Халапра мĕнле

ĕçсене сăнланă? Çĕр çинче халăхсен пурнăçĕнчи хăш саманта сăнланă? Тĕнчене шыв илнине мĕнле сăнланă? Тупса вулăр. Шыв чакни çинчен мĕнле каланă? Тупса вулăр Халап мĕн çинчен?

П ĕ т ĕ м л е т н и. (Мария Васильевна вĕрентекен каланипе усă курма пулать.)

**3.** Пай тăрăх пĕтĕмлетни (ĕç тетрадĕнчи ĕçсене (13-мĕш с.) усă курса).

**4.** Ăславлă ĕçсем йĕркелени. Ачасене вуланă халапсенчен (хăйсене ытларах кăмăла кайнисенчен) пĕр-пĕр аса юлнă саманта сăнлакан ӳкерчĕк тума ыйтни. Кайран çак ӳкерчĕксен выставкине йĕркелени.

**5.** Урока пĕтĕмлетни.

**6.** Киле ĕç пани.

## 25-мĕш урок

**Урок теми:** Чăваш халăх юмахĕ. Чĕр чун юмахĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасене текста тĕрлĕрен тишкерме (содержанине, тĕп шухăшне, вăрттăн шухăшне уйлани) вĕрентсе пырасси;

– илемлĕ хайлаври сăнарсене танлаштаруллă тишкерме-сăнлама хăнăхтарасси;

– чĕр чун юмахĕсен шалаш тата тулаш уйрăмлăхĕсене аса илтересси;

– чăваш халăх юмахĕсен уйрăмлăхĕсене сăнаттарасси.

**У р о к ю х ă м ĕ.**

**1.** Умĕнхи калаçу. Хальччен вуланă чăваш халăх юмахĕсенчи самантсене сăнлакан ӳкерчĕксене сăнаççĕ вĕсем тăрăх калаçаççĕ.

**2.** Урокра мĕнле юмах вулассине пĕлтерни, юмах ятне калани.

– Юмах «Чее такасем» ятлă. Мĕнле шутлатăр, юмах мĕн çинчен пулма пултарать? Ăнлантарăр.

**3.** Юмаха ачасем хăйсем тĕллĕн вулани.

– Юмахра мĕнсем çинчен каланă? Кун йышши юмахсене мĕнлисем тетпĕр?

**4.** Юмахра сăнланă ĕç-пуç аталанăвне йĕрлени (ӳкерчĕксен альбомĕ тăрăх).

– Аса илĕр, юмах мĕнле пуçланать? Малалла мĕн пулать? Çакна сăнарлакан ӳкерчĕке суйлăр. Юмахра ăна сăнлакан пая тупса вулăр. Такасем мĕнле хăтăлма шутлаççĕ? Упапа кашкăр такасене кăвайт патĕнче тупаяççĕ-и? Çак самантсене сăнлакан ӳкерчĕксене суйлăр, черетлĕр, юмахри пайĕсене палăртăр.

– Юмах мĕнле вĕçленет? Вулăр. Çакна сăнлакан ӳкерчĕк пур-и?

**5.** Ӳкерчĕксем тăрăх юмаха асăмлани.

**6.** Юмахри сăнарсене палăртни, тишкерни. (Ĕç тетрадĕнчи 1–6-мĕш ĕçсемпе усă курса.)

– Ку юмаха хăш халăх юмахĕ тенĕ? Сăнарĕсем мĕнле чĕр чунсем? Вĕсенчен кашниййĕ мĕнлерех терĕмĕр?

П ĕ т ĕ м л е т н и. (Шухши мучи каланипе усă курса.)

**7.** Юмахăн тĕп шухăшне палăртни. (Ĕç тетрадĕнчи 7–8-мĕш ĕçсемпе усă курса.)

П ĕ т ĕ м л е т н и. Ку авалхи юмах. Вăл вăхăтри юмахсенче чее пулнине сивлемен, чеелĕх авалхи этеме нуша-инкекрен çăлăнма пулăшнă. Чееленни, улталани, суйни шутланман.

**8.** Урока пĕтĕмлетни.

**9.** Киле ĕç пани.

## 26-мĕш урок

**Урок теми**: Тĕрлĕ халăх юмахĕсем. Йăла юмахĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасене илемлĕ хайлавăн тишкерĕвĕн тĕрлĕ тĕсĕсене çирĕпрех алла илме пулăшасси;

– илемлĕ хайлавсенче вăрттăн каланине (подтекст) сисме вĕрентсе пырасси;

– йăла юмахĕсене аса илтересси. Вĕсенче çырса кăтартакан ĕçсен, сăнарсен хăй евĕрлĕхне сăнаттарасси.

### У р о к   ю х ă м ĕ

**1.** Умĕнхи калаçу. Вĕрентекен ачасене тупмалли юмахсем шутлаттарать.

1) Пĕр пичкере икĕ тĕслĕ сăра. *(Çăмарта).*

2) Явман кантра, çăрман чуста, хупман кукăль. *(Пăрçа).*

– Паян вулакан юмахра та калаçу-халап çăмартапа пăрçа тавра пулать. Ахаль пăрçа мар, тăрăхла пăрçа. Мĕнле çимĕç вăл – тăрăхла пăрçа? (Фасоль ӳкерчĕкне кăтартсан аван.)

**2.** Юмаха пайăн-пайăн вуласа тишкерни. Ĕçсен аталанăвне йĕрлени. (Кĕнекери ыйтусемпе усă курса.)

– Юмаха миçе пая уйăрма пулать? Пайĕсене мĕнле ят пама пулать?

**3.** Ĕç тетрадĕнчи 4-мĕш ĕçе пурнăçлани.

– Ĕçсен йĕркине номерлесе палăртăр. Çакă юмах планĕ пулма пултарать-и?

– Юмахри сăнарсене аса илĕр. Вĕсенчен кашниййĕ кам?

**4.** Тишкерни.

– Пĕрремĕш ҫынни ҫинчен мĕн калăр? Хăш йĕркесем ҫакна витĕмлĕрех ҫирĕплетеҫҫĕ? Иккĕмĕшĕ мĕнлерех? Мĕншĕн каланине юмахри йĕркесемпе ҫирĕплетĕр. Израиль патшин Давидăн йышăнăвĕсене аса илĕр. Вĕсем патшана мĕнлерех сăнлаҫҫĕ? Пуринчен те тавҫăруллăраххи, чеерехҳи кам тесе шутлатăр? Мĕншĕн? (Хăйсен шухăшне палăртнă хыҫҫăн Верукпа Тимук каланисене вулаҫҫĕ.)

**5.** Юмах тĕсне, тĕп шухăшне палăртни.

Юмахра шахвăртса та юптарса каланă ĕҫсем кулленхи пурнăҫра пулма пултараҫҫĕ-и? Аса илĕр: кун йышши юмахсем хальччен вуланăччĕ-и? Вĕсене мĕнле юмахсем тенĕччĕ? Ку юмахра шахвăртса, юптарса мĕн каласшăн пулнă? Шухши мучипе Мариҫ кинеми каланисенчен хăшĕ юмахăн тĕп шухăшне ҫывăхрах?

**6.** Ĕҫ тетраденчи 5–6-мĕш ĕҫсене (16-мĕш с.) пурнăҫлани.

П ĕ т ĕ м л е т ӳ. Ку юмах еврей халăх юмахĕ тенĕ. Еврейсем – авалхи халăх, юмахĕ те вĕсен ĕлĕкхи юмах. Авалхи ытти юмахсенчи пекех сăнарсенчен чеерехҳи маттуртарах, пултаруллăрах шутланать.

**7.** Урока пĕтĕмлетни.

**8.** Киле ĕҫ пани.

## 27-мĕш урок

**Урок теми**: Асамлă юмахсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасене ҫирĕп сăмах майлашăвĕсене курма, вĕсен пĕлтерĕшне ăнланма вĕрентсе пырасси;

– ачасен хайлав планне калăплас, ун тăрăх содержанине асăмлас хăнăхăвĕсене аталантарасси;

– асамлă юмахсем ҫинчен аса илтересси, вĕсен хăй евĕрлĕхне сăнаттарасси. Асамлă япаласен пĕлтерĕшне ăнланма пулăшасси;

– юмахри сăнарсен хăтланăшĕсемпе ĕҫсен ҫыхăнăвне сăнас хăнăхăва ҫивĕчлетесси.

### У р о к ю х ă м ĕ

**1.** Умĕнхи калаҫу. Словарь ĕҫĕ.

Вĕрентекен ачасене пушкăрт халăх юмахне вуласси ҫинчен пĕлтерет. Пушкăртсем ҫинчен кĕскен (ăҫта пурăнаҫҫĕ, авал мĕн ĕҫлесе пурăннă) каласа парать. Енчĕкпе паллă тунă сăмахсен (*курай, хан, аул, пашалу*) пĕлтерĕшне уйлаҫҫĕ.

**2.** Юмаха пайăн-пайăн вулани. Кашнийĕн содержанине сӳтсе явни. Пайсене ят парса план калăплани. Вуланăҫемĕн ҫирĕп сăмах

майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсене уçăмлаççĕ: *пушă алăпа, каçăхса кайса, çын ура ярса пусман çĕр, сĕм вăрман.*

Ӳкерчĕкре хăш пайра каланă ĕçсене сăнланă? Аса илĕр.

**3.** Юмах тĕсне палăртни.

Юмахра сăнланă ĕçсем кулленхи пурнăçра пулма пултараççĕ-и? (Малтан ачасем хăйсем шутланине калаççĕ, унтан Мария Васильевна каланине вулаççĕ.)

**4.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (1–3-мĕш ĕçсем.)

**5.** Юмахри сăнарсене палăртни, тишкерни. (Ĕç тетрадĕнчи 4–8-мĕш ĕçсемпе усă курса.)

– Ӳкерчĕке тепĕр хут сăнăр. Ӳнерçĕ хана мĕнлерех сăнлать? Çакна вăл епле сăнарлать: унăн кĕлетки, алли-ури, пичĕ-кусĕ мĕнле? Унăн сасси тата мĕнле-ши? Çамрăк каччă сăнне ӳнерçĕ мĕнлерех тăвать? Çакна епле кăтартать?

**6.** Юмахăн тĕп шухăшне палăртни.

– Çак юмаха хайласа халăх мĕне ĕмĕтленнĕ? Мĕн каласшăн пулнă? Мĕншĕн юмаха «Курай юмахĕ» тенĕ?

**7.** Урока пĕтĕмлетни.

**8.** Киле ĕç пани.

## 28-мĕш урок

**Урок теми**: Автор юмахĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– пысăк калăпăшлă илемлĕ хайлавсем, вĕсем прозăллă тата сăвăллă пулма пултарни çинчен асăнасси;

– юмахсен тĕсне (чĕр чун, йăла е асамлă юмах) палăртас, ĕнентерсе çирĕплетес пултарулăхне аталантарасси;

– илемлĕ хайлаври сăнарлăх мелĕсене курма, вĕсен пĕлтерĕшне уçăмлама малалла вĕрентесси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Умĕнхи калаçу. Вĕрентекен çыравçăсем те юмахсем (прозăпа та, сăвăласа та) хайланине асăнать, хальччен вуланă автор юмахĕсене аса илме сĕнет. Унтан вырăссен чаплă çыравçи А.С. Пушкин та юмахсем хайланине калать, юмах кĕнекисене кăтартать, ачасенчен хăйсем хăшĕсене илтни-вуланине ыйтать.

**2.** «Тинĕс кукринче» юмаха вĕрентекен вулани е пăхмасăр калани.

– Ку мĕнле юмах? Мĕншĕн çапла шутлатăр?

**3.** Словарь ĕçĕ:

*тинĕс кукри* – лукоморье;

*вутăш* – шывра пурăнакан пулă, хӳреллĕ хĕр, русалка;
*пăхаттир* – паттăр.

**4.** Юмаха тишкерни.

– Хайлава сăвăлла юмах сыпăкĕ тенĕ. Ҫак шухăша ҫирĕплетĕр. Сирĕн шутпа ку мĕнле юмах сыпăкĕ? Мĕншĕн ҫапла шутлатăр? Ăнлантарăр. Юмахри мĕнле асамлă ĕҫсем ҫинчен каланă? Ҫав йĕркесене тупăр. Асамлă япаласем ҫинчен калакан йĕркесене тупăр.

**5.** Сăнарсене палăртни. (Ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕҫсемпе усă курса.)

– Хайлавра асăннă сăнарсене аса илĕр. Эсир вĕсенчен хăшĕсене пĕлетĕр? Вĕсем ҫинчен хăш юмахсене вуланă? Аса илĕр.

**6.** Ăславлă ĕҫсем йĕркелени.

– Ачасем хайлаври хăйсен кăмăлне кайнă сăнарсене е ытларах аса юлнă самантсене сăнлакан ӳкерчĕксем тăваҫҫĕ? Вĕрентекен урок вĕҫĕнче ӳкерчĕксен куравне йĕркелет.

**7.** Урока пĕтĕмлетни.

**8.** Киле ĕҫ пани.

## 29-мĕш урок

**Урок теми:** Поэзи хайлавĕсенчи сăнарлăх мелĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– сăвăласа ҫырнă хайлавсене туйăмлă йышăнма малалла хăнăхтарасси;

– автор тата харкам кăмăл-туйăмне сăнама-ăнланма вĕрентсе пырасси;

– сăвăллă хайлавсенчи сăнлăхсене палăртма, вĕсене мĕнле сăнарласа сăнланине асăрхама, сăнарлăх мелĕсене курма вĕрентесси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Умĕнхи каласу. Хĕл пуҫламăшне сăнарлакан ӳкерчĕке сăнаҫҫĕ, сăмах вĕҫҫĕн калав-сăнлав калăплаҫҫĕ.

**2.** В. Эктелĕн «Хĕл пуҫламăшĕ» сăввине итлени.

– Сăвва мĕнле туйăмпа итлерĕр? Сăвăра хĕлĕн хăш самантне сăнланă?

**3.** Сăвва вуласа тишкерни.

– Ачасем мĕн сăлтавпа йĕлтĕр сыраҫҫĕ? Пĕрремĕш юра сăвăра мĕнле сăнланă, мĕнпе танлаштарнă? Пĕрремĕш юр ҫĕр ҫине мĕнле ӳкет? Ҫакна мĕнле сăмахсемпе палăртнă?

– Мĕншĕн пĕрремĕш юр ултавлă тенĕ? Ача-пăча пĕрремĕш юра мĕнле кăмăл-туйăмпа кĕтсе илет? Ҫакна сăвăра епле палăртнă?

– Пĕрремĕш юр çунине сăнарлăрах тума тата епле мелсемпе усă курнă? (Кĕнекери ыйтусемпе усă курма пулать.)

**4.** А. Пушкинăн «Хĕлле» сăввине итлени. (Умĕн А.С. Пушкин вырăссен чаплă çыравçи пулнине, унăн хальччен вуланă хайлавĕсене аса илеççĕ.)

**5.** Сăвва пайăн-пайăн вуласа тишкерни. (Кĕнекери ыйтусем тăрăх.)

**6.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени? (18–19-мĕш с.)

**7.** Урока пĕтĕмлетни.

**8.** Киле ĕç пани.

## 30-мĕш урок

**Урок теми**: Хайлаври сăнарсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасен вулавăн тĕрлĕ пахалăхне малалла çивĕчлетесси;

– прозăллă çырнă хайлавсен жанр уйрăмлăхĕсене курма, палăртма малалла вĕрентесси;

– хайлаври сăнарсен кăмăл-туйăмне, хăтланăшĕпе калаçăвĕн хăй евĕрлĕхне сăнама хăнăхтарса пырасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Умĕнхи калаçу. Вĕрентекен мулкачпа çĕмĕл кайăкĕн ӳкерчĕкĕсене кăтартать, ачасене вĕсем çинчен мĕн пĕлнине аса илме ыйтать.

**2.** Ячĕ тăрăх хайлав мĕн çинчен иккенне уйлани.

– Хайлав ячĕ мĕнле? Сирĕн шутпа, хайлав мĕн çинчен?

**3.** Н. Сладковăн «Хĕллехи çу кунĕсем» калавне ачасем хăйсем тĕллĕн вулани.

– Ку хайлав калав е юмах пулчĕ? Вăл мĕн çинчен? Ăнлантарăр.

**4.** Хайлава пайăн-пайăн вуласа тишкерни.

– Мулкач мĕншĕн хуйхăрать? Ăна хĕл пит йăлăхтарса çитернине мĕнле кăтартнă? Хĕл пит вăрăм пулнине автор мĕнле палăртать? Хăвăр шухăша калаври йĕркесемпе çирĕплетĕр.

– Çĕмĕл кайăкĕ мулкача мĕн ăнлантарать? Вăл епле калаçать? Чăнах та калана пек-ши?

**5.** Хайлаври сăнарсене палăртни, тишкерни.

– Калаври тĕп сăнарсем мĕнсем? Мулкач мĕнлерех? Çакă ăçтан курăнать? Вăл çут çанталăкри пулăмсене мĕнле йышăнать? Çĕмĕл кайăкĕ мĕнлескер? Мĕншĕн çапла шутлатăн? Вăл мулкача мĕнле кăмăлпа ăнлантарать? Çĕмĕл кайăкĕ çут çанталăкри пулăмсене

мĕнле кăмăлпа йышăнать? (Ачасем хăйсем тĕллĕн мĕн шутланине каласа панă хыççăн Верукпа Тимук каланисене сӳтсе яваççĕ.)

**6.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. Пĕтĕмлетни.

**7.** Урока пĕтĕмлетни.

**8.** Киле ĕç пани.

## 31-мĕш урок

**Урок теми:** Юмахра сăнланнă вăхăтпа сăнарсен характерĕн шайлашăвĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– калăпăшĕпе пысăкрах хайлавсене вуласа ăнланма, асăмлама хăнăхтарасси;

– хайлаври ĕçсен аталанăвне йĕрлеме, малалла мĕн пулма пултарнине шутлама вĕрентсе пырасси;

– сăнарсен характерĕпе хăтланăшĕсене тишкерме, вĕсен çыхăнăвне курма пулăшасси.

**У р о к   ю х ă м ĕ**

**1**. Умĕнхи калаçу. Вĕрентекен ачасене юмахра асăннă йывăççен ӳкерчĕкĕсене кăтартать.

– Ку йывăççене пĕлетĕр-и? Вĕсем пирĕн тăрăхра ӳсеççĕ-и? Çак йывăççене мĕнле ушкăнлама пулать? (Çулçăллă тата лăсăллă йывăççем.)

**2.** Юмах ятне уйлани.

– Юмах мĕн ятлă? Ятне мĕншĕн ыйту пек калăпланă? Мĕнле шутлатăр, ятне кура юмах мĕн çинчен пулма пултарать?

**3.** Юмаха пайăн-пайăн вуласа содержанине тишкерни. (Пайсем хыççăн панă ыйтусем тăрăх.)

Кашни пайне вуланă хыççăн вĕрентекен малалла мĕн пулма пултарассине шутлама сĕнет.

**4.** Кĕнекери ӳкерчĕке сăнани, ун тăрăх калаçни.

– Ӳкерчĕкре юмахри хăш саманта сăнланă? Юмахра çав вырăна тупса вулăр.

**5.** Юмахри сăнарсене палăртни, вĕсен кăмăлĕсене, хăтланăшĕсене тишкерни. (Ĕç тетраденчи 2–3-мĕш ĕçсемпе усă курмалла.)

– Юмахра пĕчĕк кайăка, йывăççене кашнине мĕнле кăмăлпа сăнланă? Юмаха вуланăçемĕн сирĕн кăмăл мĕнле улшăнса пычĕ? Тарăхнă, пăшăрханнă, савăннă самантсем пулчĕç-и? Каласа парăр.

**6.** Юмахăн тĕп шухăшне палăртни. (Ĕç тетраденчи 4–5-мĕш ĕçсем тăрăх.)

– Сана юмах вĕçĕ килĕшрĕ-и? Эсир хăвăр мĕнле вĕçленĕ пулăттăр? Юмахăн тĕп шухăшĕ мĕнле?

**7.** Урока пĕтĕмлетни.

**8.** Киле ĕç пани.

## 32-мĕш урок

**Урок теми:** Сăвăласа çырнă илемлĕ хайлавсен кĕввипе чĕлхи. Вĕсенче автор кăмăл-туйăмĕ палăрни.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ачасене пĕр евĕрлĕ пулăмсене танлаштарма, пĕр пеклĕхсемпе уйрăмлăхĕсене палăртма вĕрентсе пырасси;

– сăвăласа çырнă илемлĕ хайлавсен тулаш тата шалаш формисен çыхăнăвне сăнама хăнăхтарса пырасси;

– сăвăçăн тата вулаканăн кăмăлне сăнама, палăртма вĕрентесси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Умĕнхи калаçу. Калаçăва ачасен хĕллехи вăйăи-кулли, хаваслăхĕсене сăнлакан ӳкерчĕксем тăрăх ирттерме пулать.

**2.** Мĕнле сăвă вулассине, унăн авторĕ камне пĕлтерни.

**3.** В. Харитоновăн «Йĕлтĕрпе» сăввине итлени.

– Сăвă мĕнле туйăм çуратрĕ? Каласа параканĕ, сирĕн шутпа, кам? Вăл мĕнлерех кăмăлпа каласа парать?

**4.** Сăвва ачасем вулани, тишкерни.

– Автор сăвăра ача хĕл ларнă-ларманах йĕлтĕр сырни çинчен каланисĕр пуçне тата мĕн кăтартасшăн пулнă? (Хĕллехи кун хаваслăхне, хĕллехи тавралăх хитрелĕхне.) Хĕллехи тавралăх хитрелĕхне вăл мĕнле сăнар урлă кăтартать? (Юр.) Ăна вăл мĕнле сăнарлать, мĕнле сăмахсемпе усă курать? Тупса вулăр. Хĕллехи кун хаваслăхне хăш сăнар уççăн палăртать? Ачан кăмăл çĕкленӳлĕхне кăтартма сăвăра мĕнле сăмахсемпе усă курнă?

**5.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене хăйсем тĕллĕн пурнăçлани. (Ку ĕç ачасемшĕн тĕрĕслев ыранне пулма пултарать.)

**6.** А. Смолинăн «Халăх хайлавĕ майлă» сăввине итлени.

– Сăвă мĕнле кăмăл-туйăм çуратрĕ?

**7.** Сăвва ачасем вулани, ушкăнпа тишкерни.

– Аса илĕр, сăввăн ячĕ мĕнле? Сирĕн шутпа автор сăввине мĕншĕн çапла ят панă? (Ачасене хăйсем мĕн шутланине калаттарнă хыççăн Мария Васильевна каланисемпе паллашаççĕ.)

**8.** Сăвăра сăнланă сăнарсене палăртни.

– Сăвăра сăнланă сăнарсене аса илĕр. Кашнинех мĕнле сăнарланă? Тупса вулăр. Хăвăр çак сăнарсене еплерех сăнарланă пулăттăр?

*Уҫă ҫилĕ чĕлтĕр-чĕллтĕр – ...*
*Юр пĕрчийĕ вĕлтĕр-вĕлтĕр – ...*
*Йăлтăр-ялтăр йĕлме йĕлтĕр – ...*

**9.** Урокра вуланă сăвăсене танлаштарни.

– Эсир Харитоновпа Смолин ҫыравҫăсен сăввисене вуларăр. Вĕсем мĕн енчен пĕр евĕрлине сăнарăр-и? Вĕсем мĕн ҫинчен? Сăввисем мĕнле туйăм ҫуратаҫҫĕ? Каласа параканĕсем камсем? Вĕсем мĕнлерех кăмăлпа каласа параҫҫĕ? Сăвăсенчи сăнланă сăнарсене аса илĕр, танлаштарăр.

П ĕ т ĕ м л е т ӳ. Пĕр пулăм ҫинченех тĕрлĕ ҫыравҫă тĕрлĕрен хайласа пĕр евĕрлĕ кăмăл-туйăм хускатма пултарать.

**10.** Ăславлă ĕҫ йĕркелени. Пĕчĕк ушкăнсене уйрăлаҫҫĕ. Сăвăсен витĕмĕпе, хускатнă кăмăл-туйăмĕпе шайлашуллă ӳкерчĕк тăваҫҫĕ, ун тăрăх пысăк мар текст калăпласҫĕ, ытти ачасене паллаштараҫҫĕ.

**11.** Урока пĕтĕмлетни.

**12.** Киле ĕҫ пани.

## 33-мĕш урок

**Урок теми**: Калав теми, тытăмĕ, тĕп шухăшĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– текстăн тытăмне сăнас, пайĕсене палăртса план тăвас хăнăхусене аталантарасси;

– калав темине палăртма, тĕп шухăшне ăнланма пулăшасси;

– автор ĕҫсем ҫинчен мĕнле кăмăлпа каласа панине, сăнарсене мĕн кăмăлпа еплерех сăнланине сăнама-курма хăнăхтарасси.

### У р о к ю х ă м ĕ

**1.** Умĕнхи калаҫу. Вĕрентекен Г. Харлампьев ҫыравҫă ҫинчен кĕскен каласа парать. Мĕнле калав вулассине пĕлтерет.

**2.** «Мулкач йĕрĕпе» калава ачасем хăйсем тĕллĕн вулани.

– Сирĕн шутпа, калаври ĕҫсем ҫинчен каласа параканĕ кам? Ăнлантарăр.

**3.** Калава пайăн-пайăн вуласа содержанине тишкерни, план туни.

– Калав мĕнле пуҫланать? Мулкачсем мĕнле сиен тунă? Вĕсенчен мĕнле хӳтĕленесшĕн пулнă? Ҫак пая вулăр, ят парăр.

– Тепĕр пай палăртăр, унта мĕн ҫинчен каланă? Мулкач йĕрĕ тăрăх кайсан мĕн пулнă? Пая ят парăр.

– Юлашки пайĕ мĕн ҫинчен? Вулăр? Ят парăр.

**4.** Калăпланă план тăрăх калава сăпатне улăштарса (виҫҫĕмĕш сăпат ҫинчен) асăмлани.

**5.** Калаври сăнарсене тишкерни, автор вĕсене мнле кăмăлпа сăнланине палăртни. (Ĕç тетрадĕнчи 1–6-мĕш ĕçсене пурнăçланă май.)

**6.** Калав темипе тĕп шухăшне уçăмлани. (Ĕç тетрадĕнчи 7–8-мĕш ĕçсем.)

– Калав мĕн çинчен? Унăн теми мĕнле? Автор мĕн каласшăн пулнă? Калавăн тĕп шухăшĕ мĕнле? Çакна хăш йĕркесенче палăртнă? Тупăр. Ятĕнче калав темине е тĕп шухăшне палăртнă? Эсир мĕнле ят панă пулăттăр?

**7.** Пĕтĕмлетни.

– Автор калаври ĕçсем çинчен мĕнле кăмăлпа каласа парать? Герасим Харлампьевăн хайлавĕсене эсир хальччен вуланă-и? Мĕнлисене ас тăватăр? Автор ытларах мĕн çинчен, мĕнле кăмăлпа хайланă?

**8.** Киле ĕç пани.

## 34-мĕш урок

**Урок теми**: Н. Карай. «Йăмăк».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– вулав пахалăхĕсене аталантарасси;

– «автор» тата «калавçă» çинчен пуçламăш пĕлÿ парасси;

– тăвансене юратма, вĕсемшĕн яваплă пулма хавхалантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Калавпа паллашни. (Малтанах учитель сасăпа вулать, ачасем кĕнеке тăрăх йĕрлеççĕ. Унтан ачасем черетленсе сасăпа вулаççĕ.)

**2.** Калава сÿтсе явни.

а) *Вак-тĕвек детальсене палăртни* («Тимлĕ вулавçă-и эпир?»).

– Калавçă мĕн ятлăскер? *(Микуç.)*

– Унăн йăмăкĕ миçере? *(Иккĕре.)*

– Ăна футболла выляма кам чĕнсе кăларать? *(Ваçук.)*

– Вăйă судйи кам пулнă? *(Кăтра Ваçça.)*

– Микуç йăмăкĕ çинчен хăçан аса илет? *( Кинеми кăшкăрсан.)*

ă) *Содержани тăрăх ĕçлени.*

– Автор мĕн çинчен каласа парать? (Ачасен хуравĕ.)

– Калавра пулса иртекен тĕп ĕçсене каласа тухăр. Вĕсенчен хăшĕ чи пĕлтерĕшли? (Ашшĕпе амăшĕ ĕçе кайни – Микуç футболла выляни – кинеми Микуçа асăрхаттарни – Вероника шари кăшкăрса тапкалашни – Микуç йăмăкне йăпатма тăрăшни. Чи пĕлтерĕшлĕ ĕç – Вероника кăшкăрса макăрни.)

– Тĕп герой пирки мĕн калама пулать? Вăл хăй тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать-и? (Ачасен хуравĕ.)

– Микуçа тулашран та, шалтан та сăнлăр. Вăл сире мĕншĕн килĕшрĕ е килĕшмерĕ? Ăна япăх ача тени тĕрĕс-и? (Микуç йĕркеллĕ арçын ачах, анчах та хăйне мĕн хушнине вăл манса каять. Кинеми çакăншăн хăйне асăрхаттарсан вăл хăраса ӳкет. Ара, иккĕри ачана пĕччен епле пăрахса хăварăн? Унпа тем те пулма пултарать-çке. Вăл хăвăртрах килне чупать. Йăмăкне, макăрма чарăнтăр тесе, тем те туса кăтартать. Микуçа япăх ача тесе каламалла мар ĕнтĕ.)

– Ку калавпа автор мĕн каласшăн? (Пĕчĕк ачана килте пĕччен пăрахса хăвармалла мар. Вăл пăванса-хĕсĕнсе ларма та, ӳксе аманма та пултарать. Юрать Микуç пырса кĕриччен нимле инкек те пулман-ха. Пулма та пултарнă вĕт! Малашне вăл асăрханулăрах пулма кирлĕ.)

– Çакăншăн Микуçăн кама тав тумалла? (Кинемине. Вăл асăрхаттарни инкеке сирсе яма пулăшнă.)

б) *Хайлав тытăмĕ (кăшкарĕ) тăрăх ĕçлени.*

– Калав миçе пайран тăрать? Вĕсене ят парăр. (1. Микуç йăмăкне пĕччене пăрахса хăварса урама тухса чупать. 2. Футболла выляни. 3. Кинеми асăрхаттарнă хыççăн.)

в) *Жанр уйрăмлăхĕсем çинчен калаçни.*

– Калава мĕншĕн «Йăмăк» тесе ят панă? (Йăмăкĕ пулман пулсан калав çырмалли сăлтав та пулман пулĕччĕ. Калаври мĕнпур ĕç йăмăкĕпе çыхăннă. Унпа инкек-мĕн сиксе тухнă пулсан, пуриншĕн те кулянмалли сăлтав пулатчĕ. Чи малтанах Микуç хăйне хăй каçарман пулĕччĕ.)

– Ку калавăн авторĕ çамрăк-и, ватăрах çын-и? (Ватăрах çын. Вăл хăй ачалăхĕнче пулса иртнĕ пĕр ĕç çинчен каласа парать. Хăй ача чухне мĕнле инкек пулма пултарнине чухламан та вăл.)

Вĕрентекен сăмахĕ:

– Калавăн авторĕ Николай Карай. Вăл калаври ĕçсене Микуç ячĕпе çырса кăтартать. Ачасем, нумай чухне калавçăпа авторĕ пĕр çын пулмасан та пултараççĕ.

г) *Чĕлхе хатĕрĕсемпе ĕçлени.*

– Вероника кăмăлĕ еплерех улшăнса пынине сăнлакан предложенисене тупса вулăр. («Кравать çинче мăшлатса çывăрать. – Вероника урисемпе тапкалашса çари! кăшкăрать. – Вероника йăл кулса ячĕ».)

**3.** Учебникри ытти ыйтусене хуравлани. (116-мĕш с.)

**4.** Киле ĕç пани. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (24-мĕш с.)

## 35-мĕш урок

**Урок теми**: М. Джалиль. «Çывракан ача»; Р. Минатуллин. «Пулăшакан».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– сăвăсене танлаштарса тишкерес хăнăхусене тарăнлатасси;

– кӳршĕллĕ тутар литератури тĕслĕхĕсемпе паллаштарасси;

– кĕçĕннисене юратма, вĕсемшĕн тăрăшма хавхалантарасси; çемьери тăнăçлăхпа савăнма хăнăхтарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Сăвăсемпе паллашни.

– Ачасем, паян тепĕр икĕ сăвăпа паллашăпăр. Вĕсене пирĕнпе кӳршĕллĕ тутар çыравçисем çырнă. «Çывракан ача» сăвва Мусса Джалиль хайланă. Вăл Совет Союзĕн Геройĕ, Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче нимĕç фашисчĕсен тыткăнĕнче асапланнă. Тем пек йывăр пулсан та, пуçне усман, тĕрмере пурнăçа чĕререн юратса сăвăсем шăрантарнă. Мусса Джалиль Чăваш халăх поэчĕпе Яков Ухсайпа çывăх туслă пулнă. «Пулăшакан» сăвва Роберт Минатуллин çырнă.

Малтан учитель палăртуллă вулать, кайран ачасем сасăпа вуласа паллашаççĕ.

**2.** Сăвăсене тишкерни.

а) – Сăвăсенче мĕн çинчен çырса кăтартнă? (Сăвăсенче пĕчĕк ачасем çинчен çырнă. Малтанхинче сăпка ачи çывăрни çинчен. Иккĕмĕш сăвăра пĕчĕк ача амăшне пулăшма тытăнни çинчен калать.)

– Кашни геройĕ мĕнпе кăсăклă? ( Пĕрремĕш сăвăри ача тутлă çывăрать. Амăшĕ ăна пăхса ытараймасть. Унăн ыйхине татас марччĕ тесе шăппăн-шăппăн утса çӳрет. Иккĕмĕш сăвă геройĕ амăшне чашăк-тирĕк çуса парса пулăшма шутланă. Хăй сăпкара выртнă чухне хăйне мĕнлерех юратса пăхнине манман вăл. Амăшне кăшт та пулин çăмăлтарах пултăр тесе вăйĕ çитнĕ таран пулăшма шутланă. Ку вăл питĕ паха. Пурнăçра ĕмĕрхи йĕрке çапларах. Малтанах ашшĕ-амăшĕ ачи-пăчишĕн тăрăшать, юратса ӳстерет. Кăштах ӳсерехпе вара ачисем хăйсем вăйпитти ĕçсене тума хутшăнаççĕ. Пархатарлă ачасем вĕсем теççĕ ун пек ачасем çинчен. Çапла пĕрне-пĕри юратни, пĕр-пĕриншĕн тăрăшни урлă ламран лама тăсăлса пырать пирĕн пурнăç.)

– Кашни героя мĕншĕн юратас килет? (Пĕрремĕшĕ амăшне нимпе те пăшăрхантармасть. Ăна юратас та юратас килет. Иккĕмĕшне

те юратас килет, вăл юлхав мар-çке.)

– Амăшĕ çывракан ачи çине пăхса мĕн ĕмĕтленет-ши? (Ачасен хуравĕ.)

– Кашни ачанах сăнлăр. (Пĕрремĕшĕ, тен, 3–4 çулсенче пулĕ. Вăл выляса ывăннă та халĕ лăпкăн çывăрать. Аллинче – пукане. Иккĕмĕшĕ 4–5 çулсенче пулмалла.)

– Авторсем ку сăвăсене мĕн пирки çырнă? ( Вĕсем амăшĕпе ачи пĕр-пĕрне питĕ юратнинчен тĕлĕнеççĕ. Вулакансене çакăн çинчен каласа параççĕ.)

ă) Сăвăсенчи чĕлхен палăртулăх хатĕрĕсене сăнани.

– Амăшĕ те, пепки те пĕр-пĕрне питĕ юратнине хăш сăмахсем çирĕплетеççĕ? ( «Çывракан ача» – пепкем, çеçкем, чĕппĕм. «Пулăшакан» – аннеçĕм.)

– «Ачаш тутине мăкăнь тĕсĕ çапать, пичĕ -йăлтăр улма» тенине мĕнле ăнланатăр? (Тути пиçсе çитнĕ мăкăнь пекех хĕрлĕ тĕслĕ, пичĕ улма пек чăмăр.)

**3.** Учебникри ыйтусемпе ĕçлени. (118–119-мĕш с.)

**4.** Киле ĕç пани. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (24–25-мĕш с.)

## 36-мĕш урок

**Урок теми:** А. Кăлкан. «Наян Кампур»; А. Галкин. «Шăна Кăмпин шăпи».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– юптару çинчен мĕн пĕлнине тарăнлатасси;

– текста рольсем тăрăх палăртса вулас хăнăхусене аталантарасси;

– лайăххипе япăххине, ыррипе усаллине чухлама, вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма хăнăхтарасси.

### Урок юхăмĕ

**1.** «Наян Кампур» юптарупа паллашни. (Ăшра вулаççĕ.)

**2.** Учебникри ыйтусене хуравлани (120–121-мĕш с.)

**3.** Тишкерни.

а) – Автор мĕн çинчен каласа кăтартать? (Аптранă вăхăтра пуçа темле шухăш та пырса кĕни çинчен. Çавăн чухне çапларах тунă пулсан кун пек пулмастчĕ те. Ӳлĕмрен çавна-çавна тăвăттăм тесе аптраса ӳксен кашниех калама пултарать.)

– Çулла Кампур мĕнрен çурт тăвасшăн? (Шур юртан.)

– Мĕн пирки? (Ытла шăрăх пулнăран.)

– Хĕлле тата мĕнрен çурт тăвасшăн вăл? Мĕн пирки? (Хĕлле шăмăран çурт тăвасшăн. Сивĕ пулнăран.)

– Кампур хӑй шутланине асра тытать-и? (Асра тытмасть, тепӗр куннех манса каять.)

– Хӑй сӑмахне тытайманнисем ҫинчен мӗн калаҫҫӗ? (Унӑн сӑмахӗ виҫӗ пуса та тӑмасть теҫҫӗ.)

– Хайлаври тӗп ӗҫсене каласа тухӑр. Вӗсенчен хӑшӗ чи пӗлтерӗшлӗ ӗҫ? (Ҫулла Кампур шӑрӑх тесе найкӑшать, хӗлле сивӗ тесе йӑслать. Ҫаксем тӗп ӗҫсем пулаҫҫӗ. Ҫул хыҫҫӑн ҫул иртет – шур пӳрт тӑвӑнмасть.)

– Тӗп герой мӗн енчен кӑсӑклӑскер? Вӑл мӗн пирки наян ятне илтет? (Хӑй чӗлхи ҫине мӗн килнине тӳрех каласа янипе. Вӑл ҫулла ӑшӑ, хӗлле сивӗ пулнипе шар курать.)

– Кампура сӑнлӑр. Унӑн хӑш енӗсем сире ҫывӑх? (Ку йытӑ тулта хӑйӗн йӑвинче хӗлӗн-ҫӑвӗн пурӑнать. Хӗлле сивӗпе тӑр-тӑр чӗтрет, ҫулла чӗлхине кӑларса пашкаса выртать. Сивӗ чухне ӑшӑшӑн, ӑшӑ чухне – сивӗшӗн.)

Вӗрентекен:

– Юптарура чӗр чунсем тӗп геройсем. Анчах та вӗсене ҫынсем тесе ӑнланмалла. Ҫынсем те час-часах Кампур вырӑнӗнче пулнине куратпӑр. Ҫынсене те яланах мӗн те пулин ҫитмест. Эпир те ытла ӑшӑ чухне – сивӗшӗн, ытла сивӗ чухне – ӑшӑшӑн. Наянланасси те пулать.

– Ҫыравҫӑ мӗн сӑлтавпа ку историе каласа кӑтартать? (Ҫынсем те час-часах Кампур вырӑнӗнче пулни тӗлӗнтерет ӑна.)

ӑ) – Юптарӑва пайсене уйӑрӑр та вӗсене ят парӑр. (1. Кампур ҫулла. 2. Кампур хӗлле. 3. Ҫул хыҫҫӑн ҫул иртет – ҫурт лартӑнмасть.)

б) – Юптарӑва урӑхла мӗнле ят пама пулать? (Аптранӑ Кампур.)

в) – Ҫулла шӑрӑхпа, хӗлле сивӗпе аптранине палӑртма мӗнле сӑнлӑхсемпе усӑ курнӑ? Тупса вулӑр. (Ҫулла «хашкать вӑл чӗлхине тӑсса». Хӗлле «хӗссе лартать хӳрине».)

**4.** «Наян Кампур» юптарӑва рольсем тӑрӑх вулани.

**5.** «Шӑна кӑмпин шӑпи» юптарупа паллашни. (Ушкӑнпа черетленсе сасӑпа вулаҫҫӗ.)

**6.** Тишкерни.

– Шӑна кӑмпи мӗн каласа янрашнӑ? ( Эпӗ хитре, мана юлташсенчен ан уйӑрӑр тесе янрашнӑ.)

– Ӑна кӑмпаҫӑсем мӗншӗн килӗштермен? (Сӑнран кӑна хитре, ӑшу усал тесе.)

**7.** Ӑнлантарни (интерпретаци).

– Юптарура мӗн ҫинчен ҫырса кӑтартнӑ? (Усал ҫынсем лайӑх ҫынсем ҫумне ҫыпҫӑнма тӑрӑшни ҫинчен.)

Вĕрентекен:

– Пурнăçра шăна кăмпи пек наркăмăшлă чун-чĕреллĕ çынсем те пулаççĕ. Вĕсем хăйсене тем те пĕр каласа мухтаççĕ. Сан умăнта сана мухтаса хитре те çуллă сăмахсем калаççĕ, курнăçланаççĕ. Кăшт айккинерех пăрăнсан е ăнсăртран такăнас-тăвас пулсан сана çисе яма хатĕр. Вĕсене хура чунлă çынсем теççĕ. Унашкал çынсен усаллăхĕпе киревсĕрлĕхне чухлама ачаран вĕренсе пымалла.

**8.** Пĕтĕмлетни.

– Юптарура çынсен пурнăçĕнчи çитменлĕхсене питлесе çыраççĕ. Çынсен пĕр-пĕр лайăх мар енне чĕр чунсемпе ӳсен-тăрансем çине куçарса кăтартаççĕ. Сăмахран, чее çынсене тилĕ пек теççĕ.

– Хăравçăсене мĕнпе танлаштараççĕ? (Мулкачпа.)

– Хаяр çынсене мĕн пек тесе калаççĕ? (Кашкăр пек хаяр теççĕ.)

– Упасем мĕнлерех çынсем? (Вĕсем вăйлă, анчах тăмсайрах.)

– Çăкапа юмана кампа танлаштараççĕ? (Çăка – анне, юман – атте.)

**9.** Киле ĕç пани. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (26–27-мĕш с.)

## 37-мĕш урок

**Урок теми:** Н. Иванов. «Чечек çыххи».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– текста пайсене уйăрас, чи пĕлтерĕшлĕ пайне палăртас хăнăхусене аталантарасси; содержанине каласа парас хăнăхусене çивĕчлетесси;

– сюжетри чи çивĕч саманта чухлама хăнăхтарасси;

– тимлĕ вулама хăнăхтарасси;

– ачаран тӳрĕ кăмăллă пулса ӳсме хавхалантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Текстпа паллашни. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа вулаççĕ.)

**2.** Вак-тĕвексене ăса хывни. («Тимлĕ вулавçă-и эпир?»)

– Слава мĕн туса ларнă? (Пулă тытса ларнă.)

– Люся ăçтан таврăнать: кану лагерĕнчен-и е хуларан? (Кану лагерĕнчен.)

**3.** Учебникри ыйтусемпе ĕçлени. (126–127-мĕш с.)

**4.** Тĕплĕнрех тишкерни.

– Калаври персонажсене асăнса тухăр. (Слава арçын ача, унăн йăмăкĕ Люся, вĕсен кукамăшĕ, Кĕркури тантăшĕн йăмăкĕ Верук, вĕсен аслашшĕ.)

– Ĕçсем ăçта-ăçта пулса иртеççĕ? (Кӳлĕ хĕрринче, Славăсен килĕнче, Кĕркурисен килĕ умĕнчи пĕчĕк пахчара, ял урамĕнче, шыв хĕрринче пристань патĕнче.)

– Ĕçсем хăçан пулса иртеççĕ? (Çуллахи вăхăтра.)

– Калавра пулса иртекен ĕçсене каласа тухăр. (Славăн йăмăкĕ Люся кану лагерĕнчен таврăнать. Ăна кĕтсе илме каякан Слава çула май Кĕркурисен килĕ умĕнчи пĕчĕк пахчана карта хăмине хуçса кĕрет, пĕр çыхă чечек татса тухать. Çакна Верук курса юлать. Ку чечек çыххине Слава пăрахутпа таврăннă йăмăкне Люсьăна парнелет. Каялла таврăннă чухне Верук аслашшĕне чечек вăрри кам пулнине пĕлтерет. Славăн намăслана-намăсланах хăй çĕмĕрнĕ картана юсама тивет. Хытă намăсланнă Люся чечек çыххине Славăна каялла тавăрса парать.)

Вĕрентекен:

– Илемлĕ хайлаври ĕçсенче тĕпрен илсен тăвата пай пулать: ĕç пуçламăшĕ, ĕç аталанăвĕ, чи хĕрӳ самант, ĕç вĕçленĕвĕ. Кунта чи хĕрӳ самант хăшĕ? (Славăна чечек вăррине тытни.)

– Тĕп герой мĕн енчен килĕшмерĕ? Мĕншĕн килĕшрĕ? (Чечек вăрри пулнишĕн килĕшмерĕ. Вăрланă япалана парнелени – киревсĕр ĕç. Килĕшекенни вара – Слава хăй вăрă тунишĕн лайăхмарланни. Тата вăл хăйĕн çине тĕллесе кăтартсан «Çук-çук, эпĕ мар!» тесе тӳрре тухма тăрăшмасть. Апла пулсан ку ача япăхсах кайман-ха.)

– Çак самантсене сăнлакан вырăнсене тупса тепĕр хут вулăр. («Акă вăл шыв хĕрринче тăрать. Люся килмелле пулин те кăмăлсăр хăй, ăшĕ вăркать»; « – Çак хăмана та эсĕ хуçнă-и? – тесе ыйтрĕ хуçăк хăмана кăтартса. Слава пĕрре хĕрелсе, тепре шуралса кайрĕ».)

– Сирĕн Слава характерĕнче мĕн ăнланманни пулчĕ? Мĕншĕн? (Вăл чечексем парнелесшĕн – хăй вара вĕсене акман, шăварман, ним те туман. Кунĕ-кунĕпех пулăра ларса ирттерет пулмалла.)

– Кĕркури мĕнлерех ĕçлени çинчен калакан сыпăка тупса вулăр-ха. («Кĕркури çав чечексемпе çăвĕпех тăрмашрĕ. Çĕрне тăтăшах кăпкалатрĕ, ир те, каç та шăварса тăчĕ. Ун чухне ăна Слава: «Кĕркури, пăрах-ха çав чечексемпе аппаланма, хĕр ачасен ĕçĕ вăл. Санăн хăть пĕр-пĕр пăрахут е самолет кӳлепи тăвасчĕ», – тесе миçе хут каламан-ши? Кĕркури çак сăмахсене итлемерĕ, тăрăшсах ĕçлерĕ. Чечекĕсем унăн халĕ пĕтĕм урама илем кӳрсе лараççĕ».)

– Писатель ку историе мĕн пирки каласа парать? (Хăв аллупа пăхса ӳстернĕ япалапа кăна чăннипех ху хуçа пулма пултаратăн. Хăв япалупа хуть те мĕн тусан та, сана никам та ним те калаймĕ. Çын япалипе хăвăнни пек хуçаланма пуçласан намăс курма тивет. Çакна кашнин асра тытасчĕ.)

**5.** Калав ятне ăнлантарăр. Ăна урăхла мĕнле ят пама пулать? (Калаври мĕнпур ĕç чечек çыххипе çыхăннă. Чечек çыххи вĕсене пурне те пĕр тĕвве пуçтарать. Калава урăхла çапларах ятсем пама пулать: «Чечек вăрри». «Славăпа Люся». «Арçын ĕçне тăвакан». «Лагерьтен таврăннă чух»…)

**6.** Калавăн тĕп шухăшне хăш сăмахсемпе палăртма пулать? (Вăрланинчен ыйтса илни лайăхрах.)

**7.** Киле ĕç пани.

Калав содержанине план тăрăх туллин каласа пама вĕренни. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (27-мĕш с.)

## 38-мĕш урок

**Урок теми:** И. Шухши. «Кĕрен тӳпе».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– текст планне тăвас хăнăхусене тарăнлатасси;

– вулав палăртулăхне çивĕчлетесси;

– çут çанталăкри илеме асăрхама, унпа киленме хавхалантарасси;

– шухăш вĕçевне аталантарасси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Текстпа паллашни. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа вулаççĕ.)

**2.** Содержанине сӳтсе явни.

– Персонажсен ячĕсене каласа тухăр. (Палюк, Сентти, Микуль, Анна Петровна, ачасем.)

– Калавра мĕнле ĕçсем пулса иртеççĕ? (Ачасем ӳкерчĕксем тăваççĕ. Палюк пăрахут ӳкерет. Сентти кашкăр ӳкерет. Микуль тӳпе ӳкерет.)

– Камăн ӳкерчĕкĕ чи тĕлĕнмелли? Мĕншĕн? (Микуль ӳкерчĕкĕ. Вăл ыттисем курманнине асăрханă. Хăй мĕнле курнă çапла ӳкерсе кăтартнă.)

– Тĕп герой кам тесе шутлатăр? Мĕншĕн? (Тĕп герой – Микуль, мĕншĕн тесен калаври пĕтĕм ĕç ун тавра пулса иртет.)

– Микуль сире мĕншĕн килĕшрĕ? (Вăл сăпайлă ача. Мухтанчăк мар. Ыттисем пурте хайсен ӳкерчĕкĕсене мухтаса ларнă чухне вăл чĕрре кĕмест. Хăй вара ыттисем курманнине асăрхать.)

Вĕрентекен:

– Ачасем, çут çанталăкра мĕн пулса иртекенни пурте илемлĕ. Çав илеме асăрхама пултаракансем чун-чĕрипе пуян. Вĕсем ыттисем кашни кун тĕл пулакан пулăмсемпе япаласенче хăйсене валли темскер тĕлĕнмеллине, ыттисем курманнине кураççĕ. Ку

калавра Палюкпа Сентти те хӑйсем курнинех ӳкереҫҫӗ-ха. Анчах та ҫиелтех выртакан, тӳрех куҫа тӑрӑнакан япаласене ӳкереҫҫӗ вӗсем. Тӑрӑшсах пӑрахут тӑрпинчен тӗтӗм йӑсӑрланнине, кашкӑрӑн шӑлӗсем ҫивӗч, хӳри тукмак пек пулнине ӳкереҫҫӗ. Ҫакӑ пире питех тӗлӗнтермест. Илеме курма пӗлекенсем хӑйсем курнине сӑмахпа каласа та, ӳкерчӗксем туса та сӑнлаҫҫӗ. Вӗсен хайлавӗсене пӑхатпӑр та эпир ҫакна мӗнле хамӑр та курман-ха тесе тӗлӗнетпӗр. Художник (ӳнерҫӗ) чунӗллӗ теҫҫӗ ун пек ҫынсене. Микуль чӑн-чӑн ӳнерҫӗ. Эсир те художник чунӗллӗ пулма тӑрӑшӑр. Сӑнӑр, ҫырӑр, ӳкерӗр. «Тантӑш» хаҫатпа, «Тетте» журналпа ҫыхӑну тытӑр. Вӗсенче сирӗн пек ачасемех хӑйсен хайлавӗсене пичетлеҫҫӗ.

– Микуль ӳкерчӗкне сӑнланӑ вырӑнсене тепӗр хут вуласа тухӑр. («Микуль тӳпе ӳкерчӗ. Тӳпере – хӗвел, хӗвел тавралла пӗлӗтсем ишеҫҫӗ, кайӑксем вӗҫеҫҫӗ... Эпӗ паянхи тӳпене ӳкертӗм. Акӑ хӗвел анса ларать. Хӗвелӗ те, тӳпи те, пӗлӗчӗсем те хӗрлӗ тӗслӗ».)

**3.** Калав тытӑмне сӳтсе явни.

Вӗрентекен:

– Йӗркеллӗ калав тытӑмӗн 4 пай пулать тенӗччӗ: ӗҫ пуҫламӑшӗ, аталанӑвӗ, чи хӗрӳ самант, вӗҫӗ. Ку калава 4 пая уйӑрар та вӗсене ят парар. (1. Пӗрремӗш предложени. Ячӗ: «Ӳкерме ларни». 2. Малалла – «Унӑн вара пурте хӗрлӗ тӗслӗ» предложени таран. Ячӗ: «Ӳкерчӗксем». 3. Малалла – «Ачасем, сире камӑн ӳкерчӗкӗ ытларах килӗшрӗ?» предложени таран. Ячӗ: «Чи хитре ӳкерчӗк». 4. Юлашки икӗ предложени. Ячӗ: «Микуль ҫивӗч куҫлӑ».)

**4.** Ӑнлантарни (интерпретаци).

– Ку историпе автор мӗн каласшӑн пулнӑ? (Кашниех кашни кунах куракан япалана ӳкерсе кӑтартнинче тӗлӗнмелли сахал. Ыттисем кашни кун ҫапӑнса иртсе каякан япаларах хальччен никам асӑрхаманнине курса ӳкерсе кӑтартни паха. Унашкал ачасем художник чунӗллӗ пулса ӳсеҫҫӗ.)

– Калавӑн тӗп шухӑшне палӑртӑр. (Эсӗ тунӑ ӗҫе хӑв мар, ыттисем мухтани тӗрӗсрех.)

– Калава тата мӗнле ятсем пама пулать? («Пӗчӗк художник», «Микуль художник». «Мухтанчӑк художниксемпе сӑпайлӑ Микуль».)

**5.** Учебникри ытти ыйтусене хуравлани. (129-мӗш с.)

**6.** Киле ӗҫ пани.

Калава палӑртуллӑ вулама вӗренни. Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени. (28–29-мӗш с.)

## 39-мĕш урок

**Урок теми:** Г. Волков. «Пуянлăх хакне ĕçлекен çеç пĕлет».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– автор юмахĕ çинчен мĕн пĕлнине тарăнлатасси;
– ултавпа наянлăха сивлеме хăнăхтарасси;
– пуянлăха ĕçлесе тупма хавхалантарасси;
– атте-аннене хисеплес туйăмсене аталантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Юмахпа паллашни. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа вулаççĕ.)

**2.** Содержанине тишкерни.

– Персонажсене асăнăр. (Ывăлĕ, ашшĕ, амăшĕ.)
– Тĕп герой кам? (Ывăлĕ.)
– Амăшĕ ачине хут укçа е кĕмĕл укçа парать? (Хут укçа.)
– Ывăлĕ хăй вăйĕпе мĕн чухлĕ ĕçлесе илет? (Çирĕм пус.)

– Ашшĕ епле майпа ывăлĕ улталанине пĕлет? (Хут укçана çунтарса ярса. Ывăлĕ хăй ĕçлесе илмен укçашăн ытлашшиех хыпăнса ÿкменнине кура.)

– Ашшĕ ывăлне усал е ырă тăвасшăн? Мĕншĕн çапла шутлатăр? (Ашшĕ ывăлне ырă тăвасшăн, мĕншĕн тесен амăшĕн укçипе кăна вĕреннĕ ача кахал, ултавçă пулса ÿсет. Вăл ÿссен те амăш ĕнси çинче кăна пурăнĕ. Ачаллах ĕçлеме вĕренмесен кайран тин вĕренме питĕ йывăр. Ашшĕ вара ачине ĕçлеме вĕрентесшĕн. Вăл ăна кайран хурлăх курмалла ан пултăр тет.)

– Ывăлĕ чăнласах хăй ĕçленине ашшĕ ăçтан пĕлет? ( Вăл каллех укçине кăмакана пăрахать те, ывăлĕ эпĕ ку укçашăн кунĕпе тар юхтарса ĕçлерĕм тесе кăшкăрса ярать.)

– Хăй çине кăшкăрнăшăн кÿренет-и е çук? Мĕншĕн? (Кÿрен-мест, савăнать кăна. Вăл ачи ĕçленишĕн хĕпĕртенĕ.)

– Ывăлĕ хăш вырăнта пăшăрхантарчĕ? Мĕншĕн савăнтарчĕ? (Амăшĕ панă укçапа ашшĕне улталама тăрсассăн икĕ хутчен пăшăрхантарчĕ. Хăех укçа ĕçлесе илсен савăнтарчĕ.)

**3.** Юмах тытăмне тишкерни.

– Укçа çунтарасси миçе хутчен пулса иртет? (Виçĕ хутчен.)

Вĕрентекен:

– Ку юмаха Геннадий Волков çырнă. Унăн урăхла ячĕ Хуначи Кашкăр. Геннадий Волков чăвашсен паллă çыравçи, академик. Вăл чăваш халăх юмахĕсене питĕ нумай пĕлнĕ. Хăй те халăх юмахĕсем евĕр хайлавсем сахал мар çырнă. Ку юмаха та вăл хăй ăсланă. Ку асамлă юмах. Унта çынсем хушшинче пулма пултарайман ĕçсем çинчен каласа кăтартнă. Халăх юмахĕсенче асамлă ĕçсем нумай

чухне виçĕ хутчен пулса иртеççĕ. Виççĕмĕш хутĕнче тĕп герой çĕнтерет. Кунта та укçа çунтарни виçĕ хутчен пулса иртет. Виççĕмĕш хутĕнче тин тĕп герой юсанать.

– Юмаха пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрăр та вĕсене ят парăр. (1. Ашшĕне пĕрремĕш хут улталани. 2. Ашшĕне иккĕмĕш хут улталани. 3. Кăмака умĕнче виççĕмĕш хут. 4. Ашшĕ ывăлне ĕненчĕ.)

**4.** Чĕлхен палăрту хатĕрĕсене сăнани.

– Укçа çунтарнине ывăлĕ мĕнлерех йышăннине сăнланă вырăнсене тепĕр хут вуласа тухăр. Вăл юсанса пыни палăрать-и? (Пĕрремĕш хутĕнче: «Укçа пĕр самантрах ялкăшса çунса каять. Ача çакна вырăнтан хускалмасăр тĕлĕнсе пăхса тăрать, кăмакара укçа мар, хурăн хуппи çунать тейĕн». Иккĕмĕш хутĕнче: «Ача хут укçа çунса пĕтессе кĕтсе тăмасть, нимĕн пулман пек çаврăнса утать». Виççĕмĕш хутĕнче: «Ашшĕ çав укçана илет тет те нимĕн шухăшласа тăмасăрах кăмакана пăрахма тăрать тет. Ачи çакна курсан çирĕм пуслăх кĕмĕл укçа вутра çунманнине манса кайсах ашшĕ патне чупса пычĕ тет те аллинчен ярса тытрĕ тет. – Мĕн тăвасшăн эсĕ, атте?! – тесе пĕтĕм чун хавалĕпе кăшкăрса ячĕ тет. – Эпĕ ку çирĕм пусшăн кунĕпе тар юхтарса ĕçлерĕм вĕт!»)

– Ку юмаха халăх юмахĕпе пĕр рете лартакан тата мĕнле паллă пур? ( Çине-çинех «тет» сăмахпа усă курни.)

Вĕрентекен:

– Тĕрĕс. Халăх юмахĕсем ĕлĕк-авал сăмах вĕççĕн сарăлнă, ламран лама куçса пынă, тĕрлĕ пайăрăмсемпе пуянланнă. Вун-вун каласа паракан вун-вун улшăну кĕртме пултарнă. Çавăнпа юмахçă ку юмаха хăй те такамран илтнине çирĕплетме «тет» сăмахпа çинеçинех усă курнă. Ку вăл, пĕр енчен, питех те меллĕ пулнă: юмах шухăшласа кăларакане пачах çĕнĕ юмах каласа парать пулсан та, «тет» сăмах кĕртсе лартать те авторĕ хăй пулнине пытарать.

– Ача пуçласа ĕçлесе курнине, вăл ĕçлеме хăнăхманнине хăш сăмахсем çирĕплетеççĕ? («Кунĕпе тар юхтара-юхтара ĕçлерĕ тет. Алли-ури те хăпарса тухрĕ тет».)

**5.** Çак юмахпа автор мĕн каласшăн? Юмахăн тĕп шухăшне хăш сăмахсем палăртаççĕ? (Ĕç – пурнăç тыткăчи. Пурнăç тулăх пултăр тесен укçа кирлĕ. Укçа пултăр тесен ĕçлемелле. Тĕп шухăша палăртакан сăмахсем: «Пуянлăх хакне ĕçлекен çеç пĕлет».

Вĕрентекен:

– Г. Волков юмахĕсем час-часах вĕрентсе каланă пĕр-пĕр ваттисен сăмахĕпе вĕçленеççĕ. Нумай чухне тĕп шухăшĕпе хайлав ячĕ тӳр килеççĕ.

**6.** Киле ĕç пани. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (29 – 30 с.)

## 40-мĕш урок

**Урок теми:** Л. Ковалюк. «Хăравçă».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ăшра ăнланса вулас хăнăхусене аталантарасси;

– вуланин содержанине кĕскен каласа парас хăнăхусене тарăнлатасси;

– суя паттăрлăха сивлеме хăнăхтарасси;

– тус-юлташлăх туйăмĕсене çивĕчлетесси.

**У р о к ю х ă м ĕ**

**1.** Калав текстчĕпе паллашни. (132–138-мĕш с.)

Класра аван ĕлкĕрсе пыракансем пĕрер сыпăка ăшра вуласа ăнланаççĕ те кайран хăйсем вуланин содержанине черетленсе каласа параççĕ. Вариант: класри кашни ача пĕрер «касăка» ăшра вуласа ăнланать, кайран унăн содержанине пурне те каласа памалла. (Учитель пулăшса пынипе.)

**2.** Содержанине сӳтсе явни.

– Калаври ĕçсем ăçта, хăçан пулса иртеççĕ?

– Персонажсен ячĕсене аса илĕр. (Толя, Çемен, Лева, Анюта, Иркка.)

– Вĕсене кашнине Иркка мĕнле хаклать? («Анюта нихçан та васкамасть. Кирек ăçта та вăл юлташĕсенчен ытларахăшĕ мĕн каласса кĕтет, ялан тенĕ пекех вĕсен шухăшĕпе килĕшет»; «Толя яланах малтан мала пулма, кирек ăçта та пуçаруçă пулма тăрăшать. Юлташĕсене пулăшать. Ку питĕ аван. Анчах ку сахал пек хăйне: шкула кайнă е киле таврăннă чухне те ушкăн варринче е хысĕнче мар – умĕнче утасшăн вăл. Вăйăра та хăй ертсе пырасшăн»; «Лева … пĕр класри ачасенчен пуринчен те пĕчĕкрехххи, имшерри. Кĕркунне те, хĕлле те çине-çинех гриппа е пыр шыççипе чирлет… Лева шутсăр ырă кăмăллă, пултарнă таран кашнинех пулăшма хатĕр, никама нихçан сивĕ сăмах каламасть»; «Çемен – хыт кукар. Ĕнер, Ирккан ручки çырма пăрахсан, хăйĕн тепĕр ручкине, дневникĕ хушшинче упранаканнине, темĕнле тархасласа ыйтсассăн та памарĕ».

– Ачасем хăйсем Ирккана мĕнле хаклаççĕ? (Хăравçă теççĕ.)

Вĕрентекен:

– Ачасем, илемлĕ хайлавсенче ятарласа кашни персонажа тул тата шал енчен хакласа темиçе витĕмлĕ сăмахпа ӳкерсе кăтартаççĕ. Ăна портрет теççĕ. Çапла вара портрета фотоаппаратпа, кăранташпа, тĕрлĕ тĕслĕ сăрăсемпе çеç мар, сăмахпа та ӳкерме пулать.

– Ку калаври тĕп герой – Ирккa. Кун чухлĕ вуланинчен Ирккa сирĕн ума мĕнлерех тухса тăчĕ? Унăн портретне хăвăр сăмахсемпе туса парăр. (Ирккa – тирпейлĕ хĕр ача, ашкăнма юратмасть. Вăл ушкăнран уйрăлса çӳремест, пуринпе те кăмăллă пулма тăрăшать. Ирккa чарусăр, сăлтавсăрах хастарланнине пула шар куракан арçын ачасене хĕрхенет.)

– Ирккa мĕнпе килĕшрĕ? (Вăл хăйне хăравçă тесе каланишĕн пăшăрхансах каймасть. Тирпейлĕ хĕр ача пулма тăрăшать. Çĕнĕ кĕпине те варалас марччĕ тесе упрать. Тата ку хĕр ача кашни ачана хак пама пĕлет. Хăшĕ вĕçкĕн, хăшĕ имшертерех, хăшĕ хыт кукар, хăшĕ урлă пуласран хăранине витĕр курса тăрать.)

– Ирккa характерĕнче эсир ăнланманни мĕн те пулин пур-и? (Анатарахри кĕпер патне кайса çаврăнас кăмăлĕ питĕ пысăк унăн. Хăйпе юлташ пулманни çеç чарса тăрать. Каярахпа çаврăнатчех пулĕ. Анчах та пуçтах арçын ачасем хыççăн кайса кĕпене варала-малла-и унăн?)

**3.** Калав тытăмне тишкерни.

– Калаври ĕçсен йĕркине каласа кайăр. (Ачасем шкултан таврă-наççĕ. Вăйлă çумăр çырма урлă тунă каçăна юхтарса кайнă иккен. Кĕпер патне аната кайса çаврăнас – инçерех пек. Ирккa хирĕç те мар-ха, анчах ыттисем çырма урлă сиксе каçас хастарлăхпа чарăнса тăраççĕ. Тольăпа Çемен сиксе каçаççĕ, Лева вара шыва каять.)

– Ку ĕçсене ят парса план ыйтăвĕсем тăвар. (1. Çырма тулли шыв юхать. 2. Тольăпа Çемен сиксе каçрĕç. 3. Лева шыва ӳкни.)

**4.** Чĕлхен палăрту хатĕрĕсене сăнани.

«Ирккa сĕнĕвне Лева лайăх илтрĕ. Ăшĕнче ăна вăл ырларĕ». Çак предложенисене мĕнле ăнлантăр?

**5.** Киле ĕç пани. «Хăравçă» калавăн малтанхи сыпăк содержани-не кĕскен каласа пама вĕренни.

## 41-мĕш урок

**Урок теми:** Л. Ковалюк. «Хăравçă» *(малалли)*.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– палăртуллă вулав хăнăхăвĕсене тарăнлатасси;
– суя паттăрлăхпа чăн паттăрлăха чухлама хăнăхтарасси;
– тус-юлташлăх туйăмĕсене аталантарасси.

**У р о к  ю х ă м ĕ**

**1.** Текстпа паллашни. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа палăртса вуласçĕ.)

**2.** Содержанине тишкерни.

– Левăна камсем мĕнле майпа шывран туртса кăлараççĕ? Çав йĕркесене тепĕр хут вулăр. («Иркка икĕ аллине те малалла кăнтарса, пĕтĕм пĕвĕпе туртăнса пуçĕ таранах путнă Левăна сумкинчен ярса илчĕ те çыраналла сĕтĕрме віскарĕ. «Çăлтăм», – савăнса шухăшларĕ вăл. Хăй сасартăк сулăнса кайрĕ, кăшт çеç ӳкмерĕ – шăпах çав вăхăтра Анюта тăсса панă йăмра тураттинчен хăрах аллипе çатăрласа тытрĕ...»)

– Сире тĕп герой мĕн пирки килĕшрĕ? (Вăл Лева инкеке лексен кĕпи вараланасси çинчен шутласа тăмасть, – тӳрех ăна çăлма ыткăнать.)

– Чăн-чăн паттăр тесе кама каламалла? ( Ирккана.)

– Сирĕн Иркка пек пулас килет-и? Мĕншĕн? (Ачасен хуравĕ.)

– Иркка тантăшне çăлнă хыççăн сасăпах йĕрсе ярать. Çакă вăл ку хĕр ача айван пулнине пĕлтерет-ши? Паттăрсем макăраççĕ-и? (Ачасен хуравĕ.)

– Тольăпа Çемен юпа пек хытса тăнă пирки мĕн калама пулать? (Вĕсем çухалса кайнипе юпа пек хытса тăнă. Анчах та кун пек чухне кашни самант хаклă. Арçын ачасем хĕр ачасенчен çирĕпрех те вăйлăрах. Ку лару-тăрура Иркка арçын ачасенчен пĕр шай çӳллĕрех пулни курăнчĕ.)

Вĕрентекен:

– Ирккана хăравçă тесе йĕкĕлтекенсем хăйсем хăравçă пулса тухрĕç иккен. Пурнăçра час-часах çапла пулнине асăрхатăн: кам хăйне паттăр тесе кăкăр çапса çӳрет, вăл пачах та паттăр мар иккен. Кулленхи пурнăçра ыттисенчен нимпех те уйрăлса тăманскерсем йывăр лару-тăрăва лекеççĕ те паттăр пулса тухаççĕ. Вĕçкĕннийĕпе хыт кукарĕ те чăнласах çухалса каяççĕ, те хăйсене ытларах юратни мала тухать.

**3.** Калав тытăмне тишкерни.

Вĕрентекен:

– Халĕ пĕтĕм калава вуласа тухрăмăр. Калав тытăмĕн схемине пĕтĕмĕшле палăртар:

1. Çырма тулли шыв юхать. 2. Тольăпа Çемен сиксе каçрĕç. 3. Лева шыва ӳкни. 4. Левăна çăлни.

**4.** Ăнкарни (интерпретаци).

– Автор мĕн çинчен каласа кăтартать? (Шкултан çырма урлă каçса киле таврăннă чухне пулса иртнĕ пĕр ĕç çинчен каласа кăтартать.)

– Вăл мĕн каласшăн? (Кулленхи пурнăçра сăпайлă та тирпейлĕскерсем, пуринпе те килĕштерсе тӳрĕ кăмăлпа пурăнаканскерсем хушшинчех геройсем çураласçĕ.)

– Автор мĕнрен тĕлĕнет? (Темиҫе самант маларах каялла кăна хăйсене паттăр тесе шутлакансем йывăр лару-тăрура ҫухалса кайни. Хăравҫă тесе калаканнисемех ҫухалса каймасăр паттăр ĕҫ туни.)

– Калав ятне ăнлантарăр. Ăна урăхла мĕнле ят пама пулать? (Тольăпа Ҫемен Ирккаран хăравҫă тесе витлеҫҫĕ. Тĕрĕссипе вара чăн-чăн хăравҫисем хăйсем пулса тухаҫҫĕ те. Сăмахна ĕҫӳпе ҫирĕплет. Ыттисенчен кулма ан васка. Калава урăхларах ҫак ятсем юрăхлă: «Хăравҫисем камсем?», «Икĕ хăравҫă», «Иркка хăравҫă-и?»)

**5.** Учебникри ыйтусемпе ĕҫлени. (140–141-мĕш с.).

**6.** Киле ĕҫ пани. Ĕҫ тетрачĕпе ĕҫлени. (30–31-мĕш с.)

## 42-мĕш урок

**Урок теми:** А. Ерусланов. «Хапхаҫă».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– вуланă текст планĕ тăвас хăнăхусене ҫивĕчлетесси;

– тĕрĕс интонаци туса, сасăсене тĕрĕс каласа вулас хăнăхусене таранлатасси;

– туслăх-юлташлăх туйăмĕсене аталантарасси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Текстăн пĕрремĕш сыпăкĕпе паллашни. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа вулаҫҫĕ.)

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Тĕп герой ятне калăр. (Олежка.)

– Вăл миҫери ача? (Олежка 4 ҫулти ача.)

– Ĕҫсем ăҫта пулса иртеҫҫĕ? (Поселок ҫумĕнчи ҫырмара.)

– Ҫулла тата хĕлле ачасем мĕнле айланаҫҫĕ? (Ҫулла шыв таранăшне хăпартма пĕве тăваҫҫĕ, хĕлле пăр ҫинче конькипе ярăнаҫҫĕ, хоккейла выляҫҫĕ.)

– Пĕррехинче ачасем мĕнле выляма пуҫтарăннă? (Хоккейла выляма пуҫтарăннă.)

– Калавҫăн мĕн пирки каллĕ-маллĕ чупма тивет? (Хапхаҫă пулман пирки. Хӳтĕленекен пулнă май ăна хапхана сыхлама та хушнă.)

– Вăйă вăхăтĕнче вăтакассен хапхи умĕнче мĕнле хĕрӳллĕ самант сиксе тухать? Ҫак вырăна кĕнекере тупăр та сасăпа вулăр. («Унччен те пулмарĕ – халичченех ним шухăшсăр тăнă вăтакассен центрфорварчĕ темĕнрен хăранăн хыттăн тапса сикрĕ те шайбăна манран пăрса ячĕ. Хăй ним тăхтаса тăмасăр ун хыҫĕнчен ыткăнчĕ. Эпĕ, ҫакна кĕтменскер, ҫаврăнма тăтăм. Васканипе клюшкăран такăнтăм та пăр ҫине тăсăлса ӳкрĕм. Пĕтрĕ, пирĕн хапха пĕтрĕ!..»)

– Олежка аслăраххисемпе туслă, сапăр кăмăллă ача пулнине çирĕплетекен йĕркесене тупăр та сасăпа вулăр. («Хастар ача вăл. Хăй пĕчĕк пулин те пысăк кумккасемех йăтасшăн тертленет. Мекĕрленет, вара, хĕремесленет… Эпир ăна, паллах, вăйне кура пĕчĕк муклашкасем кăна паратпăр. Вăл кунпа та сапăр – хирĕçлемест, каланине итлет».

**3.** Текст тытăмне тишкерни.

– Калавăн вуласа тухнă сыпăкĕнче пулса иртекен ĕçсен йĕркине палăртăр, вĕсене ят парăр. (1. Пĕве çинче çулла тата хĕлле. 2. Хоккейла выляни. 3. Вăтакассен хапхи умĕнче. 4. «Унччен те пулмарĕ...»)

– Чи хĕрӳллĕ саманчĕ хăшĕ? («Унччен те пулмарĕ...)

**4.** Калав чĕлхине сăнани.

– Аслăраххисем Олежкăна юратнине хăш сăмахсем çирĕплетеççĕ? («Олежка пур та – пĕчĕкрех çав-ха, пултараймасть. Апла пулсан çӳретĕрех площадка тулашĕнче, ярăнтăр хăй пĕлнĕ пек.»)

**5.** Киле ĕç пани. «Хапхаçă» калавăн пĕрремĕш сыпăкне палăртуллă вулама вĕренни.

## 43-мĕш урок

**Урок теми:** А. Еруслановъ. «Хапхаçă» *(малалли)*.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– палăртуллă вулав хăнăхăвĕсене çивĕчлетесси;

– вуланин содержанине кĕскен каласа парас хăнăхусене тарăнлатасси;

– туслăх-юлташлăх туйăмĕсене аталантарасси;

– пĕчĕкреххисемпе айванраххисене хӳтĕлеме хавхалантарасси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Калавпа паллашни. (Калав текстне рольсем тăрăх вулаççĕ.)

**2.** Калав содержанине тишкерни.

– Хапхана кам тата мĕнле майпа хӳтĕлесе хăварать? (Олежка хоккеист ури айне выртать те кĕлеткипе шайбăна хупласа хурать.)

– Малалла мĕн пулса иртет? (Калавăн малалли содержанине ачасенчен пĕрин каласа памалла.)

– Ку сыпăкри ĕçсем Олежка характерĕнчи тата мĕнле ене уçса кăтартрĕç? (Олежка хăюллă ача, ыратасран хăраманскер.)

– Олежка сире мĕншĕн килĕшрĕ е килĕшмерĕ? (Ачасен хуравĕ.)

– Унăн хăтланăшĕсенчен хăшне эсир ăнланмастăр? (Вăйă йĕркине пăсса гол кĕртме чăрмантарнине ăнланма çук. Çавăншăнах

вăтакассен хоккеисчĕ ăна хăмсарать.)

– Ачасен хутшăнăвĕсенчен хăшĕсене мухтас килет? (Ачасем хăйсен касĕнче пурăнакан пĕчĕк Олежкăна хӳтĕленине мухтас килет. Вăйă йĕркине пăснă пулсан та, вĕсем вăтакассене пĕчĕк ачана хăратма юраманни ҫинчен ăнлантараҫҫĕ. Голне кĕртнĕ-и, кĕртмен-и – калаҫса татăлсассăн ăна кĕртнĕ тесе те шутлама пулать. Олежкăна вара хăмсарма юрамасть. Вăл хăй касĕнчи ачасен командине хăй пултарнă пек пулăшма тăрăшнă вĕт. Тата вăйă йĕркисене те хăйне майлă ăнланнă пулмалла. Олежка кунта ачасене пĕр-пĕринпе мĕнле хутшăнса пурăнмалли ҫинчен вĕрентме килнĕ пекех тухса тăрать.)

**3.** Калав тытăмне тишкерни.

– Пĕтĕм калаври ĕҫсен йĕркине аса илĕр, вĕсене ят парăр, план тăвăр. (1. Пĕве ҫинче ҫулла тата хĕлле. 2. Хоккейла выляни. 3. Вăтакассен хапхи умĕнче. 4. «Унччен те пулмарĕ...» 5. Олежка хапхана сыхласа хăварать. 6. Олежка – хапхаҫă.)

**4.** Калав чĕлхине сăнани.

– «Сикрĕ тухрĕ» тени ĕҫ мĕнлерех пулса иртнине пĕлтерет? (Ку сăмах майлашăвĕ ĕҫ питĕ хăвăрт пулса иртнине пĕлтерет.

– Центрфорвард кам вăл? (Хоккейра площадка варрипе тапăнса вылякан.)

**5.** Учебникри ыйтусене хуравлани. (146-мĕш с.)

**6.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Автор мĕн ҫинчен каласа кăтартнă? Вăл мĕн каласшăн? (Проблема кăткăслăхĕн шайне кура ку ыйтусене тĕрлĕрен хуравлама пулать: 1. Кунта пысăкрах ачасемпе пĕчĕк Олежка хушшинчи туслăх ҫинчен ҫырса кăтартнă. Олежка аслăрах ачасемпе питĕ пĕрле пуласшăн. Хăйне вĕсен ушкăнне йышăнма кирлине вăл хапхаҫă вырăнне йышăнса ĕнентерет. 2. Кунта автор вăйă йĕркине пăсаспăсас мар ыйту ҫинчен каласа кăтартнă. Ача хăй пĕлменнине пула вăйă йĕркине пăсать пулсан ăна каҫармалла.)

**7.** Киле ĕҫ пани. Тунă планпа усă курса калавăн кĕске содержанине каласа пама хатĕрленни; ĕҫ тетрачĕпе ĕҫлени. (31–32-мĕш с.)

## 44-мĕш урок

**Урок теми:** О. Уайльд. «Хаяр Улăп».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– тимлĕ вулавҫă пулма хавхалантарасси;

– палăртуллă вулав хăнăхăвĕсене тарăнлатасси;

– сапăрлăхпа ыркăмăллăх туйăмĕсене аталантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Юмахпа паллашни. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа вулаççĕ.)

**2.** Юмах содержанине тишкерни.

– Тĕп персонажсен ячĕсене асăнса тухăр. (Ачасем, Хаяр Улăп, Юрпа Сивĕ, Çурçĕр Çилĕ, Хаяр Пăр, Хĕлле, Çуркунне, Çулла, Кĕркунне.)

– Улăп пахчинче миçе персик йывăçĕ ӳснĕ? (Вун икĕ персик йывăçĕ.)

– Улăп Корнуолти ятлă çын çиен Улăп тусĕ патĕнче миçе çул хушши хăналаннă? (Çичĕ çул хушши.)

– Хаяр Улăп пахча хӳми çине мĕнле хăма çапса хунă? (Хăма çине çапла çырса хунă: «Кунта кĕрсе выляма юрамасть. Итлеменнисене патак лекет».)

– Ачасем çӳллĕ хӳме çывăхĕнчен мĕн калаçса иртсе кайнă? (Епле аванччĕ пире кунта выляма тесе иртсе кайнă вĕсем.)

– Çуркунне çитсен пахчара мĕн-мĕн хуçаланнă? (Хĕл, Юр, Сивĕ, Çурçĕр Çилĕ, Хаяр Пăр.)

– Улăп мĕн шухăшланă? (Çуркунне çаплах килмест. Çут çанталăкра темле улшăну пулса иртнĕ пулмалла тесе шутланă вăл.)

– Улăп пахчинче çаплипех мĕн хуçаланнă? (Хаяр Улăп пахчинче Хĕл хуçаланнă.)

– Улăп хаярскер пулни унăн хăш ĕçĕсенче курăнать? (Унăн тусĕ те Корнуолти ятлă çын çиен Улăп. Вăл ача-пăчана юратман, вĕсене хăй пахчинче выляма чарнă. Пахчи тавра çӳллĕ хӳме тытса çавăрнă та ун çине хаяррăн асăрхаттарса çырнă. Улăп хăйне çеç юратнă.)

– Çуркунне Улăп пахчине мĕн пирки пымасть? (Улăп ачасене хăваласа янăшăн. Çӳллĕ хӳмепе хупланăшăн.)

**3.** Юмах тытăмне тишкерни.

– Юмах сыпăкĕнчи тĕп ĕçсене палăртăр та вĕсене ят парăр. (1. Улăп пахчинче питĕ аван. 2. Улăп ачасене пахчинчен хăваласа ярать, çӳллĕ хӳме тытса çавăрать. 3. Çуркунне çитсен те Улăп пахчинче Хĕл хуçаланнă. 4. Юрпа Сивве, Çурçĕр Çилне, Хаяр Пăра лайăх. 5. Çуллапа Кĕркунне килмеççĕ.

**4.** Учебникри ыйтусене хуравлани (149–150-мĕш с.)

**5.** Киле ĕç пани. Вуланин содержанине кĕскен каласа пама вĕренни.

## 45-мĕш урок

**Урок теми:** О. Уайльд. «Хаяр Улăп» *(малалли)*.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ăшра вулас хăнăхусене аталантарасси;

– текст планне тăвас хăнăхусене ҫивĕчлетесси;
– вулани тăрăх ыйтусене хуравлас хăнăхусене тарăнлатасси;
– ăшпиллĕхпе сапăрлăх туйăмĕсене сарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Текстпа паллашни. (Текста ăшра вулаҫҫĕ.)

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Ачасем пахчана кĕрсе йывăҫсем ҫине хăпарса ларни мĕн патне илсе ҫитернĕ? (Кантăр кайăкĕ юрлама пуҫланă, Хаяр Пăр кермен тавра ташлама пăрахнă, Ҫурҫĕр Ҫилĕ шăхăрса вĕрмен, уҫă кантăкран тутлă шăршă кĕнĕ, йывăҫсем ҫеҫке ҫурнă, кайăксем чĕвĕлтетсе вĕҫсе ҫӳренĕ, чечексем пуҫĕсене кăлара-кăлара кулнă.)

– Пĕр ар ача мĕншĕн ĕсĕкленĕ? (Вăл ытла та пĕчĕк пулнăран йывăҫ ҫине улăхма пултарайман.)

– Ҫакă мĕнĕн сăлтавĕ пулнă? (Йывăҫ ҫийĕн Ҫурҫĕр Ҫилĕ тулашса вĕрнĕ. Йывăҫĕ хăй юрпа пĕркеннĕ.)

– Улăп мĕне ăнланса илет? (Ҫуркунне хăй пахчине мĕншĕн кĕменнине ăнланса илет.)

– Вăл мĕншĕн ниҫта кайса кĕрейми ӳкĕннĕ? (Хăй ҫак тарана ҫити пĕр хăйне ҫеҫ юратса пурăннăшăн.)

– Улăпа чана йывăҫ ҫине хăпартса ярсан мĕн пулса тухать? (Йывăҫ ҫеҫке сарнă, кайăксем юрлама пуҫланă. Ар ача Улăпа ыталаса чуптуса илнĕ.)

– Кăнтăрла ҫынсем мĕн курнă? (Улăп пахчара ачасемпе выляннине курнă.)

– Улăп мĕн пирки хурланнă? (Пĕчĕк ар ача ҫухалнишĕн хурланнă. Вăл ăна юратса пăрахнă пулнă.)

Вĕрентекен:

– Улăп малтанах хаяр пулнă. Хăйсĕр пуҫне никама та юратман. Кайран вăл Ҫуркунне хăйĕн пахчине мĕн пирки пыманнине те ăнланса илет, хăйне пĕчĕк ар ыталаса чуптусан ăна юратса пăрахать. Улăп чунне ирĕлтерсе яраканни ăна хăйне ыттисем юратни пулчĕ иккен. Пĕр-пĕринпе килĕштерес тесен, пĕр-пĕрне каҫарма пĕлмелле тесе калама пулать-и? (Ачасен хуравĕ.)

**3.** Юмах тытăмне тишкересси.

– Ку сыпăкра ҫырса кăтартнă ĕҫсен йĕркине палăртăр. Вĕсене ят парăр. (1. Ачасем йывăҫ турачĕсем ҫине хăпарса ларнă хыҫҫăн. 2. Хаяр Улăп чунĕ ҫемҫелни. 3. Улăп ачасемпе пĕрле выляни. 4. Улăп тунсăхлать.)

– Чи пĕлтерĕшли хăшĕ? Мĕншĕн? (Ачасен хуравĕ. Кунта кирек мĕнле хурав та тĕрĕс пулма пултарать. Ача хăй хуравне ҫирĕплетме пултартăр.)

**4.** Учебникри ыйтусене хуравлани. (153-мĕш с.)

**5.** Киле ĕç пани. Текст содержанине кĕскен каласа пама вĕренни.

## 46-мĕш урок

**Урок теми:** О. Уайльд. «Хаяр Улăп» *(малалли)*.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– текста тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене аталантарасси;

– палăртуллă вулав хăнăхăвĕсене тарăнлатасси;

– сапăрлăхпа пархатарлăх туйăмĕсене çивĕчлетесси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Юмах тексчĕпе паллашни. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа вулаççĕ.)

**2.** Юмах содержанине тишкерни.

– Ватăлнăçемĕн Улăп мĕнлерех улшăнса пынă? (Халĕ ĕнтĕ вăл кунĕ-кунĕпе кресло çинче ларнă. Ачасем выляни çине пăхса савăннă.)

– Халĕ ĕнтĕ вăл хаяр-и? (Çук, хаяр мар.)

– Халĕ ĕнтĕ вăл мĕне-мĕне вĕреннĕ? (Хĕллене те юратма вĕреннĕ, Çуркунне çывхарнине, чечек-курăк тĕлĕрнине ăнланнă вăл.)

– Улăпа мĕнле асамлă ӳкерчĕк куранна? («Пахчари чи инçетри кĕтесри йывăç шап-шурă çеçке сарнă. Тураттисем ун ылтăнран пулнă, çимĕçĕсем – кĕмĕлтен. Йывăç айĕнче пĕчĕк ар ача тăнă.)

**3.** Сыпăкри ĕçсен йĕркине палăртни. (1. Улăп ватăлса пырать. 2. Пĕчĕк ар ачапа тĕл пулни.)

**4.** Учебникри ыйтусене хуравлани. (154–155-мĕш с.)

**5.** Киле ĕç пани. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (32–33-мĕш с.)

## 47-мĕш урок

**Урок теми:** Исмай Исемпек. «Шăвăç витре».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– аса илӳ хайне евĕрлĕ литература жанрĕ пулнине вĕрентесси;

– пурнăçри йывăрлăхсене тӳсĕмлĕн тӳссе ирттерме хавхалантарасси;

– вуланин содержанийĕ тăрăх лартнă ыйтусене хуравлас хăнăхусене аталантарасси;

– çемьери тăнăçлăха упрама хăнăхтарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Текстпа паллашни. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа вулаççĕ.)

**2.** Калав содержанийĕпе ĕçлени.

Вĕрентекен:

– Ачасем, литературăра тепĕр йышши хайлавсем те пулаççĕ. Вĕсем асилӳсем (мемуарсем). Писательсем хăйсен ачалăхĕ е пурнăçăн пĕр тапхăрĕ çинчен аса илсе калавсем, повеçсем, сăвăсем çыраççĕ. Акă пирĕн чаплă вĕрентекенĕмĕрĕн Иван Яковлевич Яковлевăн «Манăн пурнăç» аса илӳ кĕнеки. Кунта вăл хăй пурнăçĕнче мĕнле-мĕнле нуша курнине, мĕнле-мĕнле савăнăç пулнине каласа парса çыртарнине пичетленĕ. Трубина Мархви «Ача чухнехи», Мария Ухсай «Кăра çилсем» повеçĕсенче хăйсен ача чухнехи пурнăçĕн пĕр сыпăкне çырса кăтартнă. Халĕ вулакан калав авторĕ Исмай Исемпек. Вăл ача пулнă çулсенче пурнăç паянхи пек пулман. Çыравçă нуша курса ӳснĕ пулин те, ун аса илĕвĕнчен темле тунсăхлă ăшă çапать.

– Хăш-хăш çимĕç патша апачĕ (çав тери тутлă апат) пек туйăннă? (Çĕр улмипе çурмалла пĕçернĕ çăкăр, пăрçа пашалăвĕ, крахмал кĕселĕ.)

– Вучах чĕртес тесен мĕн тумалла пулнă? (Урама тухса кӳршĕсен мăрйинчен тĕтĕм тухасса кĕтсе тăмала пулнă, вара вĕсем патĕнчен кăвар илсе килнĕ.)

– Ĕне пуçне налук тӳлеме патшалăха мĕн чухлĕ сĕт памалла пулнă? (Çĕр аллă литр.)

– Сĕтпе сар çăва мĕнле саплаштарнă? (Çирĕм пилĕк литр сĕт пĕр кило сар çупа танлашнă.)

– Витрери сĕте хĕнесрен хăраса тĕкĕнмен-и? (Хĕнесрен хăраса мар, йывăр пурнăçа ăнланса тĕкĕнмен.)

– Кӳршĕ ялти Санюк мĕнле шар курнă? (Услам çăва супăнь шывĕпе сиктернĕ. Санюк хайхи çăва çиет те варвиттие каять.)

– Асламăшĕн пурнăçĕ тата йывăр пулни ăçтан курăнать? (Сĕлĕрен кĕсел туса çитернĕ, кĕселĕ вара питĕ йӳçĕ пулнă. Ăна вара кантăр вăррине ватса, шывпа пăтратса, сĕт пек шурăрах шĕвекпе сыпса çинĕ.)

– Асламăшĕ мĕнле чеелĕхе вĕрентнĕ? (Вăрăм улăм пĕрчипе сĕт витринченех шăл витĕр сăрăхтарса ĕçнĕ.)

– Витрери сĕт аннине мĕнле пытарнă? (Витре тавра шывпа йĕпетсе тухнă, кайран пĕр-ик çăвар сĕтпе пĕрĕхтернĕ.)

– Тĕп герой мĕнпе килĕшрĕ? (Вăл нумай çул иртсе кайнă пулсан та, ача чухне хăй çылăхĕшĕн Анаткасри Йăвана ята кĕртнĕ пирки асапланать.)

– Вăл характерĕ тĕлĕшĕнчен мĕнлерехскер? Мĕншĕн кăмăл ун еннелле туртăнать? (Вăл аслисене хисеплет. Пурнăç йывăррине ăнланать. Патшалăха сĕтпе çуран налук тӳлеме тивнине ăнланать.

Çапах та хăйне майлă чеелĕх шыраса тупнă вăл. Виçине пĕлмесĕр, ĕмĕтсĕрленсе вăрламасть вăл. Çапла тума нушаллă пурнăç, выçăллă-тутăллă пурăнма тивни хистет.)

**3.** Калав тытăмне тишкерни.

– Калавра пурнăç йывăр пулнине çирĕплетекен мĕнле фактсене асăннă? (Питĕ тутлă апат çĕр улмипе çурмалла пĕçернĕ çăкăр, пăрçа пашалăвĕ, крахмал кĕселĕ пулнă, ĕне сума пуçличчен пурнăç тата хĕсĕнсе çитнĕ, вучах чĕртме шăрпăк та çитмен, сĕтне-çуне те налук тӳлеме янă, ĕнесене те çырма-çатрара кăна çитерсе çӳренĕ. Тата ĕлĕкрех сĕлĕрен йӳçĕ кĕсел туса çинĕ.)

– Пурте çапла хĕн курнă-ши? (Пурте мар паллах. Кирек хăш саманара та чеереххисем, ăслăраххисем пулаççĕ. Вĕсем яланах ыттисенчен лайăхрах пурăнаççĕ. Паян та çаплах.)

**4.** Чĕлхене сăнани.

*Пашалу* – чустана йӳçĕтмесĕр пĕçернĕ хулăн икерчĕ евĕр çимĕç.

*Брынза* – сурăх сĕтĕнчен пĕçерекен сыр.

*Кĕсел* – мĕне те пулин (сăмахран, сĕлĕ) шӳтерсе пĕçернĕ çимĕç.

**5.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Çыравçă ку историе мĕн сăлтавпа каласа парать? Мĕн каласшăн вăл? (Вăл ача пулнă çулсенчи пурнăç питĕ йывăр пулнă. Çимелли çитсе пыманни халăха тăлласах лартнă. Налук вырăнне апат-çимĕç памалла пулнă. Ачасем çавăнпа выçăллă-тутăллă ӳснĕ. Автор халĕ хăй ватăлнă çын ĕнтĕ. Ачалăх çулĕсене аса илни темле ăшă тунсăх çуратать. Чи асра юлни вара – шăвăç витре. Шăвăç витререн улăм пĕрчи витĕр ĕçнĕ хыççăн сĕт аннине ан сисчĕр тесен витре тавра шывпа йĕпетсе тухмалла пулнă иккен. Кайран пĕр-ик çавар сĕтпе пĕрĕхтермелле. Ку чеелĕхе те автора асламăшĕ вĕрентнĕ. Амăшĕ вара витре юхать тесе шутланă. Тен, апла шутламан та, тен, ывăлĕ илттĕр тесе çапла каласнă.)

**6.** Киле ĕç пани. Учебникри 159–160-мĕш страницăсенчи ыйтусене хуравлама хатĕрленни; ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (33–34-мĕш с.)

## 48-мĕш урок

**Урок теми:** К. Ушинский. «Вăрманти ачасем».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– геройсем тата тĕп герой çинчен мĕн пĕлнине тарăнлатасси;

– тĕнчере кашни япалапа пулăмăн хăйĕн вырăнĕ пулнине ăса вырнаçтарасси;

– кил-йышри килĕшӳпе татулăха упрама хавхалантарасси.

## Урок юхăмĕ

**1.** Текстпа паллашни. (Рольсем тăрăх интонацие тĕрĕс туса, сасăсене тĕрĕс калама тăрăшса вулаççĕ.)

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Геройсен ячĕсене каласа тухăр. (Шăллĕ, аппăшĕ, пакшасем, хурт-хăмăр, нăрă, пыл хурчĕ, кăткă, пакша, кăвакарчăн, куян, çĕр çырли чечекĕ, шыв.)

– Кашниййĕ мĕн ĕçлет? (Шăллĕпе аппăшĕ шкула кайнă; кайăксем пĕр йывăç çинчен тепĕр йывăç çине сике-сике ларнă, юрланă, кăшкăрашнă; пакшасем пĕр турат çинчен тепĕр турат çине сикнĕ; хурт-хăмăр курăк ăшĕнче сĕрĕлтетнĕ; нăрă кăнтăрлахи апат тупса хатĕрленĕ; пыл хурчĕ пыл пухнă; кăткă улăм пĕрчине сĕтĕрсе пынă; пакша мăйăр хатĕрленĕ; кăвакарчăн йăва çавăрнă; куян пит-куçне çума çырма хĕрринелле чупса пынă; çĕр çырли чечекĕ çырлине пиççе çитме ĕлкĕртесшĕн васкать; шыв кунĕн-çĕрĕн ĕçлет: выльăхчĕрлĕхе шăварать, çынна шыв парать, шыв арманĕн ураписене çавăрать, кимĕсене йăтса çӳрет, пушарсене сӳнтерет, чулсем çийĕн шăнкăртатса юхать.)

Вĕрентекен:

– Тĕп герой калавра пĕрре те, иккĕ-виççĕ те пулма пултарать. Ку калавра вĕсем иккĕн. Тĕп геройсем мĕнлескерсем? Вĕсем çинчен ĕçсĕр çапкаланса çӳрекенсем тесе калама пулать-и? (Тĕп геройсем – шăллĕпе аппăшĕ, шкул ачисем. Шăрăх та тусанлă çул çинчен вăрмана пăрăннă. Кунта вара сулхăн, шавлă та савăнăçлă пулнă. Шкула ĕлкĕрĕпĕр-ха, кăштах выляса савăнар тесе шутлаççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне самантлăха манса каяççĕ. Унран та ыйтаççĕ, кунран та ыйтаççĕ вĕсем – пурте ĕçлĕ иккен. Кайран намăсланаççĕ.)

– Шăллĕ сĕннипе аппăшĕпе иккĕшĕ вăрманта выляма шутлаççĕ. Шăллĕ каланипе аппăшĕн килĕшмелле пулнă-и? Тен, аслăрах пулнипе унăн шкулах каймаллине çирĕплетмелле пулнă? (Аппăшĕ аслăрах пулнă пирки яваплăрах, унран çирĕпрех ыйтаççĕ. Çавăнпа та унăн айăпĕ те пысăкрах.)

Вĕрентекен:

– Ушкăнпа чухне яваплăх сирĕлнĕ пек пулать. Анчах та инкек-синкек сиксе тухас пулсан аслăраххинчен ытларах ыйтаççĕ. Аслăраххи нумайрах пурăннă, çавăнпа вăл ăслăрах теççĕ. Нумайрах вĕренни те ăслăрах теме май парать. Аслăраххин çирĕпрех пулмалла. Çирĕпреххисене ытларах хисеплеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен шухăшне айванраххисен наянлăхне, çемçешкелĕхне пула

улăштармаççĕ. Кашниннех хăй тунă айăпшăн явап тытма хатĕр пулмалла.

**3.** Текст тытăмне тишкерни.

– Ку калав хăш пайсенчен тăрать? Вĕсене ят парăр. Чи хĕрӳллĕ самант хăш пайра? (1. Шкула кайни. 2. Вăрман пурнăçĕ. 3. Шывпа калаçни. 4. Ачасем кичемленнĕ. Чи хĕрӳллĕ самант 3-мĕш пайра: ачасем шывăн ним те ĕçлемелле мар тесе шутланă. Çакă шыва кӳрентерет, ĕç нумай пирки манăн пуçăм çавăрăнать тет вăл.)

**4.** Ăнлантарни.

– Калав ятне ăнлантарăр. (Калава «Вăрман ачисем» тенĕ пулсан, тĕлĕнмелли нимех те пулмастчĕ. Вăрман ачисем – унпа тачă çыхăннă, тен, унтах пурăнакан ачасем. «Вăрманти ачасем» – вăрманшăн ют ачасем. Ятĕнчех калавăн тĕп шухăшĕ палăрса тăрать.)

– Çыравçă ку калавпа мĕн каласшăн пулнă? (Çĕр çинче мĕн пурри пурте мĕнле те пулин ĕç тăвать. Эпир пĕлменни вăл е ку ĕçлемест тенине пĕлтермест. Çавна пĕлесси эпир вĕреннин тĕп тĕллевĕ пулать те ĕнтĕ. Хамăрăн тĕп тĕллеве хăш чухне манса каясси пулать. Анчах та вăхăтра аса илсе вăхăтра юсанма тăрăшни паха.)

**5.** Киле ĕç пани. Учебникри 163-мĕш страницăри ыйтусене хуравлама хатĕрленни; ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (34–35-мĕш с.)

## 49-мĕш урок

**Урок теми:** Пĕтĕмлетӳ урокĕ (вăйă урок).

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– вулавçă тавра курăмне анлăлатасси;

– сыпăка вĕренсе туяннă пĕлӳсене, ăслайсемпе хăнăхусене пĕтĕмлетесси;

– пуплев ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене аталантарасси;

– пултарулăх ăсталăхне, сăнарлă шухăшлава çивĕчлетесси;

– ушкăнра ĕçлес хăнăхусене тарăнлатасси;

– социаллă пурнăçри илемлĕх туйăмне аталантарасси.

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** компьютер; мультипроектор; валеçсе памалли карточкăсем.

### Урок юхăмĕ

**1.** Вăйă йĕркипе паллаштарни.

Вĕрентекен:

– Ачасем, эпир литература вулавĕ кĕнекин тепĕр сыпăкне вуласа пĕтертĕмĕр. Мĕн ятлăччĕ вăл? («Эпир – сăпайлă ачасем»). Тĕрĕс. Акă эпир пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех вулама, мĕн вуланине тишкерме вĕренсе пыратпăр. Сас паллисене вулама циркра та «вĕрентеççĕ».

Ӑнланса вулани, кӑтартуллӑ та илемлӗ вулани, тӗрӗс интонаци туса, сӑмахсене чӑмламасӑр, сасӑсене уҫӑмлӑ каласа вулани, вуланине асра хӑварни паха. Ҫак хӑнӑхусем мӗнлерех шайра калӑпланнине палӑртатпӑр паян. (Класа ретсем тӑрӑх ушкӑнсене уйӑрмалла.)

**2.** Вайӑ ирттерни.

***1-мӗш тур***

1) «Хайлав тата автор». Ҫак йӗркесем ӑҫтан?

а) «Хӗвелӗ те, тӳпи те, пӗлӗчӗсем те хӗрлӗ тӗслӗ». (*И. Шухши.* «Кӗрен тӳпе».)

ӑ) «Пирӗн поселок ҫумӗпе пысӑках маар ҫырма юхса иртет». (*А. Ерусланов.* «Хапхаҫӑ».)

б) «Тусне, Корнуолти ятлӑ ҫын ҫиен Улӑпа, курма кайнӑ вӑл». (*О. Уайльд.* «Хаяр Улӑп».)

в) «Аслӑк тӑрринче сӑра кункӑри валли ятарласа ҫапнӑ ыраш кӗлтисем». (*Исмай Исемпек.* «Шӑвӑҫ витре».)

г) «Икӗ ача – шӑллӗпе аппӑшӗ – шкула тухса кайнӑ». (*К. Ушинский.* «Вӑрманти ачасем».)

2) «Кам ҫакӑн пек калать?» Персонаж ячӗ. Хайлав тата автор ячӗ.

а) «Асатте, асатте, акӑ кам чечек вӑрри!» (Верук. «Чечек ҫыххи». *Н. Иванов.*)

ӑ) «Ку ҫирӗм пуса ху ӗҫлесе тупнӑ иккен». (Ашшӗ. «Пуянлӑх хакне ӗҫлекен ҫеҫ пӗлет». *Г. Волков.*)

б) «Иркка – хӑравҫӑ, вӑл кунтан каҫаймасть». (Ҫемен. «Хӑравҫӑ». *Л. Ковалюк.*)

в) «Эпӗ хапхаҫӑ». (Олежка. «Хапхаҫӑ». *А. Ерусланов.*)

г) «Паянтан манӑн пахча – сирӗн пахча». (Улӑп. «Хаяр Улӑп» *О. Уайльд.*)

***2-мӗш тур***

1) «Литература пасарӗ». Сахалтарах хушма ыйтупа хайлав ятне аса илекен ушкӑн ҫӗнтерет.

а) –Ку калаври тӗп герой Слава.

– Хайлав вӑрлани ҫапӑх пулни ҫинчен.

– Унӑн йӑмӑкӗ Люся ятлӑ.

– Слава чечек вӑрлать.

– Люся кану лагерӗнчен таврӑнать.

(«Чечек ҫыххи». *Н. Иванов.*)

ӑ) – Ку хайлавра ашшӗ ывӑлне ӑса вӗрентет.

– Хайлава паллӑ чӑваш тӗпчевҫи, ҫыравҫи, этнопедагогӗ ҫырнӑ.

– Вӑл Г. Волков ятлӑ.

– Хайлавра ашшӗ укҫа ҫунтарать.

– Ывӑлӗ хӑй тӗллӗн 20 пус ӗҫлесе илет.

(«Пуянлӑх хакне ӗҫлекен ҫеҫ пӗлет». *Г.Волков.*)

б) – Йӑмӑкӗ Вероника ятлӑ.

– Унӑн пиччӗшӗ Микуҫ ятлӑ.

– Микуҫ ачасемпе футболла вылянӑ.

– Вероника килте пӗччен юлнӑ.

– Микуҫ ӑна йӑпатма тем те туса пӑхать.

(«Йӑмӑк». *Н. Карай.*)

2) «Сиктерсе хӑварнӑ сӑмахсене кӗртсе ларт».

а) «Кун пек наян ӑҫта пур-ши?
Шыраса пӑхӑр-ха, ... (Кампур.)
Тен, сирӗн хушӑра та пур?» («Наян Кампур». *А. Кӑлкан.*)

ӑ) «Сӑнран кӑна хитре ҫав эс,
Ӑшу ... (усал)». («Шӑна кӑмпин шӑпи». *А. Галкин.*)

б) «Кунта кӗрсе выляма юрамасть. Итлеменнисене ... (патак) лекет». («Хаяр Улӑп». *О. Уайльд.*)

в) «Ҫавӑнтанпа (Санюк) услам ҫу ҫине пӑхма та пултараймастчӗ». («Шӑвӑҫ витре». *И. Исемпек.*)

***3-мӗш тур***

«Ҫак сӑмахсем хӑш персонажа сӑнлаҫҫӗ?»

а) «Хастар ача вӑл. Хӑй пӗчӗк пулин те пысӑк кумккасемех йӑтасшӑн тертленет». (Олежка. «Хапхаҫӑ». *А. Еруслановｐ.*)

ӑ) «Вӑл пӗр класри ачасенчен пуринчен те пӗчӗкреххи, имшерри. Кӗркунне те, хӗлле те ҫине-ҫинех гриппа е пыр шыҫҫипе чирлет. [...] шутсӑр ырӑ кӑмӑллӑ, пултарнӑ таран кашнинех пулӑшма хатӗр, никама нихҫан сивӗ сӑмах каламасть.» (Лева. «Хӑравҫӑ». *Л.Ковалюк.*)

б) «... паян ҫӗнӗ кӗпине пӗрремӗш хут тӑхӑннӑ. Ӑна тирпейлӗхе юратакан ачан тахҫанчченех таса упрас килет.» (Иркка. «Хӑравҫӑ». *Л. Ковалюк.*)

в) «Кирек ӑҫта та вӑл юлташӗсенчен ытларахӑшӗ мӗн каласса кӗтет, ялан тенӗ пекех вӗсен шухӑшӗпе килӗшет.» (Анюта. – «Хӑравҫӑ». *Л.Ковалюк.*)

**3.** Рефлекси.

Очкосене шутлани. Ҫӗнтерӳҫӗне палӑртни.

## 50–мӗш урок

**Урок теми:** Н. Исмуков. «Ҫурхи тӗнче». Л. Смолина. «Ҫуркунне пуҫланать».

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

– сӑвӑсенче танлаштарусене асӑрхама вӗрентесси;
– сӑвӑсене танлаштарса хак парас хӑнӑхусене аталантарасси;
– сӑмах илемне туйма хӑнӑхтарасси;
– сӑвӑсене палӑртуллӑ вулас хӑнӑхусене тарӑнлатасси;
– ҫут ҫанталӑк илемне асӑрхама хӑнӑхтарасси.

**Урок юхӑмӗ**

**1.** «Ҫурхи тӗнче» сӑвӑпа паллашни. (Малтан учитель сасӑпа вулать, ачасем кӗнеке тӑрӑх йӗрлеҫҫӗ. Кайран ачасем ушкӑнпа черетленсе сасӑпа вулаҫҫӗ.)

**2.** Тишкерни.

– Автор ҫут ҫанталӑка хӑш вырӑнтан сӑнать? (Аслӑк тӑрринчен.)

– Поэт мӗнле туйӑмсемпе хавхаланса ҫырать? (Поэт хӗвел хӗртнишӗн чунтан хавхаланса ҫырать.)

– Сире ку сӑвӑ мӗншӗн килӗшрӗ? (Сӑвва вуланӑ хыҫҫӑн поэтпа пӗрле савӑнатӑн. Пурӑнас килет.)

– Ку сӑвӑра мӗне ҫырса кӑтартнӑ? (Кунта ҫуркунне пуҫламӑшне ҫырса кӑтартнӑ. Ирсерен самаях шӑнтать, кӑнтӑрла ӑшӑтса ярать.)

– Сӑвӑ тӑрӑх мӗнле ӳкерчӗк тума пулать? Сӑмахсемпе каласа кӑтарт. (Ҫулсем хуралнӑ, кӗпер хуп-хура, мӗншӗн тесен хӗвел хӗртсе ҫиелти шурӑ тӗслӗ юра ирӗлтерсе янӑ. Хир урлӑ выртакан сукмак самаях аван палӑрса тӑсӑлать. Ача аслӑк тӑрринче ҫаксем ҫине тинкерсе пӑхать.)

Вӗрентекен:

– Ачасем, сӑвӑсенче пӗр япалана е пулӑма теприне танлаштарса усӑ курнине час-часах асӑрхатпӑр. «Икӗ куҫӗ хуп-хура, икӗ хура шӑрҫа пек», – вулатпӑр «Нарспи» поэмӑра. Кунта Нарспи куҫӗсене хура тӗслӗ икӗ шӑрҫапа танлаштарнӑ. Танлаштарусенче «пек», «евӗрлӗ» сӑмахсемпе анлӑ усӑ кураҫҫӗ.

– Ҫак сӑвӑра танлаштарусене тупар-ха. (Шур юр пек шур чаршав; ҫул ула кушак пек ула; сукмак хур-акӑш ҫулӗ пек.)

– Вӗсемпе автор мӗн тӗллевпе усӑ курнӑ? (Калас тенине витӗмлӗрех, курӑмлӑрах тӑвас тенӗ. Чаршав шурӑ ҫеҫ мар, шур юр пек; ула кушак евӗр ҫул курӑмлӑрах, асра лайӑхрах юлать. Хур-акӑш ҫулӗ ҫӗрлехи тӳпере питех те уҫӑмлӑ, унпа танлаштарни уй урлӑ тӑсӑлакан сукмак пит аван палӑрать тениех пулать.)

**3.** Стильпе чĕлхе тишкерĕвĕ.

– «Ула» сăмахăн синонимĕсене тупар-ха. (Чăпар, хура-шурă.)

– Çула шăпах ула кушакпа танлаштарни вырăнлăрах пулнине ăнлантарса парăр. (Кушак хура тата шурă, хăмăр тата сарă тĕслĕ пулать. Хура кушакпа çуллахи çула, шуррипе хĕллехине çеç танлаштарма пулать пулĕ. Çуркуннехи çул вăл ни шурă мар, ни хура мар. Поэт куçĕ çакна питĕ витĕр курма пултарнă.)

– Хăш сăмахсем çут çанталăка чĕрĕ пек ӳкерсе кăтартма пулăшаççĕ? Мĕншĕн çапла шутлатăр? (Хĕвел пайăркисем пирки каскăн тенĕ. «Каскăн» сăмах чĕрĕ чун пурнăçлакан ĕçпе тӳрремĕнех çыхăннă. Каскăн така, каскăн вăкăр тетпĕр. «Каскăн» сăмах чарусăр, чарса та чарăнман чĕр чуна пĕлтерет. Хĕвел пайăркисене те нимпе те тытса чараймăн ĕнтĕ.

– Йăлăнтармăш çанталăк тенĕ. (Ирхинепе каçхине çанталăк сивĕрех, кăнтарла ăшăтать. Ку та сăвва чĕрĕрех тăвать. Сывлăш температури хытă вылять. Тумтире те кун каçиччен пач хĕллехи е пач çуллахи тăхăнса çӳреме хĕнрех. Хĕллехи тумтир пăчăхтарса ярать, çуллахине тăхăнас – сивĕрех пек. Çапла вара çанталăк чăнласах йăлăнтармăш пулса тухать.)

**4.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– «Эп пĕчĕк аслăк тăрринчен мĕнпур çут тĕнчене куратăп» тенине мĕнле ăнланатăр? (Автор (лирика геройĕ) çут çанталăка аслăк тăрринчен сăнать. Аслăк уншăн чи çӳллĕ вырăн пулса тăрать. Йĕритавра анлă уй-хир сарăлса выртать. Çакă уншăн хальлĕхе пĕтĕм çут тĕнче пулса тăрать.

– Сăвăра поэт мĕнле шухăш каласшăн? (Çуркуннепе тĕнче вăранать. Хĕвел кунран кун хĕрӳрех те хĕрӳрех. Поэт аслăк çине хăпарса тăнă та мĕнпур таврана сăнать. Унăн çут çанталăк çĕнĕрен чĕрĕлнине кура тăркач çĕнĕ ĕмĕтсем çуралаççĕ. Хайне вăл пĕтĕм тĕнчен пĕр пайĕ пек туять.)

**5.** Л. Смолинан «Çуркунне пуçланать» сăввипе паллашни. (Кашни ача пĕрер строфан сасăпа вуласа парать.)

**6.** Стильпе чĕлхе тишкерĕвĕ.

– Хăш сăмахсем сăвва чĕрĕлĕх кӳреççĕ? Мĕншĕн? *(Çепĕç çил.* – Капла калани çил лăскамалла вĕрнине мар, ачашшăн-ачашшăн ӳте, пите сĕртĕннине пĕлтерет. Сивĕ мар, ытла ăшă та мар – вăхăтлă. Чуна савăнтаракан çил тесе каламалла.

*Юр йăшать.* – Юр чĕрĕ япала мар. Йăшать тени те вырăнлă мар пек. Хĕвел вăйлăран та вăйлăрах хĕртнĕ пирки юр пĕрчисем

хушшинчи ҫыпҫăну майĕпен ҫухалса пырать, ҫавна пула юр тарăнăшĕ те чакнăҫем чакса пырать.

*Хĕл Мучи* – юмахри сăнар. Сивве Хĕл Мучи тенĕ. Сивви чаксах пырать, мĕншĕн тесен хĕвелĕ ҫӳлерех те ҫӳлерех хăпарса пырать. Ҫапла вара кунран кун ăшăрах та ăшăрах.

*Тавралăх ыйхăран вăранать* тени те ӳкерчĕке чĕрĕ тăвать. Тавралăх чĕрĕ мар вĕт вăранма. Этем, чĕр чун ҫывăрать, кайран вăранма пултарать. Автор кунта ҫут ҫанталăк хĕлле ҫывăрнă пек ăнланса ҫуркунне ăна вăратнă пек шутлать.

*Ват вăрман*. – «Ватă» сăмах та чĕрĕ чунсене пĕлтерекенскер.

Вăрман ватă тени йывăҫсем вун-вун ҫул хушши ӳссе ҫӳллĕ-ҫӳллĕ пулнине, ҫавна пула вăрманĕ те капмар та ҫӳллĕ йывăҫсемлĕ пулнине пĕлтерет.

*Кайăксем хавас*. Вĕсем чĕрĕ чунсем-ха ĕнтĕ. Анчах та савăнни-хурланни этем туйăмĕсен тĕнчинчен. Хавас кайăк тени поэтесса кайăксене те ҫынсем пекех савăнма пултараҫҫĕ тесе туйнине пĕлтерет. Тен, чăнах та, кайăксем те хавасланма пĕлеҫҫĕ?

**7.** Танлаштарни.

– Кашни этем тĕнче ҫине хăй куҫĕпе пăхать, хăйле ăнланать. Кашни ӳкерчĕк, кашни сăнлăх хăйне евĕрлĕ туйăмсем ҫуратать. Сăвăсене танлаштарса мĕн калама пулать? Хăшĕ ытларах кăмăла кайрĕ? Мĕн пирки? Сăвăсен авторĕсем мĕнлерехскерсем? (Н. Исмуков пĕрремĕш сăввин авторĕ, иккĕмĕшĕн – Л. Смолина. Н. Исмукова ҫурхи тĕнче ҫине сăнаса пăхни философла пĕтĕмлетӳсем патне сулăнтарать. Л. Смолина ҫут ҫанталăк чĕрĕлнине кура ачалла савăнать. Пĕтĕм тĕнчепе пĕрле хавасланать вăл. Поэтесса хăйне тĕнчерен уйăрмасть. Ун поэзийĕн никĕсĕнче – тĕнче чĕрĕлĕхĕнчен тĕлĕнни. Вăл кĕске предложенисенех пысăк шухăшсем кĕртме ăста, унăн кашни сăмахĕ ӳкерчĕкле сăнлăхсен никĕсĕ пулса тăрать. Поэтесса чĕлхи сĕтеклĕ, сăнарĕсем уҫăмлă та нумайлăха асра юлаҫҫĕ.)

**8.** Киле ĕҫ пани. Икĕ сăвăран пĕрне пăхмасăр калама вĕренмелле; ĕҫ тетрачĕпе ĕҫлени. (35–37-мĕш с.)

## 51-мĕш урок

**Урок теми:** Н. Некрасов. «Ешĕл шав». Уйăп Мишши. «Ҫурхи вăйă».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– лирикăллă хайлавсен уйрăмлăхĕсем ҫинчен мĕн пĕлнине тарăнлатасси;

– сăвăсене тишкерсе хак пама хăнăхтарасси;

– сăвăсене ăнланса, интонаци тĕрĕс туса, сасăсене уçăмлă каласа вулама хăнăхтарасси;

– çут çанталăка сăнама, унăн илемне асăрхаса ăса хывма, унпа киленме хавхалантарасси.

## Урок юхăмĕ

**1.** Н. Некрасовăн «Ешĕл шав» сăввипе паллашни. (Малтан учитель вулать, иккĕмĕш хутĕнче – ачасем ушкăнпа черетленсе, пĕрер строфан, сасăпа.)

**2.** Уйăп Мишшин «Çурхи вăйă» сăввипе паллашни. (Малтан учитель вулать, иккĕмĕш хутĕнче – ачасем ушкăнпа черетленсе, пĕрер строфан, сасăпа.)

**3.** Сăвăсене танлаштарса тишкерни.

Вĕрентекен:

– Ачасем, кашни сăввах вăл е ку вичене пăхăнса çыраççĕ. Вуласа тухнă сăвăсем те пĕрешкел маррине асăрхарăмăр. Чи малтанах вĕсен янăравĕ урăхларах пулни куç кĕрет. Йĕркесенчи сыпăксен шучĕ те, вĕсенче хăш вырăна пусăм ӳкесси те пĕр мар. Танлаштарса пăхар-ха акă кашни сăвăра малтанхи 4 йĕркери сыпăксен шутне.

*Н. Некрасов.* «Ешĕл шав».

1-мĕш йĕрке – 8 сыпăк.

2-мĕш йĕрке – 8 сыпăк.

3-мĕш йĕрке – 9 сыпăк.

4-мĕш йĕрке – 9 сыпăк.

*Уйăп Мишши.* «Çурхи вăйă».

1-мĕш йĕрке – 8 сыпăк.

2-мĕш йĕрке – 6 сыпăк.

3-мĕш йĕрке – 8 сыпăк.

4-мĕш йĕрке – 6 сыпăк.

Вĕрентекен:

– Йĕркесенчи сыпăксен шутне тытса пынипе кăна мар, хăш сăмахсене суйласа илессипе те, сăмахсемпе еплерех усă курассипе те кашни поэт хăйне евĕрлĕ.

**4.** Танлаштаруллă стиль тишкерĕвĕ.

– Хăш сăвăра малтанхи 4 йĕркере пĕр сăмахах темиçе хут тĕл пулать? Хăшĕнче пĕр сăмах икĕ хут тĕл пулмасть? («Ешĕл шавра» «шав» сăмах 3 хут, çав шутра «ем-ешĕл шав» тени 2 хут тĕл пулать. «Çурхи вăйăра» вара пĕр сăмах икĕ хут тĕл пулни çук.)

Вĕрентекен:

– Тĕрĕс. «Ешĕл шавра» сăмаха темиçе хут калани вырăнсем татах пур. Палăртăр-ха вĕсене.

Ачасем ĕçлеççĕ.

*Шавлать* тин шăтнă курăк,
*Шавлать* çўл вĕрене…

Тавра вĕсен йалт *çĕнĕлĕх,*
Çурхи хаваслă *çĕнĕлĕх*…

Сăвă пуçланма та, вĕçленме те пĕр йĕркесемпех вĕçленет:

Килет-чашлать ем-ешĕл шав,
Ем-ешĕл шав, çурхи чĕр шав!

– Сăмахсене икĕ хут калани мĕн тума кирлĕ пулнă-ши? ( Калас тенине витĕмлĕрех тума кирлĕ пулнă. Икĕ хут калани тата лайăхрах асра юлать. Поэт çакна хăпартланса, эсир те асăрхăр-ха тесе хистесех калать пек.)

– Сăвăсенче кăшкăру паллисемпе анлă усă кураççĕ. Ку паллă кăшкăрарах, палăртарах вуламаллине пĕлтерет. Авторшăн çак паллăллă предложени уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Пĕрремĕш сăвă авторĕ – вырăс поэчĕ Николай Некрасов, иккĕмĕшĕн – паллă чăваш поэчĕ Уйăп Мишши. Кашни поэт хăй сăввинче мĕне маларах курать? (Н. Некрасов йывăç-курăк хавасланнине мала хунă, Уйăп Мишшишĕн – ачасем савăнни малта.)

– Çапла вара, кашни сăввăн темине асăнар. («Ешĕл шав» теми – ўсен-тăран тĕнчи вăранни; «Çурхи вăйă» теми – ачасем çуркунне çитнишĕн савăнни.)

– Тĕп шухăшĕ мĕнле? (Çуркунне çитнишĕн пурте савăнаççĕ, пĕтĕм тĕнче хаваслăхпа тулнă.)

**5.** Пĕтĕмлетни. (Сăвă çырас ĕçĕн хăйĕн йĕрки-виçи пур. Кашни автор тĕнчене хăйĕн пек курать. Сăмахран, çуркунне çинчен çĕршер, пиншер сăвă çырнă. Теми те, тĕп шухăшĕ те (çуркунне çитнишĕн савăнни, хавасланни) пĕрех пулсан та, вĕсем пурте урăхларах, пĕрпĕринчен мĕнпе те пулин уйрăлса тăраççĕ. Çакă ĕнтĕ – кашни поэт тĕнчене хăй еверлĕ курни – чи пахи, тĕлĕнтерекенни.)

**6.** Учебникри ыйтусемпе ĕçлени. (167–168-мĕш с.)

**7.** Киле ĕç пани. «Çурхи хаваслăх» хайлав çырмалла. Вариант: 2 сăвăран пĕрне пăхмасăр калама вĕренмелле. Вариант: Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (37–38-мĕш с.)

## 52-мĕш урок

**Урок теми:** Мĕтри Кипек. «Çурхи вăрманта».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– текстăн жанр уйрăмлăхĕсене чухлама вĕрентесси;

– план тăвас хăнăхусене аталантарасси;

– ăшри вулав хăнăхăвĕсене ӳстересси;

– текстра уйрăм сыпăксемпе эпизодсене, сăмах майлашăвĕсене, сăмахсене тупма хăнăхтарасси;

– суйлавлă каласа пару хăнăхăвĕсене тарăнлатасси;

– çут çанталăкри илеме асăрхама, унпа киленме хăнăхтарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Текстпа паллашни. (Çуркунне çитрĕ! Çуркунне çитрĕ! – хавасланса ӳкрĕ ача-пăча» таран ăшра, малалла ушкăнпа черетленсе сасăпа вулаççĕ.)

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Текст мĕнле кăмăл çуратрĕ? (Ачасен хуравĕ.)

– Ĕçсем хăш уйăхсенче пулса иртеççĕ? ( Пуш (март), ака (апрель) уйăхĕсенче.)

–Текстра хăш чĕр чунсемпе ӳсен-тăрансене асăннă? Тупса вулăр. (Чĕр чунсем: шăнкăрчсем, хура кураксем, вĕлтрен тăррисем, пыл хурчĕсем, тĕкĕлтурасем, чĕрĕп, тилĕ, калта, кăткăсем; ӳсен-тăрансем: çеçпĕл, шур пуç, серте.)

– Ӳсен-тăрансемпе чĕр чунсене сăнланă чух мĕнле сăмахсемпе усă курнă? Тупса вулăр. («Тин çеç çулçă кăларнă туратсем», «çĕр тĕрлĕ чĕвĕлти кайăк», «çунатлă хăнасем», «тутлă шăршă саракан çĕмĕрт çеçки», «йĕплĕ тумтир тăхăннă чĕрĕп», «йăптăх тăкакан тилĕ», «йăрă калта», «кăткăсен туслă йышĕ», «нумай çунатлă капăр çулçăсемлĕ серте».)

– Уçăмлатмасăр хăварнă ӳсен-тăрансемпе чĕр чунсен ячĕсене хăвăр тĕллĕн уçăмлатăр та тепĕр хут вуласа пăхăр. Мĕн улшăнчĕ? (Пуплев пĕр тикĕслĕхĕ улшăнчĕ, интонаци такăнчĕ, стиль чухăнланчĕ.)

Вĕрентекен:

– Ачасем, литература хайлавĕсенче кашни япаланах тĕп-тĕрĕс, йышăннă калăпран ним пăрăнмасăр çырас-ха тесе тăрăшмаççĕ. Пуплев пĕр тикĕслĕхĕпе интонаци еккине тата стиль пуянлăхне маларах хураççĕ.

**3.** Калав тытăмне тишкерни.

– Ку хайлава миçе пĕлтерĕшлĕ пая пайлама пулать? Вĕсене ят парăр. (1. Пуш уйăхĕнче. 2. Ака уйăхĕн пуçламăшĕнче. 3. Ака уйăхĕн виççĕмĕш эрнинче. 4. Вăрман чĕр чунĕсем. 5. Сертере.)

– Асра юлнă пайăн содержанине каласа парăр. (Ачасен хуравĕ.)

– Ку пайсен вырăнĕсене ылмаштарса лартма пулать-и е çук? Мĕншĕн? (Пайсен вырăнĕсене ылмаштарма çук, мĕншĕн тесен çут

çанталăк аталанăвĕ шăпах çак йĕркепе пулса пырать.)

– Ку хайлав тăрăх тĕрлĕ ўкерчĕк тума пулать. Пĕр сăмахлă ўкерчĕк тăвăр та каласа парăр. (Ачасен хуравĕ.)

**4.** Стильпе чĕлхе тишкерĕвĕ.

– Поэтсем кăна мар, калав-повесть çыракансем те çут çанталăка чĕрĕ пек сăнлама юратаççĕ. Вĕсем асран кайми сăнлăхсемпе сăнарсем тума ăста. Ку хайлаври хăш сăнлăхсем хăйсен чĕрĕлĕхĕпе асра юлчĕç? (Çĕр мучи пĕр айăк çинчен тепĕр айăк çине çаврăнса выртни; сарă хĕвел çутă йĕпписемпе пăр сухаллă Хĕл Мучие çурçĕр еннелле хăвалани; çуркунне чĕвĕлтетсе персе çитни; сивĕ хĕл йĕре-йĕре çурçĕрелле тарни т.ыт.те.)

– Кăшкăру паллисем çыравçă кăмăлне мĕн енчен палăртаççĕ? (Çыравçă çуркунне çитнишĕн тата вăрманта ырă пулнишĕн уйрăмах савăнать.)

– Хăш сăмахсем çут çанталăка чĕрĕ тăваççĕ? (Тахçантанпа кĕттерсе ывăннă пуш уйăхĕ çитрĕ; шур çитти айĕнчи тўлеккĕн тĕлĕрекен Çĕр мучи; сарă хĕвелĕн çутă йĕпписем; пăр сухаллă Хĕл Мучи; сивĕ хĕл кăнтăрла каялла чакнă пек пулать те каçпа тепĕр хут таврăнса шăнтса пăрахать; çуркунне кайăк-кĕшĕкпе пĕрле савăнăçлăн чĕвĕлтетсе персе çитрĕ; уйсемпе çеçен хирсем шурă пĕркенчĕкне сирсе симĕс тум тăхăнаççĕ; хĕл чакĕ-чакĕ те тепĕр хут таврăнма тапаçланса пăхĕ; хĕл йĕре-йĕрех çурçĕр еннелле тарчĕ; аслати кĕмсĕртетрĕ; тĕнче симĕс тумтир тăхăнчĕ...)

**5.** Ăнлантарни (интерпретаци.)

– Ку калав авторĕ – паллă чăваш çыравçи Мĕтри Кипек. «Кайăк тусĕ» кĕнекинче вăл çут çанталăк çинчен питĕ пĕлсе те юратса çырать. Автор ку калавпа мĕн каласшăн? (Ачасен хуравĕ.)

Вĕрентекен:

– Çуркунне пĕтĕм тĕнче хĕл ыйхинчен вăранса çĕнĕрен çуралса тăрать, ешерме пуçлать. Çакă тĕлĕнмелле мар-и-ха? Сивĕ хĕл кунĕсенче çуркунне хăçан çитĕ-ши тесе тĕмсĕлни кашниннех пулнă ĕнтĕ. Хĕвеле пĕтĕм чĕрĕ чунпа ўсен-тăранăн амăшĕ тесе каламалла. Хĕвел ăшшине пула юр айĕнче вăхăтлăха вилнĕ пек пулса выртнă çут çанталăк çĕнĕрен пурăнма пуçлать. Мĕнпур тĕнче йăшăлтатма тытăнать. Уйрăмах ачасем савăнаççĕ: çуркунне пулсан кĕçех каникул та çитет вĕт. Кăçалхи класа хыçа хăварса тепĕр класа куçас вăхăт çитет…

**6.** Киле ĕç пани. Учебникри 171–172-мĕш страницăсенчи ыйтусене хуравлама хатĕрленни.

# 53-мӗш урок

**Урок теми:** Н. Соколов-Микитов. «Вӑрманта».

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

– геройсем хӑйсене кӑмӑл-сипет тӗлӗшӗнчен мӗнле туйнине ӑнланма хӑнӑхтарасси;

– хайлава сӳтсе явнӑ чухне диалога хутшӑнса калаҫас хӑнӑхусене аталантарасси;

– ӑнланса, палӑртуллӑ вулас хӑнӑхусене ҫивӗчлетесси;

– текст содержанийӗпе тытӑмне тишкерес хӑнӑхусене тарӑнлатасси;

– сут ҫанталӑка сӑнама, ӑна юратма хавхалантарасси.

**У р о к ю х ӑ м ӗ**

**1.** Текста ӑшра вулани.

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Калавра хӑш чӗр чунсемпе ӳсен-тӑрансем ҫинчен каланӑ? (Хура кураксем, шӑнкӑрчсем, мулкач, пӑши, упа ами, упа ҫурисем, кӑткӑсем, йывӑҫ папкисем, йӑмра тураттисем, ҫулҫӑсем, кӑткӑсем, ҫеҫпӗл, лӗпӗш.)

– Чӗрӗ мар сут ҫанталӑкри хӑш япаласене асӑннӑ? Вӗсем ҫинчен мӗн каланӑ? (Хӗвел хирсене, вӑрмансене ытларах та ытларах хӗртет. Уйра ҫулсем хуралчӗҫ, пӗвере пӑр кӑвакарчӗ. Тӳпемсенчен шывсем шӑнкӑртатса юхса анчӗҫ. Йывӑҫсем ҫинчи сухӑр шӑршиллӗ папкасем кӳпчесе кайрӗҫ. Хӗл ыйхинчен вӑраннӑ ҫӗр. Шарласа юхакан шыв. Шыв ӑшӑнса, хитреленсе пырать. Хӗвел питтинчи йӑмра тураттисем ҫинче черчен пурҫӑн ҫулҫӑсем ҫуралчӗҫ. Ҫеҫпӗл ҫеҫкене ларчӗ.)

– Умӗнхи уроксенче ҫуркунне ҫинчен ҫырнӑ хайлавсемпе танлаштарсан мӗнле уйрӑмлӑх асӑрхатӑн? (Кунта глаголсем нумай. Тӗрӗс. Глаголсем вӗсем ӗҫ тунине пӗлтерекен сӑмахсем. Ку сӑмахсем вара калав ҫивӗчлӗхне ӳстерсе яраҫҫӗ. Сут ҫанталӑк ӳкерчӗкӗсем хӑвӑрт ылмашӑнаҫҫӗ. Ҫакна пула туйӑм ҫивӗчлӗхӗ кӑштах чакать.)

– Хайлав тӑрӑх мӗнле-мӗнле ӳкерчӗк тума пулать? Пӗр сӑмахлӑ ӳкерчӗк тӑвӑр. (Ачасен хуравӗ.)

**3.** Текст тытӑмне тишкерни.

– Ку хайлава миҫе пӗлтерӗшлӗ пая уйӑрма пулать? Вӗсене ят парӑр. (1. Уй-хирте. 2. Ялта. 3. Вӑрманта.)

– Асра юлаканни хӑшӗ? Мӗншӗн? (Асра юлаканни «Вӑрманта» сыпӑк. Ӑна анлӑнрах, туллинрех ҫырса кӑтартнӑ. Ҫавӑнпа та вӑл асра ҫирӗпрех вырнаҫать.)

**4.** Стильпе чĕлхе тишкерĕвĕ.

– Çак сăнлăхсене мĕнле ăнланатăр?

*1) Пĕвере пăр кăвакарчĕ.* – Хĕлле пăр, шыв тăрă пулнине кура, хура тĕслĕччĕ. Халĕ, ăшăнса пынăçемĕн, пулăсемпе шапасем, раксем хĕл ыйхинчен вăранса пыраççĕ, хастартарах та хаваслăрах ишсе çӳреме пуçлаççĕ, юшкăна пăтратаççĕ. Çавна пула пăр тĕсĕ улшăнать. Тĕрĕссипе пăрĕ мар – шывне кăвак тĕс çапать.

*2) Сухăр шăршиллĕ папкасем.* – Хĕвел ăшшине пула йывăç хуппи айĕнче сĕткен куçма пуçлать. Ку сĕткен папкасене вăратать. Вĕсем çулçă кăларма хатĕрленеççĕ.

– Çакна мĕнле ăнланатăр? «Çуркунне шав ăшăнса, хитреленсе пырать.» (Çуркунне ăшăтнăçемĕн ăшăтнă пирки кунсерен çĕнĕрен те çĕнĕ йывăç-курăк шăтать, çулçă çумне çулçă кăларать, çӳлелле те çӳлелле ӳсет. Мĕн чухлĕ ăшăрах, çавăн чухлĕ ешĕлрех те хитререх пулса пырать тавралăх.)

– Пĕрремĕш тата юлашки предложенисене вулăр. («Хĕвел хирсене, вăрмансене ытларах та ытларах хĕртет.» – «Ун (çеçпĕл) çийĕн пĕрремĕш лĕпĕш вĕссе çĕкленчĕ».) Хайлавра çырса кăтартни хăш тапхăрта пулса иртет? (Март пуçламăшĕ – апрель пуçламăшĕ.)

– Кăткăсем çинчен пĕр предложении çырнипех çырлахнă, упа çурисем çинчен вара 6 предложени таран çырса кайнă. Кураксем çинчен те, ачасем çинчен те, папкасем çинчен те çавах, пĕр предложенипех çырлахнă. Мулкачпа пăши çинчен 4 предложени «тăкакланă». Çакна мĕнле ăнлантарма пулать? (Ку вăл автор тимлĕхĕпе çыхăннă. Нумайрах пăхса тăнă – нумайрах сăмах тăкакланă, тимлĕхе сахалрах уйăрнă – сăмахĕ те сахал. Куçа тӳрех тăрăнаканни, кăсăклăраххи – упа çурисем. Вĕсем çине нумайрах пăхса тăнă вăл. Кăткăсем çинче унăн куçĕ нумаях чарăнса тăман, пăхнă та иртсе кайнă. Ытти япаласем çинчен те çавнах каламалла.)

**5.** Ăнлантарни (интерпретаци.)

– Ку калав авторĕ – паллă вырăс çыравçи Н. Соколов-Микитов. Ку калавпа вăл мĕн пĕлтересшĕн? (Ку автор та çуркунне сут çанталăкра пулса иртекен улшăнусене кура хăй тĕлĕннине пĕлтерет. Пĕтĕм тĕнче чĕрĕлет. Кунран кун ытларах та ытларах ăшăтать. Тавралăх илемлĕрех те илемлĕрех пулса пырать. Çакна вăл асăрханă та пире каласа кăтартнă. Мĕтри Кипек калавĕнчи пекех, ку калав тытăмĕн схеми те çакнашкал. Калавçă сăмахне аякран, çуркуннен малтанхи паллисенчен, пуçласа ярать те вăрмана çитет, вăрман пурнăçĕ çинчен тĕплĕнрех темиçе сăнлăх илсе кăтартать.)

**6.** Киле ĕç пани. Учебникри 173–174-мĕш страницăсенчи ыйтусене хуравлама хатĕрленни. Вариант: ĕç тетрачĕпе ĕçлени (38–39-мĕш с.)

## 54-мĕш урок

**Урок теми:** Г. Снегирев. «Малтанхи хĕвел».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– шухăшлавăн танлаштару, пĕрлештерӳ, уйăру операцийĕсене çивĕчлетесси;

– палăртуллă вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси;

– текст содержанине туллин каласа парас хăнăхусене аталантарасси;

– диалога (ĕçлĕ калаçăва) хутшăнма хăнăхтарасси;

– çут çанталăка юратма хавхалантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Пĕчĕкçĕ калавсемпе паллашни, тата содержанине туллин каласа пани. (Пĕрер ача кашни калава сасăпа вуласа тухать те унăн содержанине туллин каласа парать. Вариант: ăшра вуламалла, кам маларах вуласа тухать, çав содержанине каласа парать.)

**2.** Калавсен ярăмĕн содержанине тишкерни.

– Упа çурисем хăш уйăхра çуралаççĕ? (Кăрлач (январь) уйăхĕнче.)

– Кашни чĕр чунĕ мĕнпе тăранса пурăннине калăр. (Упа çури – пылпа, çырлапа, кăткăпа; тилĕ çурисем – шăшипе, калтапа; мулкач çурисем – сĕтпе; пакша çурисем – мăйăрпа, йĕкелпе, кăмпапа.)

– Хăш чĕр чун уçланкăра пурăнать? (Мулкач çури.)

– Хăш чĕр чун кукăр ураллă, пысăк пуçлă? (Кашкăр çури.)

**3.** Калавсен ярăмĕн тытăмне тишкерни.

– Хăш чĕр чунсем çинчен вуларăмăр? (Ачасен хуравĕ.)

– Ку чĕр чунсене мĕн пĕрлештерекенни, мĕн уйăраканни пур? (Пĕрлештерекенни – вĕсем пурте вăрманта пурăнаççĕ, вĕсене пурне те тискер чĕр чунсем (вăрман кайăкĕ) теççĕ. Уйăраканни – мулкачсăр пуçне пурте йăвара пурăнаççĕ; упана çулла йăва кирлех те мар; кашкăр пысăк чĕр чунсене тытса çурса тăранса пурăнать, упа та выçă чухне ĕнесене, лăшисене, ытти чĕр чунсене те тытса çурма пултарать, тилĕ шăлĕ айне мĕн лекет, çавна тытса çисе пурăнать, мулкачпа пакшана вăр-вартарах пулмасан çӳлерех асăннисем хăйсем тытса çиме пултараççĕ (вĕсем ӳсен-тăранпа тăранса пурăнаççĕ,)

– Сана хăшĕ килĕшрĕ? Ун çинчен каласа пар. Автор каламасăр хăварнине те хушма пултаратăн. (Ачасен хуравĕ.)

– Калавсене вырӑнӗсемпе ылмаштарма юрать-и? (Юрать. Ним те пӑсӑлмасть.)

**4.** Ку чӗр чунсем ҫинчен чӑвашсем мӗнле сӑмахсемпе калаҫҫӗ?

*Упа* – вӑрманта пурӑнакан чи вӑйлӑ чӗр чун, анчах та вӑл тӑмсайрах. Юмахсенче упа час-часах кашкӑр кулли пулать. «Упа-упа утаман, ик урапа утакан» теҫҫӗ. «Урлӑ ура утаман» тенине те илтетӗн.

*Кашкӑр* – вӑйлӑ, хаяр, хӑрушӑ тискер чӗр чун. Чӑвашсем кашкӑра хисеплеҫҫӗ. Харсӑр каччӑсене кашкӑрпа танлаштараҫҫӗ. Кашкӑр хӑй умне лартнӑ тӗллеве пурнӑҫлассишӗн пурнӑҫне те хӗрхенмест.

*Тилӗ* – чее ҫынсене тилӗпе танлаштараҫҫӗ. Юмахсенче Тилӗ тус упана та, кашкӑра та улталать.

*Мулкач* – хӑравҫӑ чӗр чун. Мулкач пек хӑравҫӑ теҫҫӗ. Унӑн ирӗксӗрех хӑрама тивет, ҫӳлерех асӑннисем пурте унӑн тӑшманӗсемҫке.

*Пакша* – йывӑҫ хӑвӑлӗнче пурӑнаканскер. Ҫулла кӑмпа типӗтет, мӑйӑр хатӗрлесе хурать. Йӑрӑ чӗр чун.

– Ку чӗр чунсем ҫинчен тата мӗн каланине илтнӗ? (Ачасен хуравӗ.)

**5.** Ӑнлантарни (интерпретаци).

– Калавсен ярӑмӗн ятне ӑнлантарӑр. (Чӗр чунсенчен ытларахӑшӗ ҫуркунне ҫуралать. Кӗркуннеччен ӳссе ҫитсе хӑйсем тӗллӗнех хӗл касма хатӗрленсе ҫитмелле вӗсен. Ҫавӑнпа та малтанхи хӗвел тесе ят панӑ.)

– Ҫыравҫӑ ку ярӑма мӗншӗн ҫырнӑ? (Автор вулакансене пирӗн вӑрмансенче пурӑнакан тӗп чӗр чунсемпе паллаштарас-ха тесе ҫырнӑ. Мӗн те пулин ҫӗннине пӗлтересси авторӑн тӗп тӗллевӗ пулнӑ.)

**6.** Учебникри 176–177-мӗш страницӑсенчи ыйтусене хуравлани.

**7.** Киле ӗҫ пани. Пӗр-пӗр чӗр чун «пепки» ҫинчен пӗчӗкҫӗ хайлав ӑсласа ҫыр.

## 55-мӗш урок

**Урок темиː** К. Иванов. «Ҫуркунне ҫитсен».

**Урок тӗллевӗпе задачисемː**

– эпитет ҫинчен мӗн пӗлнине ҫирӗплетесси;

– сӑвва туйӑмсене палӑртса, интонацие тӗрӗс туса, сасӑсене уҫӑмлӑ каласа вулас хӑнӑхусене аталантарасси;

– лирикăллă сăвăсене тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене çивĕчлетесси;

– çут çанталăка сăнама, çут çанталăкри илеме асăрхама, унпа киленме хавхалантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Сăвăпа паллашни. (Малтан учитель сасăпа вулать. Унтан ачасем ушкăнпа черетленсе сасăпа учителе евĕрлесе вулаççĕ.)

**2.** Сăвă содержанийĕпе тытăмне тишкерни.

– Сăвăра çулталăкри хăш уйăх çинчен çырнă? (Апрель çинчен.)

– Ку сăвă мĕнле туйăмсем çуратрĕ? (Ачасен хуравĕ.)

– Сăвă йĕркисенчи сыпăксен шутне калăр. (1-мĕш йĕрке – 7 сыпăк, 2 йĕрке – 7 сыпăк, 3 йĕрке – 7 сыпăк, 4 йĕрке – 7 сыпăк.)

Вĕрентекен:

– Ку йĕркесем К. Иванов çырнă «Нарспи» поэмăран. Чăваш халăх сăмахлăхĕнче те кашни йĕркере 7 сыпăклă юрăсем нумай. Тĕслĕхрен:

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать, *7 сыпăк*
Шыв юхать те, чул юлать. *7 сыпăк*
Шухăшлăр-ха, тăвансем – *7 сыпăк*
Ĕмĕр иртет, кун юлать. *7 сыпăк*

– Сăвăра мĕн-мĕн çинчен çырнă? Мĕн çырнă? (Хĕл куççулĕ юхса кайрĕ, ача-пăча чупса çÿрет, çуркунне килчĕ, хĕвел савать, вăрман чĕрĕлет, çесен хир ешерет, чечексен шăрши сарăлать, кайăксен юрри янăрать, тăри юрри илтĕнет, путек-сурăх сиккелет.)

Вĕрентекен:

Ку сăмах çаврăнăшĕсем çут çанталăка сăнарлă та чĕррĕн ÿкерсе кăтартма май параççĕ.

– Малтанхи икĕ йĕркесĕр ыттисем пулма пултарайманнине çирĕплетсе парăр. (Ку йĕркесем çуркунне пуçламăшне сăнлаççĕ. Ытти йĕркесем çуркунне пуçланнă хыççăн черетленсе сыпăнса пыракан ĕçсене кăтартаççĕ.Пуçламăшне вĕçне кайса лартма çук.)

– Сăввăн кашни çаврăмĕ тăрăхах пĕрер сăрăллă ÿкерчĕк тума пулать. Пĕр çаврăмне суйласа илĕр те сăрăллă мĕнле ÿкерчĕк тума май пурри çинчен каласа парăр. (Ачасен хуравĕ.)

Вĕрентекен:

– Сăвăçсем калас тенине хитререх, витĕмлĕрех тăвас тесе япалан пĕр-пĕр яланхи витĕмлĕ паллине пĕлтерекен сăмахпа усă кураççĕ. Унашкал сăмахсене эпитет теççĕ. Сăмахран, *сарă хĕр, ылтăн çын.* Эпитетсем тепĕр лайăх пĕлекен япала паллисем. Хĕр сарă тĕслĕ пулмасть (сарă тĕслĕ çулçă пулать). Ылтăн тĕслĕ çын пулмасть

(ылтăн тĕслĕ хĕрес пулать.)

– Сăвăри эпитетсене тупăр, хăйсем ăнлантаракан сăмахсемпе пĕрле çырса илĕр. *(Хĕл куççулĕ, ырă çуркунне, ешĕл тумтир, (чечексен) ырă шăрши.)*

**3.** Учебникри 178-мĕш страницăри ыйтусене хуравлани.

**4.** Киле ĕç пани. Сăвва пăхмасăр калама вĕренни. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (39–40-мĕш с.)

## 56-мĕш урок

**Урок теми:** Н.Матвеев. «Таврана илем кӳреççĕ». А.Артемьев. «Çурхи кун».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ансат ăслăх хайлавĕн тĕп уйрăмлăхĕсене вĕрентесси;

– хайлава пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрас хăнăхусене аталантарасси;

– текст тăрăх лартакан ыйтусене хуравлас хăнăхусене çивĕчлетесси;

– логикăпа грамматика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс калаçу ăслас хăнăхусене тарăнлатасси;

– çут çанталăка юратма хавхалантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** «Таврана илем кӳреççĕ» текста сасăпа черетленсе вулани.

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Хайлавра хăш-хăш чĕр чунсене асăннă? (Кайăк кăвакал, тăрисем, вĕлтрен тăрри, шурă пăрчăкан, шыв чăххисем, чĕкеçсем, хурт-кăпшанкă, шăна-пăван, шăпчăк, хăлат, хурчка.)

– Кашни кайăк хăйĕн йăвине ăçта çавăрать? (Кайăк кăвакалсем – кӳлĕсемпе юхан шывсем çывăхĕнче вăрăм ӳсекен куракăсемпе хăвасем таврашĕнче; тăрисем – ана çинчех; шурă пăрчăкан – çыран хĕрринче.)

– Вĕсем йăвине мĕнрен тăваççĕ? (Кайăк кăвакалсем иртнĕ çулхи йăва сыхланса юлнă пулсан ăна тепĕр хут çĕнетеççĕ е юнашарах çĕнĕрен тăваççĕ; шурă пăрчăкан – утă-улăм пĕрчисенчен, çăмран, хĕлĕхрен, ытти япаласенчен, полиэтилен, капрон япаласенчен.)

– Тата хăш кайăк хăй йăвине мĕнрен тунине пĕлетĕн? (Ачасен хуравĕ.)

– Эсир хăвăр кашни кайăк ăçта пурăнни çинчен мĕн пĕлетĕр? Каласа парăр. (Ачасен хуравĕ.)

– Кайăксем мĕнпе тăранса пурăнаççĕ? (Тăрисем – иртнĕ çулхи куракăсемпе тырăсен вăррисемпе, тĕрлĕрен хурт-кăпшанкăпа.)

– Кайăксен шутне ўстерме мĕн-мĕн тумалла? (Наркăмăшлă им-çамсемпе пĕлсе усă курмалла; вăрмансенче выльăха çўреме чăрмалла.)

– Выльăха вăрманта çўретни кайăксене сиен кўнипе мĕнле майпа çыхăннă? (Çăра та тĕммĕн ўсекен йывăçсемлĕ вăрмансенче кайăксене пурăнма ирĕклĕ. Выльăхсем вара çамрăк йывăççен тăррисене татса çиеççĕ, ўсме чараççĕ. Çакăнпа пĕрлех вĕсем вăрманти тăпрана таптаса хытараççĕ. Çапла вара çамрăк йывăçсем ўсме пăрахаççĕ, вăрман сайралать, ватăлса пыма пуçлать, витĕр курăнакан пулать. Ватăлнă вăрмантан кайăксем сивĕнеççĕ.)

– Хăлатпа хурчкана мĕн пирки Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ? (Вĕсен шучĕ çав тери хăвăрт чакнă пирки.)

Вĕрентекен:

– Хĕрлĕ кĕнекене йышĕ пĕтсе ларас хăрушлăх патне çитсе тăнă ўсен-тăрансемпе чĕр чунсене кĕртеççĕ.

– Эсир Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ тата хăш чĕр чунсемпе ўсен-тăрансене пĕлетĕр? (Ачасен хуравĕ.)

**3.** Хайлав тытăмне тишкерни.

– Хайлав планне тăвăр. (Пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрăр.) (1. Юхан шывсем сарăлсан. 2. Пăр кайса пĕтнĕ вăхăтра. 3. Ăшă кунсем пуçлансан. 4. Кайăксем – пирĕн туссем. 5. Кайăксене пулăшмалла.)

– Хайлавăн пĕр пайĕн кĕске содержанине каласа парăр. (Ачасен хуравĕ.)

– Хайлав пайĕсене ылмаштарса лартма пулать-и? Мĕншĕн çапла шутлатăр? (Хайлав пайĕсене вырăнĕсемпе ылмаштарса лартма пулать. Апла тусан та тĕп содержани пăсăлмасть. Ку сăнлавлă хайлав. Сăнлав пайĕсем вара тачă çыхăнмаççĕ.)

**4.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Калав ячĕпе содержанийĕ хушшинчи çыхăнăва ăнлантарăр. (Кайăксем таврана илем кўреççĕ. Вĕсем çĕр çинче пурăнни, вĕсен юрри, вĕсен кĕлетки, тĕкĕсен тĕсĕ питĕ илемлĕ, Çынпа кайăк хушшинчи хутшăнусем те илемлĕ. Кайăк юррисемсĕр пуçне вăл хурт-кăпшанкăсемпе тăранса пурăнни те этемшĕн усăллă. Кайăк юррисĕр пирĕн çут çанталăк пулма та пултараймасть.)

– Автор мĕн каласшăн? (Эпир: ўсен-тăран та, çĕр çинчи мĕнпур чĕр чун тĕнчи, çынсем – пурте пĕр çĕр çинче пурăнатпăр. Ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен этем чи çўллĕ шайра тăракан чĕр чун, çĕр çинче мĕн пуррин патши. Этемĕн чĕр чунсен тĕнчине упраса хăвармалла.)

**5.** Учебникри 181-мĕш страницăри ыйтусемпе ĕçлени.

**6.** «Çурхи кун» сăнлава ăшра вулани.

**7.** Киле ĕç пани. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (40–42-мĕш с.)

## 57-мĕш урок

**Урок теми:** Пĕтĕмлетӳ урокĕ (КВН-урок).

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ăса хывнă пĕлӳсене, ăслайсемпе хăнăхусене çирĕплетесси;

– ушкăнпа ĕçлес, харкам шухăшсене палăртса калаçава хутшăнас хăнăхусене аталантарасси;

– вулавçă пултарулăхне çивĕчлетесси;

– туслăхпа юлташлăх туйăмĕсене тарăнлатасси;

– çут çанталăкри илеме асăрхама, унпа киленме хавхалантарасси.

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** ачасен ӳкерчĕкĕсем; валеçсе памалли карточкăсем.

**Хатĕрлев ĕçĕ:** командăсем маларах ушкăн ятне, девизне, эмблемине шутласа хатĕрлесе хураççĕ.

**У р о к   ю х ă м ĕ**

**1.** Йĕркелӳ саманчĕ.

**2.** Урок темине пĕлтерни.

Вĕрентекен:

– Ачасем, эпир вуласа пĕтернĕ сыпăкăн ячĕ мĕнле? (Çур хаваслăхĕ.) Паян эпир урока КВН выляса ирттеретпĕр. Эсир ушкăнсене уйрăлнă ĕнтĕ. Жюрипе паллаштаратăп. (Жюрире ĕçлеме аслăрах классенче вĕренекенсене, ашшĕ-амăшĕсене, ирĕклĕ учительсене чĕнме юрать.) Çапла вара КВНа пуçлатпăр. (КВН кĕвви янăрать.)

**3.** Конкурссем.

**А.** Командăсем хăйсемпе паллаштараççĕ. (Ячĕ, девизĕ, эмблеми, вĕсен пĕлтерĕшĕ.)

**Ă.** Ăс-хакăла çемĕçтерни.

– Автор ятне калăр. Унăн сăвви çапла пуçланать, çапла вĕçленет:

1) «Килет-чашлать ем-ешĕл шав[…] Ем-ешĕл шав, çурхи чĕр шав». (Н. Некрасов.)

2) «Тулта шавлать хĕвеллĕ çур[…] Шур çилкĕçи те пур». (Уйăп Мишши.)

3) «Хĕвел куçа йăмăхтарать[…] Мĕнпур çут тĕнчене куратăп». (Н. Исмуков.)

**Б.** Капитансен тупăшăвĕ. (Капитансем хăйсем пăхмасăр калама вĕреннĕ сăвва вулаççĕ.)

**В.** Сăвă йĕркисене майлаштарни. (Сăвă йĕркисене çырнă хута хачăпа касса тухнă. Вĕсене йĕркен-йĕркен вырнаçтарса тухмалла.)

**Г.** «Килти ĕç» конкурс. (Килте çуркунне çинчен сăвă çырса килмелле пулнă.)

**Д.** «Ӳкерчĕксем тăрăх чухлăр». (Ачасем тунă ӳкерчĕксемпе усă курмалла.)

**4.** Жюрин пĕтĕмлетӳ сăмахĕ.

**5.** Парнесем пани. Отметкăсем лартни.

**6.** Урока пĕтĕмлетни.

## 58-мĕш урок

**Урок теми:** Н. Ишентей. «Аптраман кăвакалсем».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– калав ячĕпе тĕп шухăшĕ хушшинчи çыхăну çинчен мĕн пĕлнине тарăнлатасси;

– текста пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрма пĕлнине тарăнлатасси;

– чĕр чунсене юратма хавхалантарасси.

**У р о к ю х ă м ĕ**

**1.** Текста вулани.

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Калаври ĕçсем хăш вăхăтра пулса иртеççĕ? (Ирхине пулса иртеççĕ.)

– Калаври ĕçсем хăш вырăнта пулса иртеççĕ? (Ентер кӳлли хĕрринче пулса иртеççĕ.)

– Калавра вырăнти çырма-çатра, шыв-шур ячĕсене асăннă. Мĕнле ятсем вĕсем? (Ченчи варĕ, Пархантей çырми, Ентер кӳлли.)

– Хăвăр ял таврашри çавнашкал икĕ-виçĕ ят тупса калăр. Ячĕ мĕне пĕлтернине тата мĕншĕн çавăн пек каланине ăнлантарăр. (Ачасен хуравĕ.)

– Кăвакал çемйи ăçта кайма тухнă? (Кӳлĕ хĕрне, шыв ĕçме.)

– Кăвакал ами ачасене курсан мĕн хăтланать? (Нартлатса сас парать те пăрлатса вĕçсе хăпарать, унтан ачасен умнех пырса лаплатса ӳкет.)

– Унтан мĕн пулса иртет? (Кăвакал ами ачасене хăмăшлăхалла илĕртсе каять те шыва чăмса çухалать.)

– Çакна вăл мĕн сăлтавпа тăвать? (Хăрушлăха пепкисенчен аяккалла сирсе ярас тесе тăвать.)

**3.** Текст тытăмне тишкерни.

– Калава икĕ пысăк пая пайлама пулать. Вĕсене ят парăр. (1. Пăрусене кăкарма кайнă чух. 2. Пăрусене кăкарса таврăннă чух.)

Вĕрентекен:

– Калавра кăвакал çемйи пирки тĕп сăмах. Вăл çемьепе пулса иртекен ĕçсене икĕ пая уйăрса пăхма меллĕ. Малтанхи пайĕнче кăвакал ами ачасене чĕпписем патĕнчен аяккинелле илĕртсе кайни çинчен каламалла, иккĕмĕш пайĕнче – кăвакал çемйи кӳлĕ варринче хавасланни çинчен. Кашни пайăн планне тăвар.

1. Пăрусене кăкарма кайнă чух: 1) Кăвакал çемйи шыва каять. 2) Кăвакал ами чееленет. 3) Кайăка тытма шутлани. 4) Кайăк кӳлĕ еннелле лăпăстатать. 5) Кайăк шывра çухалать. 6) Кăвакал чĕпписене çĕр çăтнă.

2. Пăрусене кăкарса таврăннă чух: 1) Кăвакал çемйи кӳлĕ варринче. 2) Чĕпĕсем выляççĕ. 3) Кăвакал çемйи шывра çухалать.

**4.** Чĕлхепе стилистика тишкерĕвĕ.

– Автор кăвакалсене мĕнле туйăмпа сăнлать? (Юратса та тĕлĕнсе сăнлать.)

– Çакна çирĕплетекен тĕслĕхсем тупăр. («Чĕпписем çăмартаран тин тухнă-тăр, пӳрнескесем пек çеç. Амăшĕ хӳхĕм, чăпаркка, тĕкĕ пурçăн, йăлтăркка. Шукăль майра пек. Утасси çеç урăхла – ипчăк-купчăк тайкаланчăк, лăкăш-лăкăш пускалать. Чĕпписене пурпĕрех тик-тик тесе йыхăрать, тикĕс утма вĕрентет. Амăшĕпе килĕшсе пик-пик теççĕ чĕпписем те сиччĕн тан… Хăй пăхмашкăн – лăкăшти, вĕçме тăрсан – вăштăкки.» Ку евĕр пĕрешкел сасăсемпе вĕçленекен сăмахсемпе сăвă çемминелле туртăнакан çаврасене юратакан автор çеç ăслама пултарать.)

Вĕрентекен:

– Çапла рифмăланакан сăмахсенчен ăсланă ярăмсене прозăллă сăвăсем теççĕ. Ун пек çавра ку калавра татах пур: «Шухă çил ачи кăна шик-шик хăмăш хушшинче: «Çук, çук, лармасть нимĕн те», – текелесе такмакларĕ, шăп-шăпăрттин кĕввипе пăшăлти юррине юрларĕ».

– Пĕр вырăнта «шельмă кăвакалĕ» тенĕ. Куна мĕнле туйăмпа каланă? (Юратса хăтăрнă пек, вăрçас килмен çĕртен вăрçам пек туса каланă.)

**5.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Кăвакал ами мĕнлерех чĕр чун? (Пепкисене юратаканскер, чеескер, ăслăскер, пепкисемшĕн хăйĕн пурнăçне те хĕрхенменскер.)

Вĕрентекен:

– Кашни чĕр чун хăйĕн пепкишĕн чунне пама хатĕр. Çĕр çинчи пурнăç никĕсĕ çакă тесе каламалла. Этем те çаплах. Сирĕн кашнийĕн аçăр-аннĕр сирĕншĕн пурăнать. Сирĕн çитĕнӳсемпе са-

вӑнаҫҫӗ вӗсем, сирӗн мӗн те пулин ӑнмасан пӑшӑрханаҫҫӗ.

– Автор ку историе мӗн сӑлтавпа каласа парать? (Харпӑр хӑйне, хӑйӗн пепкисемпе тӑванӗсене, тус-юлташӗсене юрататакан, вӗсене хӳтӗлекен, вӗсемшӗн тӑрӑшакан кирек кам пулсан та – илемлӗ те хитре. Хитререн вӗренес, ун пекех пулас килет. Хитре япала хӑтланӑшӗсем килӗшӳллӗ, паха. Кӑвакал ҫемйинчен вӗренмелли хӑш-пӗр этемсен те пур.)

**6.** Киле ӗҫ пани. Учебникри 187–188-мӗш страницӑсенчи ыйтусене хуравлама хатӗрленни. Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени. (42–43-мӗш с.)

## 59-мӗш урок

**Урок теми:** С. Элкер. «Кашкӑрсемпе ҫапӑҫни».

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

– палӑртуллӑ вулав хӑнӑхӑвӗсене аталантарасси;

– вуланине ыйтусем тӑрӑх каласа парас хӑнӑхусене ҫивӗчлетесси;

– ҫут ҫанталӑка хисеплеме хӑнӑхтарасси.

### Урок юхӑмӗ

**1.** Калава вулани.

**2.** Калав содержанине тишкерни.

– Персонажсене асӑнса тухӑр. (Ҫемен, сӑрӑ кӑвак кашкӑр, хӑмӑр тӗслӗ кашкӑр, сунарҫӑ.)

– Тӗп герой кам? (Ҫемен.)

– Ӗҫсем вӑрманта хӑш вырӑнсенче пулса иртеҫҫӗ? (Кашкӑр путмарӗнче, ватӑ хырлӑх хӗрринче.)

– Малтанах Ҫемене кашкӑрсем мӗн пек туйӑнаҫҫӗ? (Йытӑ пек туйӑнаҫҫӗ.)

– Хӑш кашкӑрӗ хаяртарах? (Хӑмӑр кашкӑрӗ.)

**3.** Калав тытӑмне тишкерни.

– Калаври ӗҫсен йӗркине план туса палӑртӑр. (1. Кашкӑр путмарӗ. 2. Сӑрӑ кӑвак кашкӑр. 3. Хура хӑмӑр кашкӑр. 4. Кашкӑрпа ҫапӑҫни. 5. Паллӑ сунарҫӑ патӗнче.)

– Ку калавра кӗрешӳ пулса иртет-и? Сӑрӑ кӑвак кашкӑрпа пулса иртнӗ кӗрешӳ ҫинчен каласа парӑр. (Ун ҫӑварӗнче урлӑн хыпса ҫыртнӑ мулкач ҫури пулнӑ. Вӑл сивӗ куҫӗпе Ҫемене сӑнаса пӑхнӑ та унтан хӑвӑрт ҫаврӑнса тӗмсем хушшине кӗрсе ҫухалнӑ.)

– Кашкӑр выҫӑ пулнӑ е ҫӑварӗнче ним те пулман пулсан, е тата ӑнсӑртран шӑп ун хӳри ҫинех пырса пуснӑ пулсан мӗн пулнӑ пулӗччӗ? (Ачасен хуравӗ.)

– Хура хӑмӑр кашкӑрпа мӗнле тытӑҫу пулса иртет? (Малтан

кашкăрĕ Çемене асăрхамасăрах ун еннелле чупнă. Çемене курсан чарăнса тăнă та шăтарас пек пăхма пуçланă. Унтан йынăшса янă та шăлĕсене йĕрнĕ, лăпчăннă, сиксе ӳкме хатĕрленсе ури çине тăсăлса выртнă. Çемен шари! кăшкăрса ярать те ялт! сиксе тăрса аллине çавăра-çавăра, пĕр таттисĕр кăшкăрса кашкăр еннелле ыткăнать. Çемен çывăхра мĕн выртать, çавăнпа вăркăнтара-вăркăнтара кашкăра тапăнса пырать. Кашкăр нăйкăша-нăйкăша каялла чакса пырать. Пĕр вĕрлĕкпе типĕ тунката çапа-çапа янраттарнă. Вĕрлĕк хуçăлни пăшал пенĕ сасă пекех янăранă. Вара кашкăр аяккалла сикет те хуллен чупса тарма тытăнать. Хунав вĕтлĕхре çухаличчен пĕр самантлăха чарăнса каялла пăхса тăрать.)

– Сунарçă Çемене мĕнле ăс çинчен калать? (Çемен кашкăра хăй çине сиксе ларма паман. Сиксе ларнă пулсан – çăлăнаяс çукчĕ. Кашкăрсем вĕсем пĕрре лартнă тĕллевне вилессе пĕлмесĕр пурнăçлама талпăнаççĕ.)

– Хăш саманта чи хĕрӳллĕ тесе шутлатăр? Мĕншĕн çапла шутлатăр? (Чи хĕрӳллĕ самант – кашкăр сиксе ӳкме хатĕрленсе ури çине тăсăлса выртнă хыççăн Çемен шари! кăшкăрса ярса ялт сиксе тухни пулать. Вăл аптраса ӳкмесĕр хăй тапăнать.)

– Кашкăрăн çивĕч чĕрнисемпе шăлĕсене хирĕç Çемен мĕнле хатĕрсемпе тапăнать? (Ку хатĕрсем çаксем: шари! кăшкăрнă сасă, кашкăра кĕтмен çĕртен тапăнни, алăпа сулкалашни, мĕн алла лекнĕ çавна вăркăнтарни, вĕрлĕке хуçса пăшал пенĕ еверлĕ сасă кăларни.)

– Кашкăр путмарĕнче мĕнле ӳсен-тăран ӳсет? (Çамрăк хунав ӳсет. Шурлăхри хăмăш пек яштака та çăран ӳссе ларакан хурăн, ăвăс, çӳçе чăтлăхĕ витĕр тăват-пилĕк утăмранах нимле япала та курăнмасть.)

**4.** Чĕлхепе стиль тишкерĕвĕ.

– Кашкăра вăрман хурахĕ тенĕ. Мĕншĕн? (Кашкăр вăйлă та хаяр, ним шелсĕр тискер кайăк. Вăл кашни чĕр чун çине тапăнма пултарать. Ниме те хĕрхенсе тăмасть. Тата кашкăр питĕ ăслă, таврăракан тискер кайăк теççĕ.)

**5.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Калав ячĕпе содержанийĕ тата тĕп шухăшĕ çинчен мĕн калама пултаратăр? Çыравçă мĕн сăлтавпа пире ку историе каласа парать? (Çемен кашкăрсемпе чăн-чăн çапăçу туса ирттерет. Алла пăшал тытса çапăçни çеç мар, пăшалсăр çапăçни те çапăçăвах пулать. Пĕрремĕш кашкăрне Çемен тытăçăва кĕмесĕрех çĕнтерет. Вăл тытăçмасăрах пăрăнса утать. Иккĕмĕш хутĕнче тытăçса

илме лекет. Кашкăрăн ҫивĕч шăлĕпе шĕвĕр чĕрнине Ҫемен хăйĕн тавҫăрулăхĕпе, янăравлă сассипе, кĕлетки хусканăвĕпе ҫĕнтерет. Ҫапла вара этем хĕҫ-пăшалсăрах ҫĕнтерӳҫĕ пулса тăрать. Калавăн тĕп шухăшĕ тесе ҫакна каламалла: кирек хăш лару-тăрура та ҫухалса каймалла мар.)

**6.** Киле ĕҫ пани. 191–192-мĕш страницăсенчи ыйтусене хуравлани. Ĕҫ тетрачĕпе ĕҫлени. (43–44-мĕш с.)

## 60-мĕш урок

**Урок теми:** Н. Иванов. «Ăсанпа Хураҫка».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– хайлав ячĕпе унăн содержанийĕ хушшинчи ҫыхăнăва туйма хăнăхтарасси;

– палăртуллă вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси;

– содержанине суйлавлă каласа парас хăнăхусене ҫивĕчлетесси;

– ҫут ҫанталăка юратма хавхалантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Калава вулани. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа вулаҫҫĕ.)

**2.** Калав содержанине тишкерни.

– Персонажсен ячĕсене каласа тухăр. (Микула, Лариван мучи, Хураҫка, ăсан.)

– Лариван мучи Микулана ăҫта илсе каять? (Вăрмана илсе каять.)

– Хутăш вăрманта мĕнле йывăҫсем ӳснĕ? (Юмансем, ăвăссем, шĕшкĕсем, вĕренесем.)

– Юплĕ юман айĕнче мĕн курнă? (Унта ăсан хăй чĕпписемпе ларнă.)

– Малалла мĕн пулнă? (Вĕсем еннелле Хураҫка лĕпĕстетсе чупнă. Ăна курсан ăсан йытă еннелле вĕҫсе кайса ларать. Хураҫка ăсан ҫинелле сикет. Ăсан сывлăша ҫĕкленет те кăшт аяккарах вĕҫсе кайса анса ларать. Хураҫка унталла вирхĕнет. Ăсан каллех вĕҫсе хăпарса аяккарах кайса ларать. Ҫапла майпа астарса ăсан Хураҫкана хăй чĕпписенчен аяккалла ертсе каять.)

– Ăсан чĕпписем ăҫта ҫухалнă? (Вĕсем ниҫта та ҫухалман, ҫав вырăнтах лăпчăнса выртнă. Ҫулçă тĕслех пулнăран вĕсене асăрхамастăн та.)

**3.** Калав тытăмне тишкерни.

Вĕрентекен:

– Ачасем, эпир иртнĕ уроксенчен пĕринче ҫакăн евĕрлĕ калавах

вуланӑччӗ. Мӗн ятлӑччӗ вӑл? Унӑн авторӗ камччӗ? (Н. Ишентей. «Аптраман кӑвакалсем».)

– Ку калавсем мӗн енчен пӗрешкелех? Мӗн енчен урӑхларах? (Унта та, кунта та амӑшӗ пепкисене хӑрушлӑхран сыхласа хӑварас тесе тӑшманӗпе хӑрушӑ вӑйӑ выляни ҫинчен ҫырнӑ. Пӗринче кӑвакал хӑйӗн чӗпписене хӳтӗлет, тепринче – ӑсан. Маларах кӑвакалӑн ҫичӗ чӗппи ҫинчен каланӑччӗ, кунта чӗпсен шутне палӑртман. Унта ӗҫсем пӗве хӗрринче пулса иртетчӗҫ, кунта – вӑрманта. Унта кӑвакал ами юлашкинчен шыва чӑмса ҫухалать, кунта ӑсан аяккалла ҫеҫ илсе кайса ярать.)

– Сирӗн кӑмӑл кайӑксен енче-и е Хураҫка енче? Мӗншӗн? (Пирӗн кӑмӑл Хураҫка енче мар, ӑсан енче. Ӑсан хӑйӗн чӗпписемшӗн пурнӑҫпа вилӗм хушшинче кӗрешет, юлашкинчен ҫӗнтерет. Ҫакӑ – ырри усаллине ҫӗнтерни – пирӗн кӑмӑла уҫса ярать.)

– Калава икӗ пысӑк пая пайлама пулать. Вӗсене ят парӑр. (1. Михалапа Лариван мучи тата Хураҫка вӑрмана каяҫҫӗ. 2. Ӑсанпа Хураҫка кӗрешӗвӗ.)

Вӗрентекен:

– Ку хайлавра икӗ калав пӗрлешсе кайнӑ. Михалапа Лариван вӑрмана кайни ҫинчен каланисем тӗп содержанипе ҫыхӑнсах кайман. Вӗсене кӑларса пӑрахсан та калавӑн тӗп шухӑшӗ, ҫыравҫӑ мӗн каласшӑн пулни пӑсӑлмасть. Ҫавнашкал икӗ калав пӗрлешсе кайнӑ хайлавсем литературӑра час-часах тӗл пулаҫҫӗ. Калав ӑшӗнчи калав теҫҫӗ вӗсене.

– «Ӑсанпа Хураҫка кӗрешӗвӗ» пайӑн планне тӑвӑр. (1. Хӑрушлӑх сиксе тухрӗ. 2. Ӑсан Хураҫкана астарать. 3. Чӗпӗсен чеелӗхӗ. 4. Хӑрушлӑх иртсе кайрӗ.)

– «Ӑсанпа Хураҫка кӗрешӗвӗ» пай содержанине каласа пани. (Пӗр ача каласа парать.)

– Калав тӑрӑх мӗнле сӑрӑллӑ ӳкерчӗк тума пулать? Ӑна сӑмахпа сӑнлӑр. (Ачасен хуравӗ.)

**4.** Чӗлхепе стиль тишкерӗвӗ.

– «...Хураҫка лӗпӗстетсе тухрӗ» тенине мӗнле ӑнланатӑр? (Хураҫка хуллен чупса пынӑ. Сӑмсипе ҫӗре шӑршланӑ. Вӑл ӑсана асӑрхаман. Асӑрханӑ пулсан сиккипе чупнӑ пулӗччӗ.)

– «...чӑлтах пуҫне ҫӗклерӗ» тенине мӗнле ӑнланатӑр? (Хӑвӑрт ҫӗклерӗ.)

– «Ӑҫта кайма пултарчӗҫ-ха ҫав вӗҫме пултарайман айвансем?» тенӗ. «Айван» сӑмахра кунта мӗнле туйӑмсем пуҫтарӑннӑ? (Хӗрхенни, юратни, шеллени, вӗсене ырӑ сунни.)

**5.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Калав ятне ăнлантарăр. (Калав ячĕ – «Ăсанпа Хураçка». Михалапа Лариван мучи вăрмана кайни, Лариван мучи çут çанталăка лайăх пĕлни, хутăш вăрманта мĕнле-мĕнле йывăççем ӳсни çинчен каланисем калав ячĕпе çыхăнсах та кайман темелле. Ку калава калав ăшĕнчи калав темелле. Вырăсла каласан, «рассказ-открытие».

– Автор мĕн каласшăн? (Кашни чĕр чун пепкисене хӳтĕлесе хăйĕн пурнăçне те хĕрхенмест. Ку вăл тĕлĕнмелли, мухтамалли пулăм. Çынсен пурнăçĕнче те çаплах. Этем пурнăçĕ – чи пысăк пахалăх, кашни çын хăйне хăй хисеплеме тивĕçлĕ. Çав вăхăтрах хамăр таврари çынсене хисеплемелли, вĕсен кăмăлне шута илмелли, тӳсмелли çинчен те манас марччĕ.)

**6.** Киле ĕç пани. Учебникри 196-мĕш страницăри ыйтусене хуравлама хатĕрленни. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (44–45-мĕш с.)

## 61-мĕш урок

**Урок теми:** Л. Ковалюк. «Мулкач та тутă пултăр».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– сăнарсене, автор тăвакан сăнлăхсемпе ӳкерчĕксене ăсра курма хăнăхтарасси;

– ăнланса, сасăсене тĕрĕс каласа, тĕрĕс интонаци туса вулас хăнăхусене аталантарасси;

– текста пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрас хăнăхусене çивĕчлетесси;

– суйлавлă калав хăнăхăвĕсене аталантарасси;

– текстăн тĕп шухăшне палăртас хăнăхусене тарăнлатасси;

– çут çанталăка, чĕр чунсене юратма хавхалантарасси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Калава вулани. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа вулаççĕ.) «Шĕпшĕлсемпе ытти кайăксем çинчен ашшĕ питĕ тĕплĕн ăнлантарнинеитле-итле Унтри сисмерĕ те, вĕсем пĕве патне çитрĕç» предложени таран.

**2.** Вулав ăнланулăхне тĕрĕслени.

– Калаври ĕçсем хăш кун пулса иртеççĕ? (Вырсарникун.)

– Кунĕ мĕнлерех пулнă? (Çутă, таса, кăшт сивĕрех хĕллехи кун пулнă.)

– Унтри мĕн-мĕн тăхăннă? (Шурă çăмат, хура цигейка кĕрĕк, çăмламас çĕлĕк.)

– Унтрипе ашшĕ ăçта кайнă? (Пĕве çине, вак куçĕ касма.)

– Вĕсем пĕве çине мĕнпе кайнă? (Йĕлтĕрпе.)

– Унтри ашшӗ мӗн пирки пăшăрханнă? (Унтри йӗлтӗрпе ярăнма юратманшăн.)

– Ашшӗпе ывăлӗн йӗлтӗр йӗрӗ мӗн енчен урăхла? (Ашшӗн йӗрӗ тӳп-турӗ, самай тарăн, Унтрин – ăшăх та пăркаланчăк, хӗррисем те тикӗс мар: пӗр вырăнта сарăлса каяççӗ, тепӗр вырăнта каскаланса пӗтеççӗ.)

– Унтри пӗве çине кайса килме хавасланса килӗшнӗ-и? (Вăл çакна кăна кӗтнӗ.)

– Ăна мӗн хăратнă? (Вăл йӗлтӗрпе ярăнма пӗлменрен хăранă.)

– Ашшӗ мӗншӗн савăнать? (Унтри йӗлтӗрпе ярăнма вӗренсе пынишӗн.)

– Вăл мӗншӗн ашшӗ хыççăн ун йӗрӗпе пымасть? (Унăн хăйӗн вăйне кăтартас килнӗ, тата ашшӗпе юнашар пырас килнӗ; лешӗ çул тăршшӗпех тӗрлӗ кăсăклă япаласемпе ӗçсем çинчен каласа кăтартнă.)

– Ашшӗ çинчен мӗн пӗлтӗмӗр? (Вăл нумай çул хушши вăрманта лесник пулса пурăннă. Халӗ урăх ӗçе куçнă та яла куçса пынă.)

– Пӗве пăрне мӗншӗн шăтарсах тăраççӗ? (Хӗлле пулăсем сывлăшсăр аптраççӗ, çавăнпа та сывлăш кӗтӗр тесе вак куçӗ уçаççӗ.)

– Вак куçне мӗнле тунă? (Вак куçӗ уснă та шӗшкӗ çатракисем тăратса ыраш улăмӗпе хупланă.)

– Шурă юр çинчен ашшӗ мӗн вӗрентет? (Таса шурă юр инçетрен пăхсан уяр çанталăкра çутă кăвакрах тӗслӗн курăнать иккен.)

– Уй улмуççийӗ çинче мӗн тӗлӗнмелли кураççӗ? (Çерçи ушкăнӗнче икӗ шӗпшӗле кураççӗ. Вӗсем çерçисем пекех, анчах сарă тӗслӗ. Хӗлле çерçисемпе пӗрле пурăнаççӗ.)

– Унтри шӗпшӗлсем çинчен тата мӗн пӗлет? («Ӗçле-ӗçле çи… Ӗçле-ӗçле çи…» тесе юрлаканни шӗпшӗл иккен.

**3.** Калав тытăмӗпе ӗçлени.

– Ку пайăн планне тăвăр. (1. Унтри çула тухма хатӗр. 2. Уйра. 3. Унтри йӗлтӗрпе ярăнма вӗренет. 4. Унтри астуса юлма тăрăшать. 5. Пӗве çинчи 5 вак куçӗ. 6. Юр мӗн тӗслӗ? 7. Шӗпшӗлсем çинчен.)

– Унтри çинчен мӗн пӗлтӗмӗр? (Унтри нумай пӗлме тăрăшакан шкул ачи. Вăл йӗлтӗрпе ярăнма пӗлмест иккен, çунашкапа ярăнма лайăхрах тенӗ вăл. Анчах та ашшӗ вӗренткеленӗ хыççăн ача пӗчӗккӗнех йӗлтӗрпе ярăнма хăнăхса пырать.)

**4.** Чӗлхепе стиль тишкерӗвӗ.

– «Ашшӗн йӗрӗ тӳп-тӳрӗ, самай тарăн, Унтрин – ăшăх та пăркаланчăк, хӗррисем те тикӗс мар: е сарăлса кайнă, е каскаланса

пĕтнĕ.» Çак йĕркесене ăнлантарăр. (Ашшĕн йĕлтĕрĕ вăрăмрах пулнă, çавăн пекех унăн хăнăхăвĕсем тарăнрах пулнă. Çакна пула йĕлтĕр йĕрĕ те тӳрĕ пулса тухать. Йĕлтĕр йĕрĕ тарăн пулни ашшĕ йывăрăшĕ пысăк пулнинчен те килет. Унтрин йĕлтĕрĕ те кĕске, унăн ашшĕпе тан ĕлкĕрсе пырас тесен васкарах та чупма тивет, вăл ярăну хăнăхăвĕсене те пĕлмест. Çакна пула йĕлтĕр йĕрĕ те çавнашкал выртса юлать.)

**5.** Киле ĕç пани. Калавăн пĕр пайĕн содержанине çырса килни (суйлав изложени).

## 62-мĕш урок

**Урок теми:** Л. Ковалюк. «Мулкач та тутă пултăр» (малалли).

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– прозăллă текстсене сӳтсе явас хăнăхусене аталантарасси;

– сасăпа вуласа ăнланас хăнăхусене тарăнлатасси;

– текста пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрас хăнăхусене çивĕчлетесси;

– суйлавлă калав хăнăхăвĕсене аталантарасси;

– çут çанталăка, чĕр чунсене юратма хавхалантарасси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Текста вулани. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа вулаççĕ.)

**2.** Вулав ăнланулăхне тĕрĕслени.

– Ашшĕ ывăлне мĕншĕн мухтать? (Унтри йĕлтĕрпе ярăнма вĕреннĕшĕн мухтать.)

– Унтри мĕне палăртасшăн мар? Мĕншĕн? (Хăй ĕшеннине палăртасшăн мар. Тепрехинче ашшĕ хăйпе пĕрле илмĕ тесе хăрать.)

– Ашшĕ ывăлне мĕншĕн пăшăрхантарасшăн мар? (Унтри чылаях ывăннине сиснине пĕлтерсен ывăлĕ пăшăрханать тесе шутлать.)

– Вĕсем хăш чĕр чун йĕрне асăрхаççĕ? (Мулкач йĕрне асăрхаççĕ.)

– Мулкач ăçталла кайнă? (Мулкач вĕсен пахчине пынă.)

– Мулкачсем мĕн пирки яла пыраççĕ? (Хĕлле юр тарăнланнă пирки. Тарăн юр пĕчĕк йывăç тĕмисене йăлтах хупласа лартать те, вĕсене валли апат юлмасть.)

– Унтри мулкачсене пулăшма мĕн сĕнет? (Сарай алăкне уçса хăварма сĕнет.)

– Ашшĕ мĕншĕн савăнать? (Ывăлĕн ырă кăмăлĕшĕн савăнать.)

– Вăл мĕн сĕнет? (Сеткăна утă тултарса пахча хыçне çакма сĕнет.)

**3.** Калав тытăмне тишкерни.

– Ку пайăн планне тăвăр. (1. Унтрие ашшĕ мухтать. 2. Унтри ывăннине пытарасшăн. 3. Мулкач йĕрне курни. 4. Мулкач йĕрĕ хыç-

çăн. 5. Мулкачсем выçăпа аптраççĕ. 6. Ашшĕпе ывăлĕ мулкачсене пулăшасшăн.)

– Калавăн чи хĕрӳ саманчĕ хăшĕ? Мĕншĕн çапла шутлатăр? (Чи хĕрӳ самант Унтри мулкачсене пулăшас тесе сарай алăкне уçса хăварма сĕнни пулать. Ку самант калавăн ячĕпе те, тĕп шухăшĕпе те çыхăнса тăрать. Ашшĕпе пĕрле пĕве çине кайса килсе, çул çинче ашшĕ каласа панисене ăса хывса вăл хăй хальччен пĕлменнине нумай пĕлекен пулать, çут çанталăка юратма пуçлать. Унтри мулкачсене пулăшас тени ашшĕне те савăнтарать. Ашшĕпе ывăлĕ çак кун пĕве çине пĕрле кайса килни вĕсемшĕн питĕ усăллă пулнă. Ку хăйне евĕрлĕ паха урок. Шăпах çапла ăнланмалла юлашки предложенине: «Ашшĕпе ывăлĕ пӳрте çав тери хавассăн пырса кĕчĕç».)

**4.** Учебникри 204–205-мĕш страницăсенчи ыйтусемпе ĕçлени.

**5.** Киле ĕç пани. Калав тăрăх «Ашшĕпе ывăлĕ мулкачсене пулăшасшăн» суйлавлă калав ăсламалла. Вариант: ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (45–46-мĕш с.)

## 63-мĕш урок

**Урок теми:** Н.Матвеев. «Уртăш».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ансат ăслăх тексчĕсене илемлĕ литература тексчĕсенчен уйăрма хăнăхтарасси;
– ăнланса сасăпа вулас хăнăхусене аталантарасси;
– текста пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрас хăнăхусене тарăнлатасси;
– ыйтусене хуравлас хăнăхусене çивĕчлетесси;
– çут çанталăка юратма хавхалантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Текста вулани.

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Эсир уртăш курнă-и? Унăн çӳллĕшĕ миçе метр? (Уртăш çӳллĕшĕ виçĕ метр.)

– Унăн йĕпписем мĕнлерех? (Вăрăмах мар, тăршшĕ – икĕ сантиметра яхăн, вĕçĕсем çав тери шĕвĕр. Вĕсем тăвата çула яхăн тăкăнмасăр лараççĕ.)

– Çырли çинчен мĕн пĕлтĕр? (Иккĕмĕш çулхине авăн-юпа уйăхĕсенче пулса çитет. Çырлапа купăста тăварланă чухне усă кураççĕ. Яшкана ярсан та тутине лайăхлатать.)

– Уртăщ мĕнрен çитĕнет? (Вăрăран шăтса çитĕнет.)

– Уртăш лăссипе мĕнле усă кураççĕ? (Милĕк туса мунча кĕреççĕ, вĕретнĕ шывĕпе çăвăнаççĕ. Çăнăхне суран çине сапаççĕ.)

– Уртăш лăссине ярса вĕретнĕ шывпа медицинăра тата мĕнле усă кураççĕ? (Сăмсапа пыр, ӳпке чирĕсене, вар-хырăм чирĕсене, пӳре чирĕсене сиплеççĕ.)

– Уртăш умĕнче мĕнле хăрушлăх пур? (Уртăш çулсеренех сахалланса пырать.)

– Ăна сыхласа хăварма мĕн тумалла? (Вăл ӳсекен вăрмансене кĕтӳ кĕртме пăрахмалла. Уртăш лаптăкĕсене карта тытса çавăрсан пăсмасть.)

– Тата мĕн тумалла? (Уртăша хуçма пăрахмалла.)

**3.** Текст тытăмне тишкерни.

– Текста пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрăр. Пайсене ят парăр. (План туни: 1. Уртăш йывăççин кӳлепи. 2. Уртăш çырли. 3. Уртăш çитĕнни. 4. Уртăш лăссипе усă курни. 5. Çамрăк уртăшпа мĕнле усă кураççĕ. 6. Уртăш – медицинăра. 7. Уртăша сыхласа хăвармалла.)

**4.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Уртăш йывăççи сахалланса пынин сăлтавĕсенчен пĕри тесе вăрмансенче кĕтӳ кĕтнине каланă. Тата тепĕр сăлтав – йывăça мунча милĕкĕ тума. Унсăр пуçне ку йывăç йышĕ çулсерен сахалланса пынин сăлтавĕ мĕн-ши? (Ачасен хуравĕ.)

– Уртăш мĕн пирки япăх аталанать? (Вăл вăрăран шăтса çитĕнет. 5–10 çул иртсен кăна çимĕç пама пуçлать. Вăррисем те икĕ çул иртсен тин шăтаççĕ.)

– Уртăша сыхласа хăварас тесен вăрмана кĕтӳ кĕртмелле мар, хуçма пăрахмалла, карта тытса çавăрмалла тенĕччĕ. Тата мĕн тума пулать? (Ятарласа вăррисене лартса уртăш вăрманĕсем çитĕнтермелле.)

– Автор ку хайлавпа мĕн каласшăн? (Уртăш йывăçĕ пит паха йывăç тесе каласшăн вăл. Унăн шăрши те ырă, унăн çырлипе те апат-çимĕç вырăнне усă кураççĕ, медицинăра та уртăш пĕлтерĕшĕ пысăк. Анчах та уртăш йывăççи вăрмансенче çулсеренех сахалланса пырать. Уртăша сыхласа хăвармашкăн хастартарах ĕçлеме пуçăнма вăхăт.)

**5.** Киле ĕç пани. Учебникри 208-мĕш страницăри ыйтусене хуравлама хатĕрленни.

## 64-мĕш урок

**Урок теми:** Н. Матвеев. «Çара çерçи».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ансат ăслăх текст уйрăмлăхĕсем çинчен пĕлнине аталантарасси;

– сăнлав ăслас хăнăхусене тарăнлатасси;
– ансат ăслăх тексчĕсене сӳтсе явас хăнăхусене çивĕчлетесси;
– çут çанталăка хисеплеме, юратма хавхалантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Текста вулани. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа тата ăшра вулаççĕ.)

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Çĕр çинче çара çерçи чи анлă сарăлнă чĕр чунсенчен пĕри пулни ăстан курăнать? (Тĕнчере 1000 тĕрлĕ çара çерçи тĕсĕ пулнинчен.)

– Чи пĕчĕккисем хăшĕсем? (Çĕрлехи çара çерçисем.)

– Хăлхаллă çара çерçисене мĕншĕн çапла ят панă? (Вĕсен хăлхисем хăйсен пĕвĕ тăршшех пулнăран.)

– Каçхи çара çерçисем ытларах ăçта пурăнаççĕ? (Вăрманта пурăнаççĕ.)

– Вăрманта тата мĕнле çара çерçисем пурăнаççĕ? (Сăран тирлĕ çара çерçисем.)

– Хăш çара çерçисен çан-çурăмĕ вăрăм çăмпа витĕннĕ? (Сăран тирлĕ тата чармаксăр çара çерçисен.)

– Чармаксăр çара çерçисем ытларах хăш вырăнсенче пурăнаççĕ? (Сын пурăнакан вырăнсенче пурăнаççĕ.)

– Çара çерçисем апат шырама хăçан вĕçсе каяççĕ? (Тĕттĕмленме пуçласан.)

– Мĕншĕн çара çерçин усси пысăк теççĕ? (Мĕншĕн тесен вăл пĕр сехет хушшинче 600–650 хурт-кăпшанкă тытать.)

– Çара çерçисем ăçта пурăнаççĕ? (Хăвăлсенче, вĕçен кайăк валли çакнă вĕллесенче.)

– Çара çерçие мĕншĕн сутăнчăкпа танлаштарнă. (Халапа каласа пани.)

**3.** Текст тытăмне тишкерни.

– Текст планне тăвăр. (1. 1000 тĕрлĕ çара çерçи. 2. Çĕрлехи çара çерçи. 3. Хăлхаллă çара çерçи. 4. Каçхи çара çерçи. 5. Сăран тирлĕ çара çерçи. 6. Чармаксăр çара çерçи. 7. Çара çерçин пурнăç йĕрки. 8. Халап.)

– Планăн пĕр пайĕн содержанине суйлавлăн каласа пани. (Ачасен хуравĕ.)

**4.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Текстра мĕн çинчен сырнă? (Текст темине палăртни: çара çерçи çинчен.)

– Тĕп шухăшĕ мĕнле? (Çара çерçисем – питĕ усаллă чĕр чунсем.

Вĕсем хăвăлсенче пурăннине шута илсе, хăвăлсем туса памалла. Вăрманти хăвăл йывăçсене касса пăрахма васкамалла мар.)

Вĕрентекен:

– Ку ансат ăслăх тексчĕ пулчĕ. Кунта иккĕлле ăнланма пулакан сăмахсемпе усă курмаççĕ. Калас тенине тĕп-тĕрĕс палăртас тесе чăн-чăн фактсемпе усă кураççĕ. Анчах та текст вĕçĕнчи икĕ абзац илемлĕ литература стилĕнчен.

– Автор мĕн каласшăн? (Эпир нумайăшĕ çара çерçисене чĕррĕн курман, мĕншĕн тесен вĕсем апат шырама тĕттĕмленсен çеç вĕçсе тухаççĕ. Кăнтăрла вĕсем хăвăлсенче, пĕр-пĕр çуртăн мачча каштинчен пуçхĕрлĕ çакăнса çывăраççĕ. Анчах та ку чĕр чунсем хурт-кăпшанкăсене нумай пĕтереççĕ. Çара çерçисене пулăшмалла. Вăрманти хăвăл йывăçсене касса пăрахмалла мар.)

**5.** Киле ĕç пани. 211-мĕш страницăри ыйтусене хуравлама хатĕрленни.

## 65-мĕш урок

**Урок теми:** Н. Матвеев. «Каюра».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– илемлĕ ăслăх тексчĕн тĕп уйрăмлăхĕсене ăса вырнаçтарасси;

– илемлĕ ăслăх тексчĕсене сӳтсе явас хăнăхусене аталантарасси;

– ăнланса сасăпа вулас хăнăхусене тарăнлатасси;

– çут çанталăка юратма хăнăхтарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Калава вулани. (Ушкăнпа черетленсе, сăмахсене чăмламасăр, уçăмлă вулама тăрăшаççĕ.)

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Тăпрана чаваласа хăпартнă йĕрсене хăш чĕр чун тăвать? (Каюра.)

– Вăл мĕншĕн çĕре чавалать? (Çĕре чаваласа вăл апат шырать.)

– Çак ĕçе вăл мĕнле майпа тăвать? (Шĕвĕр сăмсипе çĕре шăтарса пырать, ăна малти урисемпе сирсе ывăтать. Кайри урисемпе кĕлеткине малалла тĕртсе пырать.)

– Каюра çурчĕ миçе хутлă? (Икĕ хутлă.)

– Пӳлĕмĕсем мĕнлерех? (Пӳлĕмсен стенисене çирĕплетнĕ. Урайне типĕ çулçă, курăк сарнă.)

– Унăн куçĕпе хăлхи çинчен мĕн калама пулать? (Пĕчĕк куçне куç хăрпăкĕсемпе çăм хупăрласа тăрать. Вăл питĕ лайăх илтет.)

– Каюра апачĕ мĕн? (Тĕрлĕ чĕр чунсем, хурт-кăпшанкă личинкисем.)

– Каюран тăшманĕсене каласа тухăр. (Тилĕ, пăсара,чĕрĕп, сăсар, ҫынсем.)

**3.** Текст тытăмне тишкерни.

– Текст планне тăвăр. (1. Ҫумăр хыҫҫăнхи йĕрсем. 2. Каюра мĕнле куҫать. 3. Каюра ҫурчĕ. 4. Каюран туйăм хатĕрĕсем. 5. Каюра мĕнпе тăранать. 6. Каюрана сыхласа хăвармалла.)

– Кашни ыйту содержанине пĕрер ача каласа парать.

**4.** Учебникри 212-мĕш страницăри ыйтусене хуравлани.

**5.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Автора мĕн хумхантарнă? Вăл мĕн каласшăн? (Каюра тĕлĕнмелле чĕр чун. Ҫĕре чавса тунă икĕ хутлă шăтăкра пурăнать. Апатланасса та ҫĕре чавса пырса апатланать. Шăтăкне мĕнле чĕр чун, хурт-кăпшанкă лекет, ҫавна тытса ҫиет. Каюран йышĕ те сахалланса пырать. Ăна сыхласа хăварма тăрăшмалла.)

**6.** Киле ĕҫ пани. Ĕҫ тетрачĕпе ĕҫлени. (46–47-мĕш с.)

## 66-мĕш урок

**Урок теми:** Г. Орлов. «Кашкăр тавăрăвĕ».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ăнланса, нормăсене пăхăнса вулас хăнăхусене ҫивĕчлетесси;
– илемлĕ ăслăх тексчĕ ҫинчен пуҫламăш пĕлӳсем парасси;
– текста пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрас хăнăхусене аталантарасси;
– ҫут ҫанталăка юратма хавхалантарасси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Текста вулани. (Ушкăнпа черетленсе сăмахсене чăмламасăр вулаҫҫĕ.)

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Кашкăрсем хăҫан этем ҫывăхнелле туртăнаҫҫĕ? (Сивĕсем ҫитсен.)

– Вăрман хуралҫин миҫе сурăхне илсе кайнă? (Сакăр сурăхне.)

– Ҫакна вĕсем хăш вăхăт хушшинче тунă? (Пĕр эрне хушшинче.)

– Вĕсем миҫе хутчен килсе кайнă? (Икĕ хутчен.)

– Каяннăйсем миҫен пулнă? (Тăваттăн.)

– Йыттисемпе мĕн пулнă? (Вĕсене темиҫе кун малтан кашкăрсем ҫурнă.)

– Вăрман хуралҫи тепĕр кунне мĕн тăвать? (Сурăхĕсене картишнех апат парать те аслăк ҫинче утă хушшине пытанса кашкăрсене каҫченех кĕтсе ларать.)

– Усси пулать-и? (Усси пулмасть.)

– Иккӗмӗш кунне мӗн тӑваҫҫӗ? (Иккӗмӗш кунне упӑшки вырӑнне арӑмӗ пӑшал тытса юлать.)

– Хальхинче усси пулать-и? (Хальхинче те усси пулмасть.)

– Ҫапла миҫе талӑк хуралласҫӗ? (Пилӗк талӑк хуралласҫӗ.)

– Улттӑмӗш кунне упӑшки ӗҫе кайсан арӑмӗ мӗн курать? (Ҫӳллӗ хӳме ҫумӗнче пысӑк кашкӑр тӑрать, ыттисем ун ҫине хӑпарса вӑрманалла сикеҫҫӗ. Кашниех пӗрер сурӑх тытнӑ.)

– Арӑмӗ пӑшал пеме ӗлкӗрет-и? (Пӑшалне йӑтса тухма та ӗлкӗреймест.)

– Упӑшкипе арӑмӗ мӗн тӑваҫҫӗ? (Тата икӗ эрне кашкӑрсене кӗтеҫҫӗ.)

– Хальхинче вӗсем ӑҫта кӗтсе лараҫҫӗ? (Пӳртре, кантӑк умӗнче.)

– Вӗсен миҫе сурӑх юлнӑ? (Виҫӗ сурӑх юлнӑ.)

– Кашкӑрсем кӳршӗсене те сӑтӑр тунӑ-и? (Ҫук, кӳршӗсене сӑтӑр туман вӗсем.)

– Ҫулла мӗн пулнӑ? (Вӑрман хуралҫи кашкӑр йӑвине шыраса тупнӑ та ҫурисене килнех илсе таврӑннӑ.)

– Кашкӑрсем сурӑхсене ахальтен илсе кайнӑ-ши? (Ахальтен мар пуль, тавӑрнӑ пуль.)

– Пурнӑҫра мӗн те пулин ахальтен пулать-и? (Пурнӑҫра ним те ахальтен пулмасть.)

**3.** Калава пӗлтерӗшлӗ пайсене уйӑрӑр та вӗсене ят парӑр. План туни. (1. Кашкӑрсем – каяннӑйсем. 2. Тӑватӑ сурӑх ҫухални. 3. Кашкӑрсене 5 талӑк сыхлани. 4. Улттӑмӗш кунне мӗн пулнӑ. 5. Кайран мӗн пулнӑ.)

– Ку хайлавра кӗрешӳ пур-и? Кампа кам кӗрешеҫҫӗ? (Кунта кашкӑрсемпе вӑрман хуралҫи кӗрешӗвне ҫырса кӑтартнӑ.)

– Кӗрешӳ пуҫламӑшӗнче мӗнле ӗҫ пулнӑ? (Кашкӑр ҫурисене йӑтса таврӑнни.)

– Ӗҫсем ҫинчен кам каласа парать? (Вӑрман хуралҫине аван пӗлекен пӗр ҫын.)

– Сирӗн кӑмӑл хӑшӗн енче пулчӗ: кашкӑр е этем енче? Хӑшне ытларах хӗрхенмелле? (Ачасен хуравӗ.)

– Кашкӑр вӑрман хуралҫине сӑтӑр тунине ҫурисемшӗн тавӑрать теме мӗн-мӗн май парать? (Икӗ хут пырса сурӑх пусса кайни.)

– Ку ӗҫ хӗлле пулса иртет. Ҫулла кашкӑр пымасть. Мӗншӗн? (Ҫулла ӑна вӑрманта апат тупма ҫӑмӑлрах пулнӑран.)

– Апла пулсан кашкӑр тавӑрчӗ тесе эпир ҫирӗппӗнех калама пултаратпӑр-и? (Ҫирӗппӗнех кашкӑр тавӑрчӗ тесе калама пултараймастпӑр.)

– Анчах та темиҫе кун малтан вăрман хуралҫин икĕ йыттине те туртса ҫурнă-ҫке… (Ачасен хуравĕ.)

**4.** Ăнлантарни (интерпретаци.)

– Ҫырса кăтартнă ĕҫсем кашкăр ҫинчен мĕнле шутлама май параҫҫĕ? (Кашкăр шăрша лайăх сисет-туять пулмалла. Вăл хăй ҫурисене кам йăтса кайнине шăршă тăрăх йĕрлесе тупнă. Тен, айккинчен вăрман хуралҫи хыҫҫăн йĕрлесе пынă. Хĕлле вара меллĕ самант тупса икĕ ăстрăмпа 8 сурăхне йăтса кайнă. Ытти ҫынсенне мар, шăпах вăрман хуралҫинне икĕ хутчен йăтса кайни ку ĕҫе тĕллевлĕн тунă тесе калама май парать.)

– Кĕрешӳ ҫĕнтерекенсĕр пулмасть. Кунта кам ҫĕнтерчĕ тесе шутлатăр? Мĕншĕн ҫапла шутлатăр? (Ачасен хуравĕ.)

Вĕрентекен:

– Кашкăрпа этем хушшинчи кĕрешӳ паянччен пырать. Ҫак кĕрешĕвĕн тĕп сăлтавĕ мĕн тесе шутлатăр? (Кашкăр – чĕрĕ какайпа тăранса пурăнакан тискер чĕр чун. Этемшĕн те какай питĕ хаклă апат. Ҫак апат пирки вĕсем пĕр-пĕриншĕн нихҫан мирлешми тăшман пулаҫҫĕ. Кашкăр мĕн чухлĕ нумайрах ĕрчесе каять, ăна ҫавăн чухлĕ нумайрах апат кирлĕ пулать. Апачĕ этеме хăйне те кирлĕ.)

– Сут ҫанталăкра кашкăрсен шучĕ калама ҫук ӳссе каяс пулсан мĕн пулса тухнă пулĕччĕ? (Кашкăртан айванрах чĕр чунсем ҫĕр ҫинче юлман та пулĕччĕҫ.)

Вĕрентекен:

– Ҫавăнпа кашкăра ăҫта тĕл пулнă унта пĕтерме тăрăшаҫҫĕ. Хăйĕн тăшманĕ (этем) вăйлăрах пулни (унăн пăшал пур; вăл – тĕнче патши) ĕмĕрсем хушшинче кашкăра самай чее пулма вĕрентнĕ.

– Автор кăмăлĕ вăрман хуралҫи е кашкăр енче? (Автор вăрман хуралҫине шеллет. Пысăк сăтăр тăвать-ҫке кашкăр ăна. Ҫав вăхăтрах кашкăра та ăнланнă пек пулать: унăн ҫурисене пĕтернĕ вĕт. Пурнăҫ саккунĕ тăрăх вара кашни чĕрĕ чун хăйĕн пепкишĕн тăрăшма тивĕҫлĕ. Сут ҫанталăк чĕрĕ какайпа тăранса пурăнмалла туса янăшăн кашкăр айăплă мар.)

**5.** Киле ĕҫ пани. Учебникри 215-мĕш страницăри ыйтусене хуравлама хатĕрленни. Ĕҫ тетрачĕпе ĕҫлени. (47–48-мĕш с.)

## 67-мĕш урок

**Урок теми:** Пĕтĕмлетӳ урокĕ. «Брейн-ринг» вăйă.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– туяннă пĕлӳсене, ăслайсемпе хăнăхусене тарăнлатасси;

– вулавҫă творчествине аталантарасси;

– ушкӑнпа ӗҫлес хӑнӑхусене ҫивӗчлетесси;

– ҫут ҫанталӑка юратас хӑнӑхусене аталантарасси.

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** валеҫсе памалли карточкӑсем, секундомер, параппан, йывӑҫ мӑлатук, сӗтелсем ҫинче – хут листисемпе ручкӑсем, пӗчӗкҫӗ ялавсем; «асамлӑ» арча.

**Вӑйӑ йӗрки:**

– Ыйтусене сӳтсе явмашкӑн – 1 минут. Параппан сассипе пуҫламалла.

– 1 минут иртиччен командӑн ыйту хуравне тупмалла. Маларах тупсан ялав ҫӗклемелле.

– Ыйтӑва камӑн хуравламаллине капитан палӑртать.

– Команда маларах тӗрӗс мар хуравласан, ытти командӑсем ыйту хуравне малалла шыраҫҫӗ.

– Тӗрӗс хуравшӑн – 1 балл. Пӗр команда та тӗрӗс хуравламарӗ пулсан тепӗр раундри ыйтушӑн 2 балл памалла.

– Вырӑнтан кӑшкӑрни шутланмасть.

– Йӗркене пӑснӑшӑн 1 балл чакать.

**1.** Ертӳҫӗ сӑмахӗ. (Жюрипе паллаштарать, ӑнлантарать, ӑнаҫу сунать.)

**2.** Командӑсен саламӗ. (Командӑпа, девизпа, эмблемӑпа паллаштараҫҫӗ.)

**3.** 1-мӗш тур

***«Тимлӗ вулавҫӑ-и эсир?»***

1) Хӑш калавра ӗҫсем Ентер кӳлли хӗрринче пулса иртеҫҫӗ? («Аптраман кӑвакалсем». Н. Ишентей.)

2) Хӑш калавра герой тӗксӗм хӑмӑр кашкӑрпа кӗрешет? («Кашкӑрсемпе ҫапӑҫни». Ҫ. Элкер.)

3) Хӑш калавра Унтри йӗлтӗрпе ярӑнма вӗренет? («Мулкач та тутӑн пултӑр». Л. Ковалюк).

4) Хӑш йывӑҫ вӑрӑран шӑтнӑ хыҫҫӑн 5–10 ҫул иртсен кӑна ҫимӗҫ пама пуҫлать? (Уртӑш. – «Уртӑш». Н. Матвеев.)

5) «Асамлӑ арча». Арчана мӗнле ӗҫчен чӗр чун ӳкерчӗкне хунӑ? (Каюра.)

1-мӗш тур пӗтӗмлетӗвӗсем.

**4.** 2-мӗш тур

***«Сӑмах – литература хатӗрӗ»***

1) Питӗ хытӑ хӑранине мӗнле сӑмахсемпе палӑртаҫҫӗ? («Ҫӳҫӗ шӑрт пек вирелле тӑчӗ». – («Кашкӑрсемпе ҫапӑҫни». Ҫ. Элкер).

2) Сиктерсе хӑварнӑ сӑмахсене ҫырса хурӑр. *«Ҫав вӑхӑтрах вӗсем патнелле йывӑҫсем хушшинчен Хураҫка... (лӗпӗстетсе) тух-*

*ни курӑнчӗ».* («Ӑсанпа Хураҫка». Н. Иванов.)

3) Таса юр хӗллехи уяр ҫанталӑкра мӗн тӗслӗн курӑнать? (Ҫутӑ кӑвак тӗслӗн курӑнать. – «Мулкач та тутӑ пултӑр». Л. Ковалюк.)

4) Сӑмахсене уйӑрӑр: *Ҫараҫерҫисенуссипысӑк.* («Ҫара ҫерҫи». Н. Матвеев.)

5) «Тукмак» сӑмах хӑш тискер чӗр чуна пӗлтерет? (Кашкӑр.)

2-мӗш тур пӗтӗмлетӗвӗсем.

**5.** 3-мӗш тур

***«Капитансем ӑмӑртаҫҫӗ»***

1) Аптранӑ кӑвакал мӗн тунӑ? (Кутӑн чӑмнӑ.)

2) Н. Ишентейӗн «Аптраман кӑвакалсем» калавӗнче миҫе кӑвакал чӗппи ҫинчен каланӑ? (7 кӑвакал чӗппи ҫинчен каланӑ.)

3) Ҫ. Элкерӗн «Кашкӑрсемпе ҫапӑҫни» калавӗнче Ҫемен сӑрӑ кӑвак кашкӑрпа хӑш вырӑнта тӗл пулать? (Кашкӑр путмарӗнче.)

4) Пирӗн республикӑра миҫе тӗрлӗ ҫара ҫерҫи пурӑнать? (5 тӗрлӗ ҫара ҫерҫи.)

5) Г. Орловӑн «Кашкӑр тавӑрӑвӗ» калавӗнче кашкӑрсем миҫе сурӑха йӑтса каяҫҫӗ? (8 сурӑха.)

3-мӗш тур пӗтӗмлетӗвӗсем.

**6.** Урока (вӑййа) пӗтӗмлетни. (Вырӑнсене палӑртни, парнесем пани, отметкӑсем лартни.)

## 68-мӗш урок

**Урок теми:** И. Дубанов. «Эл кӳлли».

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

– ансат ӑслӑх текстӗ ҫинчен туяннӑ пӗлӳсене тарӑнлатасси;

– текста пӗлтерӗшлӗ пайсене уйӑрма, чи пӗлтерӗшлине палӑртас хӑнӑхусене аталантарасси;

– текст содержанине план тӑрӑх каласа парас хӑнӑхусене ҫивӗчлетесси;

– сут ҫанталӑка юратма хавхалантарасси.

**Урок юхӑмӗ**

1. Текста вулани. (Ушкӑнпа черетленсе сасӑпа тата ӑшра вулаҫҫӗ.)

2. Текст содержанине тишкерни.

– Чӑваш енри чи паллӑ кӳлӗ мӗн ятлӑ? Вӑл ӑта вырнаҫнӑ? (Эл кӳлли. Вӑл Тӑвай районӗнче вырнаҫнӑ.)

– Кӳлӗре чи тарӑн вырӑн миҫе метр? (10 метр.)

– Ҫыран хӗрринче мӗнле курӑксем ӳсеҫҫӗ?

– Кӳлӗре хӑш пулӑсем пурӑнаҫҫӗ? (Уланкӑ, кӑртӑш, хӗрлӗ куҫ, шыв ҫи, ыраш пӑтри, хӗрлӗ карас, карас.)

– Кунта мӗнле кайӑксем вӗҫсе килеҫҫӗ? (Кӑвакалсем, чарлансем, шыв чӑххисем.)

– Пӗрремӗш, иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш халапсем мӗн ӗнентереҫҫӗ? (Пӗрремӗш халап тӑрӑх кӳлӗ варринче авӑр пур, иккӗмӗш халап тӑрӑх – утрав пур, виҫҫӗмӗш халап тӑрӑх – кӳлӗ Атӑлпа ҫыхӑннӑ.)

– В. Димитриев халапӗнче мӗнле старик ҫинчен каланӑ? (Суваш мучи ҫинчен каланӑ.)

– Тепӗр халапра Эл кӳлли ҫинчен мӗн каланӑ? (Пӗтӗм Чӑваш ҫӗрӗнче сичӗ кӳлӗ пулнӑ. Эл кӳлли ытти кӳлӗсем патне хӑнана ҫӳренӗ. Вӗсем хӑнана кайнӑ чухне «ҫавра ҫилсем сиксе тухаҫҫӗ те кӳлӗри шыва тӳпенелле хӑпартса яраҫҫӗ».)

**3.** Текст тытӑмне тишкерни.

– Хайлав планне тӑвӑр. (1. Эл кӳлли мӗнлерех кӳлӗ? 2. Кӳллӗн цифрӑллӑ характеристики. 3. Кӳлӗри ӳсен-тӑран. 4. Кӳлӗри чӗр чунсем. 5. Халапсем – кӳлӗ ҫинчен. 6. В. Димитриев халапӗ. 7. Тепӗр халап.)

В. Димитриев халапӗн содержанийӗпе тытӑмне тишкерни.

– Типӗ ҫул тутар ҫарӗ мӗн туса ҫӳренӗ? Тупса вулӑр. («Тутар ҫарӗсем ялсене ҫарата-ҫарата, выльӑхсене хӑваласа кая-кая, ҫынсене вӗлере-вӗлере, хӗрарӑмсемпе хӗрсене тыткӑна иле-иле кайса Эл кӳлли патне ҫитсе тухнӑ.»)

– Суваш мучипе ҫынсем кӳлӗ хӗрринче мӗн тунӑ? («Вӗсем тихапа чӳк тунӑ та Эл кӳллинчен ҫумӑр яма, усал тӑшмансенчен хӳтӗлеме ыйтса кӗл тума пуҫланӑ.»)

– Чӳк тунин усси пулнӑ-и? («Унччен те пулмасть ҫиҫӗм ҫиҫет, аҫа ҫапать, ҫил-тӑвӑл ҫӗкленет те кӳлӗри шыв ҫумӑр пӗлӗчӗ пулса тӳпене хӑпарса каять. Витререн тӑкнӑ пек шалкӑм ҫумӑр пуҫланать те виҫӗ талӑк пӗр чарӑнмасӑр ҫӑвать, пӗтӗм тавралӑх шыва каять.)

– Тутар ҫарӗсемпе мӗн пулса иртет? («Ҫак вӑхӑтра тутар ҫарӗсем ҫаратнӑ пурлӑхӗпе, выльӑх кӗтӗвӗпе сӗм вӑрман витӗр иртсе пынӑ. Вӗсем тискер ҫумӑр айне пулса шурлӑха путса пӗтеҫҫӗ.»)

– Ҫакӑн хыҫҫӑн Суваш мучи хӑй несӗлӗсене мӗн халалласа хӑварать? ( «... вӑрмансене сыхлама тата упрама, кашни ҫуркунне Эл кӳллинчен ырлӑхпа сывлӑх ыйтса чӳк тума халалласа хӑварнӑ.»)

– Тытӑмӗ тӑрӑх хайлав икӗ пысӑк пая уйрӑлать: 1. Кӳлӗ характеристики. 2. Халапсем. Планӑн хӑш ыйтӑвӗсене хӑш пая ҫыхӑн-

тарма пулать? (1. Кӳлĕ характеристики: 1) Эл кӳлли мĕнлерех кӳлĕ. 2) Кӳллĕн цифрăллă характеристики. 3) Кӳлĕри ӳсен-тăран. 4) Кӳлĕри чĕр чунсем. 2. Халапсем: 1) Халапсем – кӳлĕ ҫинчен. 2) В. Димитриев халапĕ. 3. Тепĕр халап.)

– Текст содержанине план ыйтăвĕсем тăрăх каласа парăр. (Кашни ыйту тăрăх пĕрер ача калаҫать.)

**4.** Пĕтĕмлетни (интерпретаци).

– Ку хайлава Иван Дубанов ҫырнă. Вăл ку историпе мĕн каласшăн? (Ҫĕр хăвăлне шыв тулнипе пулса кайнă кӳлĕсем Чăваш енре нумаях мар. Пĕр халапра каланă тăрăх, пĕтĕмпе ҫичĕ кӳлĕ пулнă иккен. Иван Дубанов – географ. Вăл Чăваш енри кашни кӳлле, пĕвене, ҫăлкуҫа, юхан шыва пĕлет. Кашнин ҫинчен халăхра ҫӳрекен халапсене пĕлет. Эл кӳллине те тĕпченĕ вăл. Ку хайлав ун тĕпчевĕсенчен пĕри пулать. Хайлавăн пĕрремĕш пайĕ ăслăх тексчĕ пулать, иккĕмĕш пайĕ – илемлĕ литература тексчĕ. Автор тăван тавралăха юратма чĕнет. Юратас тесен чи малтан тавралăх историне пĕлмелле.)

**5.** Киле ĕҫ пани. Ĕҫ тетрачĕпе ĕҫлени. (48–49-мĕш с.)

## 69-мĕш урок

**Урок теми:** В. Харитонов. «Ҫил ачи».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– чĕлхен палăрту хатĕрĕсен пĕлтерĕшне чухлама вĕрентесси;
– ăшри вулав мехелĕсене аталантарасси;
– палăртуллă вулав хăнăхăвĕсене тарăнлатасси;
– ҫут ҫанталăка юратма хавхалантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** Сăвва ăшра вулани.

**2.** Вулав ăнланулăхне тĕрĕслени.

– Ҫил ачи пĕр каҫ кӳлĕм мĕн тăвать? (Катаччи чупма тухать.)
– Чи малтан вăл мĕн тăвать? (Мăрьене шаккать.)
– Унтан вăл ăҫталла вирхĕнет? (Вăрман еннелле вирхĕнет.)
– Ҫула май мĕнле шăхăрать? (Ши! те ши! шăхăрать.)
– Чăтлăхра мĕн тăвать? (Пĕтĕрнет, ҫаврăнать, йывăҫсене ҫапăнать.)
– Мĕнсем ура хураҫҫĕ? (Хурăнсем ура хураҫҫĕ.)
– Ҫулне мĕн пӳлет? (Ҫил ҫулне вĕрене пӳлет.)
– Шĕшкĕрен ҫил мĕн ыйтать? (Килне мĕнле каймалли ҫинчен ыйтать?)
– Шĕшки мĕн хуравлать? (Эс мĕскер ҫĕрле ҫӳретĕн тет.)

– Вара ҫил ачи мӗн тӑвать? (Вара ҫил ачи ашкӑнма чарӑнать.)

– Ҫил ачи килне ҫитет-и? (Ҫитеймест.)

– Вӑл ӑҫта ҫывӑрать? (Ҫавӑнтах ҫӗр ҫине выртать те ыйха путать.)

**3.** Сӑвӑ содержанийӗпе тытӑмне тишкерни.

– Ҫил ачи ҫулне йӗрлӗр. (Ҫил ачи ялтан тухать те вӑрманалла ҫул тытать. Кунта йывӑҫсене ҫапӑнать-ҫапӑнать те ӑна хурӑнсем ура хунипе чарӑнать.)

– Ҫил ачи тенине мӗнле ӑнланмалла? (Ҫилӗ ытлашши вайлах мар пулмалла та, ҫавӑнпа ку сӑнар ҫил ачи ятлӑ.)

– Ку ҫил ачи пулсан, ҫиле мӗнлерех сӑнарпа палӑртма пулать? (Тен, ҫил-тӑман, тен, ҫил-тӑвӑл?)

**4.** Чӗлхепе стиль сӑнавӗ.

– Поэт ҫут ҫанталӑк пулӑмне – ҫиле – чӗрӗ сӑнар тума питӗ ирӗклӗ сӑнлӑхсем ӑсталать. Ҫапла тума ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсем пулӑшаҫҫӗ. Ҫав сӑмахсене тупар-ха. (Ҫил – чупма тухрӗ (катаччи), шаккарӗ (мӑрьене), ҫӳҫентерчӗ (Марьене), тухрӗ (ҫул ҫине), вирхӗнчӗ (вӑрман енне), шӑхӑрать (ши!), пырса ҫитрӗ (чӑтлӑха), пӗтӗрнет, ҫаврӑнать, ҫапӑнать (йывӑҫсене), кайӗччӗ (килне), ыйтать (шӗшкӗрен), чарӑнать (ашкӑнма), ҫӗтсе кайнӑ, выртать (ҫӗр ҫине), путать (ыйха). Ҫил ачи ҫын пекех калаҫать (Кирлӗ мар катаччи).

– Ҫиле чӗрӗ тума паллӑ ячӗсем те пулӑшаҫҫӗ. Вӗсем хӑшӗсем? (Вичкӗнни, пуҫтах, шух (ҫил).

– Сӑвӑра ытти сӑнарсем те чӗрӗ. Вӑл тӗслӗхсене тупӑр. (Хурӑнсем ура хураҫҫӗ; вӗрене пӳлет ҫулне; «Эс мӗскер ҫӗрле ҫӳрен?» – тет мӑйӑр йывӑҫҫи; хӗвел хӗрелсе тухать.)

**5.** Учебникри 220-мӗш страницӑри ыйтусемпе ӗҫлени.

**6.** Сӑвва палӑртуллӑ вулани.

**7.** Ӑнлантарни (интерпретаци).

– Сӑвӑ мӗнле туйӑм ҫуратрӗ? (Сӑвӑ хаваслӑ туйӑм ҫуратрӗ.)

– Автора мӗн хумхантарнӑ? (Ҫиллӗ ҫанталӑк ун умне ҫил ачи сӑнарне кӑларса тӑратнӑ. Ку пӗчӗкҫӗ кӑна ҫил ачи. Вӑл ашкӑнчӑк, шухӑ ача пекскер. Мӑрьене шаккаса пӑхать те вӑрманалла вӗҫтерет, унта чӑтлӑха пырса кӗрсен нумаях та ашкӑнаймасть. Ӗшеннӗскер ҫавӑнтах выртса ҫывӑрать. Ҫапла вара поэтсемшӗн мӗнпур тӗнче чӗрӗ.)

– Сӑвва тата мӗнле ят килӗшет? («Ашкӑнчӑк ҫил ачи», «Чарусӑр ҫил ачи».)

**8.** Киле ӗҫ пани. Сӑвва пӑхмасӑр калама вӗренни. Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени. (49–50-мӗш с.)

## 70-мӗш урок

**Урок теми:** Г. Орлов. «Çухату».

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

– палăртуллă вулав хăнăхăвӗсене аталантарасси;

– геройсен кăмăлçах туйăмне ăнкарма хăнăхтарасси;

– çут çанталăка юратма хавхалантарасси.

**Урок юхăмӗ**

**1.** Текста вулани. (Ушкăнпа черетленсе сасăпа вулаççӗ.)

**2.** Калав содержанине тишкерни.

– Автор килӗштерекен вырăн ăçта пулнă? (Йăлăмра пулнă.)

– Ку мӗнле вырăн пулнă? Тупса вулăр. («Хырлă-хурăнлă, сăртлă-лапамлă тавралăх».)

– Çав вырăн авторшăн тата мӗнпе паха? (Унта тӗлӗнмелле кайăк пурăннипе паха пулнă.)

– Кайăк ăна курсанах мӗнле юрлама тытăннă? («Пи-пип, пи-пи-пи… Кил-кил-кил…» – тесе ăшшăн чӗнетчӗ пек».)

– Унăн кӗвви мӗнлерех пулнă? Тупса вулăр. («Инçетрен ун кӗвви яланах тунсăхлă пекчӗ. Çывхарнă май вăл савăкланнăçемӗн савăкланнине сисеттӗм.»)

– Автора кайăк ăçта кӗтсе илнӗ? (Прачака хӗррине тухса кӗтсе илнӗ.)

– Вăл авторпа юнашарах пынине ăçтан пӗлнӗ? Тупса вулăр. («… эпӗ ăçталла пăрăнаттăм, вăл та çавăнталлах пыратчӗ. Йывăç çинчен йывăç çине вӗçе-вӗçе… Вăл, кӗвви ӗнтӗ, вăйсăрланса пыратчӗ те самантлăха пачах çухалатчӗ, унччен те пулмасть каллех хыттăн-хыттăн янăраса каятчӗ. Çывăхрах… Эпӗ хăйӗн чиккинчен (çав тавраран эппин) аяккарах кайсассăн тин вăл манран юлатчӗ.»)

– Çав кайăк авторшăн кам пек туйăннă? (Ырăран ырă савăк юлташ пек туйăннă.)

– Кайăк сасси аяккалла кайса пынăçемӗн мӗнлерех илтӗннӗ? («Кил, кил, татах кил…» тенӗн илтӗннӗ.)

– Мӗн пирки автор çулне кукăртса-тавралатса çав кӗтесе сахал мар кӗрсе тухнă? (Çав кайăкпа тӗл пулма, ун сассине итлесе киленме.)

– Çапла миçе çул иртнӗ? (Виçӗ çул иртнӗ.)

– Тăваттăмӗш çулхине мӗн пулнă? (Кайăк кӗтсе илмен.)

– Кунти ӗçсем хăш уйăхра пулса иртеççӗ? (Сентябрьте.)

– Эрне малтан мӗн пулнă? Тупса вулăр. («Унччен, эрне малтан, вăл нихçанхинчен те хавасрах юрларӗ. Темиçе хут та çывăхранах çаврăна-çаврăна иртрӗ. Ăсатасса та яланхилле мар, инçерех ăсатрӗ мана. Теме сисрӗ пулмалла çав».)

– Автор кайӑка кӗтнӗ-и? (Кӗтнӗ. Кайӑк сасси илтӗнмест-ши тесе урлӑ-пирлӗ утнӑ, анчах кайӑк сасси илтӗнмен.)

– Кӑштахран хыр лӑссисем ҫинче мӗн асӑрханӑ? (Юнлӑ тӗксем асӑрханӑ.)

– Унтанпа миҫе ҫул иртнӗ? Ҫакна ӑҫтан пӗлтӗмӗр? (Унтанпа ҫичӗ ҫул иртнӗ: хурӑнсем ҫичӗ хут ҫулҫӑ тӑкрӗҫ тенӗ.)

– Автор халӗ те унта ҫӳрет-и? (Ҫӳремест.)

– Мӗншӗн каймасть? (Чунӗ сивӗннӗрен.)

**3.** Калав тытӑмне тишкерни.

– Калава миҫе пӗлтерӗшлӗ пая пайлама пулать? Калав планне тӑвӑр. (1. Йӑлӑмри тарават вырӑн. 2. Пӗчӗкҫӗ кайӑк кӗтсе илет. 3. Пӗчӗкҫӗ кайӑк ӑсатса ярать. 4. Ҫав вырӑна ҫаврӑнса ҫитни. 5. Тӑват-тӑмӗш кӗркунне, эрне маларах. 6. Кайӑка кӗтни кӑлӑхах. 7. «Чун сивӗнчӗ».)

– Чи хӗрӳллӗ самант хӑшӗ? Мӗншӗн ҫапла шутлатӑр? (Чи хӗрӳллӗ самант автор юнлӑ тӗксем сапаланса выртнине курни пулать. Вӑл вӑрмана кашни каймассерен – виҫӗ ҫул хушши – пӗчӗк кайӑкпа тӗл пулма хӑнӑхнӑ. Кайӑка туртса ҫурнине ӑнлансан вӑл пӗтӗм чӗререн хӗрхенет ӑна. Ӗнтӗ вӑл тек нихҫан та ҫав кайӑка кураймӗ, унӑн савӑк сассине илтеймӗ. Ӑна малашне те «кил-кил-кил» тесе кӗтсе илсе «кил, кил, татах кил» тесе ӑсатса ямӗ.)

– Кайӑк автор чӗрине ӗмӗрлӗхех кӗрсе вырнаҫнине мӗн ҫирӗплетсе парать? (Ҫичӗ ҫул каялла пулса иртнӗ историне каласа парать вӑл. Кайӑк тусне чунтан хӗрхеннине пулах унӑн чунӗ те ҫав вырӑнтан сивӗнет. Ӗнтӗ вӑл унта ҫичӗ ҫул каймасть.)

**4.** Чӗлхепе стиль тишкерӗвӗ.

– Калавҫӑ 1-мӗш сӑпатран каласа парать. Урӑх сӑпатран каласа панӑ пулсан мӗн улшӑннӑ пулӗччӗ? (1-мӗш сӑпатран каласа панипе автор калавӑн туйӑмлӑхӗпе кӑмӑлҫах уҫлӑхне витӗмлӗрех тӑвать. Хӑй калас тенине эпир ҫывӑхрах, уҫӑмлӑрах куратпӑр. Пирӗн туйӑм та вайлӑрах кисренет.)

– Кайӑка автор мӗнле сӑмахсемпе палӑртать? («Тӗлӗнмелле кайӑк», «ҫав вырӑнӑн кӑмӑллӑ хуҫи еврӗскер», «пӗчӗкчӗ хӑй», «ырӑран та ырӑ пӗр савӑк юлташчӗ ӗнтӗ», «юратнӑ кайӑк».)

– Калавра кайӑкӑн ятне мӗншӗн асӑнман? (Кайӑк кирек мӗнле ятлӑ та пулма пултарать. Кирек хӑш кайӑка туртса ҫурни те пурнӑҫпа килӗшсе тӑман пулӑм. Ҫавӑнпа автор ку ыйтупа вакланса кайман. Тата вӑл ҫапла ҫырать: «Сӑнаса тӑман эп. Ҫук. Сассинченех пӗлеттӗм».)

**5.** Ӑнлантарни (интерпретаци).

– Автора мĕн тыткăна илнĕ? Вăл мĕншĕн çак историне каласа парать. (Çав вырăна пымассерен пĕр кайăках хăйне кĕтсе илни, ăсатса яни. Тăванне курнăнах туйăннă çакă ăна. «Чуна ытла та ăшăччĕ уна», – тесе çырать вăл. Çакă вăл виçĕ çул хушши тăсăлать. Ытла та çывăхланать вăл кайăкпа. Кайăка çухатсан вара уншăн çав вырăн ют пулса тăрать. Автор çут çанталăка питĕ чунне çывăх илет. Анчах та кайăкăн ĕмĕрĕ этем ĕмĕрĕпе танлаштарсан ытла та кĕске. Ĕнер-и, паян-и – вĕсен уйрăлмах тиветчĕ. Анчах та кайăка унăн тăшманĕ туртса çурни автора хытă кӳрентернĕ. Пурнăçра час-часах çапла пулать: тăшмансем хăйсен тĕллевне пурнăçлани пире пысăк çухату кӳрет.)

**6.** Киле ĕç пани. Учебникри 223-мĕш страницăри ыйтусене хуравлама хатĕрленмелле. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (50-мĕш с.)

## 71-мĕш урок

**Урок теми:** «Çулçӳревçĕ вăрăсем».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– ăслăх тексчĕсем çинчен пĕлнине тарăнлатасси;

– текста сӳтсе явас хăнăхусене аталантарасси;

– харкам тĕллĕн хайлав ăслас хăнăхусене аталантарасси;

– çут çанталăк тĕлĕнтермĕшĕсемпе тĕлĕнес хăнăхусене çивĕчлетесси.

### Урок юхăмĕ

**1.** Текста вулани. (Черетленсе сасăпа вулаççĕ.)

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Вăрăсене мĕн пирки хăйсене çитĕнтернĕ ӳсен-тăрансенчен инçерех ӳсме çăмăлрах? (Ун пек чухне вĕсен вырăншăн кĕрешмелле мар.)

– Вăрăсем мĕн çинче çул çӳреççĕ? (Чĕр чунсем çинче, вĕçен кайăксем çинче, урапа-машина çинче.)

– Кокос мăйăрĕсем миçе çухрăм, мĕн чухлĕ вăхăт хушши ишме пултараççĕ? (Çĕршер çухрăм хушши, икшер уйăх ишме пултараççĕ.)

– Тĕрлĕ чĕр чунсем çинче мĕнле вăрăсем çул çӳреççĕ? (Ятарлă çекĕлсемлĕ вăрăсем.)

– Вĕсем мĕнле майпа куçаççĕ? (Иртсе çӳрекен чĕр чунсен çăмĕнчен çаклanaççĕ те куçаççĕ.)

– Кайăк урисем çумне мĕнле майпа çыпçăнаççĕ? (Тусан-пылчăк çине ӳкеççĕ те кайăк урисем çумне çыпçăнаççĕ.)

– Чарльз Дарвин вĕсем çинче миçе тĕслĕ ӳсен-тăран вăрри тупнă? (80 тĕслĕ вăрă тупнă.)

– Мĕнлерех хаярсем пурри çинчен пĕлтĕмĕр? (Вăрăсене перекен хаярсем пур.)

– Вĕсем вăррисене миçе метр таран таврана переççĕ? (8 метр таран переççĕ.)

– Вăррисем сехетре миçе çухрăм хăвăртлăхпа сирпĕнеççĕ? (Сехетре 100 çухрăм таран хăвăртлăхпа сирпĕнеççĕ.)

**3.** Текст тытăмне тишкерни.

– Текст планне тăвăр. (1. Вăрăсем мĕншĕн çул çӳреççĕ? 2. Кокос мăйăрĕсем. 3. Чĕр чунсен çăмĕнчен çакланакансем. 4. Кайăк ури çумне çыпçăнакансем. 5. Перекен хаярсем.)

– Çилпе вĕçсе куçакан ӳсен-тăран вăррисене каласа тухăр. (Кукша пуç, тирек (тополь), хыр, çӳçе, çăка, вĕрене, упа сарри, хурама, ут кăшкарĕ…)

– Чĕр чун çăмĕнчен çакланса куçакан ӳсен-тăран вăррисене каласа тухăр. (Пиçен, тал пиçен, шăши тикенекĕ.)

– Текст тăрăх мĕнле ӳкерчĕксем тума пулать? Пĕр ӳкерчĕкне сăмахпа сăнласа парăр. (Ачасен хуравĕ.)

**4.** Учебникри 225-мĕш страницăри ыйтусене хуравлани.

**5.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Ку текст мĕн çинчен? (Ӳсен-тăран вăррисем урăх çĕре куçни çинчен.)

– Тĕп шухăшĕ мĕнле? (Ӳсен-тăран вăррисем тĕрлĕ мелпе аяккалла куçаççĕ: шывпа та юхса каяççĕ, çилпе те вĕçеççĕ, чĕр чунсен çăмĕнчен те çакланаççĕ.)

– Текста мĕн тĕллевпе çырнă? (Çĕннине, халиччен пĕлменнине пĕлтерес тесе çырнă.)

**6.** Киле ĕç пани. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (51-мĕш с.)

## 72-мĕш урок

**Урок теми:** М. Волкова. «Пĕлĕтсем, ăçта васкатăр?»; Р. Сарпи. «Пĕлĕтсем – шур путексем».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– сăвăсене танлаштарса тишкерес хăнăхусене аталантарасси;

– чĕлхен палăрту хатĕрĕсен пĕлтерĕшĕсене чухлас хăнăхусене тарăнлатасси;

– пăхмасăр калама вĕренес хевтене çивĕчлетесси;

– сут çанталăкри илеме асăрхама, унпа киленме хавхалантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** «Пĕлĕтсем, ăçта васкатăр?» сăвва вулани. (Учитель вулать.) «Пĕлĕтсем – шур путексем» сăвва вулани. (Учитель вулать.)

**2.** Сăвăсен содержанине тишкерни.

– Сăвăсем мĕн çинчен? (Пĕлĕтсем çинчен.)

– Вĕсен авторĕсем камсем? (Пĕрремĕш сăвă авторĕ Мария Волкова, иккĕмĕш сăвă авторĕ – Раиса Сарпи.)

Мария Волкова сăввине тишкерни:

– Пĕлĕтсем мĕн тăхăннă? (Шур çĕлĕк тăхăннă.)

– Автор мĕнрен тĕлĕнет? (Пĕлĕтсем тем шыраса пĕрмаях таçталла чупнинчен тĕлĕнет.)

– Пĕлĕтсене автор мĕнсемпе танлаштарать? (Шур путексемпе танлаштарать.)

– Шур путексем хăш еннелле ӳпĕннĕ пек туйăнаççĕ? (Шыв енне кăшт ӳпĕннĕ пек туйăнаççĕ.)

Раиса Сарпи сăввине тишкерни.

– Шурă пĕлĕтсене автор мĕнсемпе танлаштарать? (Шурă путексемпе танлаштарать.)

– Путексем ăçта пухăннă? (Вăрман çине пухăннă.)

– Вĕсем кунта мĕн тума пухăннă? (Çулçă çиме пухăннă.)

– Путексем пулсан кĕтӳçĕ те кирлĕ. Сăвăра кĕтӳçе мĕнпе сăнланă? (Кĕтӳçĕ пек çил ачине сăнланă.)

– Вăл мĕн тăвать? (Вăл çывăрать.)

– Ăçта çывăрать вăл? (Тĕм айĕнче çывăрать.)

– Пушши пур-и унăн? (Пушши те пур. Авă, айккинче.)

**3.** Танлаштарни.

– Икĕ автор та пĕлĕтсем çинчен çыраççĕ. Иккĕшне те пĕлĕтсем путексем пек туйăнаççĕ. Çанталăк кашни самантрах улшăнса тăрать. Çавăн пекех пĕлĕтсене те шăп пĕрешкел самантра тытма çук. Икĕ автор хăш тăрăмри пĕлĕтсем çинчен çыраççĕ? (М. Волкова пĕве (кӳлĕ, юхан шыв) çийĕнчи пĕлĕтсем çинчен çырать. Р. Сарпи пĕлĕчĕсем вăрман çийĕнче.)

– Хăш сăвăри пĕлĕтсем куçаççĕ? Хăшĕнчисем куçмаççĕ? (М. Волкова пĕлĕчĕсем куçаççĕ, Р. Сарпин куçмаççĕ.)

– Авторсем сăвва çырнă чухне мĕн ĕçленĕ-ши? (Р. Сарпи сăвă çырнă вăхăтра уйра кĕтӳ кĕтнĕ пулмалла. Пĕлĕтсене сăнанă-сăнанă та вăл çак сăвва çырса хунă. М. Волкова мĕн ĕçленине чухлама хĕн. Тен, шыв хĕрринче хĕртĕнсе выртнă вăл.)

– Сăвăсене вуласа çанталăк ăшă е сивĕ пулнине пĕлме пулать-и? Ăнлантарса парăр. (Р. Сарпи пĕлĕчĕсем ăшă çанталăк çинчен çырнăскерсем: çил çук, пĕлĕчĕсем шап-шурă. М. Волкова сăввинче вара кăштах çил тухнине сисетпĕр. Çавна пула пĕлĕтсем «шыв енне кăшт ӳпĕнсе шăваççĕ.)

**4.** Чӗлхене сӑнани.

– «Шурӑ-шурӑ пӗлӗтсем, шурӑ-шурӑ путексем» тенӗ. Кунта сӑмаха мӗншӗн икӗ хут каланӑ? (Пӗлӗтсем те, путексем те питӗ шурӑ, шап-шурӑ, чӑлт шурӑ пулнине палӑртма ҫапла каланӑ.)

**5.** Ӑнлантарни (интерпретаци).

– Пӗр темӑпах тӗрлӗ автор тӗрлӗ хайлав ӑслать. Ку вӑл ҫут ҫанталӑк тӑрӑмӗ мӗнлерех пулнипе ҫыхӑннӑ. Шӑп пӗрешкел тӑрӑм нихҫан та пулмасть. Шӑп пӗр пек шухӑшлакан, тӗнче ҫине пӗрешкел куҫпа пӑхакан та ҫук. Кашнин хӑйӗн шухӑшлавӗ. (Ачасен хӑйсен, ҫитӗннӗ ҫынсен хӑйсен, арҫынсен хӑйсен, хӗрарӑмсен хӑйсен.) Унсӑр пуҫне тата хаваслаппӑ е хурланнӑ самант пулни те хӑйле сӑнарсем ҫуратать. Ҫавна пула пӗр темӑллӑ сӑвӑсем урӑхла пулса тухаҫҫӗ.

**6.** Киле ӗҫ пани. Сӑвӑсенчен пӗрне пӑхмасӑр калама вӗренни. (В а р и а н т: 226-мӗш страницӑри ыйтусене хуравлама хатӗрленни. В а р и а н т: пӗлӗтсем ҫинчен сӑвӑ ҫырну. В а р и а н т: ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени. (51–52-мӗш с.)

## 73-мӗш урок

**Урок теми:** Хв. Уяр. «Тарӑхнӑ така».

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

– хайлав жанрӗсем ҫинчен мӗн пӗлнине анлӑлатасси;

– персонажсен кӑмӑлҫахпа кӑмӑл-сипет туйӑмне чухлас хӑнӑхусене аталантарасси;

– хайлав содержанийӗпе тытӑмне лартнӑ ыйтусем тӑрӑх тишкерме хӑнӑхтарасси;

– хайлав тытӑмне пӗлтерӗшлӗ пайсене уйӑрас хӑнӑхусене тарӑнлатасси;

– ҫут ҫанталӑка юратма хавхалантарасси.

**У р о к ю х ӑ м ӗ**

**1.** Текста вулани. (Ушкӑнпа черетленсе сасӑпа вулани.)

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Персонажсене асӑнса тухӑр. (Калавҫӑ хӑй, Хитре инке, така.)

– Сурӑха мӗн тени суя? Мӗншӗн? Тупса вулӑр. (Ухмах выльӑх тени суя. «Сурӑх хӑйне кура ӑслӑ та, тӑнлӑ та. Вӑл хӑйне юратнине те аякранах сисет, хӑй ҫине выльӑхла пӑхакан, ӑна сума суман ҫынсене те лайӑх уйӑрса илме пултарать. Сурӑхӑн кирлӗ таран чеелӗхӗ те пур».)

– Яка аппа мӗнле хӗрарӑм пулнӑ? (Тӳр пилӗклӗ хӗрарӑм пулнӑ.)

– Вӑл вӑхӑта мӗнле иртгернӗ? (Пасартан пасара чупнӑ.)

– Пĕррехинче каçкӳлĕм Хитре инке ăçтан таврăннă? (Пасартан таврăннă.)

– Хитре инке мĕнле кĕпепе пулнă? (Шап-шурă кĕпепе пулнă.)

– Хитре инке мĕнле утса пынă? Тупса вулăр. («Йĕтĕр çăтнă текен çын пек, тӳп-тӳрĕ кĕлеткепе патаккипе шак! шак! тутарса ниçталла пăхмасăр утса пырать».)

– Çул çинче мĕн канса выртнă? (Колхозăн ăратлă таки канса выртнă.)

– Хитре инке мĕн тăвать? (Такана туйипе мăйракинчен çапать.)

– Таки çул парать-и? Тупса вулăр. («Лешĕ сиксе тăчĕ те малалла кайса çынна çул пачĕ. Вара тин кам çапать-ха мана тенĕн ун çине таврăнса пăхрĕ».)

– Малалла мĕн пулнă? Тупса вулăр. («Така çапла хăтланни хĕрарăма килĕшмерĕ курăнать. Вăл ăна хăваласа çитрĕ те туйипе тепре çапрĕ. Лешĕ тата пăртак аяккалла лăст! лăст! чупса кайрĕ, каллех çаврăнса тăчĕ».)

– Хитре инке такана виççĕмĕш хут çапма тăрсан мĕн пулнă? Тупса вулăр. («Мăн кăмăллă выльăх та тарăхса çитрĕ. Вăл пуçне лăстăр! силлерĕ те ик-виç утăм каялла чакрĕ. Вара пĕррех Хитре инкене тĕрлеттерсе хăвалама тытăнчĕ».)

– Инке мĕн тăвать? (Малтанах хурăн хыçне пытанса пăхать, унтан туйине ывăтса ярса Хĕветĕрсем патне вирхĕнсе кĕрсе каять.)

– Тем вăхăт иртсен Хитре инке çенĕк умне тухсан мĕн пулнă? Тупса вулăр. («...така таçтан хăяматран сиксе тухрĕ те Хитре инкене хыçалтан пырса нăк! тутарчĕ. Ирĕксĕрех каялла йăпăр-япăр тарса кĕтĕмĕр».)

– Хитре инке пӳртре хăçанччен такана вăрçса ларнă? (Каç пуличчен.)

– Вăл картишне тухса хапха еннелле пынă чух мĕн пулса иртет? Тупса вулăр. («... хайхи така сасартăк тислĕк купи леш енчен сиксе тухрĕ те хапха алăкне уçакан Хитре инкене хыçалтан тепре пырса тăрслаттарчĕ».)

**3.** Калав тытăмне тишкерни.

– Калав планне тăвăр. (1. Сурăх ухмах выльăх мар. 2. Хитре инке. 3. Пасартан таврăнни. 4. Такана пĕрремĕш хут çапни. 5. Такана иккĕмĕш хут çапни. 6. Виççĕмĕш хут çапма тăрсан. 7. Хĕветĕрсем патне тарса кĕни. 8. Çенĕк умне тухсан. 9. Каç пулса çитсен. 10. «Вăт сана ухмах така!»

Вĕрентекен:

– Ку уйлавлă хайлав. Уйлавлă хайлав тытăмĕ çапларах: 1. Тезис. (Кунта мĕнле те пулин шухăша палăртаççĕ.) 2. Аргументсем. (Кунта шухăша çирĕплетекен ĕçсене каласа е çырса кăтартаççĕ.) 3. Пĕтĕмлетӳ. (Кунта хайлав пуçламăшĕнче палăртнă шухăша çирĕплетеççĕ.) Тишкерекен хайлавра аргументсем Хитре инкепе така хушшинчи путишле ĕçсем пулса тăраççĕ. Планăн пĕрремĕш тата юлашки ыйтăвĕсене тезиспа пĕтĕмлетни. Пĕрремĕш тата юлашки ыйтусене сиктерсе хăварсан та хайлав тытăмĕ пăсăлмасть. Хитре инкепе така хушшинчи тытăçăва хăйне уйрăм калав тума та юрать. Ытти калуллă калавсене пурне те тенĕ пекех тезис тата пĕтĕмлетӳ пайĕсемпе анлăлатма пулать.

**4.** Чĕлхепе стиль тишкерĕвĕ.

– Тӳр пилĕклĕ тесе мĕнлерех çынсене калаççĕ? (Ĕçлеме юратман, ĕçрен пăрăнарах çӳрекен, кахал, наян çынсене çапла калаççĕ.)

– Хитре инке, Яка аппа тенисем чăнласах мухтаса, ырă сунса е йĕкĕлтесе каланă сăмахсем? (Ырă сунмасăр, йĕкĕлтесе каланă сăмахсем.)

Вĕрентекен:

– Ĕç вăхăтĕнче пасарсем тăрăх çӳрекенсене халăх юратмасть, вĕсене йĕкĕлтевлĕ ятсем парать. Вĕсем çинчен сăмахланă чухне те йĕкĕлтеш, витлеш сăмахсемпе усă курать. Хитре инке çинчен мĕнле лайăх мар сăмахсемпе юмахланă? (Тӳр пилĕклĕ хĕрарăм, яка тумланса, йăкăртаттарса чупнăшăн, Яка аппа, йăкăртаттарса таврăнать, шап-шурă кĕпепе, вĕçкĕнленсе, йĕтĕр çатнă текен çын, тӳп-тӳрĕ кĕлеткепе, ниçталла пăхмасăр, ейкеленсе, йăпăртаттарчĕ.)

**5.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Автор кăмăлĕ хăшĕн енче: Хитре инке е така енче? Мĕншĕн çапла шутлатăр? (Автор кăмăлĕ така енче. Вăл такана ахалех çапнине ырламасть.)

– Автор ку историпе мĕн каласшăн? (Вырăхсене, чĕр чунсене çынсемпе танлаштарни пĕрре те тĕрĕс мар. Сурăх пек тăмсай тени те вырăнлă танлаштару мар, мĕншĕн тесен кашни чĕр чунăн хăйне пурăнмалăх ăсĕ пур. Хăйне сăлтавсăрах çапнишĕн така хытă кӳренет. Вăл кӳрентерекене хăй пултарнă пек таварать. Çакă, хăйĕн чысне хӳтĕлеме хăтланни, пирĕн кăмăла каять. Эпир уншăн савăнатпăр. Хитре инкере пирĕн кăмăла кайманнисем çаксем: вăл пурте ĕçленĕ вăхăтра яка тумланса пасартан пасара йăкăртатаса çӳрени, мăн кăмăллă пулни, ыттисене хисеплеменни (çакă такана

хиселлеменнинче те куранчĕ). Выльăх пулсан та, ăна хиселлемелле.)

**6.** Киле ĕç пани. Учебникри 229-мĕш страницăри ыйтусене хуравлама хатĕрленни; ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (52–53-мĕш с.)

## 74-мĕш урок

**Урок теми:** Х. Юлдашев. «Лĕпĕш»; Уйăп Мишши. «Çуллахи каникул».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– палăртуллă та илемлĕ вулав ăслайĕсене аталантарасси;

– сăмахсен пĕлтерĕшĕсене чухлас хăнăхусене тарăнлатасси;

– чĕлхе туйăмне çивĕчлетесси;

– çут çанталăк илемне юратма хавхалантарасси.

**Урок юхăмĕ**

**1.** «Лĕпĕш» сăвва вулани. (Малтан учитель палăртуллă вулать, унтан ачасем вулаççĕ.)

**2.** Тишкерни.

– Автор улăхра мĕн тунă? (Утă çулса капана хывнă.)

– Вăл мĕн асăрхать? (Ун умĕнче лĕпĕш явăнма тапратать.)

– Ун пуçĕнче мĕнле ыйтусем çуралаççĕ? (Мĕн шыраса вĕçет-ши тет. Тен вăл хăй кăмăллană чечеке шыраса вĕçет тет. Вăл чечеке эпĕ ăнсăртран касрăм-ши тесе пăшăрханнă пек пулать.)

– Сăвă мĕнле кăмăл-туйăм çуратрĕ? (Ăшă тунсăх çуратрĕ.)

– Сăвă тăрăх мĕнле ӳкерчĕк тума пулать? Сăмахпа каласа пар. (Улăхра, сăмахран, шăнкăрав куракĕ. Кĕрен çеçкесем, симĕс тунапа çулçăсем. Чечек тăррине лĕпĕш, хитре çунатсем. Тӳпере хĕртсе хĕвел пăхать.)

**3.** Сăвва иккĕмĕш хут палăртуллă вулани.

**4.** «Çуллахи каникул» сăвва вулани.

**5.** Тишкерни.

– Сăвă теми мĕнле? (Вĕренӳ çулĕ вĕçленни.)

– Сăвă мĕнле туйăм çуратрĕ? (Хавасла туйăм çуратрĕ.)

– Ача мĕншĕн хавасланать? (Вĕренӳ çулĕ пĕтнишĕн. Çитес çул тепĕр класа куçнишĕн. Çуллахи вăхăтра лайăх ĕçлесе лайăх канассишĕн.)

– Ăшă çу кунĕнче шкулта хаваслă-ши е тунсăхлă? Мĕншĕн? (Тунсăхлă, мĕншĕн тесен шкул пушанса, шăпланса юлнă.)

– Ача тăван шкулне юратни хăш сăмахсенче палăрать? Вуласа парăр. («Савнă шкул, сывă пул», «Эс тăван кил пек пултăн».)

– «Сывă пул сарă ылтăн кĕркунне çитиччен» тенине мĕнле ăн-

ланатăр»? (Ачасем шкулта тепĕр класра вĕренме кĕркунне, сентябрь уйăхĕнче пуçтаранаççĕ. Кĕркунне йывăç çулçисем саралма пуçлаççĕ, ылтăн тĕслех курăнаççĕ. Çавăнпа поэтсем «ылтăн кĕркунне» теççĕ. Авторăн çав тери кĕркунне сарă тĕссем хуçаланнине палăртас килнĕ те, вăл «ылтăн» сăмах умне тата тепĕр «сарă» сăмах хушса лартнă: «сарă ылтăн кĕркунне». Ку вăл туйăмĕ питĕ вăйлă пулнипе сыхăннă.)

– Çуллахи кунсенче мĕнпе савăнмалăх пур? (Çаксемпе савăнмалăх пур: çанталăк ăшă та ырă; тĕнче питĕ симĕс (куна пĕрешкел паллах пĕлтерекен синонимсемпе çине-çинех усă курни çирĕплетет: «ешĕл симĕс тĕнче».)

– Ачасене мĕн йыхăрать? (Ачасене ешерекен аслă улăх йыхăрать.)

– Ирсерен мĕн тума пулать? (Пĕвере вăлтапа пулă тытма пулать.)

– Ачасем çу каçа паллаймиех улшăнасси çинчен хăш йĕркесенче каланă? Вуласа парăр. («Сăн-питсем пăхăрланĕç, ак паллаймăр пачах».)

– Пăхăрланĕç тенине мĕнле ăнланмалла? (Ачасем çу каçипе хĕвел питтинче хĕртĕнеççĕ те вĕсен ӳчĕ хăмăрланать, пăхăр тĕслĕ пулать.)

**6.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Хăш сăвва пысăк хавхаланупа, хавасланса çырнă? Хăшĕ шухăша ярать? (Иккĕмĕш сăвва çуллахи каникул çитнĕшĕн савăнса та хавхаланса çырнă. Вăл хаваслă туйăм çуратать. Пĕрремĕш сăвă шухăша ярать. Лĕпĕш хăй ларса канакан чечеке шыраса вĕçнĕн туйăнать. Автор çав чечеке касса пăрахнăшăн айăплă пек туять. Пурнăçра та эпир шухăшлмасăр тăвакан ĕçсем теприне хур туни час-часах пулаççĕ текен шухăшсем çуралаççĕ. Сăвăсенчи йĕркесен вăрăмăшĕ, ĕçе пĕлтерекен сăмахсем çине шухăш тĕшши ӳкни те шухăшлăхпа туйăмлăх çине витĕм кӳреççĕ. «Лĕпĕш» сăвăра – йĕркесенчи сыпăксен шучĕ çапла черетленет: 9 сыпăк – 6 сыпăк. Кунта йĕркесене вăрăмăшĕ палăрмаллах расна. Шухăш тĕшши ӳкекен сăмахсем: *капана хываттăм, явăнма тапратрĕ, темĕскер тупассăн, ăнсăртран эп касрăм.* «Çуллахи каникулта» йĕркесен черетленĕвĕ çапларах: 7 сыпăк – 6 сыпăк. Уйрăмлăхĕ 1 сыпăк. Çакă сăвă юххине çăмăллатнипе пĕрлех шухăша палăртаслăхне чакарса лартать.)

**7.** Киле ĕç пани. Сăвăсенчен пĕрне пăхмасăр каласа пама хатĕрленни. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (53–54-мĕш с.)

## 75-мӗш урок

**Урок теми:** Г. Харлампьев. «Кӳлӗ хӗрринче».

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

– хайлавӑн темипе тӗп шухӑшне палӑртас хӑнӑхусене аталантарасси;

– палӑртса, тӗрӗс интонаци туса, сӑмахсене чӑмламасӑр вулас хӑнӑхусене ҫивӗчлетесси;

– текст содержанине каласа парас хӑнӑхусене тарӑнлатасси;

– ҫут ҫанталӑка юратма хавхалантарасси.

**Урок юхӑмӗ**

**1.** Текста вулани. (Ушкӑнпа черетленсе, вулав нормисене шута илсе, сасӑпа вулани.)

**2.** Текст содержанине тишкерни.

– Калаври ӗҫсем хӑҫан пулса иртеҫҫӗ? (Ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче пулса иртеҫҫӗ.)

– Текстри персонажсене асӑнӑр. (Автор хӑй тата Йӑкӑнат.)

– Хӑш кӳлӗ таврашӗнче кунӗпе ҫӳресен те йӑлӑхтармасть? (Ҫавра кӳлӗ таврашӗнче.)

– Кӳлӗ таврашӗнче мӗнле ӳсен-тӑрансемпе чӗр чунсем пурӑнаҫҫӗ? (Хӑях, хӑмӑш, чечексем, хӑва, тем тӗрлӗ кайӑк-кӗшӗк.)

– Авторпа пӗрле кам ҫӳрет? (Йӑкӑнат.)

– Вӑл ӑна мӗншӗн юратмасть? (Кайӑксене чулпа персе хӑратнӑшӑн юратмасть.)

– Автор чӗр чунсене юратни ӑҫтан курӑнать? (Вӑл Йӑкӑната юратманнинчен.)

– Автор кӳлӗ хӗрринче мӗн тунӑ? (Хӑва хушшине вырнаҫса ларса кӗнеке вулама тытӑннӑ.)

– Вӑл мӗнпе киленсе ларать? (Кайӑксем юрланине итлесе киленсе ларать.)

– Сасартӑк мӗн курать? (Икӗ кайӑк кӑвакал ишсе пынине курать.)

– Вӗсем унран хӑраҫҫӗ-и? (Хӑрамаҫҫӗ.)

– Сасартӑк мӗнле хӑрушӑ ӗҫ пулса иртет? Тупса вулӑр. («Унччен те пулмарӗ хайхи кӑвакалсем еннелле ман пуҫ урлӑ туя вӑшлатса иртрӗ. Кайӑксем ҫатӑл-ҫатӑл ҫӗкленсе вӗҫсе кайрӗҫ».)

– Ҫак ӗҫе кам тунӑ? (Йӑкӑнат.)

– Ҫав кӑвакалсем кӳлӗ ҫине урӑх вӗҫсе килеҫҫӗ-и? (Тӗттӗмленес умӗн каллех вӗҫсе килеҫҫӗ.)

– Хальхинче вӗсем автор патне ҫывхараҫҫӗ-и? (Ҫывхармаҫҫӗ. Ӑна курсан аякранах вӗҫсе тараҫҫӗ.)

– Пĕрре шуйхатнă кайăксем çинчен калавра мĕн каланă? Тупса вулăр. («Пĕрре шуйхатнă кайăксем этемрен шикленме пуçлаççĕ иккен. Вĕсем çын аллинче пăшал е патак-мĕн курсан та катаранах хăраса тараççĕ. Ку çеç те мар, кайăксем çын хăйсем çине пăхнине, иртсе пынă чух чарăнса тăнине е тата вĕсем енне алăпа тĕллесе кăтартнине те питĕ юратмаççĕ».)

**3.** Калав тытăмне тишкерни.

– Калавăн планне тăвăр. (1. Çавра кӳлĕ таврашĕнче. 2. Чăрсăр Йăкăнат. 3. Кайăксен концерчĕ. 4. Икĕ кайăк кăвакал. 5. Туя. 6. Тĕттĕмленес умĕн. 7. Пĕрре шуйхатнă кайăксем.)

– Планри пĕр-пĕр ыйтăвăн содержанине уçса пани.

– Сире хăш персонаж килĕшрĕ? Хăшĕ килĕшмерĕ? Мĕншĕн? (Автор килĕшрĕ. Вăл çут çанталăка юрататъ, кайăксен концертне итлесе киленет. Çакă вăл таса чун-чĕреллĕ, ырă ача пулнине пĕлтерет. Кайăк кăвакалсене те хăратмасть вăл. Йăкăнат вара килĕшмерĕ. Вăл усал ача: кайăксене юратмасть, вĕсене туяпа перет.)

– Калаври ĕçсем хăш вырăнта мĕн вăхăт хушшинче пулса иртеççĕ? (Кӳлĕ хĕрринче пĕр кун хушшинче пулса иртеççĕ.)

– Калав тăрăх миçе ӳкерчĕк тума пулать? Пĕр ӳкерчĕкне сăмахпа сăнлăр. (Ачасен хуравĕ.)

**4.** Калав чĕлхине сăнани.

– «Вырăнĕ ытарма çук илемлĕ!» тенĕ. Çак предложенире кăшкăру паллине мĕншĕн лартнă? (Калас тенине палăртуллăрах тăвас тесе.)

– «Шуйхатнă кайăксем» тенĕ. «Хăратнă кайăксем» теме те пулать. Малтанхи сăмах çаврăнăшĕ вырăнлăрах пулнине ăнлантарăр. Хăратнă чухне хăрушлăх хăш енчен пулни паллă. Шуйхатнă чухне хăрушлăх хăш енчен килессе пĕлмеççĕ, çавăнпа та урлă-пирлĕ чупкалаççĕ. Хăйсен тăшманĕ ăçта пытанса ларнине асăрхамасан та пултараççĕ.)

– Йăкăнат туйипе персе кăвакалсенчен пĕрне вĕлернĕ пулсан малалла мĕн пулма пултарнă пулĕччĕ? (Икĕ кăвакал аçипе ами е амăшĕпе (ашшĕпе) чĕппи пулма пултарнă. Сывă юлни питĕ татăлса, макăрса кăшкăрнă пулĕччĕ. Ниçта кайса кĕрейми хурланĕччĕ. Кайран ку кӳлĕрен урăх çĕре вĕçсе кайнă пулĕччĕ.)

**5.** Ăнлантарни (интерпретаци).

– Автор ку историпе мĕн каласшăн? (Çĕр çинче усалли те пур, ырри те пур. Лайăххи те, япăххи те юнашар. Усалли айăпсăрринех хур кăтартма пăхать. Лайăххи юратура. Ырă кăмăллă çынсем çут

çанталăка, чĕр чунсене юратаççĕ. Усал чунлă çынсем кайăксене туяпа персе вĕлереççĕ. Вĕсем çут çанталăк илемне туйма пĕлмеççĕ. «Калăр-ха, мĕншĕн хăратас чип-чипер вĕçсе çӳрекен кайăксене? Мĕншĕн тивес никама сиен кӳмен чĕр чунсене?» – тет автор. Çакă калавăн тĕп шухăшĕ пулса тăрать.

**6.** Киле ĕç пани. Учебникри 233-мĕш страницăри ыйтусене хуравлама хатĕрленни. Ĕç тетрачĕпе ĕçлени. (54 – 55-мĕш с.)

## 76-мĕш урок

**Урок теми:** Пĕтĕмлетӳ урокĕ. Литература уявĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

– туяннă пĕлӳсене. ăслайсемпе хăнăхусене тарăнлатасси;
– ушкăнпа ĕçлес хăнăхусене аталантарасси;
– ыйтăва хуравласа диалога хутшăнас хăнăхусене çивĕчлетесси;
– çут çанталăк илемне асăрхама, унпа киленме хăнăхтарасси.

**Урок юхăмĕ**

Тăван тавралăх хитри çинчен кĕвĕ янăрать. (А. Никитин альбомĕ.)

**1.** Йĕркелӳ саманчĕ.

Вĕрентекен:

– Акă эпир, ачасем, тата тепĕр сыпăка, юлашки сыпăка вуласа пĕтертĕмĕр. Кĕнеке вĕçне тухрăмăр. Сыпăк ячĕ мĕнлеччĕ? («Ытарайми, асран кайми тăван тавралăх.)

– Пирĕншĕн пуриншĕн те хамăр çуралнă ял, ял тавралăхĕ, вăрманĕ, уй-хирĕ хаклă.

– Çыравçăсен хайлавĕсене вуларăмăр эпир. Вĕсене мĕн хумхантарать? Мĕн çинчен çыраççĕ вĕсем? Усаллине е ыррине мухтаççĕ? (Ыррине, лайăххине мухтаççĕ, унпа тĕлĕнеççĕ, савăнаççĕ.)

– Эсир хăвăр çут çанталăкри илеме туйма вĕренĕр. Ытла та çепĕç те черченкĕ пирĕн çут çанталăк. Упрăр та перекетлĕр ăна.

– Этем çут çанталăк патши теççĕ. Анчах та эпир çĕр çинче пĕччен мар. Пирĕн пĕчĕкçĕ тăвансем пур, вĕсем – чĕр чунсем. Нумайăшне алла вĕрентнĕ. Вĕсемшĕн тӳрременĕх явап тытатпăр. Анчах та алла вĕрентменнисене те упрамалла. Вĕсене валли лайăх условисем туса пама тăрăшмалла.

**2.** Паллаштарни.

– Пирĕн пата паян çамрăк çыравçăсем килнĕ. Çут çанталăка питĕ юратаççĕ вĕсем. Хăйсен юратăвне сăвăра палăртаççĕ. Вĕсем сăввисене «Тантăш» хаçатпа «Тетте» журналта пичетлеççĕ.

**3.** Çамрăк çыравçăсен сăмахĕ.

1-мĕш çыравçă:

ÇЕÇПĔЛ

Эп çеçпĕл чечеке сума săватăп.
Çеçкийĕ унăн хĕрлĕ те кăвак.
Хăвачĕпе чăн-чăн вăл улăп –
Юр сиввинчен те хăрамасть.

*(Улатимĕр Мишшан)*

2-мĕш çыравçă:

ХĔЛ ПУÇЛАНАТЬ

Çăра вăрман пин тĕслĕн
Çунса йăлтăртатать.
Пит шăппăн, чĕрне вĕççĕн
Ват Хĕл мучи утать.

Çиçет хаваслă кăмăл,
Чĕрем сиксех тапать!
Чунра ман питĕ çăмăл
Каллех хĕл пуçланать.

*(А. Васильев)*

3-мĕш çыравçă:

ХĔЛЛЕ

Хĕлле, тăкса хăй кĕмĕлне,
Çутатрĕ тĕттĕм çĕр сăнне.
Шăпланчĕ халĕ пушă хир,
Тек шăпчăк юрламасть каç-ир.

*(В. Терентьев-Тăвăл)*

4-мĕш çыравçă:

ÇИТРĔ ÇУРКУННЕ

Ялкăшса çиçет инçет,
Сăрт çамки ăшша писет.
Пăсланать вăл шевкенччен*
Сар хĕвел пытаниччен.
Ун тавра ача-пăча
Канăçа пĕлмест пачах.
Çил ачи пек, вăр! кăна
Кутăн-пуçăн вăркăнать.
Маннă тейĕн кил çинчен
Савăнаççĕ тĕттĕмччен.
Ма тесессĕн сăрт çине
Килсе çитрĕ çуркунне!

*(Л. Смолина)*

*шевкен – каçхи шурăмпуç

**4.** Халĕ сирĕн хайлавсене итлер. (Класри ачасен хайлавĕсене итлеççĕ.)

**5.** Ачасене хайлавĕсенче мĕн килĕшнине палăртаççĕ.

**6.** Пĕтĕмлетни.

---

**Асăрхаттарни.** Кĕнекере усă курма сĕннĕ ĕç тетрачĕ «Перфектум» издательствăра 2010 çулта пичетленнĕ (авторĕсем Т.В. Артемьева, О.И. Печников). Каярахпа тухнă ĕç тетраденчи страницăсем ку кĕнекере кăтартнă страницăсемпе тӳр килмесен те пултараççĕ.

◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇◇

# ТУПМАЛЛИ


«Литература вулавӗ» предметӑн 3-мӗш класри вӗрентӳ тӗллевӗсемпе задачисем....... 3

Литература вулавӗн «Ылтӑн пучах» кӗнеки тытӑмӗ........ 4

Литература вулавӗн урокӗсенче воспитани парасси........ 7

«Литература вулавӗ» предмет мелӗсемпе 3-мӗш класра вӗренӗвӗн универсаллӑ действийӗсене (ВУДсене) калӑпласси........ 14

Текстпа ӗҫленӗ чухне пуплев ӑслайӗсемпе хӑнӑхӑвӗсене аталантарасси........ 20

Вулаҫӑ пултарӑвне пуянлатасси тата аталантарасси.... 21

Ачасен ҫитӗнӳ шайне палӑртмалли хаклав виҫисем....... 23

Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлесси........ 26

Ӳкерчӗксен альбомӗпе ӗҫлесси........ 29

Уроксем........ 32

*Учебное издание*

**Тамара Васильевна Артемьева**
**Олег Иванович Печников**

# ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВĔН УРОКĔСЕМ

***3-мĕш класс***

---

# УРОКИ ЛИТЕРАТУРНОГО ЧТЕНИЯ В 3 КЛАССЕ

**Методические рекомендации**

*На чувашском языке*

Редактор *О. Г. Кульев*
Корректор *В. А. Филиппова*
Верстка *И.В. Матвеевой*

Подписано к печати 15.06.2012 г.
Формат 60x84/16. Бумага офсетная. Печать офсетная
Физ.печ. л. 9,0. Тираж 1000 экз. Заказ № К-105

Издательский центр Чувашского республиканского
института образования.
428017, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М.Горького, 5.

Отпечатано с готового оригинал-макета
в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 41-17-87. E-mail: newtime1@mail.ru.

35.00